К 81
С32
Ч-36770

В. И. СЕРГЕЕВ

# ХАЛЬХИ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРА ЧĔЛХИ

## ЛЕКСИКА ТАТА ЛЕКСИКОЛОГИ СЕМАНТИКА ТАТА СЕМАСИОЛОГИ

ВĔРЕНУ ПОСОБИЙĔ

ШУПАШКАР 2000

Национальная библиотека ЧР
4-036770

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗ…
обозначенного здесь срок…

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

К81
С 33

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ПЕЛӲ МИНИСТЕРСТВИ
И. Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ

В. И. СЕРГЕЕВ

# ХАЛЬХИ ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРА ЧӖЛХИ

## ЛЕКСИКА ТАТА ЛЕКСИКОЛОГИ СЕМАНТИКА ТАТА СЕМАСИОЛОГИ

ВӖРЕНӲ ПОСОБИЙӖ

КР

ШУПАШКАР 2000

81 Чув-3

ББК Ш12 = 635.1 я 73
С 32

Обяз. экз.

**Сергеев В. И.** Современный чувашский язык. Лексика и лексикология. Семантика и семасиология: Учеб. пособие / Чуваш. ун-т. Чебоксары, 2000. 160 с.

ISBN 5—7677—0418—x

Рассмотрены вопросы лексико-семантико-системной организации чувашского языка. Раскрыты принципы и приемы семантического анализа лексики чувашского языка, описаны основные категории: многозначность, синонимия, антонимия, омонимия, паронимия.

Для студентов I—II курсов факультета чувашской филологии и культуры.

ПРОВЕРЕНО
2010 16 МАР 2017

Ч-36770
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5—7677—0418—x

ББК Ш12 = 635.1 я 73

© Сергеев В. И., 2000

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ЛЕКСИКИНЕ ТĔПЧЕНИН ИСТОРИЙĔ

## КӲРТĔМ

Чăваш чĕлхин лексикине ятарласа тĕпченĕ ĕçсем XIX ĕмĕрте пачах пулман тесен те юрать. Вăл тапхăрта лексика ыйтăвĕсене фонетикăпа морфологие тĕпченĕ май кăна хускатнă. Сăмахран, В. П. Вишневскин 1836 çулта Хусанта тухнă «Начертание правил чувашского языка» текен ĕçĕнче вырăс грамматикин правилисене тĕпе хурса çырнипе чăваш чĕлхин хăйевĕрлĕхĕ питĕ сахал курăнать. В. П. Вишневскин ĕçĕпе В. Шотт усă курнă. «De Lingua Tschuwaschorum» ятлă брошюринче (Берлин, 1840) вăл, тĕрĕк тата чăваш сăмахĕсене танлаштарса, уйрăм сасăсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхне тĕрĕс кăтартнă. Ҫу кĕнеке 1876 çулта Парижра «La lingua Tschowaches» ятпа тепĕр хут тухать.

1870-мĕш çулсенче Н. И. Золотницкин çакăн пек ĕçĕсем пичетленсе тухаççĕ: «Заметки для ознакомления с чувашским наречием. Вып. 1. Отдел звуковой» (Казань, 1871); «Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен» (Казань, 1875), «Особенности чувашского языка, зависящие от изменения и выпуска согласных гортанных звуков» (Казань, 1877) т. ыт. те.

1882—1883 çулсенче Лейпцигра тухнă «Phonetik der Nördlichen Türksprachen» кĕнекинче В. Радлов чăваш чĕлхипе çыхăннă ыйтусене 116, 189, 192, 194, 238, 261, 268, 293, 304, 422-мĕш параграфсенче пăхса тухать, чăваш фонетикин тĕрлĕ уйрăмлăхĕсене танлаштару мелĕпе тĕпчет. Танлаштару материалне вăл тутар тата туркка чĕлхисенчен илет.

1903 çулта тухнă «Die tschuwaschischen Lehnwörter in der permishen Sprachen» монографире Ирьĕ Вихман пермь чĕлхисене кĕнĕ авалхи чăваш сăмахĕсене тишкерет тата пермяк чĕлхисенчен йышăннă сăмахсене илсе кăтартать.

1920 çулта М. Рясянен çырнă «Die tschuwaschischen Wörter in tscheremissichen» тĕпчев ĕçĕ тухнă. Автор шухăшĕпе, чăваш чĕлхинче мари чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсен шучĕ аллăна çитет.

Чăваш чĕлхин историне çавăн пекех Н. И. Ашмарин, Г. Рамстедт, Н. Поппе, И. Бенцинг, О. Притцак, Д. Немет, Г. Клоусон, Г. Доерфер, Б. А. Серебренников, Э. В. Севортян, Л. С. Левитская, И. Г. Добродомов, Р. Ахметьянов ĕçĕсенче çутатса панă.

Чăваш чĕлхин лексикологи ыйтăвĕсене ятарласа тĕпченĕ ученăйсенчен пĕри — В. Г. Егоров. 1930 çулта Мускавра тухнă «Введение в изучение чувашского языка» кĕнекере вăл чăваш чĕлхин лексика составне пăхса тухать, тăван чĕлхемĕрĕн лексикинче ют чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсем чылай пулнине палăртать. Чăваш халăхĕ историн тĕрлĕ тапхăрĕсенче ытти халăхсемпе юнашар пурăннине тата çыхăну тытнине шута илсе, В. Г. Егоров тăван чĕлхере тĕрĕк, араб, перс, еврей, вырăс, финн, китай тата Европа халăх сăмахĕсем пуррине çырса кăтартать.

1954 çулта Шупашкарта тухнă «Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении» (I пайĕ) кĕнекере ют чĕлхерен йышăннă сăмахсемпе пĕрлех В. Г. Егоров чăваш чĕлхин тĕп словарь фондне мĕнле сăмахсем кĕнине кăтартать, тĕп чăваш сăмахĕсемпе пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсем хальхи чăваш чĕлхин тĕп шăнăрĕ пулнине ĕнентерет. Лексика çинчен çырнă май В. Г. Егоров фразеологи ыйтăвĕсене хускатать, ку таранччен тухнă словарьсене тишкерсе хак парать. 1971 çулта кĕнеке тепĕр хут пичетленсе тухать. Автор малтанхи кăларăмĕсенче тапратнă ыйтусене тарăнрах çырса кăтартать.

Çӳлерех асăннă ĕçсенче В. Г. Егоров чăваш чĕлхи лексикологийĕн хăш-пĕр ыйтăвĕсене кăна тĕпченине шута илсе, вĕсене эпир чăваш лексикологийĕн тулли курсĕ тесе пăхма пултараймастпăр. Пĕтĕмĕшле илсен, автор çав ĕçсенче чăваш чĕлхин сăмах йышне истори тĕлĕшĕнчен çутатса парать, çавăнпа та вĕсене «Истори лексикологийĕн хăш-пĕр ыйтăвĕсем» тесе те ят пама пулать.

Чăваш чĕлхин лексики совет тапхăрĕнче мĕнле çĕнелсе улшăннине А. Е. Горшков «Чăваш чĕлхи лексикин аталанăвĕ (Совет тапхăрĕ)» кĕнекинче (Шупашкар, 1960) тĕпчет. Ку монографире автор лексика аталанăвĕн пĕтĕмĕшле ыйтă-

вёсене хускатнипе пӗрлех ҫӗнӗ сӑмахсем тумалли мелсене, вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсене тата терминсем тӑвас ӗҫӗн ҫитменлӗхӗсене тишкерет.

Аслӑ вырӑс чӗлхи чӑваш чӗлхишӗн аталану ҫӑлкуҫӗ пулнине А. Е. Горшков 1963 ҫулта тухнӑ «Роль русского языка в развитии и обогащении чувашской лексики» кӗнекинче кӑтартса парать.

Чӑваш чӗлхи лексикологийӗн пӗтӗмӗшле курсне малтанласа Н. А. Андреев тӗпчевҫӗ йӗркелет («Чӑваш чӗлхин лексикологийӗ». Шупашкар, 1961). Унччен лексикологин чылай ыйтӑвӗсене системӑласа анлӑн тишкернӗ ӗҫсем пулман. Н. А. Андреев ӗҫне пӗрремӗш опыт тесе пӑхмалла, ҫавӑнпа та унта ҫитменлӗхсем те ҫук мар. Автор, хӑй каланӑ тӑрӑх, чӑваш чӗлхи лексикин хӑйне евӗрлӗ уйрӑмлӑхӗсене кӑтартнипе пӗрлех ҫав ыйтусене вырӑс чӗлхи тӗпчевҫисем мӗнле ӑнланнине те шута илнӗ. Чӑваш чӗлхин материалӗпе анлӑ усӑ курса тата ҫав материала тӗплӗ тишкерсе, автор хӑш-пӗр ыйтусене ҫӗнӗлле ҫутатать. Ҫак кӗнекерех вӑл фразеологи ыйтӑвӗсене те хускатнӑ, чӑваш лексикографийӗн ыйтӑвӗсене пӑхса тухнӑ. Чӑваш лексикологийӗн хӑш-пӗр проблемисене Н. А. Андреев «Чӑваш чӗлхин стилистики» очеркӗсенче те (I пайӗ — 1958 ҫулта, II пайӗ — 1964 ҫулта, III пайӗ 1966 ҫулта тухнӑ) хускатать.

Чӑваш, мари, удмурт тата мордва чӗлхисем истори тапхӑрӗнче пӗр-пӗрин сӑмахӗсене йышӑннипе пуянланса пынине М. Р. Федотов «Исторические связи чувашского языка с языками угро-финнов Поволжья и Перми» (Шупашкар, 1965) тата «Исторические связи чувашского языка с волжскими и пермскими финно-угорскими языками» (Шупашкар, 1968) кӗнекисенче ҫырса кӑтартнӑ.

Чӑваш чӗлхинчи мари сӑмахӗсене тишкерсе ҫырнӑ ӗҫсенчен Г. В. Лукояновӑн «Марийские заимствования в чувашском языке» ятлӑ монографине (Шупашкар, 1973) палӑртмалла.

Чӑваш диалекчӗсемпе калаҫӑвӗсен лексика уйрӑмлӑхӗсене Л. П. Сергеев «Чӑваш чӗлхин вырӑнти калаҫӑвӗсем» (Шупашкар, 1969) тӗпчевре кӗскен асӑнса иртет.

Чӑваш литература чӗлхин Октябрь революцийӗчченхи аталанӑвне С. П. Горский «Очерки по истории чувашского литературного языка» кӗнекинче (Шупашкар, 1959) ҫырса кӑтартать.

Ҫӳлерех асӑннӑ ӗҫсем лексикологин тулли курсӗн шайӗнче тӑмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсенче нумай ыйтӑва пачах та

асӑнман. Чӑваш лексикологийӗн тулли курсне хатӗрленӗ чухне (ку вӑл наука лексикологийӗ пулать-и е халӑха ӑнланмалла ҫырнӑ вӗренӳ пособийӗ) тюркологи ҫитӗнӗвӗсемпе туллин усӑ курмалла. Г. Г. Мусабаевӑн «Современный казахский язык. Лексика» (Алма-Ата, 1959) тата Б. М. Юнусалиевӑн «Киргизская лексикология» (Фрунзе, 1959) ку тӗлӗшрен пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Юлашки вунӑ-вун пилӗк ҫул хушшинче тухнӑ пысӑкрах ӗҫсенчен тата ҫаксене асӑнма пулать: Историческое развитие лексики тюркских языков (М., 1961); Ф. Б. Астемирова. Кумыкская лексика советской эпохи (Махачкала, 1970); Н. К. Антонов. Материалы по исторической лексике якутского языка (Якутск, 1971); К. М. Мусаев. Лексика тюркских языков в сравнительном освещении (М., 1975) т. ыт. те.

Кусемсӗр пуҫне, тӗрӗк тата чӑваш чӗлхисен лексикологийӗн уйрӑм ыйтӑвӗсемпе ҫырнӑ кандидат диссертацийӗсем пур, сӑмахран: Ш. Баратов. Профессиональная лексика уйгурского языка (Алма-Ата, 1971); М. И. Скворцов. Старочувашская общественно-политическая лексика (М., 1971); Г. Е. Корнилов. Опыт исследования по чувашской диалектологии и булгаро-чувашской топонимике (Ленинград, 1966); Н. П. Петров. Язык и стиль произведений С. Фомина (М., 1963); А. Жапуев. Термины земледелия в балкарском языке (М., 1975) т. ыт. те.

XX ӗмӗрӗн юлашки ҫирӗм ҫулӗ хушшинче лексикологи ыйтӑвӗсене ҫутатса паракан чылай пысӑк калӑплӑ ӗҫсемех пичетленсе тухрӗҫ. Вӗсенчен пӗри — ӑслӑх тӗпчев институчӗ кӑларнӑ «Хальхи чӑваш чӗлхин лексикологийӗ» (Шупашкар, 1978, 10,0 п. л.). Кӗнекен авторӗсем — В. И. Сергеев, А. Е. Горшков тата Н. П. Петров. Тӗрӗссипе илсен, кӗнекен чи пысӑк пайне В. И. Сергеев ҫырнӑ, А. Е. Горшковпа Н. П. Петров уйрӑм ыйтусене ҫутатнӑ статьясемпе пая кӗнӗ. Кӗнекене университетӑн чӗлхе пӗлӗвӗн кафедри хатӗрленӗ «Чӗлхе пӗлӗвӗсен программине» тӗпе хурса хатӗрленӗ, ҫапла майпа вӑл вӗренӳ (е вӗрентӳ) кӗнеки шайӗнче шутланать.

Тепӗр вунӑ ҫултан (1988 ҫулта) пуҫламӑш шкул учителӗсене хатӗрлекен факультет студенчӗсем валли Л. П. Сергеев тата В. И. Котлеев ҫырнӑ «Чӑваш чӗлхи» вӗренӳ кӗнеки пичетленсе тухать; ку кӗнекен хушса ҫӗнетнӗ иккӗмӗш кӑларӑмӗ 1993 ҫулта кун ҫути курать. Кӗнекере «Лексикологи» пай 26—78 страницӑсенче вырнаҫнӑ, ӑна Л. П. Сергеев ҫырнӑ.

Тата тепĕр вунă çултан (1997 ç.) А. Е. Горшков çырнă «Лексика, фразеологи, пуплев культури» вĕренӳ пособийĕ пичетленсе тухать. Кĕнекен умсăмахĕнче çапла çырса хунă: «Шупашкар хулинчи аслă шкулсенче чăваш чĕлхине хальхи вăхăтра филологи факультечĕсен студенчĕсем çеç мар, ытти факультетсен студенчĕсем те вĕренеççĕ. Çак пособие шăпах вĕсем валли çырнă». Кĕнекере чăваш чĕлхин лексикипе фразеологине тата лексикографине, пуплев культурин паллăрах ыйтăвĕсене, çав шутрах орфоэпи правилисене те, çырса кăтартнă. Çапла майпа ку пособире «Лексикологи» пай пысăк вырăн йышăнмасть (16—29 с.).

Çӳлерех асăннă кĕнекесем (асăрхарăр пулĕ) пурте вĕренӳ кĕнекисем (пособийĕсем) шутланаççĕ. Вĕсене ӳкерчĕклекен мелсене тĕпе хурса çырнă.

1989 çулта Наука тĕпчев институчĕн ăслăх канашĕ виçĕ томлă «Хальхи чăваш литература чĕлхи» наука ĕçĕ хатĕрлесе пичетлеме йышăнать. Авторсен коллективĕ хатĕрленĕ «Хальхи чăваш литература чĕлхи» монографи 1990 çулта вырăсла пичетленсе тухать. Ку кĕнекери «Лексикологи» текен пая М. Ф. Чернов çырнă (95—161 с.). Аннотацире кĕнекепе студентсем, шкул учителĕсем, тюркологсем тата чĕлхе ыйтăвĕсемпе кăсăкланакансем пурте усă курма пултарнине асăрхаттарнă. Паллах, кĕнекен авторĕсем ушкăнпа ĕçленĕ ĕç наука грамматикин пĕр пайĕ пултăр тесе вăй хунă; иккĕмĕш томĕ «Морфологи», виççĕмĕшĕ «Синтаксис» ятпа пичетленсе тухмалла пулнă. Пĕрремĕш том тухнăранпа сакăр çул çитрĕ. Иккĕмĕш томĕ авторсен коллективĕ хатĕрлеменнине кура пичетленсе тухаймарĕ, виççĕмĕш томне хатĕрлеме институт коллективĕ хал çитереймест пулмалла. Çав кĕнекерех Н. И. Егоров профессор çырнă «Чăваш чĕлхи лексики истори тĕлĕшĕнчен аталанни» пысăк калăплă статья пичетленнĕ (128—149 с.).

Лексикологи ыйтăвĕсене хускатакан ĕççене Л. П. Сергеев профессор темиçе те пичетлесе кăларчĕ. «Сăмах тĕнчи» (1997 ç.) брошюрăна автор вăтам шкулта вĕренекенсене халалланă. Автор кулленхи пурнăçра усă куракан сăмахсен ытла та тĕлĕнмелле енĕсем пуррине, вĕсен хăйсен тĕнчи пуррине, хăйсен шăпи пулнине çырса кăтартать. Кунтах тĕрлĕ сăмахсен пулăвĕпе кун-çулне, сасă тытăмĕпе грамматика формисем улшăннине çырса кăтартнă.

Л. П. Сергеев çырнă «Чăваш чĕлхи: Справочник» юсаса анлăлатнă иккĕмĕш кăларăмпа 1994 çулта тухнă. Ку пособие аслă шкулсенче, училищĕсемпе техникумсенче вĕре-

некенсене, чăваш чĕлхипе литература учителĕсене, заочник студентсене пулăшас тĕллевпе çырса хатĕрленĕ. Лексикологи ыйтăвĕсене кунта 23—30-мĕш страницăсенче çутатнă.

Çапла вара, чăваш чĕлхе наукинче юлашки çирĕм çул хушшинче лексикологи ыйтăвĕсене вĕренӳ пособийĕсен шайĕнче çутатма тăрăшни сисĕнет. Пĕтĕмĕшле илсен, çав ĕçсенчен чылайăшĕнче лексикологипе семасиологи ыйтăвĕсене яланхиллех пĕрле çырса кăтартма тăрăшни куç умĕнчех. Енчен те семасиологи сăмахсен лексика пĕлтерĕшне (пĕлтерĕшĕсене) тĕпчекен чĕлхе наукин пĕр пайĕ пулса тăчĕ пулсан, вĕсене, лексикологипе семасиологие, уйрăм пайсем туса çырса кăтартмалли куç умĕнчех.

# ЛЕКСИКА ТАТА ЛЕКСИКОЛОГИ

## ПĔТĔМĔШЛЕ АНЛАНТАРНИ

Пĕр-пĕр чĕлхери сăмахсен йышне лексика теме йышăннă. Пуласса вăл грек чĕлхинчи lexikos «сăмахпа çыхăннă» тенинчен пулса кайнă. Чăваш чĕлхинчи сăмахсен йышне чăваш лексики теме пултаратпăр. Çак терминпах пĕр-пĕр писатель хăйĕн произведенийĕсенче усă курнă сăмахсен йышне палăртма та пулать. Тĕслĕхрен, П. П. Хусанкай лексики, К. В. Иванов лексики, Çеçпĕл Мишши лексики т. ыт. те.

Кулленхи калаçура пĕр-пĕринпе ăнланса калаçма пире икĕ-виçĕ пин сăмахран ытла кирлех те мар. Сăмах ăстисен, писательсемпе поэтсен, журналистсен «сăмах хутаççи» (лексиконĕ) вара чылай пуянрах. Чăваш чĕлхин сăмах йышĕ питех те пысăк, пуян; унпа эпир кирек мĕнле шухăша та итлекенсем патне ăнланмалла çитерме пултаратпăр. Чи кăткăс пулăмсене, ăслăхпа çыхăннă ăнлавсене палăртма тĕрлĕрен терминсемпе усă куратпăр. XIX ĕмĕрччен чăваш чĕлхинче йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахсем пулнă, хальхи чăваш чĕлхинче вара обществăпа политика, ăслăхпа техника, культурăпа искусство ăнлавĕсене палăртмалли сăмахсем те чылай.

Чĕлхери сăмахсен хисепĕ миçе пулнине никам та тĕп-тĕрĕс калама пултараймасть, мĕншĕн тесен сăмахсен йышĕ пĕр вĕçĕмсĕр улшăнса тăрать: киввисем чĕлхерен тухса ўкеççĕ, çĕнĕ ăнлава палăртаканнисем кĕрсе пыраççĕ. Пирĕн ку таранччен тухнă словарьсем (лексиконсем, тезауруссем) пĕри те чĕлхемĕрти сăмахсен йышне туллин палăртайман: Н. И. Ашмаринăн вун çичĕ томлă словарьне те, М. И. Скворцов редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словаре» те хĕрĕх пине яхăн сăмаха реестра кĕртнĕ. Ку, паллах, чăваш чĕлхинче хĕрĕх пин сăмах кăна пулнине пĕлтермест. Н. И. Ашмарин словарьне ют чĕлхерен (ытларах вырăс чĕлхинчен е ун урлă) çыру чĕлхи урлă кĕнĕ сăмахсем кĕмен, М. И. Скворцов редакциленинче вара юлашки вăтăр-хĕрĕх çул хушшинче çыравçăсемпе сăвăçăсем, хаçат-журналсенче, радиопа телевиденире вăй хуракансен пултарулăхне кура хайланă çĕнĕ

сăмахсем (неологизмсем) çук. Хальхи вăхăтра, И. Я. Яковлев сăмахĕсене аса илсе, чăваш халăхĕн çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ теме пултаратпăр.

Чĕлхери сăмахсен йышне (лексикăна) чĕлхе наукин тĕрлĕ пайĕсенче тĕпчеме пулать: лексикологире, семасиологире тата ономасиологире.

Вăл е ку чĕлхепе калаçакансем пĕр-пĕринчен професси тĕлĕшĕнчен, ўсĕм шайĕпе, социаллă пурнăçри вырăнĕпе уйрăлса тăраççĕ. Çавна кура лексикăна социолингвистикăра та, психолингвистикăра та тĕпчеме пулать. Калаçакансем тĕрлĕ вырăнта пурăннине шута илсе лексикăн калаçу уйрăмлăхĕсене диалектологи тĕпчет. Диалект сăмахĕсем литература чĕлхине пуянлатмалли мел шутланаççĕ.

Лексика стиль тĕлĕшĕнчен те расналанса тăрать. Стиль тĕлĕшĕнчен нейтраллă сăмахсемпе пур стильте те усă кураççĕ, вĕсем словарĕн тĕп шăнăрĕ шутланаççĕ. Стиль уйрăмлăхĕсене палăртакан лексика тĕрлĕрен пулать: поэзи лексики, ансат калаçу лексики, калаçу лексики, вульгарлă лексика т. ыт. те.

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем лексикăна фразеологире те тĕпчеме май пуррине палăртаççĕ. Пирĕн шутпа, фразеологизмсем — хытса ларнă сăмах майлашăвĕсем, çавна май вĕсене тĕпчекен ăслăх та сăмахсене тĕпчекен ăслăхран уйрăм пулмалла, ахальтен мар ăна фразеологи теççĕ.

Ку таранччен семасиологие лексикологи курсĕнче тĕпчесе çырса кăтартнă пулнă. Семасиологи юлашки çулсенче аталанса чĕлхе наукин пайĕ шайне çĕкленчĕ, вăл сăмахсен лексика пĕлтерĕшне тĕпчекен пай шутланать. Çавна шута илсе ку вĕренў кĕнекинче лексикологипе семасиологие уйрăммăн пăхса тухса çырса кăтартнă. Анчах та çакна ас тутарса хăварас пулать: семасиологи сăмахсен пĕлтерĕшĕсене кăна мар, ирĕклĕ тата çыхăнчăк сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене те тĕпчес тĕллев лартать. Семасиологи тенине тепĕр чухне семантика тесе те палăртаççĕ, чăвашла ăна пĕлтерĕшлĕх терминпа палăртма пулать. Чĕлхемĕрти сăмахсен икĕ расна пĕлтерĕшлĕх пулать: пĕри лексика пĕлтерĕшлĕхĕ тата грамматика пĕлтерĕшлĕхĕ. Тулли сăмахсен е тымар морфемăсен пĕлтерĕшне палăртнисĕр пуçне эпир аффикс морфемăсен пĕлтерĕшлĕхне те палăртма пултаратпăр. Сăмах тăвакан аффикссен сăмах тăвас пĕлтерĕшлĕхĕ (вырăсла: словообразовательное значение) палăрать, сăмаха улăштараканнисем вара грамматика (морфологи е синтаксис) пĕлтерĕшлĕхне витĕмлĕн палăртаççĕ. Сăмаха улăштаракан аффикс

морфемăсен пĕлтерĕшлĕхне тата валентлăхне (вĕсен тымар морфема е сăмах тĕпĕ çумне çыпçăнаслăхне е аффикссен сăнчăрлă тĕвĕленчĕклĕхне, кĕскен: агглютинацине) ытларах морфологире тата морфемикăра палăртаççĕ. Дериваци (сăмах тăвакан аффикс) морфемисен сăмах тăваслăх пĕлтерĕшĕ ятпару (номинаци) процесĕпе çыхăннă, çавăнпа та *çынлăх* сăмахра, *çын* сăмахпа танлаштарсан, пĕлтерĕш расналăхĕ питĕ уçăмлăн палăрать:

1) *çын* — шухăшласа калаçма пултаракан, ĕç хатĕрĕсем туса вĕсемпе усă курма пĕлекен чĕрчун;

2) *çынлăх* — çынна хисеплени, юратни.

Çапла вара, лексикологире пĕрремĕшле сăмахсене кăна мар, иккĕмĕшле сăмахсене те тĕпчеççĕ тата çырса кăтартаççĕ.

Лексикологи — чĕлхери сăмахсен йышне тĕпчекен чĕлхе наукин пĕр пайĕ. Лексикăна икĕ тĕрлĕ тĕпчеме тата çырса кăтартма май пур. Истори лексикологийĕн тĕп тĕллевĕ — уйрăм сăмахсен, пĕр-пĕр тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсен кӳлепи тата пĕлтерĕшĕ улшăнса пынине тишкересси.

Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ:

а) чăваш чĕлхин лексикине пулса кайни енчен;

ă) чĕлхери сăмахсен йышĕ усă курас тĕлĕшпе сийленни енчен тишкерет;

б) чĕлхери стиль сийĕсене çырса кăтартассине тĕп вырăна хурать.

Лексика — кăткăс система. Унăн паллăрах уйрăмлăхĕсем çаксем: уçăлăх (уçă система), вак ушкăнсенчен тăни, чĕлхе саккунĕсенчен килмен, чĕлхе тулашĕнчи сăлтавсене пула хăвăрт улшăнни, пĕр вăхăтрах чĕлхен кивĕ тата çĕнĕ единицисене пĕрлештерсе тăни.

Чăнах та, чĕлхемĕрти фонемăсен хисепĕ хĕрĕх-хĕрĕх пиллĕкрен иртмест, сăмах тăвакан тата улăштаракан аффикссене шутласа кăларма пулать (вĕсем пĕтĕмĕшпе виç çĕр-виç çĕр аллăран ытла мар). Çав вăхăтрах сăмахсен хисепĕ темиçе пин. Сăмахран, икĕ хупă сасă хушшинчи сасăсен улшăнăвĕ тĕрлĕрен пулăм-тăрăма, палла, ĕç-хĕле палăртма май парать: *тар* (гл.), *тар* I, *тар* II, *тар* III (япала ячĕ), *тăр (тăр шыв), тăр* (гл.), *тăр* (ев. сăм.), *тӳр (тӳр пилĕк), тĕр* (гл.), *тĕр* (ев. сăм.), *тир* (яп. ячĕ), *тир* (гл.), *тор* (диал.: *пирĕн лаши хора тор)*. Илсе панă сăмахсем çумне тĕрлĕрен сăмах тăвакан аффикссем хушса иккĕмĕшле сăмахсен хисепне ӳстерме пулать:

*тар* (гл.) *-кăн, тар-т, тар-мак*

*тар* I: *тар-ла, тар-лă*
*тар* III: *тар-çă*
*тăр* (пал. ячĕ): *тăрă-л, тăрă-лăх, тăр-и, тăр* (гл.), *тăр-кăч, тăр-ăм, тăр-ăш*
*тӳр* (-ĕ): *тӳр-лет, тӳр-лен, тӳр-ем, тӳр-ем-лĕх, тӳр-ем-лет* т. ыт. те.

Чĕлхене пĕр вĕçĕмсĕрех çĕнĕ сăмахсем кĕрсе пыраççĕ, вĕсем хушшинче уйрăм çынсем йĕркелештернисем те (*пуçтайăм* «поклон», *астăвăм* «память», *чĕлхесĕрлет* «заставить замолчать»). Ҫиввисем чĕлхерен тухса ӳкеççĕ, анчах хăшĕ-пĕрисем вăхăт иртнĕ май каялла таврăнаççĕ. Ҫакă вăл лексикăн уçăлăхне те, куçăмлăхне те кăтартать. Лексикăн уçăлăхне тата куçăмлăхне пула эпир чĕлхемĕрте сăмахсен хисепĕ миçе пулнине тĕрĕс хуравлаймастпăр.

Чĕлхе çавăн пекех наука терминĕсемпе те пуянланса пырать. Терминсем час-часах хаçат-журнал страницисенче кун кураççĕ е вĕсемпе радио-телевидени передачисенче усă кураççĕ, вĕсенчен хăшĕсем халиччен тухнă словарьсенче палăрмаççĕ те (*ваучер, бартер, консенсус*).

Сăмах чĕлхе тата пуплев единици пулнă май хăйне уйрăммăн та тăма пултарать. Анчах та калаçура эпир уйрăм сăмахсене пĕрлештерсе пуплев йĕркелетпĕр. Ҫав пуплевре сăмахсем пĕр-пĕринпе грамматика правилисем тĕлĕшĕпе шайлашса тăраççĕ. Тĕслĕхрен,

Мехел те мĕн те пул
Ыйт çумăр пĕлĕт

тенин пĕлтерĕшне ăнланма йывăр, анчах П. Хусанкай çав сăмахсенчен çакăн пек сăвă йĕркисем шăрçалать:

Мехел тени мĕскер тени пулать?
Ыйтсамăр çумăр пĕлĕчĕсенчен..

Е çыннăн ырă енĕсене (пултарулăхне) эпир çакăн пек сăмахсемпе палăртатпăр: *маттур, хастар, паттăр, патвар.* Ку сăмахсем, синоним ретне кĕрсе, хăйне евĕр «контекст» йĕркелеççĕ — эпир ку сăмахсене çын пирки кăна калама пултаратпăр. Ҫав вăхăтрах: *ырхан, начар, имшер, хыткан* сăмахсене çын пирки те, выльăх-чĕрлĕх пирки те, кайăк-кĕшĕк пирки те калама пулать. Пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен ку сăмахсем тан пĕлтерĕшлĕ пек туйăнаççĕ, анчах та вĕсенче стиль уйрăмлăхĕсем пулаççĕ: *хĕр-пике, телей-ăраскал, тусан-тăркăш.* Пĕлтерĕш пĕрпеклĕхĕ тата стиль расналăхĕ çӳлерех илсе кăтартнă сăмахсене парадигма çыхăнăвне пĕрлештереççĕ. Сă-

махсен парадигма (е парадигматика) çыхăнăвĕ тематика ушкăнĕсенче те палăрать, сăмахран, ӳт-пӳ пайĕсем: *куç-пуç, пит, хăлха, алă, ура, мăй, пĕçĕ, хул, ĕнсе, çурăм, хырăм, ӳпке, чĕре, пĕвер, пыршă* т. ыт. те. Ку сăмахсене синонимсем теме пултараймастпăр, вĕсене пĕр тема пĕрлештерет.

Чылай чухне пĕр-пĕр тематика ушкăнĕнчи сăмахсем тепĕр лексика-семантика ушкăнне кĕмеççĕ; сăмахран: *вăрман, хырлăх, юманлăх, чăрăшлăх, раща, пулăх* т. ыт. те. Хушăран пĕр тематика ушкăнĕнчи сăмах пĕлтерĕш расналăхĕсене (нумай пĕлтерĕшлĕхне) кура тĕрлĕрен лексика-семантика ушкăнĕсенче пулма пултарать. Тĕслĕхрен, *сысна* сăмаха илер:

1) выльăх-чĕрлĕх: *сысна, ĕне, сурăх, лаша, тиха, пăру, путек, качака, вăкăр, пăши* т. ыт. те;

2) çурт-йĕр пайĕ: *сысна*: а) горизонталлĕ хунă тĕтĕм тăрпи; ă) пĕренелесе тунă çурт çамки;

3) *сысна* — çын: пӳтсĕр, йĕксĕк, пархатарсăр, киревсĕр (çын).

Илсе кăтартнă тĕслĕхсем лексика уçă система пулнине тепĕр хут çирĕплетеççĕ.

Чылай чухне сăмахсем хăйсен нумай пĕлтерĕшлĕхне уйрăм тăнă чухне мар, сăмах майлашăвĕсенче тата пуплевсенче (контекстра) палăртаççĕ. Сăмахсен синтагматика çыхăнăвĕсем пуплевре, çыхăнуллă текстра палăраççĕ. Тĕслĕх вырăнне *сыпăк* сăмаха илер:

*кĕнеке сыпăкĕ* «раздел книги»;
*карта сыпăкĕ* «пролет забора»;
*уçă сыпăк* «открытый слог»;
*аталану сыпăкĕсем* «стадии развития»;
*пĕр-икĕ сыпăк юрла* «спеть один-два куплета»;
*вĕсем виçĕ сыпăкран тăван* «они связаны через три ступени родства»;
*пĕр сыпăк вăрман* «квартал леса».

*Сыпăк* сăмахăн тулашри валентлăхне (дистрибуцине) пула çӳлерех илсе панă тĕслĕхсенче пĕлтерĕш расналăхĕ уçăмлăн палăрать.

Халĕ *сыпăк* сăмаха *сыпă* лексемăпа тулашри валентлăхĕ тĕлĕшĕнчен танлаштарса пăхар, вĕсем пĕр-пĕринчен *-к* сăмах тăвакан аффикс пуррипе уйăрăлса тăраççĕ: *çул сыппи* «распутье»; *алă сыппи* «запястье»; *вут сыппи* «полено»; *хӳме сыппи* «пролет забора»; *алăк сыппи* «прихожая»; *çамрăк сыпă* «молодое поколение».

Сӑмахӑн синтагматика ҫыхӑнӑвӗ пирки кайрантарах «Сӑмахсен нумай пӗлтерӗшлӗхӗ» пайра тӗплӗн чарӑнса тӑрӑпӑр.

## СӐМАХ — ЛЕКСИКӐН ТӖП ЕДИНИЦИ

Сӑмах кирек мӗнле чӗлхен те (ҫавӑн пекех лексикӑн е лексикологин) тӗп единици шутланать. Кун пирки никам та иккӗленмест, анчах та: «Мӗн вӑл сӑмах?» — тесе ыйтсан, чӗлхеҫӗсем (лингвистсем) те тӳрремӗнех хурав пама пултараймаҫҫӗ. Сӑмах чӗлхен (лексикӑн) тӗп единици пулни пирки иккӗленекенсем те пур. Сӑлтавӗ кун акӑ мӗнре.

Ку таранччен тухнӑ ӑслӑх тӗпчев ӗҫӗсенче сӑмахӑн палӑртӑмне (дефиницине) темӗн чухлех панӑ, анчах та вӗсенчен пӗри те пурне те тивӗҫтерекен шая ҫитмен. Ку сӑмаха лексикӑра кӑна мар, морфологире те, синтаксисра та, фонетикӑра та тишкерме май пурринчен те килет. Юлашки вӑхӑтра тата сӑмах логикӑн, психологин, философин, психолингвистикӑн, социолингвистикӑн, семиотикӑн, информаци теорийӗн тӗпчев объекчӗ пулса тӑчӗ. Ҫакна пула ӑслӑхӑн (наукӑн) кашни пайӗнчех сӑмаха тӗрлӗ палӑртӑм пама май килсе тухать. Ҫапла майпа сӑмах пирки пурне те килӗшекен ӑнлантару тума май килмест. Ҫав сӑлтава пула хӑш-пӗр филологсем сӑмах текен термин лингвистикӑра усӑ курма тивӗҫлӗ марри ҫинчен те калаҫу пуҫаркаланӑ. Вӗсен шучӗпе чӗлхе факчӗсене анализ тунӑ чухне монема, фонема, морфема, предложени, текст терминсемпе усӑ курни те ҫителӗклӗ. Анчах та юлашки ҫулсенче сӑмах лексика категорийӗ кӑна мар, лингвистика (филологи) категорийӗн шайне ҫӗкленчӗ. Сӑмах вӑл чӗлхеҫӗсем усӑ куракан термин кӑна мар, вӑл сӑвӑҫӑсемпе ҫыравҫӑсен «алран-кайми аки-сухи». Сӑмах хӑватне туйман ҫыравҫӑ ҫыравҫӑ та мар. Кун пирки чӑваш халӑх поэчӗ П. П. Хусанкай ҫапла ҫырнӑ:

Эп сӑмахӑн хӑватне ӗненетӗп
Эп пӗлетӗп: сӑмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать ҫӗклеме.

Ҫак сӑвӑ куплетӗнче миҫе сӑмах пулнине чӗлхеҫӗ-профессор кӑна мар, шкул ҫулне ҫитнӗ кашни ачах калама пултарать, ҫав вӑхӑтрах кашни шкул ачиех ку куплетра миҫе фонема, морфема, предложени пулнине калама пултараймасть. Ҫакӑ вӑл сӑмах текен ӑнлав кашни ҫыннӑн ӑс-тӑнӗнче тӗвӗленнине палӑртать. Вӑл е ку чӗлхепе калаҫакан ҫын ӑнӗнче чӑн малтанах сӑмахӑн тулаш паллисем палӑраҫҫӗ:

1) сăмах уйрăммăн çӳреме пултарать, çырура вăл кĕретĕн курăнать; 2) сăмахăн пусăмĕ (ударени) пур; 3) сăмаха каланă хыççăн чарăну тума пулать, сăмах варринчи пауза ăнланма чăрмав кăларса тăрататъ; 4) сăмахсен çыхăнăвĕ сăмах майлашăвĕсем тума пулăшать т. ыт. те.

«Сăмах» сăмаха чĕлхере тĕрлĕ пĕлтерĕшпе усă курнине те манмалла мар. Чĕлхере унăн пĕлтерĕшĕ питĕ анлă: вăл сăмах майлашăвĕ те, фраза та, предложени те, текст та иккен:

1) *халал сăмахĕ* «завещание», *ӳкĕт сăмахĕ* «уговоры», *аннӳ сăмахне итле* «слушайся советов матери»; паллах, *халал* тата *ӳкĕт* тенисенче пĕр сăмах кăна мар (анлă текст); *

2) *сăмах тапрат (хускат)* «заговорить о чем-либо» (текст);

3) *салам сăмахĕ* «приветствие» (текст), *юлашки сăмах* «заключительное слово» (на собрании);

4) *сăмах çитер* «известить о чем-либо» (текст);

5) *сăмах сар* «распустить слух» (текст);

6) *сăмах тĕк* «упрекать» (текст);

7) *мĕн сăмахпа килтĕн?* «по какому делу пришел?» (текст).

Çак пĕлтерĕшсене пăхсан «сăмах» сăмах пулма пăрахать. Çакă та сăмаха татăклă палăртăм пама чăрмантарать пулмалла. Сăмахăн тĕп паллисене палăртса пынипе пĕрлех эпир çавна хирĕçлесе те калама пултаратпăр:

1. Сăмахăн ятпару функцийĕ пур, вăл мĕне те пулин палăртать, пĕлтерет (анчах та: *ах, ух, эх, и-и* тенинче ятпару функцийĕ палăрмасть).

2. Сăмах пĕр-пĕр ăнлава палăртать (анчах та: *ку, леш, Антон Павлович* сăмахсенче ăнлав палăрăмĕ çук).

3. Сăмахсене предложенире пĕр-пĕринчен çăмăллăнах уйăрса илме пулать (анчах та калаçура сăмахсен чикки пур чух та уçăмлах мар: *каспать* — литература чĕлхинче: *каяс пулать*).

4. Кашни сăмах сасăсенчен тăрать, уйрăм сасăсем (фонемăсем) ниме те пĕлтермеççĕ (анчах та хушăран уйрăм сасăсен те (морфема шайĕнче чух) пĕлтерĕшĕ пулать; сăмахран, *çут-ă, турт-а* сăмахсенчи *-ă, -а* фонемăсен сăмах тăваслăх пĕлтерĕшĕ пур, вĕсене пула глаголтан япала ячĕсем пулаççĕ).

---

* И. Я. Яковлевăн «Чăваш халăхне панă чун халалне» малтан пуçласа вĕçне çитиччен вуласа тухăр.

Кунта эпир К. М. Шанский панӑ сӑмах палӑртӑмне илсе кӑтартар: «Сӑмах — чӗлхе единици, хӑйӗн пуҫламӑш форминче пӗр пусӑмлӑ (ударениллӗ) пулать, унӑн пӗлтерӗшӗ, лексикӑпа грамматкка паллисем пур, сӑмаха аркатма май ҫук».[1]

К. М. Шанский сӑмахӑн вун пилӗк уйрӑм паллӑ пуррине кӑтартать, вӗсенчен пиллӗкӗшне кӑна тӗп паллисен шутне кӗртет: 1) сӑмах сасӑсенчен тӑни; 2) семантика валентноҫӗ; 3) икӗ тӗп пусӑм (ударени) тума май ҫукки; 4) лексикӑпа грамматика уйрӑмлӑхӗсем тата 5) пӗлтерӗш пытарӑнчӑклӑхӗ пурри.

Сӑмах проблемине татса парас тӗлӗшпе ӗҫленӗ тӗнче шайӗнчи тӗпчевҫӗсен ӗҫӗсене тӗплӗн тишкерсе тухмасӑрах эпир вӗсем каланине ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳсенче кӑтартма пултаратпӑр:

1) предложенин пӗлтерӗшлӗ чи пӗчӗк пайӗ (Щерба, Блумфилд, Поливанов, Харрис);

2) пуплевӗн пӗлтерӗшлӗ единици (Реформатский, Ельмслев, Норейн, Тогебю);

3) фонема, семантика тата грамматика паллисене пӗр тӗвӗре тытса тӑракан чӗлхе единици (Овсянико-Куликовский, Мейе, Бюлер);

4) чӑн пурнӑҫри пулӑмсене, ӗҫе-хӗле, паллӑсене палӑртма пултарни (Виноградов, Дорошевский, Галкина-Федорук).

Кашни чӗлхе единицин хӑйӗн тӗп функцийӗ пур:

— фонема — пӗлтерӗшпе ҫыхӑнас хевтеллӗ чи пӗчӗк пайрӑм, пуплев юхӑмӗн вакланман пайрӑмӗ (уйӑрав, чикӗлев, палӑртав функцийӗсем); фонема — чӗлхен сасӑ тытӑмӗнчи чи пӗчӗк, вакланман, пӑхӑнман пайрӑм, унӑн пӗлтерӗшпе ҫыхӑнас хевти пур, чӗлхен пӗлтерӗшлӗ пайрӑмӗсене калӑплать тата вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрма пулӑшать;[2]

— сӑмахӑн ятпару функцийӗ тӗп вырӑнта;

— предложенин ҫыхӑнтару функцийӗ куҫкӗретлӗ.

Сӑмахсене пӗр-пӗринчен уйӑрма май пурри вӗсене фонетика тата грамматика тӗлӗшӗнчен калӑплама май парать, пӗлтерӗш калӑпӑшӗпе тарӑнӑшне тӳрех палӑртма май ҫукки

---

[1] Шанский Н. М. Лексикология современного русского языка. М., 1964. С. 31.

[2] Яковлев П. Я. Чӑваш фонетики: Вӗренӳ кӗнеки. Шупашкар, 1995. 18 с.

вĕсен идиомăлăхне кăтартать. Çапла вара *сăмах* вăл — фонетика тата грамматика тĕлĕшĕнчен калăпланнă, ятпару функциллĕ, идиомăлăх сĕмĕсем пуррипе палăрса тăракан чĕлхе единици.

## ЛЕКСЕМА

*Лексема* тени *фонема, морфема, семема, интонема* терминсемпе пĕр ретре тăрать. Паллах, çӳлерех асăннă терминсен кашнийĕнех хăйĕн пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсем пур, анчах вĕсенче *«ема»* элемент пурри курăнать, çавна пула вĕсем тулаш тĕлĕшĕнчен пĕр рете лекеççĕ те ĕнтĕ.

*Лексема* термин чăваш чĕлхе наукинче 1978 çулта тухнă «Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ» кĕнекере[3] пĕрремĕш хут тĕл пулать. Унччен те, ун хыççăн та ку термин пирки никам та, нихăш ĕçре те сăмах хускатман. Ку ĕçре хушăран сăмах тенипе пĕр ретре çав пĕлтерĕшпех лексема термин та тĕл пулать. Вырăс чĕлхин тĕпчевçи В. В. Виноградов академик сăмахпа лексема хушшинчи çыхăнусемпе уйрăмлăхсене пур енлĕн çутатса кăтартнă.[4] Чăн малтанах лексема термина А. М. Пешковский сĕннĕ пулнă, ун хыççăн вăл В. В. Виноградов, А. И. Смирницкий, А. А. Зализняк ĕçĕсенче тĕл пулать. Çӳлерех асăннă тĕпчевçĕсен шухăшĕсене тĕпе хурсан, сăмах тĕрлĕ формăра тата тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнине шута илсе ăна *лексема* темелле. Сăмахăн парадигматикине тĕпе хурса ăна хăш-пĕр тĕпчевçĕсем лексема теме сĕнеççĕ пулин те, вăл халлĕнех ăна çапла ят пама килмест-ха. Çавăн пекех сăмахăн лексика-семантика вариантĕсене те уйрăммăн илсе лексема теме май çук.

Сăмахран, *пуç* сăмах пĕрреллĕ хисепри, тĕп падежри япала ячĕ шутланать. Грамматика тĕлĕшĕнчен вăл тĕрлĕ формăсенче пулма пултарать: *пуççем, пуçăм, пуçу, пуçĕ, пуçăмăрсем, пуçăрсем, пуçĕсем; пуçăн, пуça, пуçра, пуçран, пуçпа, пуççăр, пуçшăн, пуçăн (хĕр пуçăн)* т. ыт. те. Морфологи тишкерĕвĕ тăвас пулсан, кашни уйрăм илнĕ кӳлепе хăйне евĕр пĕлтерĕшлĕ пулса каять:

1) *пуççемпе* — япала ячĕ, сăмах тĕпĕ — *пуç*, пĕрремĕшле сăмах, пайăр мар ят, нумайлă хисепре, пĕрлелĕх падежĕнче;

2) *пуçу* — япала ячĕ, сăмах тĕпĕ — *пуç*, пĕр сăмах, пайăр мар ят, камăнлăх-сăпат категорийĕн иккĕмĕш сăпачĕ,

---

[3] Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1978. 11—12 с.

[4] Виноградов В. В. Исследования по русской грамматике // Избранные труды. М., 1975. С. 37.

Ч-36770
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

япала ячĕ те, сăпат аффиксĕ те пĕрреллĕ хисепре, тĕп падеж ра т. ыт. те.

Тепĕр енчен *пуç* сăмахăн лексика-семантика варианче сем темиçе те, вĕсенчен паллăраххисем çаксем: 1) пуçлăх 2) çын (этем); 3) выльăх шучĕ; 4) пучах; 5) пуçламăшĕ 6) вĕçĕ т. ыт. те.

*Пуç* сăмах тĕрлĕ кӳлепеллĕ (формăллă) тата пĕлтерĕш лĕ пулма пултарнине шута илсе, ăна лексема темелле.

Чĕлхе вĕрентĕвĕнче лексема пирки урăхла каланă шу хăшсем те пур. Сăмахран, Н. И. Толстой лексемăпа семем пĕрлĕхне сăмах[5] тесе шутлать. Çапла пăхни сăмахăн сас йышне кăна лексема тесе калама хистет. Ку шухăш тĕрĕсси пе тĕрĕс маррине тĕпчевлĕ куçпа пăхмалла, ăна тĕпе хурас пулсан, пĕлтерĕшсĕр сасă пуххисене те (*санс, тустан, рачун*) лексемăсем теме лекет пек.

Çав вăхăтрах лексема сăмаха фонема, морфема, сема (семема) терминсемпе пĕр рете лартса пăхса тишкерӳ ту сан, Н. И. Толстой шухăшĕнче хывăх анчах мар, тĕшши те пур пек туйăнать. Асăрхăр: а) фонема — чĕлхен сасă тытă мĕнчи чи пĕчĕк, вакланман, пăхăнман пайрăм; ă) морфе ма — пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмахра е сăмах формисен че тĕл пулакан пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пай; б) сема — пĕлте рĕшĕн вакланман чи пĕчĕк пайĕ.

Çӳлерех илсе кăтартнă терминсемпе танлаштарсан, *лексема* ăнлав анлăрах пĕлтерĕшлĕ пек курăнать. Пĕр енчен *лексема* — сăмах, анчах вăл лексика единици кăна мар грамматикăри сăмах та. Çавна шута илсен сăмах лексемăпа семема пĕрлĕхĕ:

$$\text{сăмах} — \frac{\text{лексема}}{\text{семема}}$$

Çавнах эпир сăмахăн лексика-семантика варианчĕ (ЛСВ) пайĕсем пек те пăхма пултаратпăр:[6]

$$(\text{ЛСВ}) — \frac{\text{лексема}}{\text{семема}}$$

$$\text{сăмах (с)} — \frac{\text{лексема}}{\text{семема}_1 \langle — \rangle \text{семема}_2 \langle — \rangle \text{семема}_3}$$

---

[5] Толстой Н. И. Из опыта типологического исследования славянского словарного состава // Вопр. языкознания. 1963. № 1. С. 30.

[6] Новиков Л. А. Семантика русского языка. М.: Высш. шк., 1982 С. 114, 115.

Асăрхăр: *лексема* тени лексика (е лексикологи) единици кăна мар, вăл пĕр вăхăтрах грамматика объекчĕ те, мĕншĕн тесен лексема тени сăмах улшăнăвне (парадигмине) те палăртать. Çапла майпа сăмахăн лексика-грамматика варианчĕ (ЛГВ) пирки калаçма пулать. *Сĕтел* сăмахăн лексика-грамматика варианчĕсене (*сĕтелсем; сĕтелĕм, сĕтелӳ, сĕтелĕ, сĕтелĕмĕр, сĕтелĕр; сĕтелĕн, сĕтеле, сĕтелте, сĕтелтен, сĕтелпе, сĕтелсĕр, сĕтелшĕн*) лексема темелле:

*сĕтел* — (ЛГВ) (*сĕтелсем, сĕтелĕ, сĕтелте...*) / (ЛСВ): 1) ĕçме-çиме; 2) прилавок; 3) учреждени

*Кӳршĕсем çĕнĕ сĕтел туяннă. Кӳршĕсен сĕтелĕ пуян* предложенисенче пĕр лексема, анчах та икĕ лекса (е ЛГВ): *сĕтел, сĕтелĕ;* пĕр лексема, анчах та икĕ семема: 1) *сĕтел-пукан* (мебель); 2) *сăй* (апат-çимĕç).

## ЧĂВАШ ЛЕКСИКИН ИСТОРИРИ АТАЛАНĂВĔ

### 1. Чăваш чĕлхин тĕрĕк чĕлхисен хушшинчи вырăнĕ

Чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен шутне кĕрет, анчах та эпир, чăвашсем, тӳрремĕнех тутарсемпе те, пушкăртсемпе те, узбексемпе те, алтаецсемпе те, якутсемпе те калаçса пĕр-пĕрне ăнланаймастпăр. Çакă вăл чăваш чĕлхи ытти тĕрĕк чĕлхисем хушшинче уйрăммăн тăнине пĕлтерет. Пирĕн чĕлхе кыпчак ушкăнне те, карлук ушкăнне те, огуз ушкăнне те, Çĕпĕрти тĕрĕксен ушкăнне те кĕмест. Чăваш чĕлхине пăлхар (огур) чĕлхисен ушкăнне кĕртеççĕ. Вăта тата авалхи пăлхар чĕлхисемпе хурăнташлă шутланать вăл, анчах ку чĕлхесем хальхи саманара сыхланса юлман, вĕсен тăхăмĕнчен юлнă пĕртен-пĕр чĕлхе вăл — чăваш чĕлхи. Хальхи чăваш чĕлхи ытти тĕрĕк чĕлхисемпе мĕнле шайра çыхăннине çапларах кăтартма пулать: чăваш чĕлхи ← Атăлçи пăлхар чĕлхи ← вăта пăлхар чĕлхи ← авалхи пăлхар чĕлхи ← прототюрк (пратюрк) тапхăрĕнчи мĕнпур тĕрĕк чĕлхисен пĕрлĕхĕ.

Чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕрет, тĕрĕк чĕлхисем монгол, тунгус-маньчжур, яппун, корей чĕлхисемпе пĕрле алтай, урал-алтай чĕлхисен ушкăнне йĕркелеççĕ. Çапла вара алтай ушкăнне кĕрекен чĕлхесене тата пысăкрах, калăплă нострат (е борей) чĕлхисен çемйине кĕртеççĕ. Нострат (борей) чĕлхисен çемйине татах çак чĕлхесен пысăк ушкăнĕсем кĕреççĕ: индоевропа, урал, картвел, дравид тата семит-хамит чĕлхисем.

## 2. Чăваш чĕлхин историри тапхăрĕсем

Пратюрк (прототюрк) тапхăрĕ. Ку тапхăра гипотеза шайĕнче кăна пăхма пулать. Çав гипотезăна чăнласах ĕненес пулсан пур тĕрĕк чĕлхи те пĕр кăкран (тымартан) аталанса кайнине çирĕплетмелле. Çав кăк чĕлхерен тĕрĕк халăхĕсен диалект уйрăмлăхĕсем тĕвĕленсе кайнă та ĕнтĕ. Огуз, карлук, кыпчак, Çĕпĕр тĕрĕк чĕлхисен диалект уйрăмлăхĕсем вăйлансах пынă май вĕсем тĕрĕк чĕлхисен уйрăм ушкăнĕсене тĕвĕленĕ. Пĕтĕм тĕрĕк чĕлхисен лексикин тĕп фончĕ çав вăхăтра хывăнса юлнă, анчах та çав вăхăтрах ют чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем те пулнă. Тĕпчевçĕсем шутланă тăрăх, пирĕн эрăчченхи II—I ĕмĕрсенчех прототюрк чĕлхине индоевропа тата авалхи иран чĕлхисенчен сăмахсем кĕнĕ:[7] чăв. *лаша*, тĕрĕк *алаша* ~ санскрит *räsabha* ~ (< * *rä-sa* ~ *bha* ~ ) «ашак, мул»; чăв. *пӳ* (танл. *ĕмпӳ, çĕрпӳ, вунпӳ)*, тĕрĕк *бег* «господин» ~ ав. иран *baga* «турă», «господин» т. ыт. те.

Прототюрк чĕлхипе калаçакансем вăл вăхăтра Тĕп Азире Байкал тăрăхĕнче тата Монголире пурăннă. Пирĕн эрăчченхи I ĕмĕрте прототюрк кăк чĕлхе икĕ пая пайланса кайнă пулмалла: 1) огуз (огуз, карлук, кыпчак, çĕпĕр тĕрĕк) чĕлхисем; 2) огур (огур, оногур, пăлхар — чăваш) чĕлхисем.

Пратюрк чĕлхиллĕ çынсен калаçăвĕнче малтанхи вăхăтра *-з* (*с*), *-ш* элементсем хуçаланнă пулмалла: *кыз, отуз, кыш, тис* ~ *тиш*. Çав элементсем огуз ушкăнне кĕрекен чĕлхесенче паян кунччченех сыхланса юлнă, ăна эпир зетацизм, сигматизм паллиллĕ чĕлхесем тетпĕр. Огур ушкăнне кĕрекен чĕлхесенче вара *-р, -л* элементсем хуçаланнă курăнать: *хĕр, вăтăр, хĕл, шăл*. Вăл паллăсем хальхи чăваш чĕлхинче палăраççĕ.

Огур тапхăрĕ *(пирĕн эрăчченхи I ĕмĕрĕн çурри — пирĕн эрă пуçламăшĕ)*. Огузсен те, огурсен те ăру тотемĕ *вăкăр* шутланнă пулмалла. Огуз тенине М. Р. Федотовăн «Чăваш чĕлхин этимологи словарьне» (I т. Шупашкар, 1996. 105 с.) уçса *вăкăр* словарь статйине шырамалла: тур. *öкӳз,* кирг. *öгӳз,* каз. *ӳгез,* як. *угус,* кумык. *огӳз. Огур* тени чăваш чĕлхинчи (*в*)*ăкăр* сăмахпа пĕр картра çӳрекен лексема, <*в*> кунта протеза шутланать; танл. монг. *ухэр* «шултра мăйра-

[7] Егоров Н. И. Историческое развитие чувашской лексики // Современный чувашский литературный язык. Т. I. Чебоксары, 1990. С. 128—149.

каллă выльăх»; тункăс-маньчжур чĕлхисенче: эвенк. *угур* ~ ~ *һукур* ~ *һукил,* сол. *ухур* ~ *укӳр* «майракаллă выльăх, вăкăр»; венгр чĕлхинче: *ökör, wkur, vkur.*

Чăваш чĕлхинчи <*в*> протеза вырăнне уйгур, узбек чĕлхисенче <*х*> протеза çӳрет: уйг. *hokys*, узб. *хукиз* «вăкăр». Ротацизм палли огурсен йăхĕсем Тĕп Азире пурăннине çирĕплетет, ахальтен мар ауслаутри *-р* монгол, тунгус-маньчжур чĕлхисенче тĕл пулать: чăв. *çыр* ~ монг. *зура* ~ нанай *н'иру* ~; чăв. *тар* ~ монг. *тара* ~ *эвенк* ~ *тара* ~; чăв. *чĕр (чĕркуççи)* ~ монг. *турий* ~ эвенк. *тирексэ* ~; чăв. *чĕр* ~ ~ эвенк. *чури, чирчи.*

Оногур тапхăрĕ *(пирĕн эрă пуçламăшĕ — пирĕн эрăн III ĕмĕрĕ).* Оногур автоэтноним икĕ пайран тăрать: *он* «вунă» + *огур.* Ку вунă огурсен йăхĕ пĕрлешсе пĕр канаш тытнине пĕлтерет.

II ĕмĕр çурринче оногур йăхĕсем Çичĕ шыв (Семиречье) таврашне пырса çитеççĕ. Вырăнта пурăнакан иран чĕлхиллĕ халăх вĕсене *сабир* ~ *савир* ят парать: ав. перс. *asabara* < < *aspa* «ăйăр» + *bara* «çӳре»; çĕнĕ перс. *suvar* «юланутçă». Çапла вара *сабир* ~ *савир* ~ *сувар* ~ *суваз* тени юланутпа çӳрекенсене палăртнă. Кайрантарах çав ят *Сибирь* (*сабир*) «Çĕпĕр» топоним ятра сыхланса юлать.

Оногурсен выльăх çӳретмелли вырăн чылай анлă пулнă. Çĕпĕрте хĕл тăнă вăхăтра оногурсем кĕтĕвĕсене кăнтăралла хăваланă. Çĕпĕре çу кунĕсем килсен кĕтĕве çурçĕр енче кĕтнĕ. Хĕвел анăç Çĕпĕрте оногурсем угор йăхĕсемпе хутшăнăва кĕреççĕ. Кунта вăл вăхăтра хантсен, мансисен тата венгрсен мăн аслашшĕсем пурăннă. Çав тапхăрта хăш-пĕр чăваш сăмахĕсем венгр чĕлхине кĕрсе юлнă та ĕнтĕ. Хант тата манси чĕлхисенче те çав вăхăтра савир (чăваш) чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тупма пулать.

Авалхи пăлхар тапхăрĕ *(IV—VII ĕмĕрсем).* Савир (чăваш) йăхĕсем IV ĕмĕрте Çурçĕр Кавказа çитнĕ. Угор (венгр) йăхĕсем те, гуннсем хĕснипе, Европăна куçса килнĕ. Хура тинĕс таврашĕнчи хирсенче оногур — савир — пăлхар йăхĕсем, Кубрат хан ертсе пынипе, Аслă (Ылтăн) Булгари патшалăхне йĕркелесе янă. Çав феодаллă патшалăхра (ханствăра) пурăнакансене пăлхарсем тенĕ. Пăлхар (чăваш) чĕлхинчен хăш-пĕр сăмахсем авалхи вырăс чĕлхине, Кавказри халăхсен чĕлхисене кĕрсе юлнă. Çурçĕр Кавказри тата вырăссен кăнтăр енчи хирĕсенче юнашар пурăннине пула авалхи пăлхар (чăваш) сăмахĕсем венгр чĕлхине чылай кĕрсе юлнă. Мĕнле сăмахсем кĕнине татăклах калама хĕн, ан-

чах та çак чăваш сăмахĕсем венгр чĕлхине авалах кĕнĕ пулмалла: *gyürü* — *çĕрĕ*, *iro* — *ырă* (ĕне ырри), *szür* — *сĕр* «сцедить», *terd* — чăв. *чĕр (чĕркуççи)* т. ыт. те.

В ă т а п ă л х а р т а п х ă р ĕ *(VIII—XVI ĕмĕрсем)*. VII ĕмĕр вĕçĕнче пăлхар йăхĕсем Вăтам Атăл тăрăхне куçса килеççĕ. Ку тапхăра виçĕ пая пайлама пулать: 1) Ылтăн Ордачченхи тапхăр (VIII—1235 çул); 2) Ылтăн Орда тапхăрĕ (1236—1444 çулсем); 3) Хусан Ханстви тапхăрĕ (1445—1551 çулсем).

1. Ы л т ă н О р д а ч ч е н х и т а п х ă р. Хазарсем хĕснипе пăлхарсем VII ĕмĕр вĕçĕнче, VIII ĕмĕр пуçламăшĕнче Атăлпа Кама тăрăхне куçса килсе вырнаçаççĕ. XX ĕмĕр тĕлне кунта Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ йĕркеленет. 922 çулта Алмуш хан Пăлхарта пурăнакансене мăсăльман тĕнне йышăнтарать, çавна пула пăлхар, берсула, эсегель, темтюз йăхĕсем пĕр халăх пулса тăраççĕ. Пăлхар чĕлхи ку тапхăрта хăйне тĕллĕн аталанать. Паллах, вырăссемпе юнашар пулни чĕлхене хăш-пĕр витĕм кӳрет. Авалхи вырăс чĕлхи чăваш чĕлхине IX ĕмĕртех витĕм кӳме пуçланă. Ку вăл çакăнтан курăнать: авалхи вырăс чĕлхинче сăмсапа калакан уçă сасăсем пулнă, вĕсем X ĕмĕрте чĕлхерен çухалнă. Чăваш чĕлхине *кăмпа* < *гоба*, *кĕнчеле* < *коделя* сăмахсем X ĕмĕрченех кĕрсе юлнă пулса тухать.

Çак тапхăрта чăваш чĕлхине араб тата перс сăмахĕсем кĕреççĕ, çав сăмахсенче *а* ~ *ы* ылмашу пурри курăнать: *мыскара* < *маскара*, *хыпар* < *хабар*, *хысна* < *казна* т. ыт. те.

2. Ы л т ă н О р д а т а п х ă р ĕ *(1236—1444 çулсем)*. Атăлçи Пăлхар патшалăхне тутар-монгол ешкерĕсем тĕпренех çĕнтерни пăлхар (чăваш) чĕлхинче те палăрмаллах йĕр сем хăварнă. Пăлхар чĕлхине кыпчак элеменчĕсемпе пĕрле монгол, араб, перс сăмахĕсем кĕрсе пыраççĕ. Кыпчак чĕлхи урлă çав тапхăрта пăлхар (чăваш) чĕлхине çакăн пек монгол сăмахĕсем кĕнĕ тесе шутламалла: *евчĕ, илпек, нăхта, пăлчав (пăлчал), путене, тилхепе, хачă (хайчă), хăта, хурал, хурчăка, хӳхĕм, чăт, чуптар*. Ылтăн Орда тапхăрĕнче кыпчак чĕлхисем урлă кĕнĕ араб сăмахĕсем çаксем: *вăхăт, сăнчăр, мухмăр, сунтăх, тухья, тупăк, хула, хут;* перс сăмахĕсем: *пурçăн, сунтал, сурпан, çурхат, чăм, сăвап, чун* т. ыт. те.

Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ культурăпа экономика, обществăпа политика тĕлĕшĕнчен аталаннă пĕрлĕх пулнă, вăл вăхăтра ун витĕмне юнашар пурăнакан халăхсем туйса тăнă. Пăлхар (чăваш) чĕлхинчен мари чĕлхине çав вăхăтрах пĕр

пине яхăн сăмах кĕрсе юлнă. Çав вăхăтрах чăваш чĕлхинче мари сăмахĕсем темиçе çĕр кăна; вĕсен хушшинче çаксене асăнма пулать: *каччă, кăткă, кача (кача тăвар), кĕтес, лĕпĕш, пушкар, тенкел, турпас, шĕкĕ, ўпре* т. ыт. те.

3. Хусан ханстви тапхăрĕ *(1445—1551 çулсем).* Çав вăхăтра тутар чĕлхинчен Атăл тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен чĕлхисене чылай сăмах кĕрсе юлать. Ял ячĕсем икĕ вариантлă пулса каяççĕ, пĕри — чăвашла ят, тепри — тутарла: *Кинчер — Янситово, Куснар — Байгулово, Вăтакас — Янцибулово, Пинер — Шихабылово, Ырашпулăх — Бишево.*

Хусан ханстви тапхăрĕнче тури диалектăн калаçу уйрăмлăхĕсем йĕркеленеççĕ. Ку диалектра мари сăмахĕсем палăрмаллах пысăк вырăн йышăнаççĕ: *ĕртĕ* «центр», *йăрлан* «çыран», *йăха* «ал пăчки», *шопашка* «катка». Ку сăмахсем тури диалектра кăна çўреççĕ.

4. Çĕнĕ Пăлхар, е чăваш тапхăрĕ (1551 *çултан паян куна çитиччен).* XVII ĕмĕрте чăвашсемпе тутар-мишерсем пĕр-пĕринпе хутшăнса пĕрле пурăннине пула чăваш чĕлхин анатри диалект паллисем йĕркеленеççĕ. Турипе танлаштарсан анатри тутар-мишер чĕлхинчен илнĕ сăмахсен хисепĕ пысăк пулнипе палăрса тăрать. XVII—XVIII ĕмĕрсенче чăвашсем ялĕ-ялĕпе Кама леш енне пурăнма куçса каяççĕ, XVIII ĕмĕрте чăвашсем Пушкăрт çĕршывне ушкăнĕпех куçса кайни паллă. 1551 çулта чăвашсем хăйсен ирĕкĕпе Вырăс патшалăхĕн тытăмне кĕреççĕ, çав вăхăтран пуçласа паян кунччченех вырăс чĕлхин витĕмĕ чĕлхемĕрте палăрать. *

* «Чăваш чĕлхин историри аталанăвĕ» сыпăка çырнă чух Н. И. Егоров профессорăн «Историческое развитие чувашской лексики» статйинчи тĕслĕхсемпе усă курнă.

# ХАЛЬХИ ЧӐВАШ ЧӖЛХИН ЛЕКСИКИНЕ ПУЛСА КАЙНИ ЕНЧЕН ПӐХСА ТУХНИ

## УМӖН ҪАЛАНИ

Малтанах «Хыпар» хаҫатран (1998. Ҫӑрлачӑн 10-мӗшӗ) илнӗ виҫӗ пуплеве илсе пӑхар:

1. *Оперӑпа балет театрӗнче те савӑнӑҫлӑ церемоние (инаугурацие) тӗплӗн хатӗрленеҫҫӗ* (1 с.).

2. *«Пикемпи» халӗ пирӗншӗн кивелнӗ сӑмах, вӑл халӗ тӗрлӗ каларӑшсемпе тупмалли юмахсенче кӑна юлнӑ, словарьсене кӗртеҫҫӗ-ха ӑна* (4 с.).

3. *Вӑхӑтлӑ пӗҫернӗ шӑрттана хӑй тӗллӗн вӗрилле те, сивӗлле те, сив ҫупа ӑшаласа та параҫҫӗ, хытӑ типӗтнӗ шӑрттанран яшка пӗҫереҫҫӗ* (4 с.).

Малтанхи предложенире тӑхӑр сӑмах, ҫавсенчен пиллӗкӗшӗ ют чӗлхе сӑмахӗсем пулнине кашни хутла вӗреннӗ чӑваш ҫынниех уйӑрса илет. Чӑваш чӗлхине вӗсем вырӑс чӗлхи урлӑ кӗнине те чухласа илме пултараҫҫӗ хӑшӗсем, анчах та вырӑссем вӗсене хӑш чӗлхерен илнине чылайӑшӗ хуравлаймаҫҫӗ. Тӗрӗссипе вара:

опера < ит. *opera* < лат. *opera*
балет < фр. *ballet*
театр < гр. *theatron*
церемони < лат. *caerimonia*
инаугураци < анг. *inauguration*

Тата вӗсенчен пӗрисем чӗлхемӗре иртнӗ ӗмӗртех пырса кӗнӗ, *инаугураци* сӑмах вара халь кӑна (вӗр ҫӗнӗ) йышӑннӑ сӑмах.

Малтанхи предложенипе танлаштарсан иккӗмӗш предложенире пӗртен-пӗр *словарь* ют чӗлхе сӑмахӗ пек туйӑнать. Виҫҫӗмӗш предложенире вырӑс чӗлхинчен е ун урлӑ йышӑннӑ сӑмахсем пачах та ҫук, вӗсем пурте тӗп чӑваш сӑмахӗсем пекех туйӑнаҫҫӗ. Чӗлхеҫӗ-этимолог куҫӗпе пӑхсан ку пачах та тӗрӗс мар шухӑш пулнине туйса илетӗн: *вӑхӑт* — араб сӑмахӗ иккен, вӑл пур тӗрӗк чӗлхине те кӗнӗ: *вакыт, вакт, вахт* (М. Р. Федотов); *шӑрттан* (чӑваш халӑхӗн чи юратнӑ ҫимӗҫӗ) — перс чӗлхинчен кӗнӗ: *ширдан* «сурӑх хы-

рăмлăхне какай тата рис хурса пĕçернĕ çимĕç»; ку сăмах ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулсах каймасть, пĕр узбек чĕлхинче кăна *ширдон* «тултармăш» пулни паллă (В. Г. Егоров). *Яшка* тени *аш* пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсенчен *-ка* аффикс хушăннипе пулнине перс чĕлхинчен кĕни пирки тĕпчевçĕсен иккĕленӳлĕх пур.

Хальхи чăваш литература чĕлхин лексики хăйне евĕр кăткăс та пуян. Кунта тĕп чăваш тата пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсемсĕр пуçне араб, перс, акăлчан, француз, вырăс, латин, грек, нимĕç, мари, мордва, удмурт сăмахĕсем те нумай тĕл пулаççĕ.

Пулса кайни енчен пăхсан, чăваш лексикине çакăн пек ушкăнлама пулать:

1. Тĕп чăваш сăмахĕсем. Вĕсене хăйсене виçĕ пысăк ушкăна уйăрма май пур:

а) пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсем; ă) чăваш тата хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче кăна тĕл пулакан сăмахсем; б) чăваш чĕлхинче хăйĕнче пулса кайнă сăмахсем.

2. Урăх чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем.

3. Тăван чĕлхере усă куракан сăмахсен никĕсĕ çинче çĕнĕ сăмахсене хунатни.

4. Гибрид сăмахсем: ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем çумне чăваш чĕлхин аффиксĕсем хушăннипе пулнă лексемăсем.

## ТĔП ЧĂВАШ СĂМАХĔСЕМ

Тĕп чăваш сăмахĕсем чăваш чĕлхи лексикин тĕп никĕсĕ пулса тăраççĕ. Ку ушкăна кулленхи пурнăçра усă куракан сăмахсем кĕреççĕ. Вĕсем япаласемпе пулăмсен, япаласен ячĕсем тата ĕçĕн паллине, ĕçе кăтартакан сăмахсем шутланаççĕ. Тĕп чăваш сăмахĕсем ытти тĕрĕк чĕлхисенче те тĕл пулаççĕ.

Чылай тĕрĕк чĕлхисенче пĕр пĕлтерĕшпех тĕл пулакан сăмахсене пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсем теççĕ. Чăваш чĕлхинче чылай чухне вĕсем сасă тĕлĕшĕнчен улшăннисен шутне кĕреççĕ:

| чăвашла | тĕрĕкле |
|---|---|
| пуç | баш, бас, паш, пас |
| юн [йун] | кан |
| юр [йур] | кар |
| пулă | балык |
| чăрăш | чыршы |
| вун, вунă, вуннă | он |
| тутлă | татлы |

| | |
|---|---|
| çыр | яз |
| ил | ал |

Çакăн пек сăмахсем тĕрлĕрен тематика ушкăнĕсенче тата чылай пуплев пайĕсенче тĕл пулаççĕ:

1. Çыннăн ӳт-пӳ пайĕсене палăртакан сăмахсем: *алă, ура, куç, тута, çăвар, хăлха, мăй, пит, çӳç, ĕнсе, пилĕк, шăмă, чĕре* т. ыт. те.

2. Тăванлăх сăмахĕсем: *атте, анне, ывăл, хĕр, тăван, хурăнташ, аппа, инке, кин, хăна, пултăр, тăхăм.*

3. Кил-çурта палăртакан сăмахсем: *çурт, чӳрече, алăк.*

4. Çутçанталăкри пулăмсене кăтартакан сăмахсем: *хĕвел, пĕлĕт, уйăх, çăлтăр, шыв, пăр, сивĕ, çил.*

5. Чĕрчун тĕнчи: *ĕне, ут, тилĕ, пăру, вăкăр, йытă, кĕсре, така, пулă.*

6. Ӳсен-тăран, йывăç-курăк ячĕсем: *юман, çăка, чăрăш, тирек, пултăран, каврăç, хурăн.* Вĕсенчен *чăрăш, тирек, хăва, хурăн* сăмахсем пур тĕрĕк чĕлхинче тенĕ пекех тĕл пулаççĕ.

7. Металсемпе материалсем: *хурçă, ылтăн, кĕмĕл, кӳкĕрт, пурă, хăйăр.*

8. Апат-çимĕç ячĕсем: *сĕт, уйран, хăйма, пăтă, пыл, çăмарта.*

9. Ĕç хатĕрĕсен ячĕсем: *пăчкă, пуртă, сунтал, хăйра.*

10. Тумтир, атă-пушмак ячĕсем: *кĕрĕк, сăхман, атă.*

11. Япалан паллине кăтартакан сăмахсем: *тутлă, чĕрĕ, хура, хĕрлĕ, вăрăм, çĕнĕ, хытă.*

12. Япалан хисепне палăртаканнисем: *пĕрре, иккĕ, виççĕ, виннă, çĕр, пин.*

13. Ĕçе-хĕле палăртаканнисем: *çи, ĕç, кур, ĕçле, çӳре, кас, тарла, чĕрĕл, тыт, пиç.*

14. Местоименисем: *эпир, эсир, вĕсем, ку, кам, мĕн* т. ыт. те.

Чăваш тата хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан сăмахсем:

*кĕрĕк* — ав. тĕрĕк *кӳрк: тон кӳрк,* тур. *кӳрк* «кĕрĕк», анчах тутар, пушкăрт чĕлхисенче *курек* «вĕркĕч» (тимĕрç лаççинчи вĕркĕч «кузнечный мех»);

*упа* — хакас чĕлхинче *оба,* ытти тĕрĕк чĕлхисенче *аю, айы, адыг, айых;*

*тута* — азерб. *додаг,* турккă *дудак,* туркм. *додак,* салар. *тутах (дудах), тотах,* ытти тĕрĕк чĕлхисенче *эрин, ирен;*

*хум* — алт. *ком,* уйг., тур. *кум,* анчах хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче *толкун, тулкын, долгун* (вырăнти калаçусенче *тулхăн* тени те тĕл пулать);

*пăр* «град» — тут., пушк. *боз,* уйг. *муз,* як. *муус* «лед», хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче — *долы, долгу;*

*тĕтре* — туркменла *тот,* ытти тĕрĕк чĕлхисенче *туман, думан* (вырăс чĕлхине *туман* сăмах тĕрĕк чĕлхисенчен кĕнĕ).

**Чăваш чĕлхинче хăйĕнче пулса кайнă сăмахсем**

Ку ушкăна чăваш чĕлхинче хăйĕнче кăна тĕл пулакан е усă куракан сăмахсене кĕртмелле. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: а) чăваш чĕлхисĕр пуçне ытти тĕрĕк чĕлхисенче çук сăмахсем; ă) хальхи вăхăтра хăш чĕлхерен йышăннине палăртма май çук сăмахсем; б) пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсен тĕпĕсем çумне чăваш чĕлхинче анлă усă куракан аффикссем хушăннипе пулнă сăмахсем; в) сăмахсем мăшăрланнипе пулнă чĕлхе единицисем; г) хутлă сăмахсем; д) сăмах майлашăвĕсем лексикализациленнипе пулнă сăмахсем.

**Чăн чăваш сăмахĕсем**

1. Тăванлăх терминĕсем:

а с а н н е < *аслă* + *анне* сăмах майлашăвĕнчен пулнă; ытти тĕрĕк чĕлхисенче çав модельпе пулнă сăмах майлашăвĕсем кăна тĕл пулаççĕ: кăркăс *чон эне,* уйг. *чон ана,* тур. *бÿйÿк анне (ана),* хак. *улуг иче;*

а с а т т е < *аслă* + *атте* сăмах майлашăвĕнчен пĕрремĕш компонент кĕскелнипе пĕр сăмах шайĕнче юлнă; танл.: казах. *улы ата,* к.-калп. *улкен ата,* кăркăс *чон ата,* нухай *карт атай;* анчах пушкăртла *олатай* (*оло* «аслă»);

к у к а м а й < *кăк* + *ама* + *-ай* (чĕнÿ формин аффиксĕ); синцзьян уйгур чĕлхинче ку модельпе пулнă тăванлăх терминĕ сăмах майлашăвĕн шайĕнчех юлнă: *кок апа* «прабабушка» (Ег. ЭСЧЯ, 115);

к у к а ç и, к у к а ç е й < *кăк* + *аçа* + *-ей* (*-и*) чĕнÿ формин аффиксĕ;

к у к к а < *кăк* + *ача;* авалхи тĕрĕк чĕлхинче *ача* «аслă пичче» пĕлтерĕшлĕ пулнă. *Кукамай, кукаçи, кукка* сăмахсенче *кăк* «тымар, ăрат, несĕл» хăйĕн фонетика сăн-сăпатне улăштарнă: *кăк* < *кук;*

т ă х л а ч ă «сваха, сватья», ытти тĕрĕк чĕлхисенче çук; фин-угор чĕлхисене чăваш чĕлхинчен кĕнĕ пулмалла: удм. *туклачи,* мар. *тулаче* (диал. *туглаче*); *тăхлачă* сăмах *тăхăм* лексемăпа пĕр тĕпрен пулма пултарать;

мучи < *мăн* + *мун* + *ичи* «пичче»;
мамак < *мăн* + *ама* + *-к*;
маçак < *мăн* + *аçа* + *-к*.

2. Çынна палăртакан терминсем:

арçын < *ар* + *çын;* ытти тĕрĕк чĕлхисенче: уйг. *эр киши,* пушк., тут. *ир кеше,* тува *эр кижи,* хак. *ир кизи* сăмах майлашăвĕсем çав пĕлтерĕшпех çӳреççĕ;

хĕрарăм < *хĕр* + *арăм;* ытти тĕрĕк чĕлхисенче: *хатун, хатын, катын, кадын;*

хĕрача < *хĕр* + *ача;* ытти тĕрĕк чĕлхисенче: *кыз, гыз* е *кыз бала;*

ача — çак пĕлтерĕшпех ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулмасть; танлаштарăр: ав. тĕрĕк чĕлхинче *ача* «тăван».

3. Ӳт-пӳ пайĕсене палăртакан сăмахсем:

сăмса; ытти тĕрĕк чĕлхисенче: *тумсук, тумчук, тумшук.* Чăваш сăмахĕпе тӳр килекен сăмаха чĕлхеçĕсем монгол чĕлхисенче пуррине палăртаççĕ; çыру монгол чĕлхинче: *samsa, samsai* «сăмса çунатти, сăмса хăвăлĕ», калмăк *самсэз* ~ ~ *самс,* монгол *самс* çӳлерех асăннă пĕлтерĕшпех çӳреççĕ;

чавса — чăваш чĕлхинче кăна тĕл пулать;

çивĕт — сăмах мĕнле пулни паллă мар, анчах чĕлхеçĕсем *çи* элемент *çи-ел, çӳ-лĕ, çĕ-лĕк* (*çи* + *-лĕк*) сăмахсенчи *çи, çӳ, çĕ* сыпăксем пĕр килнине палăртаççĕ;

4. Кайăк-кĕшĕк ячĕсем:

автан < *авăт* + *-ан,* тутар чĕлхинче чăваш сăмахĕ евĕрлĕ *этэч* сăмах пур, унта *эт* «юрла» + *-эч* (аффикс), анчах чăваш чĕлхинче *-ан* яланхи причасти аффиксĕ сăмах тăвакан элемент шутланать;

кăсăя — пулăвĕ паллă мар, ытти тĕрĕк чĕлхисенче ун пек сăмах çук;

шăпчăк < *шăп* + *-чăк,* *шăп* евĕрлев сăмахĕнчен *-чăк* сăмах тăвакан аффикс хушăннипе пулма пултарнă, ытти тĕрĕк чĕлхисенче ку сăмах кӳлепеллĕ сăмахсем пур, анчах та вĕсем пĕри те шăпчăк пĕлтерĕшлĕ мар: к.-калп. *шымшык* «çерçи», тутар *чыпчык* «çерçи».

5. Пулă ячĕсем:

йăпăл, йăпăлтак «голец»; евĕрлев сăмахĕнчен пулма пултарнă;

кăртăш «ерш», танлаштарăр: тутар чĕлхинче *кыртыш,* пушкăртла *йыртыш* «ерш».

6. Япалан паллине кăтартакан сăмахсем:

вата — ытти тĕрĕк чĕлхисенче кун пек сăмах çук, ун вы-

рăнне *карт* «ватă» сăмах çӳрет; чăваш чĕлхинче вăл *карчăк* (*карт* + *-чăк*) сăмахра сыхланса юлнă. Чăваш чĕлхинчи *ватă* сăмах çыру монгол чĕлхинчи *öтегӳ* «старик», *öтел* «ватăл», хальхи монгол чĕлхинчи *öтгöс* «ватăсем, стариксем» сăмахсене тӳр килет имĕш; ун пек сăмахсем тункăс-маньчжур чĕлхисенче те пур: эвенк. *уту* «ватă», сол. *утáци* «асатте», эвенк. *утэ* «ватă» (йытă пирки). Ку сăмахсем чăваш чĕлхинчи *йӳте* «ватăл», «ватăлса тăнран тух» сăмаха аса илтереççĕ;

с и м ĕ с — ытти тĕрĕк чĕлхисенче кун пек сăмах çук, вĕсенче «симĕс» пĕлтерĕшпе *ешĕл* ~ *йашил* ~ *йешил* ~ *яшил* сăмах çӳрет.

7. Кил-çурт таврашĕнчи япаласен ячĕсем:

т ĕ п е л < *тĕп* + *ел*, ытти тĕрĕк чĕлхисенче *ал* (*ел*) «ен» тенине пĕлтерет, апла пулсан *тĕпел* «тĕп ен» пĕлтерĕшлĕ; ку элементпа пулнă сăмахсем: *хыçал, шал* < *ăш* + *ал, мал* < *ум* + *ал, çӳл* < *çи* + *ел*;

у р а й < *ура* + *ай* (+*-е*);

п у с м а < *пус* + *-ма* «лестница».

8. Ĕç-хĕле кăтартакан пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле глаголсем (евĕрлев сăмахĕсенчен пулнă иккĕмĕшле сăмахсем): *шавла, чĕвĕлтет, макăр, мĕкĕр, кĕрле, ахлат, пакăлтат* т. ыт. те.

Чăн чăваш сăмахĕсен шутне хамăр чăваш сăмахĕсенчен тата пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсенчен чăваш чĕлхинчи анлă усă куракан аффикссем хушăннипе пулнă сăмахсем те кĕреççĕ:

*-çă* (*-çĕ, -ç*): *кăмпаçă, арманçă, пĕлӳçĕ, кĕтӳç, кĕнекеçĕ, куçаруçă, кĕслеçĕ;*

*-лăх* (*-лĕх, -лăк*): *хастарлăх, илемлĕх, шăналăк, тислĕк* ~ *тирĕслĕк;*

*-у* (*-ӳ*): *каю* (*кай* + *-у*), *лару-тăру, хĕрӳ, пĕлтерӳ;*

*-в*: *суйлав, калав, тĕллев, сăнав;*

*-ăм* (*-ĕм*): *кӳлĕм, сисĕм, чикĕм, сĕвĕм;*

*-кăч* (*-кĕч*): *яркăч, явкăч, сыпкăч, çапкăч;*

*-ă* (*-ĕ*): *сутă, кулă, каçă, чĕлĕ, тĕкĕ, сыпă;*

*-ăç* (*-ĕç*): *анăç, тухăç, пурăнăç, курăнăç;*

*-ăш* (*-ĕш*): *кулăш, пĕлĕш, сывлăш, пĕлтерĕш;*

*-кă* (*-кĕ*): *тапкă, чышкă, çупкă, ĕçкĕ, çикĕ;*

*-кăн* (*-кĕн*): *çăткăн, вĕçкĕн, еркĕн, çиçкĕн;*

*-ăк* (*-ĕк*): *шăтăк, путăк, çĕтĕк, çурăк;*

*-ти*: *якăлти, ихĕлти, сĕмпĕлти, пакăлти;*

*-ла* (*-ле*): *ĕçле, пайла, мăшла, сĕрле;*

*-лан* (*-лен*): *шиклен, ĕмĕтлен, кансĕрлен*;
*-лаш* (*-леш*): *пĕрлеш, чикĕлеш, туслаш*;
*-лат* (*-лет*): *тачкалат, хулăнлат, çилĕмлет, нартлат, нăриклет*;
*-тат* (*-тет*): *пăшăлтат, мĕшĕлтет, йăкăлтат, вĕлтĕртет, йăлтăртат*.

Хальхи вăхăтра этимологи тĕлĕшĕнчен тĕксĕмленнĕ сăмахсем тата хăш чĕлхерен кĕнине палăртма май çук сăмахсем те тĕп чăваш сăмахĕсен шутне кĕреççĕ:

а с л ă к < *ас?* + *-лăк,* хальхи вăхăтра *ас* элемент мĕне пĕлтернине çырса кăтартни çук; *-лăк* аффикс *-лăх* аффиксăн варианчĕ шутланать;

в ă й — пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕ марри паллă; чăваш чĕлхине мари чĕлхинчен кĕме пултарнă: мар. *вий* «вăй»;

к ӳ н ч ĕ к (< *кӳн* «хĕвел» + *-чĕк*) «хĕрарăм кĕпи çинчи ултă кĕтеслĕ эреш»;

л ӳ п п е р «çаврăнăçусăр», мĕнле пулни паллă мар, т. ыт. те.

## Сăмахсен йышĕ пĕр тĕпрен (тымартан) хунаса пыни

### *Шыв* сăмахăн диалект, дериваци тата этимологи йăвисем

Çиелтен пăхсан чĕлхери сăмахсен хушшинчи «тăванлăха» тепĕр чух асăрхама та çук, ăна чылай чух ятарлă тĕпчев тусан тин курма пулать. Тĕслĕх вырăнне *шыв* сăмаха илер, унăн диалект, дериваци тата этимологи йăвисене пăхса тухар.

Диалект йăви тесе эпир *шыв* сăмахăн диалектсенче (вырăнти калаçусенче) тĕл пулакан варианчĕсене калатпăр:

а) пĕр фонемăран тăраканни: *у* «шыв» Н. И. Ашмарин словарĕнче ăна ача-пăча сăмахĕ тесе панă (Ашм. III, 167);

ă) икĕ фонемăллисем: *шу, су, шӳ, ша;*

б) виçĕ фонемăллисем: *шăв, шĕв, шуй, шар, шур;*

в) тăватă фонемăллисем: *шывă.*

*Шыв* сăмахăн диалект йăвине Н. И. Ашмарин словарьне тĕплĕн вуласан тин тупса палăртма май килет.

Ытти хурăнташ тĕрĕк чĕлхисенче *шыв* сăмахăн çакăн пек вариантсем пуррине палăртнă: *уу, су, сув, суг, суй, сух, суб, һыу, суу.*

Чăваш чĕлхинче (ытти тĕрĕк чĕлхисенчи пекех) диалект йăвине кĕрекен сăмахсем пĕр-пĕринчен сасăсен хисепĕпе тата ылмашăвĕ пуррипе уйăрăлса тăраççĕ.

Дериваци тенине эпир чăвашла сăмах пулăвĕ тетпĕр. Çапла майпа дериваци йăви тени сăмах пулăвĕн йăви тенипе

пĕр пĕлтерĕшлех. Сăмах пулăвĕн йăви — пĕр тымартан пулнă сăмахсен ушкăнĕ:

ш ы в: *шывак, шываклан, шывлан, шывланкă, шывлă, шывлăх, шыври* «вутăш», *шывсăр, шывсăрлан, шывсăрлат, шывсăрлăх, шывăшлăх.* Кунтах хутлă тата мăшăр сăмахсем те кĕреççĕ: *шыв-шур, шыв-шурлăх, шывлă-юрлă, шывçи, шыв-юр.* Илсе кăтартнă тĕслĕхсенче *шыв* тымар морфема пурри иккĕленӳллĕ мар, вăл ирĕклĕнех пайланать, хăй пĕлтерĕшне сыхласа хăварать.

Халĕ диалект варианчĕсене илсе вĕсен сăмах пулăвĕн йăвине пăхса тухар:

ш ă в: *шăвак, шăвар, шăвару, шăварăн, шăвăшлăх* «çурт карнизĕ хĕррине шыв юхма çакнă валак»;

ш ĕ в: *шĕвек, шĕвеке, шĕвекле, шĕвеклен, шĕвеклет, шĕвĕ, шĕвел, шĕвеклĕх, шĕвет;*

ш ӳ: *шӳкĕр* «тумла пăрĕ», *шӳлĕш* «сывлăш», *шӳреки* «шыври усал», *шӳрел* «вĕтĕ усалсем», «иесем».

*Шăв, шĕв, шӳ* тымар морфемăсем пултаракан тĕпсем шутланаççĕ пулин те, вĕсем хăйсен кӳлепине улăштарнине пула радиксоидсем пек туйăнаççĕ.

Этимологи йăвине кĕрекен сăмахсен тымарĕсене чăнласах радиксоидсем вырăнне йышăнма пулать:

* с ы в: *сывлăм* < *сыв* «шыв» + *лăм* «нӳрĕк», шыв»; *сыв-*
∧ ∧
*лаш* < *сыв* «шыв» + *-ла* + *-ăш;* *сывлăш* «карниз хĕррине шыв юхма çакнă валак»; танлаштарăр: *шывăшлăх, шăвăшлăх* «çав пĕлтерĕшлех»;

* *сыв* радиксоид *шыв* сăмахăн этимологи варианчĕ шутланать, ăна эпир ытти тĕрĕк чĕлхисенчи тĕслĕхсемпе танлаштарсан курма пултаратпăр: чăв. *сывлăш* «застреха», тут. *сулык,* пушк. *һыулык* «водосток на крыше дома» сăмахсем *су, һыу* «шыв» сăмах çумне *-лык* аффикс хушăннипе пулнă. Чăваш чĕлхинче ку сăмах авал * *сывлăх* ~ *шывлăх* кӳлепеллĕ пулма пултарнă. *Сывлăш* сăмахăн варианчĕсем çаксем: *шывăшлăх, сывлăшлăх.*

*Шыв* сăмахăн этимологи йăвине çак сăмахсене кĕртмелле: *сывлăм* < *сыв* «шыв» + *лăм* «нӳрĕк» (танлаштарăр: тува чĕлхинче *шалын,* хакас *салым,* чăваш диалекчĕсенче *сулăм*); *сывла, сывлăш, сывал, сывă*; диалект сăмахĕ шутланакан *сывал* (*-хух*) «испаряться, усыхать» лексемăн * *сыв* «шыв» пултаракан тĕпĕ çумне *-ал* сăмах тăвакан аффикс хушăннă; танлаштарăр: казах. *суал,* кăрк., тува, хакас, якут. *соол,* Çĕпĕр тутар *суал,* XII—XIII ĕмĕрти тефсир *сухул.*

В. Г. Егоров хайӗн этимологи словарӗнче ку сӑмах пирки (иккӗленсе) *су* «шыв» сӑмахран пулма пултарать тесе палӑртса хӑварнӑ (Ег. ЭСЧЯ, 199).

*Шур* «путлӑх» сӑмахра *шу* тымар морфема пулни паллах, апла пулсан *-р̂* сӑмах тӑвакан элемент пулнӑ, ӗлӗк (ытти тӗрӗк чӗлхисенче: *сас* ~ *саз* ~ *һаз*; *р* ~ *з*). Г. Алкаров *саз* ~ *шур* сӑмахсенчи сӑмах тымарӗ *су* «шыв» пулнине палӑртать (Ег. ЭСЧЯ, 339). *Шур* «нӳрӗк выран, путлӑх» сӑмахпа пӗр тӗпрен пулнӑ * *сыр* сӑмах та пур, вӑл хӑй тӗллӗн ҫӳремест, *сыр кӑмпи* сӑмах майлашӑвӗнче сыхланса юлнӑ; танлаштарӑр: казахла *сыз* «нӳрӗк» (~ чӑв. *шур*).

*Шур* ~ *сыр* этимологи дублечӗсемпе пӗр ретрех *сур* радиксоид та тӑмалла, вӑл *сурчӑк* (<*сур* + *-чӑк*) сӑмахра палӑрать; ав. тӗрӗк чӗлхинче *sud-* ~ *sut-* ~ suδ «сур» (< *su* + + *-d* (*t*, δ)).

Этем организмӗнчен тухакан шӗвексен шутне *шӑк* «моча» сӑмах кӗрет: *шӑк* < *шӑр* + *-ӑк*; *шӑк* тата *шӑр* сӑмахсенчи *-к*, *-р* элементсем сӑмах тӑвакан элементсем пулнӑ пулмалла; танлаштарӑр: чӑв. *шӑр* ~ уйг. *сез, сыз* (*р* ~ *з*), казах *шора* (чӑв. *шӑра кут*), *сар* «шӑр»; монг. *сарах* «йӑтӑ шӑни». Паллах, чылайӑшӗ ку сӑмахсен этимологи тымарӗ *шыв* (*су, шу*) сӑмахпа ҫыхӑннине иккӗленсе йышӑнмасан та пултарать. Кун пек иккӗленӳ *куҫҫуль* (*куҫ* + *ҫуль*) сӑмахри *ҫуль* элемент пирки те ҫуралма пултарать, анчах та диалектсенче *куҫшуль* ~ *куҫшӳл* вариантсем тӗл пулни *шуль* ~ *шӳл* элементсен тытӑмӗнче *шу* ~ *шӳ* «шыв» пулма пултарнине хыпарлать; апла пулсан *-л̂* кунта сӑмах тӑвакан аффикс вырӑнӗнче юлать. Ӑна эпир *сӗлкӗш* ~ *сӗлтӗ* ~ *сӗлтӗш* ~ *сӗлтӗк* «шыв ӗҫнӗ юр» дублетсенче те тӗл пулатпӑр; вӑлах *сӗлкӗ* ~ ~ *сӗлӗт* ~ *сӗлтӗ* ~ *сӗлтӗк* «щелок» диалект варианчӗсенче те пулма пултарать.

Этем организмӗнчен тухакан шӗвексенчен *-л̂* дериватлӑ сӑмах пуррине те палӑртмалла: *сӗлеке;* танлаштарӑр: монг. *шулс* (*эн*), калм. *шулсн* (*шулсен*). Монгол чӗлхисенчи *шулс (эн), шулсн* сӑмахсенче *шу* «шыв» сӑмах этимологи варианчӗ пулнине никам та каламан, паллах; танлаштарӑр: монг. *ус* (*ан*) < * *су* (*ан*) ~ * *шу* (*ан*) метатеза йӗркипе пулнӑ.

*Шыв* сӑмахӑн чӑваш е ытти тӗрӗк чӗлхисенчи этимологи йӑвине тӗплӗн тупса палӑртас тесен ку ыйтӑва тӗплӗн тӗпче-

мелле. Халлĕхе эпир ăна гипотеза шайĕнче кăна пăхса тухрăмăр.

Этимологи йăвине кĕрекен сăмахсен тĕпĕсем хальхи чĕлхере хăйсем тĕллĕн ҫӳреймеҫҫĕ, радиксоидсем шутланаҫҫĕ, вĕсене чылай чухне танлаштаруллă мелпе кăна тупса палăртма пулать.

Диалект йăвине кĕрекен сăмахсем пĕр-пĕриншĕн фонетика варианчĕсем шутланаҫҫĕ, вĕсенче пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ палăрсах каймасть. Чылай чухне вĕсем пĕрремĕшле сăмахсем.

Дериваци (сăмах пулăвĕн) йăвине кĕрекен сăмахсем — иккĕмĕшле сăмахсем. Вĕсем пĕр-пĕринчен сăмах пулăвĕн моделĕ урăх пулнипе тата пĕлтерĕшĕсемпе расналанса тăраҫҫĕ.

*Йывăҫ* сăмахăн 1) диалект йăви: *йăвăҫ, йӳҫ, йуҫ, уҫ* (*хутруҫҫи* $<$ *хутăр* $\sim$ *йывăҫҫ* $\sim$ *-и* $>$ *хутр* $\sim$ *уҫҫ* $\sim$ *-и*);

2) сăмах пулăвĕн йăви: *йывăҫлăх, йывăҫлан, йывăҫлă;*

3) этимологи йăви: ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан вариантсем: *ағач, ағаш, ағас, агыс, йагач, ыяш, агас, ёгоч, йигаш, жыгач, аач*; авалхи тĕрĕк чĕлхисенче ї «йывăҫ», «ӳсен-тăран», «тĕмĕ (йывăҫ тĕмми)», апла пулсан, їγаč $<$ *ї* + -γаč $\sim$ *й* + *ы* + *-вăҫ* (Фед. ЭСЧЯ, 1, 179); *й* — протеза, *ы* — радиксоид (этимологири сăмах тымарĕ), *-вăҫ* — аффиксоид.

Монгол чĕлхисенчи *уул, уула* вариантсене шута илсе М. Рясянен чăв. *ăв* (*-ă*), *ву, ăвă* $<$ ** *уу* (Фед. ЭСЧЯ, 1, 80). Чăваш чĕлхинче *у* «йывăҫ» пĕлтерĕшпе *у кăмпи* сăмах майлашăвĕнче сыхланса юлнă теме пулать.

## УРĂХ ЧĔЛХЕСЕНЧЕН ЙЫШĂННĂ СĂМАХСЕМ

Ҫирек хăш чĕлхепе кăларнă словаре уҫса пăхсан та унта тĕп тăван чĕлхе сăмахĕсемсĕр пуҫне ытти чĕлхесенчен йышăннă сăмахсене тупма пулать. Тĕслĕхрен, 1982 ҫулта М. И. Скворцов редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словарĕн» 21-мĕш страницине уҫса пăхсан ҫакă курăнать: ку страницăра реестра 49 сăмаха кăларнă, вĕсенчен 33-шĕ тĕп чăваш сăмахĕсем, 16-шĕ вырăс чĕлхи урлă ытти ют чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем: *авиабаза, авиабомба, авиадесант, авиазавод, авиаклуб, авиакомпани, авиакомпас, авиаконструктор, авиалини, авиамоделизм, авиамоделист, авиамодель, авианосец, авиаотряд, авиаприбор.* Ку сăмахсенче пуринче те пултаракан тĕп *авиа* сăмах пур. Вăл хăй вырăс чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те ҫыхăнчăк тымар шутланать, хăй тĕллĕн

çӳресех каймасть, анчах та вăл *авиаци* сăмахпа çыхăннине пурте ăнланаççĕ. *Авиа* элементпа словаре кĕнĕ сăмахсен йышĕ вăтăра çитет, вĕсенчен виççĕшĕнче: *авиаçул, авиаçыхăну, авиашкул* ют чĕлхе элеменчĕ çумне чăваш сăмахĕсем хушăнни курăнать. *Авиа, авиаци* сăмахсем вырăс чĕлхине француз чĕлхинчен кĕнĕ, французсем ăна латин чĕлхинчен йышăннă; танлаштарăр: лат. *avis* «кайăк».

Йышăннă сăмахсенчен пĕрисем тепĕр чĕлхене тӳрремĕнех куçаççĕ, теприсем вара ик-виç чĕлхе урлă тăваттăмĕшне е пиллĕкмĕшне те куçма пултараççĕ. Чĕлхе наукинче ун пек сăмахсене «куçса çӳрекен сăмахсем» (вырăсла «странствующие слова») теççĕ. Тĕслĕхшĕн *каникул* сăмаха илер. Чăваш чĕлхине вăл вырăс чĕлхинчен, вырăс чĕлхине поляк чĕлхинчен, поляк чĕлхине латин чĕлхинчен кĕнĕ. Латин чĕлхине вара ку сăмах грек чĕлхинчен куçма пултарнă. Латин чĕлхинче унăн куçăмлă пĕлтерĕшĕ (тен, тĕп пĕлтерĕшĕ) те пур: вăл Сириус çăлтăра палăртать. Шăрăх çанталăк пуласси çак çăлтăртан килет тесе шутланă авалхи грексем. Шăрăх çанталăкра ĕçлемен пирки ку сăмахăн «ĕç вăхăтĕнчи тăхтав, кану» пĕлтерĕшĕ çуралнă.

*Хăмла* куçса çӳрекен сăмаха хăш чĕлхерен йышăнни пирки калама йывăр. Атăлçи пăлхар чĕлхинче вăл *хумлаг* кӳлепеллĕ пулни паллă, унтан вăл славян чĕлхисене куçма пултарнă *(хмель)*. Вăл финн-угор чĕлхисенче те пур: мари *умла,* ирçе *комоля,* мăкшă *комля,* финн-угор *humala, humal.* Грек тата латин чĕлхисене хăш чĕлхерен кĕни паллă мар (*humulus*). Тĕпчевçĕсен шухăшĕпе *хăмла* тĕп тĕрĕк сăмахĕ: тутарла *колмак,* пушкăртла *комалак,* казахла *кулмак,* алтайла *кумдак.* М. Рясянен шухăшĕпе, тĕрĕк чĕлхисенчи ку сăмах авалхи тĕрĕк чĕлхинчи *qum* ~ чăв. *хум* «волна» пултаракан тĕпрен пулса кайнă (Фед. ЭСЧЯ, II, 326). Чĕлхеçĕсен шучĕпе, чăваш чĕлхинче йышăннă сăмахсен хисепĕ вун пилĕк процентран ытла мар.

Сăмахсене йышăнассин сăлтавĕсем çаксем: 1) чăвашсем ытти халăхсемпе хутшăнса пурăнни: вĕсемпе суту-илӳ енĕпе çыхăнни, политикăпа экономика, культура çыхăнăвĕсене аталантарса пыни.

### Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене икĕ ушкăна пайлама пулать: а) ĕлĕкрех калаçу чĕлхи урлă йышăннă сăмахсем; ă) хальтерех çыру урлă йышăннă сăмахсем.

Раççей патшалăхĕпе пĕрлешсен, вырăс сăмахĕсем чăваш чĕлхине пĕр вĕçĕмсĕрех кĕрсе пынă. Вырăссемпе тачă çыхăну тытса тăнă май чăваш халăхĕ вырăссен вăйлăрах аталаннă культурипе паллашнă, хăйсен пулман ĕç хатĕрĕсемпе усă курма пуçланă, кил-çурт таврашĕнче кирлĕ япаласемпе усă курнă май тĕрлĕ çĕнĕ ăнлавсене ăша хывса пынă, çав ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсемпе усă курма пуçланă. Калаçу чĕлхи урлă йышăннă сăмахсем фонетика тĕлĕшĕнчен улшăнни вĕсене чăваш сăмахĕсем пекех пăхма май парать пек: *пичке, кĕрепле, витре, куршак, суха.* Акă, *суха* сăмахран чăваш чĕлхинчи аффикссем хушăннипе çĕнĕ ăнлавсене палăртакан (ятпару функциллĕ) сăмахсем пулса кайнă: *сухаçă, сухала, сухалакан, сухапуç.* Вырăс чĕлхинчи *соха ~ сока* «патак, шалча, юплĕ йывăç» пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш чĕлхинчи *ака-суха* сăмахри компонентсем пĕр пек пĕлтерĕшлĕ тесе шутламалла. *Ака* сăмах чăваш чĕлхинче икĕ пĕлтерĕшлĕ; ăна словарьсенче омонимсем пек панă: *ака* I «пахота, пашня», «сев, посевная», ку чухне *ака* < *ак*
Λ
«сеять» + *-а* (сăмах тăвакан аффикс); *ака* II уст. «старинный плуг, сабан».

*Ака* сăмах авалхи йывăç плуга пĕлтернĕ чухне, Г. Е. Корнилов шучĕпе, *ак* «патак, турат, кукăр кăк» пĕлтерĕшлĕ сăмах тĕпĕнчен пулса кайнă (Корн. ЕЛП, 11). Чăнах та, ку шухăш тĕрĕссине чăваш чĕлхинчи *măйрака* < *măйри ака* сăмах та çирĕплетет. Апла пулсан, *măйрака* «мăй çинче ӳсекен патак (турат)». *Ака* сăмах ытти тĕрĕк чĕлхисенчи *ағач, ағаш* «йывăç» сăмахпа тӳр килет; тĕрĕк чĕлхисенчен венгр чĕлхине кĕнĕ *аагаш* «авалхи йывăç суха» пĕлтерĕшлĕ.

Ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахсен никĕсĕ çинче сăмах пулăвĕн йăви аталанни çак сăмах чĕлхемĕрте çирĕп тымар янине, тăван сăмах картине кĕме пуçланине систерет: *кĕрпе* (*крупа*): *кĕрпек, кĕрпеклен, кĕрпекле, кĕрпеклет, кĕрпеклĕ; пăшал* (*пищаль*): *пăшаллан, пăшалçă, хĕç-пăшал, хĕç-пăшаллан.*

Калаçу чĕлхи урлă кĕнĕ вырăс сăмахĕсем фонетика тĕлĕшĕнчен «чăвашланнă». Лексика пĕлтерĕшне кура вĕсене ушкăнсем çине пайласа çырса кăтартма пулать:

— ял хуçалăхĕпе çыхăннă ăнлавсене палăртаканнисем: *суха (соха), кĕрепле (грабли), лапатка (лопатка), мотык, муттик, мотик (мотыга), сурат (зарод), шушил, шушшул (сушило), хăмăт (хомут); авăн (овин), тăпач (дубец), мишавай (межевой);*

— çурт-йĕр, кил-çурт таврашĕнчи хатĕр-хĕтĕр ячĕсем: *кĕлет (клеть), мачча (матица), калинкке (калитка), тăрпа (труба), витре (ведро), ухват (охват), турилкке (тарелка), варинкке (воронка), кравать (кровать), сăпка (зыбка), кăмака (каменка), пăрăс (брус), кĕленче (скляница);*

— ĕçме-çимене пĕлтерекен сăмахсем: *апат (обед), пĕремĕк (пряник), сахăр (сахар), шушка (сушки), пĕлĕм (блин), кĕрпе (крупа);*

— атă-пушмак, тумтир ячĕсем: *калуш (галоши), сантал (сандали), пиншак (пиджак), шĕлепке (шляпа), перчетке (перчатки), чăлха (чулок);*

— чиркӳпе тата тĕнпе çыхăннă сăмахсем: *чиркӳ (церковь), мăнастир (монастырь), пачăшкă (батюшка), çветтуй (святой), прaçник (праздник), çветкă (святки);*

— администраципе суд ăнлавĕсене палăртакан сăмахсем: *кĕпĕрне (губерния), уес (уезд), кантур (контора), уретник (урядник), кăлава (голова), тиек (дьяк), ваккат (адвокат), саккун (закон);*

— çар терминĕсем: *пăшал (пищаль), йĕтре (ядро), салтак (солдат);*

— суту-илӳ ĕçĕнчи ăнлавсене палăртакан сăмахсем: *лапка (лавка), тавар (товар); тавар* сăмаха, чăнах та, чăвашсем вырăссенчен илнĕ, анчах вырăс чĕлхине вăл тĕрĕк чĕлхисенчен кĕнĕ; танлаштарăр: уйг., алт. *табар* «товар», уйг., тур. *тавар* «пурлăх», «килти выльăх-чĕрлĕх», крым тутарĕсен чĕлхинче *тувар* «выльăх, выльăх-чĕрлĕх; *пăт (пуд), купса (купец), пухут (поход);*

— транспорт терминологийĕ: *тăрантас (тарантас), потсанккă (подсанки), ритăван (рыдван), парум (паром), лутка (лодка), карап (корабль), вакун (вагон);*

— пайăр ятсем: *Мускав (Москва), Ĕренпур (Оренбург), Аçтăрхан (Астрахань), Çĕпĕр (Сибирь), Якур (Егор), Кĕркури (Григорий), Якку (Яков), Матĕрне (Матрена), Микулай (Николай);*

— халăх ячĕсем: *акăлчан (англичанин), вырăс (русский), яппун (японец), чикан (цыган), пушкăрт (башкир), тутар (татарин), кăркăс (киргиз), нухай (ногаец);*

— вĕрентӳ ĕçĕпе çыхăннă сăмахсем: *шкул (школа), училище (училище), парттă (парта), сумккă (сумка), чернил (чернила).*

Қалаçу урлă вырăс сăмахĕсене йышăнасси тĕрлĕ тапхăрта пулса пынă:

1) XVI ĕмĕрччен йышăннă сăмахсем: *кĕнчеле, кăмпа, ыраш, вырăс, Мускав, Кейӳ (Киев);*

2) XVI—XIX ĕмĕрсенче йышăннă сăмахсем:

— ял хуçалăхĕпе çыхăннă сăмахсем: *ĕçкĕрт (скирда), наçилкка (носилка), авăн (овин);*

— кил-çуртри япала, савăт-сапа ячĕсем: *çенĕк (сени), чашăк (чашка), катка (кадка), сăмавар (самовар), черкке (чарка);*

— апат-çимĕç, пахча çимĕç ячĕсем: *чуста (тесто), кăвас (квас), кĕсел (кисель), салат (солод), пĕлĕм (блин), шаркку (жаркое);*

— чĕр чун ячĕсем: *шапа (жаба), сайкка (зайка)* т. ыт. те.

### Çыру урлă йышăннă сăмахсем

XVI—XIX ĕмĕрсенче вырăс чĕлхинчен чăваш чĕлхине йăла пурнăçĕпе çыхăннă ăнлава палăртакан сăмахсене йышăннă пулсан, XX ĕмĕрте вара обществăпа политика, наукăпа техника, культурăпа искусство ăнлавĕсене палăртакан сăмахсем чăваш чĕлхине кĕреççĕ:

— наукăпа техника терминĕсем: *наука, индустри, электричество, промышленность, технологи, завод, фабрика, цех, автозавод;*

— ял хуçалăх терминĕсем: *колхоз, совхоз, комбайн, трактор, агротехника, культиваци, автопоилка;* ку сăмахсем хăйсемех ял хуçалăхĕ промышленность никĕсĕ çинче аталанма пуçланине кăтартаççĕ;

— профессие кăтартакан сăмахсем: *инженер, техник, слесарь, каменщик, водитель, летчик, шофер, диспетчер, хирург, стоматолог, композитор, дирижер, ученăй, архивариус;* ку сăмахсем чăвашра та çак профессисем анлă сарăлнине хыпарлаççĕ;

— культура терминĕсем: *опера, балет, театр, радио, телевидени, архитектура, кино, роман, музыка, консерватори;* ку сăмахсем хăйсемех халăхăн культури ӳснине кăтартаççĕ.

Çӳлерех илсе кăтартнă сăмахсене сăнасарах пăхсан унта чăн вырăс сăмахĕсемсĕр пуçне вырăс чĕлхи урлă йышăннă ют чĕлхе сăмахĕсем пуррине курма пулать. Вĕсем вырăс чĕлхине кĕрсе çирĕпленеççĕ, кайран вара çыру чĕлхи урлă ытти чĕлхесене (вăл хушăра чăваш чĕлхине те) кĕрсе пыраççĕ.

Грек чĕлхинчен вырăс чĕлхине унтан чăваш чĕлхине кĕнĕ сăмахсем нумайăшĕ наукăпа искусство тата чиркӳпе тĕн ăнлавĕсене палăртаççĕ: *астрономи, грамматика, кафедра, планета, лексика, талант.*

Латин чĕлхинчен кĕнисем наука, обществăпа политика, искусство терминĕсем: *администраци, актив, депутат, лекци, министр, республика, экскурси.*

Çар ĕçĕпе, искусствăпа, общество пурнăçĕпе çыхăннă сăмахсем француз чĕлхинчен вырăссем урлă килнĕ: *батальон, гарнизон, дуэль, артиллери, десант, жюри, актер, балет, суфлер, рояль, одеколон.*

Нимĕç чĕлхинчен вырăссем урлă пирĕн чĕлхене кĕнĕ сăмахсем çар ĕçĕпе, промышленноçпа, кил-çуртпа çыхăннă япаласемпе ăнлавсене палăртаççĕ: *ефрейтор, штаб, рота, штурм, кран, кухня, маляр, галстук, карттус.*

Акăлчан чĕлхинчен вырăс чĕлхине спорт терминĕсем ытларах кĕнĕ, çав халлĕнех вĕсем чăваш чĕлхине кĕрсе вырнаçнă: *спорт, бокс, футбол, баскетбол, теннис, волейбол, бейсбол.*

Итальянецсен чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем ытларах музыка терминĕсем: *альт, бас, тенор, либретто, мандолина, флейта, опера* т. ыт. те.

Вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ сăмахсенчен чылайăшĕ халăхсем хушшинче çӳрекен (интернационаллă) сăмахсем. Халăхсен пурнăçĕнчи чи кирлĕ ăнлавсене палăртнă пирки вĕсем чылай халăх чĕлхисене кĕрсе вырнаçнă. Вĕсен шутĕнче наука, философи, спорт, обществăпа политика терминĕсем: *философи, спорт, президент, экзамен, студент, профессор, лексика, лексикологи, морфологи, синтаксис, прогресс, хоккей, гандбол, шахмат, теннис, бокс* т. ыт. те.

Тĕнче уçлăхне тĕпчес тапхăр пуçланнипе чĕлхемĕре çĕнĕ сăмахсем кĕрсе пычĕç: *космос, космонавт, спутник, луноход. Спутник, луноход* вырăс сăмахĕсем тĕнчери чылай чĕлхене кĕрсе халăхсем хушшинче сарăлнă сăмахсем пулса тăчĕç.

Çыру урлă йышăннă сăмахсем чылай чухне пĕр пĕлтерĕшпе (тĕп пĕлтерĕшпе) чăваш чĕлхине кĕрсе пыраççĕ: *опера, штаб, кино, философи, бокс* т. ыт. те. Икĕ е виçĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тепĕр чĕлхене çав пĕлтерĕшсемпе куçнин тĕслĕхĕсем сахал: *пресса* 1) хаçат-журнал; 2) журналистсем; *полигон* 1) çар терминĕ: хĕç-пăшал сăнамалли вырăн; 2) строительство терминĕ: уçă цех.

## Араб тата перс чĕлхисенчен йышăннă сăмахсем

### (Арабизмсемпе фарсизмсем)

Малтанах уйрăм списокпа ятарласа араб, унтан перс сăмахĕсене илсе кăтартар.

Араб сӑмахӗсем (арабизмсем): *авал, айван, айӑп, ахах, вӑхӑт, ӗмӗр, капӑр, калӑп, лайӑх, масар, меслет, мӗскӗн, мыскара, намӑс, несӗл, пайтах, перекет, салам, самана, сехет, сунтал, сунтӑх, тамаша, телей, тӗнче, халӑх, харам, хут, халат, хак, халал, хисеп, шерпет, элек* т. ыт. те.

Перс сӑмахӗсем (фарсизмсем): *асамат, ансат, аҫтаха, ӗмӗт, кӗсье, йӗтес, йӗтӗн, кахал, кашӑк, кӗрепенкке, кимӗ, кӳкӗрт, наркӑмӑш, начар, нарӑс, пай, патша, сӑнчӑр, сенкер, сехре, сиен, сулӑ, сурпан, ҫӑхав, тараса, тар (порох), тӑшман, тӳшек, хастар, хаяр, хуҫа, чаршав, чей, чӗлӗм, чипер, чӳрече, эрне* [1] т. ыт. те. Хальхи чӗлхере вӗсем тӗп чӑваш сӑмахӗсем пекех курӑнаҫҫӗ, иккӗмӗшле сӑмахсем тумалли никӗс шутланаҫҫӗ.

Чӑваш чӗлхинче араб е перс сӑмахӗсем (арабизмсем, фарсизмсем) пуррине революциччен В. К. Магницкий, Н. И. Золотницкий, Н. И. Ашмарин ӗҫӗсенче каласа хӑварнӑ. Ку ыйтӑва тарӑнрах В. Г. Егоров профессор тӗпченӗ. Вал хӑйӗн «Современный чувашский литературный язык» ӗҫӗнче чӑваш чӗлхинче 100 араб, 70 перс сӑмахӗ пуррине кӑтартать, «Этимологический словарь чувашского языка» кӗнекинче араб тата перс чӗлхинчен йышӑннӑ 240 сӑмаха пӑхса тухать.

М. Р. Федотов ку ыйтӑва тата анлӑрах тишкерет. [2] Вал араб сӑмахӗсем чӑваш чӗлхинче перс сӑмахӗсенчен икӗ хут ытларах пулнине тӗпчесе пӗлет, вӗсен шучӗ 250 сӑмаха ҫитнине палӑртса хӑварать.

Ытти тӗпчевҫӗсен шухӑшӗсене малалла аталантарса, М. И. Скворцов ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ патне пырса тухать: а) араб тата перс чӗлхинчен кӗнӗ пӗрремӗшле сӑмахсем пирӗн чӗлхере 300 сӑмах ытла: ӑ) иккӗмӗшле сӑмахсене шута илсен, арабизмсемпе фарсизмсем пинрен те иртеҫҫӗ. [3]

Араб, перс сӑмахӗсем чӑваш чӗлхине хӑҫан тата мӗнле майпа кӗрсе юлнӑ? Тӗпчевҫӗсем, пӗр шухӑшлӑ пулса, арабизмсемпе фарсизмсем чӑваш чӗлхине ытларах Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗ ӳссе тӗрекленнӗ вӑхӑтра кӗнӗ теҫҫӗ. Ку тапхӑрта араб тата перс купсисем Булгар, Сувар хулисен ялан-

---

[1] Тӗслӗхсене ҫак кӗнекерен илнӗ: Сергеев Л. П. Чӑваш чӗлхи: Справочник. Шупашкар: Руссика, 1994. 27, 28 с.

[2] Федотов М. Р. Об арабских и персидских заимствованиях в чувашском языке // Учен. записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1963. Вып. 26. С. 89—124.

[3] Скворцов М. И. Еще раз об арабско-персидском вкладе в чувашскую лексику // Учен. записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1968. Вып. 39. С. 139—155.

хи хăнисем пулнă. Арабсемпе перссен культури вăл вăхăтра çӳллĕ шайра тăнă, сутă тума турттарса килекен япалисем те хăйсен пахалăхĕпе вырăнти халăхăннинчен чылай лайăх пулнă пулмалла, çавăнпа та вăл япаласен ячĕсем чăваш чĕлхине кĕнишĕн пĕртте тĕлĕнме кирлĕ мар. Тĕслĕхшĕн *алка, ахах, мерчен, шерепе, нухрат, катан (пир), мамăк, пурçăн, сентел, тарай, хăмач, масмак, сурпан, тевет, тухья, çăпата, шăлавар, халат, шаль (тутăр)* сăмахсене илме юрать.

Чăвашсем мусульман тĕнне йышăнман пулин те, пирĕн чĕлхене çав тĕнпе çыхăннă сăмахсем кĕрсе юлнă: *тĕн, асам, киремет, масар, хăямат, шуйттан, ахрат* т. ыт. те. Христос тĕнне йышăниччен чăвашсем те ача ячĕсене час-часах мусульмансенни пек хунă: *Тухтар, Эмир, Керим, Велюш, Хамит, Сайте* т. ыт. те. Вăл ятсем хальхи чĕлхере тĕл пулмаççĕ.

Араб купсисем суту-илӳ тума тутлă йышши çимĕçсемпе эрехсем те илсе килнĕ пулмалла, вăл ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем чăваш чĕлхинче халĕ те сыхланса юлнă: *шăрттан, шерпет, эрех, шӳрпе.* Арабсемпе перссен имçам тăвасси те вăйлă аталаннă. Суту-илӳ çыхăнăвĕсем аталаннă май чăваш чĕлхине тĕрлĕрен эмелсемпе хими препарачĕсен ячĕсем кĕнĕ: *кӳкĕрт, çилĕм, эмел, наркăмăш* (диалектсенче: *маркăмăш*). Чăваш чĕлхинче, кунсăр пуçне, общество пурнăçĕпе çыхăннă араб е перс сăмахĕсем те сахал мар: *мăрса, тӳрешара, патша, хĕсмет, хысна, хырçă.* Пирĕн чĕлхере тата пахалăха, тĕсе палăртакан араб е перс сăмахĕсем тĕл пулаççĕ: *паха, селĕм, ухмах, айван, лайăх, хаяр, капăр, сенкер, чăпар, кахал, шуçă, чапрас, чипер* т. ыт. те.

Арабизмсемпе тата фарсизмсемпе хальхи чĕлхере анлă усă кураççĕ. Вĕсем тĕп чăваш сăмахĕсем пекех сăпатланаççĕ, вĕçленеççĕ, сăмах тăвакан е улăштаракан аффикссем йышăнаççĕ. Хăш-пĕр чухне тĕп чăваш сăмахĕпе араб е перс сăмахĕ, лексика пĕлтерĕшĕпе пĕр пек пулса, мăшăр сăмах туса хураççĕ: *ăс* (чăв.) *-хакăл* (араб.), *ăс* (чăв.) *-хал* (араб.), *вăй* (чăв.) *-хăват* (араб.), *сăн* (перс.) *-сăпат* (араб.), *тӳре* (чăв.) *-шара* (араб.), *кашăк* (перс.) *-çăпала* (чăв.), *ача* (чăв.) *-пăча* (араб.), *тути* (чăв.) *-маси* (перс.).

Чăваш чĕлхине кĕнĕ арабизмсемпе фарсизмсен пысăк пайĕ — япала ячĕсем. Иккĕмĕш вырăнта паллă ячĕсем тăраççĕ.

Чăваш чĕлхин грамматика системинче араб тата перс сăмахĕсем палăрмалла йĕр хăварайман. Сăмах тăвакан аффикссенчен çаксене çеç кăтартма пулать: *-сар (Юмансар,*

*Çăкасар, Хурăнсар* (~ *сур*), *Кайăксар, Варасар, Упамсар*); *-шкал* (*унашкал, кунашкал, çавнашкал, пирешкел, сирешкел*). *Харпăр хăй, харкам хăй* йышши конструкцисенче тĕл пулакан *хар* компонент та — перс чĕлхинчен кĕнĕ сăмах.

Çапла вара, ĕлĕк-авал йышăннă араб, перс сăмахĕсем халăхăмăр калаçăвĕпе çырăвĕнче паян кун та тĕл пулаççĕ.

Хăш-пĕр араб тата перс сăмахĕсем литература чĕлхинче çук, вĕсене вырăнти калаçусенче кăна илтме пулать: *пехĕт, пиала, рехет, элле, аравасăр, мичĕт, нелет* т. ыт. те.

Араб е перс сăмахĕсенчен чылайăшĕ чăваш чĕлхинче архаизмсем е историзмсем шутланаççĕ: *мăрса, мăскал, пихампар, апăс, аçтаха, сăвап* т. ыт. те. Хăш-пĕр сăмахĕсем чăваш чĕлхине тутар чĕлхи урлă кĕнине палăртмалла. Вĕсем мĕнле сăмахсем пулнине тĕпчемесĕр калама май çук. Нумай араб е перс сăмахĕсем чăваш чĕлхинче кăна мар, ытти тĕрĕк чĕлхисенче те анлă сарăлнă. Тĕслĕхрен, *пахча* — перс сăмахĕ, вăл пур тĕрĕк чĕлхисенче те пур. Арабизмсемпе фарсизмсем вырăс чĕлхинче те чылай: *амбар* (чăв. *ампар*), *корабль* (чăв. *карап*), *сахар* (чăв. *сахăр*), *сундук* (чăв. *сунтăх*), *лохань* (чăв. *лаххан*), *базар* (чăв. *пасар*) т. ыт. те.

Асăннă сăмахсем чăваш чĕлхине вырăс чĕлхи урлă е тата вырăс чĕлхине хăйне тĕрĕк чĕлхисем урлă кĕме пултарнă. Çавăнпа та арабизмсемпе фарсизмсем чăваш чĕлхине пĕр вăхăтра (икĕ-виçĕ ĕмĕр хушшинче) кăна кĕрсе юлнă тени тĕрĕс мар пулĕ. Тĕслĕхрен, *магазин, алгебра, адмирал, халва, матрац* тата ытти сăмахсем интернационаллă лексика фондне те кĕрсе юлчĕç. Вĕсем чăваш чĕлхине юлашки икĕ ĕмĕр хушшинче вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ. Асăннă сăмахсене тепĕр чухне вырăс сăмахĕсем тени те тĕл пулать. Ку, паллах, тĕрĕс мар. Чăннипе, вĕсем халăх хушшинче анлă сарăлнă интернационаллă сăмахсен шутне кĕреççĕ.

## Мари, мордва тата удмурт чĕлхисенчен йышăннă сăмахсем

«Пин çул ытла ĕнтĕ чăвашсемпе марисем кӳршĕллĕ пурăнаççĕ. Темиçе ĕмĕр хушши вырьăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăннă чăваш халăхĕ, кӳршĕ мари халăхĕнчен вĕренсе, çĕр ĕçлеме пуçланă, ухутана çӳреме тытăннă.

Чăвашсемпе марисем хушшинче туслăхпа тăванлăх туйăмĕ яланах аталанса пынă. Марисем чăваш хĕрĕсене, чăвашсем мари хĕрĕсене качча илнĕ, пĕр-пĕрин йăли-йĕркине, çи-

пуçне йышăннă. Тухса кай-ха Атăл юпписем тăрăх. Сĕве, Сăр, Юнкă çи марисем чăвашсенчен çи-пуç енчен уйрăлса тăмаççĕ тесен те юрать: çав-çавах шурă кĕпе-йĕм, урара хура тăла, тĕррисем те пĕр пекех.

Чăвашсем — тĕрĕк халăхĕ, марисем — финн-угорсем. Кана наука тахçанах çирĕплетсе панă ĕнтĕ. Анчах та чăн пурнăç наука каланинчен чылай кăткăсрах та пуянрах. Чĕлхе тĕлĕшпе чăвашсем тутарсемпе, пушкăртсемпе хурăнташ пулин те, вĕсен калаçăвĕнче финн-угор сăмахĕсем те темĕн чухлех. Чăвашсен казахсем е алтайсем пек тăхăнмалла-çке тесе шутламалла, анчах вĕсем мари халăхĕ пек шурă халатсемпе çӳреççĕ. Мари калаçма пуçлать те — кашни сăмах çаврăнăшĕнчех чăваш сăмахĕ. Пыр та калаç вĕсемпе, кам кампа хурăнташлă, кам камăн сăмахĕсене йышăннă?».

Ку сăмахсене эпир Ким Васин çырнă «На земле Онара» кĕнекерен [4] илтĕмĕр. Автор фактсене пĕртте пысăклатса кăтартмасть. Тĕпчевçĕсем ĕнентернĕ тăрăх, мари чĕлхинче пин ытла чăваш сăмахĕ.

Чăваш чĕлхинчен йышăннă мари сăмахĕсене тата мари чĕлхинчен чăваш чĕлхине кĕнĕ сăмахсене питĕ анлă та тарăн тĕпчекенсенчен пĕри вăл — М. Р. Федотов профессор. Унăн ку ыйтупа икĕ кĕнеке тухрĕ. [5] Диалектологи материалне те тĕплĕн тишкерсе, автор чăваш чĕлхинче 130 ытла мари сăмахĕ пуррине палăртать.

Г. В. Лукоянов ку ыйтупа ятарласа тĕпчев ĕçĕ çырнă. [6] Хăйĕн кĕнекинче вăл мари сăмахĕсем Чăвашра пур çĕрте те пĕр пек сарăлманнине кăтартать. Чăваш Республикин çурçĕр районĕсенче ку сăмахсен йышĕ пысăкрах, мĕншĕн тесен тури чăвашсем марисемпе ĕлĕкрен хутшăнса пурăннă. Çавăнпа та Г. В. Лукоянов çырса кăтартнă 330 ытла мари сăмахĕнчен çурри майлах диалект сăмахĕсем шутланаççĕ, чăваш литература чĕлхи фондне кĕмеççĕ.

Мари чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене çакăн пек ушкăнсем çине пайласа тухма пулать:

1. Этем тата ӳт-пӳ пайĕсен ячĕсем *(каччă, пакарта, çамка, чĕчĕ* (?), *пит)*.

---

[4] Ким Васин. На земле Онара. М., 1967. С. 138—139.

[5] Федотов М. Р. Исторические связи чувашского языка с языками угро-финнов Поволжья и Перми. Ч. I. Чебоксары, 1965; Унăнах. Исторические связи чувашского языка с волжскими и пермскими финно-угорскими языками. Ч. II. Чебоксары, 1968.

[6] Лукоянов Г. В. Асăннă ĕç.

2. Этеме сӑнарлакан сӑмахсем (*лапшака, латака, пӗлтӗрти, чӑмшӑк, чӑркӑш*).

3. Пӳрт-ҫурта, кил-ҫурт тавраш̆ӗпе ҫыхӑннӑ япаласене пӗлтерекен сӑмахсем (*шалча, шӑчӑ, шӗкле, пӳрт, кӗтес, йӗлтӗр, кунтӑк, куплак, ленкес, лутка, пӗрне, пукан, сӳсмен, ҫурла, тӗкӗ, тенкел, ункӑ*).

4. Ҫи-пуҫ таврашӗпе пир-авӑр терминӗсем (*шупӑр, шӳлкеме, муркка, ҫытма, тӑпка*).

5. Апат-ҫимӗҫ ячӗсем (*кукӑль, нимӗр, сӑсӑл*).

6. Чир-чӗр ячӗсем (*чӗмере, нӑкӑш*).

7. Ӳсен-тӑран тӗнчине пӗлтерекен сӑмахсем (*шӑлан, яхтӑ, кикен, пантӑ (кӗпҫи), пултӑранкӑ, шӑпкан*).

8. Выльӑх-чӗрлӗх тӗнчине кӑтартакан сӑмахсем (*ӑтӑр, пӑши*).

9. Кайӑк-кӗшӗк ячӗсем (*чӗкеҫ, шаланкӑ*).

10. Пула ячӗсем (*кутан, шампа, кӑлчак*).

11. Хурт-кӑпшанкӑ ячӗсем (*кӑткӑ, ӳпре, шӗкӗ, эрешмен*).

12. Ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсен, таврари япаласен ячӗсем (*лапра, муклашка, ура (улӑм ури), шӗлкӗш, нӳрӗ, лӗп, пӑчӑ*).

13. Япаласемпе ӗҫ-хӗлсен паллисене кӑтартакан сӑмахсем (*вашӑк, каштӑркка, мӑнтӑр, патрака, шупка, вӗлкӗш*).

Илсе кӑтартнӑ сӑмахсем пурте тенӗ пекех литература чӗлхине кӗнӗ. Вӗсемсӗр пуҫне, тури диалектра кӑна тӗл пулакан мари сӑмахӗсем те чылай: *кайӑр, кӑрӑш, кенче, коппок, кончака, кошемӗр, лаксӑк, локӑр, мӗнем, нӗркӗ, арша, пӗлетӗш, сарпала, тӑшка, хӑрлин, чашката, шӳеш, эртнӗ, ялка* т. ыт. те. Ку сӑмахсенчен чылайӑшӗ анатри диалектра тӗл пулмасть.

Чӑваш чӗлхине мари чӗлхинчен выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессипе ҫыхӑннӑ терминсем пачах кӗмен, ҫӗр ӗҫ терминӗсем те кунта сахал (эпир пӑхса тухнӑ тӑрӑх, *ҫурла* сӑмах ҫеҫ).

Чӑваш чӗлхинче мари сӑмахӗсем кӑна мар, кӳршӗллӗ пурӑнакан удмурт тата мордва сӑмахӗсем те пур. Пӑлхар патшалӑхӗ вӑхӑтӗнче те, кайрантарах та удмурт тата коми чӗлхисене ик ҫӗр ытла чӑваш сӑмахӗ кӗрсе юлнӑ, мордва чӗлхинче вӗсен шучӗ вӑтӑр таран. Удмуртсем, марисем пекех, ӗлӗк Пӑлхар патшалӑхне те кӗме пултарнӑ. Юнашар пурӑннӑ май, чӑвашсем удмуртсемпе мордва чӗлхисенчен сӑмахсем йышӑннӑ, хӑйсен лексикине пуянлатнӑ. Чӑваш чӗлхине финн-угор чӗлхисенчен кӗнӗ сӑмахсене эпир ытти тӗрӗксен сӑмахӗсемпе танлаштарса пӗлетпӗр: чӑваш сӑмахӗ тӗрӗк чӗлхисенче ҫук пулсан, ҫав вӑхӑтрах вӑл сӑмах ытти финн-

угор чĕлхисенче пур пулсан, эпир ăна, паллах, пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕ тесе шутлама пултараймастпăр.

Ку ыйтăва ятарласа тĕпченĕ ĕҫсем нумай мар. Сăмахран, финн-угор тĕпчевҫи Ю. Вихман чăваш чĕлхинче удмурт чĕлхинчен кĕнĕ ҫакăн пек сăмахсене асăрхать: *пĕрне* — удм. *бырнье,* коми *бурня; кĕтмĕл* — удм. *кудмульы* «шурлăх ҫырли»; *лапа вырăн* — удм. *лап иньты,* коми *льанкыд; пукан* — удм. *пукон* (*пук* «лар»), коми *пукан,* мар. *кӳкен; чĕкеҫ* — удм. *чечек,* коми *чигись,* мар. *цегак.*[7]

*Ан* хирĕҫлев татăкне те чăвашсем удмурт чĕлхинченех илме пултарнă, танлаштарăр: *ан кала — эн вера; ан ҫӳре — эн мун; ан ҫыр — эн гиже.*

Маларах *пукан, чĕкеҫ* сăмахсене мари чĕлхинчен кĕнĕ пулĕ тесе палăртрăмăр, анчах та вĕсене удмурт чĕлхинчен те йышăнма пултарнă. Хирĕҫӳлĕх ан пултăр тесен, вĕсем хăш вăхăтра тата хăш чĕлхерен кĕнине историе шута илсе тĕпчемелле. Ҫирĕплетсех калама ҫук пирки эпир вĕсене икĕ ҫĕрте те асăнтăмăр.

Н. А. Андреев чăваш чĕлхинче йышăннă ҫакăн пек мăкшă (ирҫе-мордва) сăмахĕсем пуррине кăтартать:[8]

| чăвашла | мăкшăлла |
|---|---|
| кала | кял «чĕлхе» |
| вула | вал «сăмах» (чăвашсем *сăмахла* тессине тепĕр чух «вула» теҫҫĕ) |
| кӳш, кӳште | кяж «усал» |
| тачка | начка «чĕрĕ», «йĕпе» (*тачкамас, начкамас* тенисем диалектра тĕл пулаҫҫĕ) |
| | вьнвпанде «йăран» |

Вĕсем пурте мордва сăмахĕсем пулнине ҫирĕплетсе калама май ҫук.

### Монгол чĕлхинчен йышăннă сăмахсем

Чăваш чĕлхинче араб-перс, финн-угор сăмахĕсемпе пĕрлех монгол сăмахĕсем пур тесе шутлаҫҫĕ тĕпчевҫĕсем. Анчах та ку ыйту питĕ тавлашуллă, ăна тарăн ҫутатса парас тесен, чĕлхе историне те, халăхсен историне те тĕпчес пулать. Пĕрремĕш пысăк ыйту вăл — алтай чĕлхисен пĕрлĕхĕ ҫинчен

---

[7] Кун ҫинчен В. Г. Егоровăн «Современный чувашский литературный язык» (Чебоксары, 1971) кĕнекинче те (100—110 с.) вулама пулать.

[8] Андреев Н. А. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1961. 70 с.

калакан гипотезăна татса парасси.[9] Çак задачăна пурнăçлас тесен, тĕрĕк чĕлхисемпе монгол чĕлхисем тата монгол чĕлхисемпе тунгус-маньчжур чĕлхисем хушшинчи çыхăнăва танлаштарса пăхмалла. Асăннă чĕлхесен лексикине кăна вĕренни çителĕксĕр, çавăнпа ку чĕлхесен фонетика пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене палăртни тата грамматика категорийĕсене танлаштарни те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Паллах, чăваш чĕлхинче монгол сăмахĕсем пурри танлаштаракан чĕлхесем тăванлă пулнине татăклă çирĕплетеймест. Монгол сăмахĕсем чăваш чĕлхине тахçан авал чăваш йăхĕсем хунсен патшалăхĕнче чухнех кĕрсе юлма пултарнă е кайран, Чингисхан вăхăтĕнче е тутар-монголсем тĕрĕк халăхĕсене пăхăнтарсан, пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçма пултарнă. Вăл тапхăрта монголсем, тĕрĕк сăмахĕсене йышăнса, хăйсен чĕлхине пачах манса кайнă тесен те юрать. Тĕрĕк чĕлхисен лексики вара монгол сăмахĕсемпе пуянланса юлнă.

Чăваш чĕлхинче монгол сăмахĕсем пуррине е пулма пултарнине В. Г. Егоров профессор çырса кăтартнă.[10] Çак чĕлхесенче тĕл пулакан пĕр евĕрлĕ сăмахсене вăл икĕ ушкăна пайлать: 1) монгол, чăваш тата ытти хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче те пур сăмахсем; 2) чăваш тата монгол чĕлхисенче кăна тĕл пулакан сăмахсем (ку ушкăна фонетика формипе урăхларах тата пĕлтерĕшĕ пĕр килмен хăш-пĕр тĕрĕк сăмахĕсене те кĕртнĕ).

В. Г. Егоров пĕрремĕш ушкăнра çак сăмахсем пулма пултарнине палăртать:

| чăвашла | монголла | тĕрĕкле |
|---|---|---|
| урпа | арбай | арпа |
| пăрçа | бурцаг | борчаг |
| пăтă | будаа | бутка |
| вăрă | уре | урук |
| пыл | баа | бал |

---

[9] Щербак А. М. Об алтайской гипотезе в языкознании // Вопр. языкознания. 1959. № 6.

Клоусон Д. Лексикостатическая оценка алтайской теории // Вопр. языкознания. 1969. № 5.

Баскаков Н. А. Ареальная консолидация древнейших наречий и генетическое родство алтайских языков // Вопр. языкознания. 1971. № 3.

Доерфер Г. Можно ли проблему родства алтайских языков разрешить с позиций индоевропеистики? // Вопр. языкознания. 1972. № 3.

[10] Егоров В. Г. Современный чувашский литературный язык .С. 105—108.

| | | |
|---|---|---|
| мул | мол | мал |
| ар | эре | эр, ир |
| паттăр | богатур | алт. патыр; кăрк., турк. богадыр |
| хуп | хап | хап |
| хурал | хурал | каравыл, карауыл |
| анчăк | анг | анг |
| пуян | баян | бай |
| нăхта | нохта | мокта |
| чĕлпĕр | цолбогур | чылбыр |
| ĕне | ӳне | инек |
| путене | бӳтне | бодӳне |
| чăхă | тахиа | таук |
| тимĕр | темӳр | темир |
| тусан | тогосун | тос, тозан |
| йĕке | ийг | иг |
| çак | чӳг | юг |
| хăйра | хайрга | кайрак т. ыт. те. |

Пĕрремĕш ушкăна кĕрекен сăмахсене чăннипех монгол чĕлхисенчен йышăннă тесе çирĕплетме питех те хĕн. Ятарласа тĕпчемесен, вĕсене монгол чĕлхисене кĕнĕ тĕрĕк сăмахĕсем тесе те пăхма пулать. Ыйтăва тĕрĕс татса парас тĕллевпе А. Рона-Таш профессор синоним сăмахсен пĕлтерĕшне тĕпе хума сĕнет тата сăмахăн этимологине тĕпчеме хушать.[11] Қалăпăр, икĕ синоним сăмах А чĕлхере пĕр япаланах пĕлтереççĕ, çав синонимсенчен пĕри анчах Б чĕлхере пур, апла пулсан, вăл йышăннă сăмах пулма пултарать. Анчах та ку шанчăклă аргумент мар, мĕншĕн тесен синонимсем кашни чĕлхерех пулма пултараççĕ. Сăмахран, монгол чĕлхинче *ĕмсӳн* — «хăйăр», *кумаки* — «хăйăр», авалхи пăлхар чĕлхинче *кумак* — «хăйăр», авалхи тĕрĕк чĕлхинче *кум* — «хăйăр». Апла пулсан, *кум, кумак* — монгол сăмахĕсем тесе шутлама май килет.

Е пĕр-пĕр сăмах А тата Б чĕлхесенче пĕр пек формăпа тĕл пулать, анчах та А чĕлхере унăн этимологине ăнлантарма май çук, çав вăхăтрах Б чĕлхере вăл сăмахăн тĕпне е сăмах тăвакан аффиксне тупма пулать, вара ăна Б чĕлхерен йышăннă тесе калама пултаратпăр: монголла *икире,* чăвашла *йĕкĕреш,* авалхи пăлхарла *икир,* авалхи тĕрĕкле *екиз, еки* «иккĕ». Ку принципа тĕпе хурсан, *йĕкĕреш, йĕкĕр* сăмахсене монгол чĕлхинчен кĕнĕ теме май çук.

---

[11] Рона-Таш А. Общее наследие или заимствования? // Вопр. языкознания. 1974. № 2.

Е тата сăмах икĕ чĕлхере те пур, анчах та А чĕлхере унăн пĕр тĕп пĕлтерĕш кăна, çав вăхăтрах Б чĕлхере темиçе пĕлтерĕш те пур. Апла пулсан, А чĕлхене вăл Б чĕлхерен кĕме пултарнă. Танлаштарăр:

| чăваш чĕлхинче | монгол чĕлхинче | тĕрĕк чĕлхисенче |
|---|---|---|
| тырă | тариан | тары «вир» |
| тулă | талик | |
| икерчĕ | акарча | |
| турăх | тарак | |
| нар (нар пек) | нар (наран) | |
| çыр | зурах | |
| ача | ач (мăнук) | |
| пилĕк | бэлхӳӳг | тут. бил |
| йĕкĕр | икире | тут. игез |
| тиха | тахак | |
| пăру | буру | бузагу |
| тутăр | татурган | |
| чул | чулу | таш |
| тăхлан | тухулган | |
| хăйăр | хайр | |
| пĕчĕк е пĕчĕккĕ | бичикан | |
| хавшак | хавшгай | |
| пĕтĕ | бот | кăрк. бооз |
| кала | кале | |
| сăлтав | шалтаг | уйг. сылтав |
| какай | гагай «сысна» | |
| хурав | хариун | |
| юмçă | кам | |

Монгол тата чăваш чĕлхисенче *р* сасă вырăнне тĕрĕк чĕлхисенче *з* сасă тăрать, *л* сасă вырăнне — *ш* сасă:

| чăваш чĕлхинче | монгол чĕлхинче | тĕрĕк чĕлхисенче |
|---|---|---|
| хĕл | холдӳӳ «шăн» | кыш |
| чул | чулун | таш |
| пăру | буру, бирагу | бузагу |
| вăкăр | ӳкер, ӳхер | огуз, ӳгез |
| çыр | зиру | яз |

Анчах та *л* сасăпа *ш* сасă ылмашасси тĕрĕк тата монгол чĕлхисенче çирĕпленсе çитнĕ теме май çук. Акă тĕслĕхсем:

| чăваш чĕлхинче | монгол чĕлхинче | тĕрĕк чĕлхисенче |
|---|---|---|
| çул (кун-çул) | йил, йыл (бурят-монг.) | йул, йол, чол, жол |

| | | |
|---|---|---|
| çул | зол | йол. йул, юл |
| мулаххай | малгай | малахай |
| пăлчав | болзоон | болжал, болчаг |

**Китай, санскрит (инди) чĕлхисемпе чăваш чĕлхинчи пĕрпеклĕхсем**

Ку питĕ кăткăс ыйту. Тĕрĕссипе калас пулсан, çак пĕрпеклĕхсене никам та çине тăрса тĕпчемен. Н. И. Ашмарин китайпа чăваш чĕлхисем хушшинче лексика çыхăнăвĕ пуррине асăнса кăна иртет.[12] В. Г. Егоров профессор вара чăваш чĕлхинче пилĕк-ултă китай сăмахĕ пуррине кăтартать: *чи* (вăйлатакан татăк), *чике* (виçе ячĕ), *чӳк, çын, çĕн* (глагол).[13]

Н. А. Андреев чĕлхеçĕ тишкерсе тухнă тăрăх, чăвашпа китай чĕлхисем хушшинче чылай пĕрпеклĕх тупма пулать, çав сăмахсем сасă тĕлĕшĕнчен те, пĕлтерĕшĕсемпе те е пĕр пек, е çывăх.[14] Танлаштарăр:

| чăвашла | китайла |
|---|---|
| çу (сăмахран, сив çу, услам çу) | иу, ю |
| çу (кĕпе çу) | сви |
| çу (çулла) | сьиа |
| çу (çу, çумăр, юр çăвать) | сьиа (юр, çумăр çинчен) |
| çи (япалан тулаш енĕ) | зьи |
| çи (яшка çи) | чи, чы |
| çын | жень |
| çĕнĕ | сьин |
| çан (пӳ-си, çан-çурăм) | шэнь |
| çĕн (çĕнес, çĕнтерес) | чань |
| тан (тикĕс) | тань |
| тин (анчах) | зьинь |
| тав (тавлашу) | дау |
| суя | зьиа |
| чуччу | цюцянь |
| тусан | тужан |
| кĕнеке | кань кэ |
| чăн | чэн |
| хунь (хуньăм) | хунь |

[12] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Рукописный фонд / ЧНИИ. Т. 32. С. 6.

[13] Егоров В. Г. Введение в изучение чувашского языка. М., 1930. С. 98—101.

[14] Андреев Н. А. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. 74, 75 с.

Акă, *çĕнĕ* сăмаха илсе пăхар. Янравлăхĕпе вăл китайпа чăваш чĕлхисенче кăна мар, монгол чĕлхисенче те пĕр евĕрлех: *шинэ*. Тĕрĕк чĕлхисенче те çакнах асăрхатпăр. Сăмахран, казах чĕлхинчи *жана,* кăркăс чĕлхинчи *жаны,* калмăк чĕлхинчи *шин* китай чĕлхинчен кĕнĕ тесе калама йывăр.

*Тав* (*тавлашу*) сăмах, В. Г. Егоров шухăшĕпе, тĕрĕк чĕлхисене араб е перс чĕлхисенчен кĕнĕ. Тĕрĕк чĕлхисем урлă вăл китай чĕлхине кĕме пултарнă.

*Тан* сăмах пур тĕрĕк чĕлхисенче те çӳренĕ пирки ăна китай сăмахĕ тесе калама йывăр, танлаштарăр: авалхи тĕрĕк, казах, кăркăс чĕлхисенче *тен,* уйгур чĕлхинче *тэн,* узбек чĕлхинче *тенг,* хакас чĕлхинче *тин,* туркмен чĕлхинче *ден.*

*Çын* сăмаха, чăнах та, китай чĕлхинчен кĕнĕ тесе шутлама май пур, мĕншĕн тесен ытти тĕрĕк чĕлхисенче пуринче те ку пĕлтерĕшпе *одам, эдем, этем* сăмахсем çӳреççĕ. Чăваш чĕлхинче вара *этем* те, *çын* та пур.

Н. А. Андреев чăваш чĕлхинче санскрит (авалхи инди чĕлхи) элеменчĕсем пуррине те палăртать:

| чăваш чĕлхинче | санскрит чĕлхинче |
|---|---|
| вар (çырма) | вар (и) «шыв» |
| вăй | вăйа |
| йăва (чустаран тунă çимĕç) | йăва «урпа, тырă» |
| юр (чухăнлăх) | йар «начарлан» |
| карт (кас) | карт |
| мая (çăмарта, вăрлăх çăмарта) | бейа «вăрлăх» |
| çăва (масар) | сава «вилĕ» |

Ку сăмахсем санскрит чĕлхинчен тӳрех чăваш чĕлхине кĕнĕ теме май çук. Çитменнине тата, вăл сăмахсем ытти чĕлхесенче те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхшĕн *вăй* сăмаха илер. Вăл чăваш чĕлхине мари чĕлхинчен кĕнĕ тесен тĕрĕсрех пулать,[15] мĕншĕн тесен ку сăмах финн-угор чĕлхисенче чылайăшĕнче пур: мари чĕлхинчи *вий,* финн-угор чĕлхисенче *война,* манси чĕлхинче *вай,* ханты чĕлхинче *вей, вег.*

## Тутар чĕлхинчен йышăннă сăмахсем

Тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем çинчен калаçу пуçарас пулсан, çакна ас тумалла: вăл та тĕрĕк чĕлхисен шутне кĕрет, çавăнпа та тутар чĕлхинчен йышăннă сăмахсене пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсем тесе те пăхма пултаратпăр, мĕншĕн тесен вăл сăмахсем асăннă чĕлхере кăна мар, ытти хурăнташ

[15] Лукоянов Г. В. Марийские заимствования в чувашском языке. С. 74.

чĕлхесенче те тĕл пулаççĕ. Апла пулин те, тĕпчевçĕсем чăваш чĕлхинче «тутар сăмахĕсем» пуррине кăтартаççĕ. Паллах, авалтан кӳршĕллĕ пурăннă икĕ халăх пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр пурăнман, çавна май пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене сăмахсем куçасси анлă сарăлнă.

В. Г. Егоров, тутар сăмахĕсем чăваш чĕлхине Хусан ханстви вăхăтĕнче кĕрсе юлма пултарнине палăртса, вĕсене фонетика уйрăмлăхĕсем тăрăх ушкăнлать.[16]

П ĕ р р е м ĕ ш  у ш к ă н. Икĕ чĕлхере те сăмах пуçламăшĕнчи *й* сасă хыççăн *а* сасă тăрать (хальхи орфографи ку сасăсен пĕрлĕхне *я* графемăпа палăртать):

| чăваш чĕлхинче | тутар чĕлхинче |
|---|---|
| ялан | ялан |
| янах | янак |
| япăх | ябык |
| ясмăк | ясмык |
| яхăн | якан |
| ят | ат |

И к к ĕ м ĕ ш  у ш к ă н. Сăмах пуçламăшĕнче *й* сасă хыççăн *а, у* сасăсем мар, *ă, ĕ, е* тата *ы, и, е* уçă сасăсем пулаççĕ:

| чăваш чĕлхинче | тутар чĕлхинче |
|---|---|
| йăваш | яуаш |
| йăмшак | йомшак |
| йăнăш | янгыш |
| йĕс | йиз |
| йăмран | йымран |

В и ç ç ĕ м ĕ ш  у ш к ă н. Сăмахсен пĕрремĕш сыпăкĕнче *а* сасă умĕн *й* сасă çук:

| чăваш чĕлхинче | тутар чĕлхинче |
|---|---|
| алка | алка |
| акăш | аккош |
| хапха | капка |
| карчăк | карчык |
| кантăк, карăнтăк | карындык |

Т ă в а т т ă м ĕ ш  у ш к ă н. Тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче *с* сасă сыхланса юлнă, авалхи чăваш чĕлхинче *с* сасă вырăнне *р* пулнă: *тăкăс — тăвăр, тинĕс — тенгер, Хусан — хуран — казан.*

---

[16] Егоров В. Г. Современный чувашский литературный язык. С. 90.

П и л л ĕ к м ĕ ш  у ш к ă н. Кунта анатри диалектра кăна тĕл пулакан тутар сăмахĕсем кĕреççĕ: *куймак* (тутарла *каймак)* — тури диалектра *пĕлĕм* е *икерчĕ*; *яш*, *йĕкĕт* — турисен *каччă; явлăк* — турисен *тутăр, тоттăр.*

Çӳлте кăтартнă хăш-пĕр сăмахсем, чăнах та, тутар чĕлхинчен кĕнĕ тесе татăклăн калама çук. Тĕслĕхрен, *алка* сăмах, В. Г. Егоров çирĕплетнĕ тăрăх, араб чĕлхинчен кĕнĕ. [17] *Кантăк* тата *карăнтăк* вариантлă сăмахсем тĕп чăваш сăмахĕсем пулма пултараççĕ (*кар* — сăмах тымарĕ). Чăваш сăмахне тутарсемпе пушкăртсем йышăнма пултарнă.

## ЧĂВАШ ТАТА ТУНКĂС-МАНЬЧЖУР ЧĔЛХИСЕНЧИ ПĔР КИЛЕКЕН СĂМАХСЕМ

Ку пайра пăхса тухакан сăмахсене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене кĕнĕ тесе çирĕплетсех каламăпăр, вĕсем алтай ушкăнне кĕрекен чĕлхесенчи пĕр килекен сăмахсен ушкăнне кĕреççĕ.

Малтанах ротацизм тата зетацизм ыйтăвĕсемпе çыхăннă лексика единицисене пăхса тухăпăр.

Ку таранччен монгол тата чăваш чĕлхисенче ротацизм, тĕрĕк чĕлхисенче зетацизм хуçаланни пирки пĕрре мар çырнă, тĕрĕсрех каласан, монгол тата чăваш чĕлхисенче *р* сасă пулсан, ытти тĕрĕк чĕлхисенче *з* сасă тăрать. Аяларах илсе кăтартнă тĕслĕхсенче тункăс-маньчжур чĕлхисенче те *р* сасă хуçаланни курăнать:

| чăваш чĕлхинче | монгол чĕлхинче | тункăс-маньчжур чĕлхисенче | тĕрĕк чĕлхисенче |
|---|---|---|---|
| çыр «писать» | зура | нан. н'иру<br>эвенк. суруй<br>маньч. җиру | яз, ёз, жас |
| тар «убегать» | тара | эвенк. тара | дис — тиз |
| чĕр, чĕркуççи | турий | эвенк. тирэксэ | тиз — тез |
| тӳрĕ | | ороч. чур | тӳз — дӳз |
| чĕр «царапать» | | эвенк. чури<br>чирчи «сцарапать» | узб. чыз<br>тут. сыз |

### Еç хатĕрĕсен ячĕсем

| чăваш чĕлхинче | тункăс-маньчжур чĕлхисенче |
|---|---|
| кусар «пысăк хулăн çĕçĕ» | удм. кусигэ «çĕçĕ» |
| пуртă | эвенк. пурта «çĕçĕ» |

[17] Егоров В. Г. Современный чувашский литературный язык. С. 101, 102.

| | |
|---|---|
| çĕçĕ | нег. усэ «çĕçĕ» |
| савăл | эвенк. шиволан, ульч. сивал, ороч. сувал |
| тукмак | ороч. тункун |

**Кил-çурт таврашĕнчи япаласем**

| чăваш чĕлхинче | тункăс-маньчжур чĕлхисенче |
|---|---|
| кил «дом» | эвенк. гулэ «изба» |
| пура | эвенк. пури «лабаз» |
| чăлан | эвенк. чонал «место в чуме» |
| нирке «венец», «звено в срубе» | эвенк. һарчи «низ» |
| тĕнĕ (шăтăкĕ) | мар. доно — тоно «дымовое отверстие» |
| тĕкĕ, тĕрек | эвенк. турга |

**Савăт-сапа ячĕсем**

| | |
|---|---|
| кăмкан «рукомойник» | мар. хумган «кувшин, сосуд» |
| кунтă «лукошко» | ороч. конди «ковш» |
| пурак | ульч. пурă «мешок» |
| савăт «посуда» | эвенк. савода «вещь» |
| çарма: катка-çарма | эвенк. урмэ «сосуд» |
| хуран | эвенк. калан «котел» |
| чăм | эвенк. чомо «стакан, бокал, посуда, чашка» |

**Çи-пуç, тумтир ячĕсем**

| | |
|---|---|
| калпак | эвенк. кэлпэкэ «детская одежда» |
| саппун | нег. сипýн «сукно» |
| çухава | эвенк. саүа «воротник» |
| тăлăп | эвенк. тулумкан «мешок из кожи» |
| тум | эвенк. сум — сун «одежда, шуба» |

**Транспорт**

| чăваш чĕлхинче | тункăс-маньчжур чĕлхисенче |
|---|---|
| кимĕ | ульч. гилэ «лодка» |
| çуна | эвенк. синак, якут. сынах «полоз саней» |
| çатан «тăрантас» | сол. сезин «телега» |

**Çут çанталăкри пулăмсен ячĕсем**

| | |
|---|---|
| ейÿ «разлив, половодье» | эвенк. эјӯн «поток», эјим «полынья» |

| | |
|---|---|
| йĕпе «мокрый» (о погоде) | эвенк. jэпу «жидкий» |
| лапка: лапка-лапка юр çăвать | эвенк. либкэ «первый снег» |
| пăр «град» | эвенк. бојйкта «град» |
| тăм «заморозки» | эвенк. доното «мороз» |
| тапă «наводок» | нан. талбо «заводь» |

Çӳлерех илсе кăтартнă сăмахсене чăвашсем тӳремӗнех тункăс-маньчжур чĕлхисенчен илнĕ теме май çук, мĕншĕн тесен çав сăмахсенчен чылайăшне ытти тĕрĕк е монгол чĕлхисенче тупма пулать. Апла пулсан вĕсенчен чылайăшĕ алтай ушкăнне кĕрекен чĕлхесен пĕрлехи фончĕ шутланма тивĕç.

Анчах та *савăл — шиволан, сивал, сувал* «клин» йышши сăмахсем пирки уйрăммăн каламалла. В. Г. Егоров хăйĕн «Чăваш чĕлхин этимологи словарĕнче» В. В. Радлов словарĕнчен илнĕ пĕртен-пĕр параллель кăна парать: куманд. леб. *сыгыс* «клин» (Радлов. IV, 620); *г* ~ *в*; *с, ш* ~ *л* (Ег. ЭСЧЯ, 174).

М. Р. Федотов хăйĕн «Этимологи словарĕнче» (II, 3, 4) В. Г. Егоров танлаштарăвĕ иккĕленӳллĕ пулнине палăртать те, Х. Эрен сĕннĕ пек турккă чĕлхинчи (анатоли диалектĕнчи) *sigil* «тимĕр е йывăç савăл» тенине чăваш чĕлхинчи *савăл* сăмахпа танлаштарма май пуррине кăтартать, фонетика варианчĕсене те парать: *siyil, singil,* анчах та ку сăмахсен тымарĕ мĕне пĕлтерни паллă мар.

В. Г. Егоров та, М. Р. Федотов та *савăл* сăмахăн параллелĕсем тункăс-маньчжур чĕлхисенче пуррине кăтартман.

# ЧӖЛХЕРИ СӐМАХСЕН ЙЫШӖ УСӐ КУРАС ЕНЧЕН СИЙЛЕННИ

## ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРА ЧӖЛХИН НИКӖСӖ

Чӑваш чӗлхин лексикине, ытти пур чӗлхесенчи пекех, усӑ курас енчен икӗ тӗп ушкӑна пайлама пулать: пӗтӗм халӑх усӑ куракан лексика тата халӑхӑн пӗр-пӗр йышӗ усӑ куракан лексика.

Пӗтӗм халӑх усӑ куракан лексика — чӑваш литература чӗлхин тӗреклӗ никӗсӗ, ӑна хӑй евӗрлӗ тума пулӑшакан типмен ҫӑл куҫ. Пӗтӗм халӑх усӑ куракан сӑмахсем чӑвашла калаҫакан кашни ҫыншӑнах паллӑ, вӗсем калаҫура та, литература чӗлхинче те тӗл пулаҫҫӗ.

Пӗтӗм халӑх усӑ куракан лексика шутне ҫак сӑмахсене кӗртме пулать:

а) тӑванлӑха палӑртакан сӑмахсем (*атте, анне, пичче, йӑмӑк, шӑллӑм, аппа, йысна, инке, хуньӑм, хунчӑкам*);

ӑ) ҫыннӑн е чӗр чунӑн ӳт-пӳ пайӗсене палӑртакан сӑмахсем (*чӗре, алӑ, куҫ, ҫӑвар, сӑмса, чӗлхе, хӑлха, пуҫ, янах, ҫамка, ҫӳҫ, ҫӑм*);

б) кил-ҫурт тата унпа ҫыхӑннӑ япаласен ячӗсем (*пӳрт, ҫурт, ампар, сарай, карта, вите, алӑк, витре, пӑчкӑ, ҫӑра, пуртӑ*);

в) тискер чӗрчунсемпе килти выльӑхсен ячӗсем (*упа, кашкӑр, тилӗ, мулкач, ҫӳлевӗҫ, ӗне, сурӑх, путек, пӑру, сысна*);

г) кайӑк-кӗшӗк ячӗсем (*чакак, курак, чана, кӑвакарчӑн, чӑх, кӑвакал, хур*);

д) йывӑҫ-курӑк ячӗсем (*йӑмра, хурама, юман, ҫӑка, чӑрӑш, пилеш, палан, йӗлме, каврӑҫ, шӗшкӗ, вӗрене, хыр*);

е) пахча ҫимӗҫ ячӗсем (*пан улми, ҫӗр улми, кӑшман, кишӗр, хӑяр, сухан, ыхра*);

ё) ӗҫме-ҫиме ячӗсем (*ҫӑкӑр, аш, сӗт, шыв, пыл, пӑтӑ, сӑра, эрех*);

ж) кӗпе-тумтир ячӗсем (*кӗпе, йӗм, ҫӗлӗк, кӗрӗк, тӑлӑп*);

з) халӑх ячӗсем (*вырӑс, тутар, ҫармӑс, еврей, пушкӑрт, кӑркӑс, узбек, чикан, нимӗҫ, акӑлчан, француз, турккӑ*);

и) шкул тата унпа çыхăннă япаласен ячĕсем (*шкул, класс, парта, доска, хут, ручка*);

й) тĕнче уçлăхĕпе çыхăннă япаласен ячĕсем (*хĕвел, уйăх, çăлтăр, пĕлĕт*);

к) çут çанталăк пулăмĕсен ячĕсем (*çил, çумăр, тăвăл, уяр, юр*);

л) япаласен паллисене пĕлтерекен сăмахсем (*пысăк, пĕчĕк, лутра, симĕс, сарă, хĕрлĕ, лайăх, япăх, шултра, кĕске, лапчăк, вăрăм*);

м) ĕçе-хĕле палăртакан сăмахсем (*çи, ĕç, ĕçле, пурăн, вĕрен, кай, кил, шухăшла, лар*);

н) учрежденисен ячĕсем, политика терминĕсем (*институт, бюро, министерство, закон*) т. ыт. те.

Паллах, пĕтĕм халăх усă куракан сăмахсене вун ултă ушкăна çеç пайлани питех те çителĕксĕр, мĕншĕн тесен вĕсен шучĕ тата пысăкрах.

Халăхăн пĕр-пĕр йышĕ усă куракан лексика шутне вырăнти калаçу (диалект) лексики кĕрет. Вырăнти калаçу, е диалект, тесе пĕр-пĕр территорире тĕл пулакан чĕлхе уйрăмлăхĕсене калаççĕ. Вырăнти калаçу, диалект уйрăмлăхĕсене тĕпчекен ăслăлăха диалектологи теççĕ. Диалектсемсĕр чĕлхе çук та пулĕ. Сăмахран, чăваш чĕлхинче икĕ диалект, мари чĕлхинче — виççĕ. Диалект чĕлхен пĕр пайĕ пулса тăрать, хăйĕн уйрăмлăхĕсемпе литература чĕлхине е тепĕр диалекта хирĕçлет.

Литература чĕлхипе диалектсем хушшинче çакăн пек уйрăмлăхсем пур:

1) диалект чĕлхи тĕрлĕ вырăнта пурăнакансен тĕрлĕрен пулать. Қалăпăр, Сĕнтĕр чăвашĕпе Вăрмар чăвашĕ пĕр-пĕрне ăнланаççĕ пулин те, вĕсен калаçăвĕнче уйрăмлăхсем палăраççĕ. Çакă диалектсем пĕр-пĕринчен территорилĕх принципĕпе уйрăлса тăнине кăтартать. Литература чĕлхинче кун пек принцип çук;

2) литература чĕлхин икĕ форма пулать: калаçу чĕлхи тата çыру чĕлхи. Диалект чĕлхи вара ытларах сăмах вĕççĕн çӳрет;

3) диалект чĕлхипе кулленхи калаçура (килте, ял-йышра усă кураççĕ пулсан, литература чĕлхи вара пур çĕрте те сарăлнă. Вăл литературăпа культура, наука чĕлхи, çав вăхăтрах куллен калаçмалли чĕлхе те.

Чĕлхери уйрăмлăхсене кура чăвашсен икĕ диалект пуррине палăртаççĕ: тури тата анатри. Қашни диалектăн хăйĕн вырăнти калаçăвĕсем пур. Çак икĕ диалектăн вырăнти кала-

çăвĕн уйрăмлăхĕпе пĕрпеклĕхĕсене Н. И. Ашмарин, Т. М. Матвеев, А. С. Ҫанюкова, Л. П. Сергеев чĕлхеçĕсем пайтах тишкернĕ. Л. П. Сергеев икĕ диалект уйрăмлăхĕсемпе пĕрлех хутăш (е куçăмлă) калаçу пуррине те палăртать.[18] Хутăш калаçу Вăрнарпа Йĕпреç тавра шĕнчен пуçланать те Чăваш Республикин çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле Атăл хĕррине çитиччен тăсăлать.

Вырăнти калаçура çеç тĕл пулакан, литература чĕлхине кĕмен е кĕрсе çитеймен сăмахсене диалектизмсем, е диалект сăмахĕсем, теме йышăннă.

Диалект лексикинче çакăн пек диалектизмсем пуррине палăртмалла: фонетика, грамматика, лексика, семантика, этнографи, фразеологи диалектизмĕсем тата сăмах пулăвĕн диалектизмĕсем.

Фонетика диалектизмĕсем тесе литература чĕлхинчи сăмахсенчен сасă тĕлĕшĕнчен уйрăлса тăракан, анчах пĕлтерĕшĕпе вĕсемпе пĕр пек сăмахсене калаççĕ: *кăçкăр, шохăш, холăм, итем, тилкепе, тӳлхепе, пӳтене, потяна, питене, путяна, ăвăç, увăç, ывçă, уçă, ӳç, коккăль, çамçа, шулчă, молча, мăкăр, тоттăр, опа, вурăс, шу, çок, пытяк* т. ыт. те.

Литература чĕлхинче вĕсене çак вариантсем тивĕçлĕ: *кăшкăр, шухăш, хулăн, йĕтем, тилхепе, путене, ывăç, кукăль, çемçе, çулçă, мунча, вăкăр, тутăр, упа, вырăс, шыв, çук, путек* т. ыт. те.

Литература чĕлхинчи сăмахсенчен фонетика диалектизмĕсем çакăн пек паллăсемпе уйрăлса тăраççĕ:

а) сасăсем ылмашнипе *(орам — урам, тĕрне — тăрна, хăлач — хăлаç, шулчă — çулçă, мăкăр — вăкăр, вакша — пакша);*

ă) литература чĕлхипе танлаштарсан, диалект сăмахĕсенче ытлашши сасăсемпе сыпăксем пур е хăш-пĕр сасăсемпе сыпăксем çук *(мулкачă, шăнкăрчă, лаçă, вĕтрен, путран);*

б) сасăсен вырăнĕсем ылмашнипе *(юмçă, çивчĕ, милкĕ, тиркĕ, ывçă, хорăç).*

Фонетика диалектизмĕсене тепĕр майлă литература чĕлхинчи сăмахсен диалект варианчĕсем теме пулать.

Грамматика диалектизмĕсем тесе литература чĕлхине йышăнман аффикссем хушăнса пулнă сăмахсен формисене калаççĕ. Ку диалектизмсем падеж, вăхăт, сăпат, хисеп тата япала ячĕсен камăнлăх формисенче ытларах тĕл пулаççĕ.[19]

---

[18] Сергеев Л. П. Чăваш чĕлхин вырăнти калаçăвĕсем. Шупашкар, 1969.
[19] Сергеев Л. П. Асăннă ĕç. 11 с.

Тĕслĕхсем вырăнне çак сăмахсене илсе кăтартма пулать: *çынсам, çынсань, çынсане, çынсанĕн; хулая; çырат, çыратĕ, çырмас; çырува, çыруя; лашайа, пăруйа, лашасама, курат* (курат), *каймас, пĕлмес, калимас, хусамăр* т. ыт. те.

Лексика диалектизмĕсем литература чĕлхин нормине пăхăнман сăмахсен синонимĕсем шутланаççĕ, вĕсемпе литература чĕлхинче усă курмаççĕ. Ун пек сăмахсем пĕр япалана е пулăма икĕ е виçĕ (е ытларах та) ят параççĕ:

| литература чĕлхинче | диалект чĕлхинче |
|---|---|
| анне | апи, апай, ави |
| чӳрече | карăнтăк, окошка, укошка, кассуй, корнак |
| пусма | чикмек, шучă |

Лексика диалектизмĕсем япалана кăна мар, япалан паллине е ĕçе-хĕле палăртакан сăмахсем те пулма пултараççĕ: *кĕптĕш, кӳлеш; вола, юмахла, попля, пупле, солля; чĕке, чӳнкĕр, шĕкĕнтĕр, моркка, муркав, явлăк, кулюкка, павар, тупа, кулатă.*

Литература чĕлхинче ку сăмахсене çак вариантсем тивĕçлĕ: *кĕвĕç, калаç, чăнкă, кишĕр, тутăр, кăвакарчăн, лаç, çатма, пусă* (çăл).

Ĕлĕк-авалтан пыракан чăваш сăмахĕсен сийĕнче те, тĕслĕхрен, тăванлăха палăртакан сăмахсенче, диалект лексикин уйрăмлăхĕсем сахал мар: *асатте — маçак, мăнаçи, маçи, маçакки, атитте, аттика, папай, тятя; асанне — аслапай, асапай, апай, мамок, мамак, мамакки, мами, мăнами, анненe, анянь, апакка, апикка, эпи, паппи; пичче — тятя, тете; упăшка — юлташ, мăшăр, старик.*

Тури калаçупа анатри калаçу лексикин уйрăмлăхĕсене аяларах илсе кăтартнă тĕслĕхсенче те курма пулать:

| анатри калаçура | тури калаçура |
|---|---|
| нарат | хыр |
| кишĕр | шĕкĕнтĕр |
| шăнаршă | сăпка |
| кăкшăм | чăм |
| павар | лаç |
| чӳлмек | коршак |

Чăваш диалекчĕсен лексикинче ют чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсем пур. Тĕслĕхрен, вĕсенче вырăс, тутар, мари сăмахĕсем тĕл пулаççĕ. Унта фонетика тĕлĕшĕнчен улшăннă çакăн

пек вырăс сăмахĕсене курма пулать: *варапи, варави (çерçи), çерккăл (тĕкĕр), сутка (талăк), кулата (пусă), кăрис, крыса (йĕкехӳре)* т. ыт. те.

Мари чĕлхисенчен кĕнĕ сăмахсем: *нальă, налĕ (юшкăн), серете (урай), йосу (лайăх)* т. ыт. те.

Тутар сăмахĕсем: *тикенек (куршанак), калай (шăвăç), кисек (тислĕк), ишкет (кĕсмен), вĕчев (çăпала)* т. ыт. те.

Семантика диалектизмĕсем пĕтĕм халăх сăмахĕсемех шутланаççĕ, анчах та формипе пĕрешкел сăмахсем диалектра пĕр пĕлтерĕшпе, литература чĕлхинче тепĕр пĕлтерĕшпе çӳреççĕ. Акă, *йӳрĕк* сăмахах илсе пăхар. Литература чĕлхинче вăл «чĕрĕ, çивĕч, шухă, ĕçчен, çаврăнăçуллă, тĕплĕ» тенине пĕлтерет, диалектра — «тирпейсĕр, мĕшĕлти». Вырăнти калаçура *куçлăх* «тĕкĕр» пĕлтерĕшпе çӳрет, *чĕпĕ* «чăхă» тени пулать.

Этнографи диалектизмĕсем чĕлхере пассивлă сăмахсем шутланаççĕ. Вĕсем вырăнти йăла-йĕркене, тум-тир ячĕсене, кил-çурт таврашĕнче тĕл пулакан япаласене пĕлтереççĕ. Литература чĕлхинче кун йышши диалектизмсен синонимĕсем пулмаççĕ, çавăнпа та вĕсене лексика диалектизмĕсен шутне кĕртни йăнăш тесе шутламалла.

Этнографи диалектизмĕсем тесе çак сăмахсене йышăнма пулать: *тевет, улача, кĕски, сăрка, турахуп, чапчушка, холчи, шопăр.* Ку сăмахсем вăхăт иртнĕ май япаласем е пулăмсем пурнăçран тухнă пирки активлă сăмах йышĕнчен тухса пассивлă сăмах йышне куçса пыраççĕ. Çавăнпа та этнографи диалектизмĕсене кивелнĕ сăмахсем (архаизмсем) темелле.

Фразеологи диалектизмĕсем тесе литература чĕлхине кĕмен, диалектсенче анчах тĕл пулакан тачă сăмах майлашăвĕсене (идиомăсене) калаççĕ. Тĕслĕхсем: *таман кунне çит* (ĕç тăвассине чи юлашки вăхăта хăвар), *вилсе каясла ĕçле* (хытă тăрăш), *юмăç яр* (отвес тытса пăхса тĕрĕсле — платниксен калаçăвĕнче).

Сăмах пулăвĕн диалектизмĕсем шутне тухăçлă аффикссем хушăнса пулнă, анчах та литература чĕлхинче усă курман сăмахсене кĕртмелле: *ăмсăрлăх* — лит. *ĕмĕтсĕрлĕх (Çав çынсен ăмсăрлăхне пĕтĕм ялĕпех курчĕç); çитӳ* — лит. *çителĕклĕх, тулăх пурнăç (Çитӳ çитсен, пурнăç лайăх); çимĕçле* — лит. *выльăха тăрантар (Хăнасен лашине çимĕçленĕ); чăсăк* — лит. *суя, суеçĕ (Эй, чăсăк, эп хам полсаç онта, ним те çок).* [20]

---

[20] Тĕслĕхсене Л. П. Сергеевăн «Диалектологический словарь чувашского языка» кĕнекинчен илнĕ / Чебоксары, 1969. 13, 62, 63, 85 с.

Чăваш чĕлхин диалект уйрăмлăхĕсене тĕпчесе вĕренни тăван халăхăн кунçулне, йăли-йĕркине, шухăш-туйăмне, ĕçне-хĕлне тата чĕлхен аваллăхне пĕлме пулăшать. Чăваш халăх историне пĕлни чăваш чĕлхипе диалекчĕсен историне тĕрĕс ăнланса илме май парать.

Диалектологи материалĕсем сăмахсен этимологине палăртнă чухне кирлĕ. Сăмахран, тури чăвашсен *шупашка* ятлă хырса тунă савăт пур.[21] *Шупашка* сăмах мари чĕлхинчен *(шоваш)* кĕнĕ. Анатри чăвашсем ку савăта *çӳпçе* тесе ят панă. *Шупашка* сăмахран *Шупашкар* топоним пулса кайма пултарнă. *Шупашкар* малтанах *шупашка* евĕрлĕ вырăнта ларнăран ăна çапла ят панă пулĕ. Танлаштарăр: *Хусан* (Казань) *казан* «хуран» сăмахран пулса кайнă. Хула сак ята хуран евĕрлĕ вырăна ларнăран илнĕ тесе шутлаççĕ хăш-пĕр тĕпчевçĕсем.

Диалектологи халăхăн пурлăхпа ăс-тăн культурине тĕпчесе пĕлекен этнографи наукипе тачă çыхăннă.

Писательсемпе поэтсем, драматургсемпе чĕлхеçĕсем, литература критикĕсемпе хаçатçăсем, диалект сăмахĕсемпе кирлĕ вăхăтра меллĕн усă курса, литература чĕлхине пуянлатса пыраççĕ. Илемлĕ литература произведенийĕсенче ытларах лексика диалектизмĕсем тĕл пулаççĕ.

Этнографи диалектизмĕсем литература чĕлхине писательсемпе поэтсем хăйсен произведенийĕсенче тăтăшах усă курнине пула кĕрсе пыраççĕ. Тĕслĕхĕшĕн *сарă* (хĕр арăм тум-тирĕн эрешĕ) сăмахах илер. Вăл, литература чĕлхине кĕрсе, диалектизм паллине тахçанах çухатнă.

Лексика диалектизмĕсен ретĕнче япаласемпе пулăмсен тĕрлĕ пахалăхĕсене, вĕсен уйрăмлăхĕсене тĕрĕсрех, уççăнрах сăнласа паракан сăмахсем те тăраççĕ. Вĕсен хушшинче ăнлавсемпе япаласене кăтартаканнисем те сахал мар. Ун пек диалектизмсемпе литературăра усă курни чĕлхене пуянлатма пулăшать.[22] Тĕслĕхшĕн *ахрăм* (вырăсла эхо) сăмаха илсе пăхар. Ку сăмаха 1961 çулта пичетленнĕ «Чăвашла-вырăсла словаре» кĕртмен. Анчах юлашки çулсенче унпа усă курман поэт е писатель çук та пулĕ: *Сасси çирĕп иккен патшан — Йăлăм вăрманĕнче таçта çити* *ахрăм* *янăраса кайрĕ* (К. Турхан).

---

[21] Егоров В. Г. Мĕншĕн çапла калатпăр // Чăваш календарĕ. 1964. 148, 149 с.

[22] Сергеев Л. П. Хаçат чĕлхинче вырăнти калаçу сăмахĕсемпе усă курасси // Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. 1-мĕш кĕн. Хаçат-журнал чĕлхи. Шупашкар, 1971. 100 с.

Халь чӗнет янравлӑ *ахрӑм*
Ирӗн-каҫӑн такама (А. Воробьев).

Хӑш-пӗр писательсем хӑйсен произведенийӗсенче лексика диалектизмӗсене уямасӑртарах усӑ курни те сисӗнкелет. Сӑмахран, Хӗветӗр Агиверӑн «Ҫапҫа ҫумӑр ҫӑвать» кӗнекинче вулакан ӑнланман сӑмахсем *(ынат, ынатлӑ, вашмӑк, ытлӑх* т. ыт. те) час-часах тӗл пулаҫҫӗ. Диалект сӑмахӗсем илемлӗ произведенисенче пулмаллах, анчах малтанлӑха вӗсене ӑнлантарса памалла.

Диалектсен пуласлӑхӗ пирки пӗтӗмӗшле ҫакна каламалла: чӑваш литература чӗлхин хӑватлӑ вӑйӑмне пула вырӑнти калаҫусен уйрӑмлӑхӗсем ерипен пӗтсе пымалла. Литература чӗлхи, диалектсен мӗнпур сӗткенне ӗмсе, тата хӑватлӑрах ӳсмелле. «Литература чӗлхи вырӑнти калаҫусенчен ҫимӗҫ илсе тӑрсан тин чӗрӗ чӗлхе пулса тӑрать», — тесе ҫырнӑ хӑй вӑхӑтӗнче Н. И. Ашмарин. [23]

## ЯТАРЛА ЛЕКСИКА

Чӑваш халӑх чӗлхин лексикине усӑ курас енчен икӗ пая анчах (пӗтӗм халӑх усӑ куракан лексика тата диалектизмсем) пайлани ҫителӗксӗр. Вӗсемпе пӗрлех пирӗн ятарлӑ лексика пуррине те палӑртса хӑвармалла. Ятарлӑ лексика шутне эпир пӗр-пӗр ӗҫре, ҫынсен пӗр-пӗр ушкӑнӗнче час-часах усӑ куракан сӑмахсене кӗртетпӗр. Вӗсем тӗрлӗрен ӗҫ хатӗрӗсен, ҫав ӗҫ хатӗрӗсемпе туса кӑларакан япаласен, абстракциллӗ ӑнлавсен ячӗсем пулаҫҫӗ. Ҫӳлерех каланине таблица туса кӑтартар:




[23] Ашмарин Н. И. Незаконченные рукописи // НА ЧНИИ. Отд. IV. Ед. хр. 13. С. 26.

Таблица çакна кăтартса парать: литература чĕлхи пĕтĕм наци чĕлхинчен ансăртарах, диалектизмсем пĕрлехи халăх (наци) чĕлхин лексикине кĕреççĕ. Терминсем, професси сăмахĕсем, арготизмсем çынсен уйрăм ушкăнĕ калакан сăмахсем анчах пулин те, пĕрлехи халăх лексикине те, литература чĕлхин лексикине те кĕме пултараççĕ. Диалектсенче те ятарлă лексикăн пуянлăхĕпе ирĕклĕнех усă курма пулать.

Терминсем тесе эпир пĕр-пĕр ăслăлăх ăнлавĕсене е япаласене палăртма ятарласа тунă сăмахсене е сăмах майлашăвĕсене калатпăр. Пур чĕлхере те кашни наукăн, техника отраслĕн, ял хуçалăхĕн хăйĕн ятарлă терминĕсем пулаççĕ. Ку е вăл отраслĕн термин пуххине терминологи теççĕ. Наука терминĕсенчен чылайăшĕ чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчен е вырăс чĕлхи урлă ытти чĕлхесенчен кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, *наречи, подлежащи* терминсем — вырăс чĕлхинчен йышăннăскерсем, *лаборатори* — вырăс чĕлхи урлă нимĕç чĕлхинчен кĕнĕ латин сăмахĕ, *линотип* — вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ француз сăмахĕ.

Терминсем вырăс чĕлхинчен ытларах та ытларах кĕрсе пыраççĕ. Акă, юлашки вăтăр-вăтăр пилĕк çул хушшинче йышăннă терминсем: *нейлон, полимер, космонавтика, космонавт, луноход, лунодром, скафандр, эрози, неоколониализм, маоизм, неофашизм, сегрегаци, конфронтаци, ваучер, приватизаци* т. ыт. те.

Хăш-пĕр наука е техника терминĕсем чăваш чĕлхине кальккăланса та кĕреççĕ: *хăйхаклăх* «себестоимость», *тĕп фонд* «основной фонд», *çĕр чĕтренни* «землетрясение», *лаша вăйĕ* «лошадиная сила», *пысăк вольтлă* «высоковольтный», *сăпатлани* «спряжение», *вĕçленӳ* «склонение».

Терминсен шутне çут çанталăк пулăмĕсен, çăлтăр, планета ячĕсем *(Уйăх, Хĕвел, Алтăр Çăлтăр, Шурăмпуç çăлтăрĕ, хĕвел тĕттĕмленни)*, ӳсен тăран ячĕсем *(утмăл турат, шапа хупаххи, анра çарăк, кӳкĕрчен, çеçпĕл, ĕшпĕл, хĕвел çаврăнăш)*, тыр-пул ячĕсем *(хура тул, ыраш, урпа)* т. ыт. те кĕреççĕ.

Чĕлхе наукинче ун пек ятсене кулленхи пурнăçра тĕл пулакан номенклатура * тесе ят панă. Вĕсем, термин паллине çухатса, пĕрлехи халăх лексикине тата литература чĕлхине тахçанах кĕнĕ: *кăлкан, шăнкăрав курăкĕ, хăях, улăх кĕпçи, çĕмĕрт, хура çырла, хĕрен, кĕтмĕл* т. ыт. те.

---

* Пĕтĕмĕшле ăнлава мар, пĕр-пĕр уйрăм япалана палăртакан сăмахсене номенклатура теççĕ.

Анчах та çынсем хăйсен калаçăвĕнче е литература чĕлхинче час-часах усă курман сăмахсене номенклатура теме май çук. Вĕсем наука терминĕсем шутланаççĕ. Тĕслĕхсем: *кăвак хунчав, галега, Гмелин чĕп куçĕ, финн куç куpăкĕ, Судет курăкĕ* т. ыт. те.[24]

Терминсен хăйевĕрлĕхĕ вăл — вĕсенчен чылайăшĕ пĕр пĕлтерĕшлĕ кăна пулни. Сăмахран, медицинăн çак терминĕсем яланах пĕр пĕлтерĕшлĕ: *флюорографи, хирург, невропатолог, диагноз.*

Терминсем нумай пĕлтерĕшлĕ те пулма пултараççĕ[25], çакă вăл терминологи çирĕпленсе çитменнине е унта йĕркелĕх çуккине пĕлтермест. Қалăпăр, чĕлхе наукинче усă куракан çак терминсем пурте икĕ пĕлтерĕшлĕ: *грамматика, морфологи, синтаксис, этимологи.* Вĕсем пĕр вăхăтрах чĕлхе наукин ятне те, наукăн объектне те пĕлтереççĕ. Тепĕр чухне тата пĕр япаланах е пулăмах икĕ терминпа палăртни те тĕл пулать: *государство — патшалăх, учитель — вĕрентекен.* Қун пеккисене синонимлă терминсем теме пулать.

Çакна та манма юрамасть: хăш терминсем сайра, теприсем час-часах тĕл пулаççĕ. Сайра усă куракан терминсем чылай чухне пур çынна та паллă мар, вăл сăмахсене наукăн пĕр-пĕр отраслĕнче ĕçлекенсем анчах ăнланма пултараççĕ. Тĕслĕхсем: *калькуляци, радикал, грануляци, номенклатура, люминесценци.* Ют чĕлхесенчен кĕнĕ хăш-пĕр терминсем калаçу чĕлхинче пĕр вĕçĕмсĕр тĕл пулнипе пĕтĕм халăх усă куракан сăмахсен ретне куçса пыраççĕ: *самолет, рентген, лампа.*

Терминсен шутнех эпир професси сăмахĕсене (профессионализмсене) кĕртетпĕр.

Професси сăмахĕсем тесе тĕрлĕ ĕç туса пурăнакан çынсен (тĕрĕсрех каласан, професси çыннисен) сăмахĕсене калаççĕ. Хăш-пĕр профессионализмсене пĕр-пĕр профессипе пурăнакан çынсен калаçăвĕнче кăна илтме пулать, вĕсем пĕтĕм халăх усă куракан сăмахсен шутне те кĕрсе çирĕпленме пултараççĕ. Тепĕр чухне професси сăмахĕсене диалектизмсем тесе хаклама тивет. Сăмахран, пулăçсем *атмана* тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ калаççĕ: *атма, немотка, меметке, мечелкке, пусма, ăсма, сăмалли.*

---

[24] Тĕслĕхсене А. Д. Плетнева-Соколова, А. Н. Львова, К. С. Дмитриева çырнă «Чувашско-русский словарь названий растений» кĕнекерен (Шупашкар, 1967) илнĕ.

[25] Котелова Н. З. К вопросу о специфике термина // Лингвистические проблемы научно-технической терминологии. М., 1973.

Чылай кивӗ професси сӑмахӗсем вӑхӑт иртнӗ май, манӑҫа тухса, архаизма куҫаççӗ. Тӗслӗхшӗн чӑптаҫӑсен сӑмахӗсене тата сӑмах ҫаврӑнӑшӗсене илер: *курӑс ачи, чӑпта йӗппи.* Чӑвашсем чӑпта ҫапма пӑрахнӑ пирки ҫав професси сӑмахӗсем халӗ чӗлхерен тухса пыраççӗ.

Революциччен те, ун хыççӑн та чӑвашсем килтех пир-авӑр тӗртсе пурӑннӑ, ҫавна май ҫак профессипе ҫыхӑннӑ сӑмахсем тата сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем чылай: *хултӑрчӑ, хутруççи, пир вырӑнӗ, пӑртуççи, йӗке, кӗнчеле, кӗнчелеççи, хутӑр, ҫиччӗ хӗççи, хутӑр хутӑрни, пир пӗветни, пир шуратни, пир ҫапни, сӳс тӳни* т. ыт. те.

Малалла тӗрӗ ӗҫӗпе ҫыхӑннӑ професси сӑмахӗсене илсе пӑхар. Вӗсене виҫӗ ушкӑна пайлама пулать:

1) ӗҫ хатӗрӗсен тата тӗрӗ тӗрленӗ чух усӑ куракан материалсен ячӗсем: *пяльца* (каркӑч), *мешки* (материала карӑнтармалли кӑшӑл), *редина* (шалашка пир), *флахтук* (ҫӗрҫӗн евӗрлӗ материал). Ку ушкӑна кӗрекен профессионализмсем пурте вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ;

2) ӗҫ процесӗпе ҫыхӑннӑ ятсем: *чикӗм, тултарни;*

3) тӗрӗ ячӗпе ҫыхӑннӑ професси сӑмахӗсем: *сӗтел сарми тӗрри, ҫулкӑ тӗрри* (кантӑк карри тӗрри), *минтер пичӗ тӗрри, кӗскӗ тӗрри, хантӑс тӗрри, халам кашти.*

Писательсем хӑйсен произведенисенче терминсемпе те, професси сӑмахӗсемпе те анлӑ усӑ кураççӗ. Ку, паллах, ҫынсен ӗҫне-хӗлне, шухӑш-кӑмӑлне тарӑнрах та витӗмлӗрех сӑнлама пулӑшать. Акӑ, Г. Ефимов ҫырнӑ «Ҫӑка пыл шӑрши сарсан» кӗнекерен илнӗ тӗслӗхсем:

1. — Апла эсир *корреспондент* пулӗ? Пӑрахут *капитанӗнчен интервью* илесшӗн ӗнтӗ...

— Ҫу-ук... *Корреспондент* сӑнлӑ-и вара эпӗ? Эпӗ *фрезеровщик.*

2. Ыйтса пӗлес — *дебаркадерсене* килсе лартман-ха, — пӑшӑрханчӗ Яргунин.

— *Юханшыв флочӗн резиденцийӗ* авӑ ҫавӑнта...

3. — Инҫетрен... Эпӗ *госпитальтен...* Юлташ адрес панӑччӗ. Ӑна ҫухатрӑм... *Контузи* хыççӑн ниепле те аса илейместӗп, — кӗҫ-вӗҫ йӗрсе ямасть хӗр.

### ЖАРГОН, АРГО ЛЕКСИКИ ТАТА МАКАРОНИЗМСЕМ

*Жаргон, арго* — француз сӑмахӗсем. *Жаргон* «пӑсӑлнӑ, тӗрӗс мар чӗлхе» тенине пӗлтерет. Арго тата слэнг жаргонӑн хӑйне евӗр тӗсӗсем кӑна пулса тӑраççӗ.

Ĕлĕк дворянсем, буржуази, хăйсене хура халăхран çӳлерех кăтартас тесе, ытларах ют çĕршыв сăмахĕсемпе усă курса калаçнă. Кунашкал пуплеве ахаль çын ăнланайман. Чĕлхине вара жаргон тенĕ. Пирĕн çĕршывра пуç пулса тăракан классем çĕнĕрен вăй илме пуçларĕç, çавăнпа та ун пек классен жаргонĕ çинчен калаçма сăлтав пур. Чĕлхене кирлĕ-кирлĕ мар çĕртенех вырăс е урăх чĕлхе элеменчĕсене кĕртсе лартса кăткăслантарасси халĕ нихçанхинчен те ытларах сисĕнет. Тĕслĕхрен, вырăсла вĕренсех çитеймен, чăваш чĕлхине манма пуçланă çынсен калаçăвĕнче çакăн пек сăмахсем пуррине куратăн: *не палтай, шофером ĕçлет, опозданипе являться тăвать, дом отдыхăра пултăм, питĕ лайăх отдыхать турăм, просто душа савăнать, машинпа кататься туса çӳрет, учетран сниматься туман-ха* т. ыт. те. Калаçăва кирлĕ-кирлĕ мар çĕртенех кĕртсе яракан ют чĕлхе сăмахĕсене м а к а р о н и з м с е м теççĕ.

Жаргон е арго лексики чăваш чĕлхишĕн кăтартуллă мар. Çамрăксем е шкул ачисем, хăйсем калаçнине ыттисем ан ăнланччăр тесе, хушăран жаргонизмсемпе е арготизмсемпе калаçаççĕ.[26] Вĕсен чĕлхинче çакăн пек уйрăмлăхсем пур:

а) сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене е тулли предложенисене вĕçĕнчен пуçласа малалла калани (е çырни): *Анас нĕм ĕлрик?* (Сана мĕн кирлĕ?). *Шел телик* (Леш килет);

ă) сăмахсене ытлашши сыпăксем кĕртсе лартни: *Эснепĕ тесне киснилетĕп* (Эпĕ те килетĕп). *Уснунпа писнирĕн хуснушăра вăснăрçă тухнухса каснайрĕ* (Унпа пирĕн хушăра вăрçă тухса кайрĕ). Н. Р. Романов çакăн пек шухăшласа кăларнă чĕлхене криптологи тенĕ. Вăл çирĕплетнĕ тăрăх, криптологипе ачасем анлă усă кураççĕ: *Вепа веянве веачавесемпе вешкуве лаве векайвенăвĕ* (Паян ачасем шкула кайнă). *Юмла ахла юла пала тăрла ринле челе...* (Юмах юпа тăрринче...). *Эфĕпĕр пĕр кифиличчен кифилтех лафар* (Эпĕр киличчен килтех лар);

б) сăмах сыпăкĕсене пĕр-пĕринпе ылмаштарни: *лепки* (килеп, орфографи чĕлхипе килетĕп), *ратю* (юрать), *ханасăр* (асăрхан);

в) а, ă, б пунктсенче асăннă паллăсемпе пуринпе те харăс усă курса, калаçăва пачах та ăнланмалла мар туни: *Рĕпе уснулма ламавăр манкай* (Эпир улма вăрлама кайман).

[26] Копыленко М. М. О семантической природе молодежного жаргона // Социально-лингвистические исследования. М., 1976. С. 79—86.

Тĕрме çыннисен, вăрăсен хăйсен арго сăмахĕсем тĕл пулкалаççĕ; артистсем, спортсменсем те хăйсене валли арготизмсем шутласа тупма пултараççĕ.

Çапла вара, арго, жаргон, слэнг лексики тесе çынсен пĕрпĕр ушкăнĕ хăйне евĕр туса калакан сăмахсене калаççĕ, вĕсене диалект сăмахĕсем теме çук.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ЛЕКСИКИН СТИЛЬ СИЙĔСЕМ

Стиль тĕлĕшĕнчен сăмахсем пĕр пек мар. Çавна кура вĕсене тĕрлĕ ушкăнсене уйăраççĕ. Лексика стиль енчен мĕнле пайланнине таблицăра курма пулать.

- Чăваш чĕлхин лексики
  - Пур стильсенче те усă куракан лексика
  - Калаçу чĕлхин лексики
    - Литература чĕлхинчи калаçу лексики
    - Кулленхи калаçу лексики
    - Тӳркес калаçу лексики
  - Çыру чĕлхин лексики
    - Наука лексики
    - Официаллă документсемпе ĕç хучĕсен лексики
    - Публицистика лексики

Пур стильсенче те усă куракан лексика кирек хăçан та, кирек ăçта та тĕл пулма пултарать:

1) калаçу чĕлхинче: *Çапла вара, ачасем, эпĕ революци салтакĕ пулса тăтăм. Сăмăлах марччĕ çав ун чухне пурăнăç, выççине, туттине те курнă;*

2) поэзире:

Тăван çĕршыв. Манран сана тавах.<br>
Эп сан ытамунта кăна телейлĕ.<br>
Эп санра çеç тупса юратăва,<br>
Пĕр санпа çеç эп сывă та кĕрнеклĕ.<br>
(В. Митта);

3) наука ĕçĕсенче: *Пурлăхпа çуклăх категорийĕ кашни чĕлхерех пур. Пурлăхпа çуклăх, пĕр-пĕрне хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулин те, пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăннă* (И. А. Андреев);

4) ĕç хучĕсемпе документсенче: *Паспортсене çакăн пек чух улăштармалла:* а) *паспорт срокĕ тухсан;* ă) *çын ятне е хушаматне улăштарсан;* б) *çырнисенче тĕрĕс марлăхсем тупăнсан;* в) *документ усă курма юрăхсăра тухсан.*

Чĕлхе наукинче пурте усă куракан лексикăна пĕтĕмĕшле стиль лексики (е пур стильсенче те усă куракан лексика) те-

ме йышӑннӑ. Ку ушкӑна кӗрекен сӑмахсем питех те йышлӑ, вӗсем чӑваш лексикин чи пысӑк пайӗ пулса тӑраççӗ.

Калаçу чӗлхин лексики тесе ахаль калаçура усӑ куракан сӑмахсене калаççӗ. Калаçу лексики çыру чӗлхин лексикине кӗмест, тӗрӗсрех каласан, калаçу сӑмахӗсемпе наука статйисенче, ӗç хучӗсенче, публицистикӑра пачах усӑ курмаççӗ, сайра-хутра вӗсем хаçат-журнал лексикинче тӗл пулаççӗ. Кунта тата çакна асӑрхаттармалла: çыру чӗлхин лексики шутне илемлӗ произведенисен лексики те кӗрет. Илемлӗ произведенисен лексики жанр енчен те, стиль тӗлӗшӗнчен те тӗрлӗ енлӗ. Унта стиль тӗлӗшӗнчен уйрӑлса тӑракан сӑмахсем те кӗме пултараççӗ. Вӗсем расна функциллӗ. Илемлӗ литературӑна калаçу сӑмахӗсене кӗртни, тӗслӗхрен, персонажсен чӗлхин хӑй евӗрлӗхне кӑтартма кирлӗ: *Килех, ыльӑм, иртсе лар* (А. Емельянов). Мӑн Якур (журнал страницисене хӑвӑрт уçса каять). *Чиччас, чиччас, ан васка... Акӑ, тупрӑм. Во* (Л. Агаков).

Калаçу чӗлхин лексики виçӗ ушкӑна пайланать:

1. Илемлӗ литература чӗлхинче усӑ куракан калаçу лексики: *кӳп* (нумай çи), *пакӑлтат* (нумай е хытӑ калаç), *чӗрӗл* (сывал). Ку ушкӑнах диалект е вырӑнти калаçу сӑмахӗсене те кӗртме пулать, мӗншӗн тесен писательсем персонажа пур енчен те сӑнарлас тӗллевпе диалектизмсемпе те усӑ кураççӗ.

Мархи. Хуса çитсе çапса пӑрахмаллаччӗ.

Истрат. Кӑмӑллӑрах пулма тӑрӑш-ха, Мархи аппа. *Аттутӑк* картин çинче *вӗреçӗлен* тӗслӗ пулатӑн.

Мархи. Илтрӗн-им, кӳршӗ чӑххисене хуса ятӑм. Пӗтӗм купӑста-хӑяра çисе яраççӗ. Хӑйсенне тивмеççӗ, *каяннисем*, ятарласа çын пахчине кӗреççӗ. Тем те пулӗ. Паянах кайса *пӑскӑртатӑп-ха* (Л. Агаков).

2. Кулленхи калаçу лексики. Ку ушкӑна литература чӗлхине кӗмен лексика диалектизмсене тата фонетика сӑн-сӑпатне улӑштарнӑ сӑмахсене кӗртме пулать: *ати* (атте), *пускатте, пускати* (хреснатте), *шӑнӑршӑ* (сӑпка), *калхус, каммун, ративӑ, савхус.*

3. Тӳркес калаçу лексики: *йӗксӗк, хӑямат, эсрел, анрасухра, шуйттан, вупкӑн, çӑткӑн.*

Тӳркес пуплевре усӑ куракан сӑмахсем хӑйсен тӗп пӗлтерӗшне улӑштараççӗ:

Вӑйлӑ, имӗш, çав тӑшман.
*Çичӗ куçлӑ çав çӑхан.*
(Г. Краснов-Кӗçӗнни).

Ҫапла вара, тӳрккес калаҫу сӑмахӗсемпе литература чӗлхинче те усӑ кураҫҫӗ. Тӳрккес калаҫу лексикине хут ҫине ҫырма юраман сӑмахсене те кӗртмелле.

Ҫыру чӗлхин лексики стиль тӗлӗшӗнчен ҫакӑн пек ушкӑнсене пайланать: ӗҫ хучӗсен лексики, наука, хаҫат-журнал, публицистика лексики.

Ӗҫ хучӗсен лексики хӑй темиҫе тӗрлӗ пулать:

а) канцеляри чӗлхин лексики (*протокол, кун йӗрки, кирлӗ документсем, тухса калаҫакансем, итленӗ, йышӑннӑ, акт, шантару, расписка, килӗшӳ (хучӗ), ӗнентерӳ, справка, отчет*). Ӗҫ хучӗсене вырӑсла ҫырнӑ май чӑваш терминӗсем пурнӑҫран тухса пыраҫҫӗ, вӗсен вырӑнне вырӑс чӗлхинчен е вырӑс чӗлхи урлӑ кӗнӗ ют чӗлхе сӑмахӗсем йышӑнаҫҫӗ;

ӑ) юристсем час-часах усӑ куракан лексика (*айӑпланакан, айӑплакан, приговор, свидетель*);

б) дипломатсем усӑ куракан сӑмахсем (*резиденци, коммюнике, договор, посол, ратификаци*).

Хаҫат-журнал лексики. Хаҫат-журнал тӗрлӗрен пулнине кура вӗсен лексикине пӗрешкел хаклама май ҫук. Ҫалӑпӑр, «Тӑван Атӑл» е «Ялав» журналсенех илер. Ку журналсен лексики илемлӗ произведенисен лексикинчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмасть, мӗншӗн тесен пичетленессе те унта ытларах писатель произведенийӗсем пичетленеҫҫӗ. «Хыпар» хаҫат лексикипе танлаштарсан, асӑннӑ журналсенче тӗп чӑваш тата пӗрлехи тӗрӗк сӑмахӗсем чи пысӑк вырӑн йышӑннине палӑртмалла. «Хыпар» хаҫатӑн лексики пӗр тӗрлӗ марри тӳрех курӑнать: унта пурте усӑ куракан сӑмахсемпе пӗрлех интернационаллӑ сӑмахсем те, обществӑпа политика, ял хуҫалӑх, промышленность, техника, культура, искусство, спорт терминӗсем те пур. Хаҫат лексикинче усӑ куракан терминсем пурнӑҫӑн тӗрлӗ енӗсене, ҫынсен туйӑмӗсемпе интересӗсене, ӗмӗчӗсене палӑртаҫҫӗ.

Пӗтӗмӗшле илсен, паянхи пичет чӗлхи — чӑн-чӑн литература чӗлхи. Анчах та, илемлӗ литература чӗлхипе танлаштарсан, хаҫат-журнал чӗлхинче ют чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсемпе калькӑсен хисепӗ чылаях пысӑк. Шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, «Хыпар» хаҫатӑн 1-мӗш страницинче вӑтамран виҫӗ пин сӑмаха яхӑн. Хуҫалӑх ыйтӑвӗсене ҫутатса паракан материалсенче обществӑпа политика терминӗсем 7—8% чухлӗ, политика темисемпе ҫырнисенче чылай ытларах — 10—20%,

официаллă документсен чĕлхинче вара — 28—30%.[27] Ку цифрăсем, паллах, пур номерсенче те пĕр пек пулма пултараймаççĕ.

## ЛЕКСИКĂН СТИЛЬ СИЙĔСЕМ ТАТА СĂМАХĂН НУМАЙ ПĔЛТЕРĔШЛĔХĔ

Сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине эпир пăхса тухнăччĕ ĕнтĕ. Тимлĕрех сăнасан, сăмах хăйĕн пĕлтерĕшне кура стиль енчен пур чухне те пĕр маррине асăрхама пулать. Тĕслĕхрен, *тăмана* сăмах тĕп пĕлтерĕшĕпе (кайăк ячĕ) пурте усă кураканлитература чĕлхинче тĕл пулать, тепĕр пĕлтерĕшĕпе («ухмах, тăмсай çын») калаçу чĕлхинче сарăлнă.

Выльăх-чĕрлĕхе тата кайăк-кĕшĕке палăртакан сăмахсем пурте тенĕ пекех нумай пĕлтерĕшлĕ, вĕсен куçăмлă пĕлтерĕшĕсем çынна хак параççĕ, сăнарлаççĕ:

*ĕне* — лӳппер, мăран çын;
*сурăх* — ухмах, тăнсăр çын;
*çăхан* — çăткăн, ĕмĕтсĕр çын;
*упа* — мĕшĕлти, мăран çын;
*мулкач* — хăравçă;
*тăрна* — вăрăм, тăсланкă çын;
*шăпчăк* — хитре юрлакан çын;
*чĕкеç* — çепĕç чĕлхеллĕ, кăмăллă çын;
*арлан* — хăйшĕн тăрăшакан çын;
*автан* — вăрçма юратакан çын.

---

[27] Скворцов М. И. Хаçат чĕлхинчи обществăпа политика терминĕсем // Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. 1-мĕш кĕн. Хаçат-журнал чĕлхи. Шупашкар, 1971. 55 с.

# ЯЛАН ТАТА САЙРА УСĂ КУРАКАН СĂМАХСЕМ

## ЛЕКСИКА — ОБЩЕСТВО КУН-ÇУЛĔН ТĔКĔРĔ

Общество пĕр вĕçĕмсĕр аталанать, улшăнать, çĕнелет. Пурнăçра пулса иртекен улшăнусем чĕлхере те палăраççĕ, çавăнпа та ăна эпир общество кун-çулĕн тĕкĕрĕ тетпĕр. Пурнăçра çĕнĕ япаласем, ăнлавсем çуралнă май çĕнĕ сăмахсем чĕлхене кĕрсех пыраççĕ, киввисем е çĕнĕ пĕлтерĕш туянаççĕ, е чĕлхерен пачах тухса ӳкеççĕ.

Кашни чĕлхерех ялан усă куракан (активлă) тата сайра усă куракан (пассивлă) сăмахсем пур.

Ялан усă куракан (активлă) сăмахсем тесе кулленхи калаçура, литература чĕлхинче анлă сарăлнă сăмахсене калаççĕ. Активлă сăмахсен шутне хăш-пĕр терминсемпе професси сăмахĕсем те кĕреççĕ.

Сайра усă куракан (пассивлă) сăмахсем тесе литература чĕлхинчен тухса ӳкнĕ лексемăсемпе анлă сарăлман неологизмсене калама йышăннă.

Çапла вара, хальхи чăваш чĕлхин лексики час-часах е сайра усă курни енчен çакăн пек ушкăнсене пайланать: а) хальхи вăхăтра пурте усă куракан сăмахсем; ă) кивелнĕ сăмахсем (архаизмсемпе историзмсем); б) çĕнĕ сăмахсем (неологизмсем).

Пурте усă куракан сăмахсем тени пĕтĕм халăх усă куракан лексика тенипе пĕр килет.

Кивелнĕ сăмах чĕлхерен тӳрех тухса ӳкмест. Ялан усă куракан сăмах общество пурнăçĕ улшăннă май малтанах сайра усă куракан сăмахсен йышне лекет, унтан вăл чĕлхерен пачах тухса ӳкет, е, япали, пулăмĕ пурнăçран çухалмасть пулсан, çĕнĕ ят çуралать, кивви манăça тухать. Хушăран ку е вăл сăмах чĕлхере сыхланса юлать, анчах унăн пĕлтерĕшĕ пачах улшăнать. Акă, тĕслĕхшĕн *чĕлхеçĕ* сăмаха илсе пăхар. Н. И. Ашмарин словарĕнче: «Чĕлхеçĕ — ворожей, ворожея», — тенĕ. Ку «юмăç» тенине пĕлтерет ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра çак сăмах «чĕлхе тĕпчевçи» е «чĕлхе ăсти» пĕлте-

рӗшпе ҫӳрет. Кивелнӗ лексемӑсем хушӑран чӗлхере тепӗр хут вӑй илеҫҫӗ те ялан усӑ куракан сӑмахсем пулса каяҫҫӗ. Ҫакӑн пек сӑмахсен шутне эпир *пике, тӑхлач, несӗл, йыхрав* тенисене кӗртме пултаратпӑр. *Пике* ӗлӗкрех «хуҫа майри», «хуҫа хӗрӗ» пӗлтерӗшпе ҫӳренӗ. Халӗ вӑл «хитре хӗр» тенине пӗлтерет.

Кирек мӗнле чӗлхере те кивелнӗ сӑмахсем сахал мар. Вӗсене эпир историе ҫутатакан произведенисенче тӗл пулатпӑр. Акӑ, Юхма Мишши ҫырнӑ «Кӑвак ҫӗмрен» (Шупашкар, 1971) романа илсе пӑхар. Автор ӑна ҫырма пуҫӑниччен Пугачев тапхӑрӗ ҫинчен калакан истори докуменчӗсене, авалхи кӗнекесене тӗпченӗ. Документсене тишкернӗ май ҫыравҫӑ, паллах, кивелнӗ сӑмахсене тӗл пулмасан та пултарнӑ, анчах та романра авалхи самана сӑнне кӑтартма Юхма Мишши чӗлхе факчӗсене те истори тӗлӗшӗнчен тӗпченӗ, кирлӗ ҫӗрте кивелнӗ сӑмахсемпе усӑ курнӑ: *кӳпе* — пӑхӑр, йӗс е тата тимӗр ункӑсенчен тунӑ авалхи тум; *келше* — кивҫен панӑшӑн хушса тӳлени (вырӑсла *пени*); *мӑчавӑр* — киремет картине пӑхса сыхласа тӑракан ҫын; *укҫу* — ҫӗмрен валли ятарласа ҫӗленӗ сӑран хутаҫ; *айпӑраш* — хитре арҫын; *мӗчевӗр* — каласма юратман, вӑтанчӑк ҫын; *кӳсе* — мӑйӑхсӑр, сухалсӑр; *хавхав* — тискер, хӑрушӑ; *сыхча* — этем чунне хураллакан пирӗшти ячӗ; *ҫывалккӑ* — чул ывӑтмалли хӗҫ-пӑшал; *тирев* — вӑрҫӑ умӗнхи шӑв-шав, пӑлхану; *кӳнтелен* — куракан, свидетель т. ыт. те.

Асӑннӑ сӑмахсем чылайӑшӗ пурнӑҫран пӑрахӑҫа тухнӑ ӑнлавсемпе япаласене, ӗҫ хатӗрӗсене, паянхи куншӑн ют йӑласене палӑртаҫҫӗ. Ҫакӑн пек сӑмахсем К. Турханӑн «Сӗве Атӑла юхса кӗрет» ятлӑ романӑн пӗрремӗш кӗнекинче 330 яхӑн, вӗсенчен 132-шӗн пӗлтерӗшне ӑнлантарса панӑ.

Хальхи вӑхӑтра *нӳкер, тӗкӗрҫ, укҫу, ясыр, ясак* сӑмахсем пирӗншӗн ӑнланмалла мар. Ҫакӑн йышши сӑмахсене чӗлхе наукинче историзм е архаизм теҫҫӗ. Мӗнпе уйрӑлса тӑраҫҫӗха историзмсем архаизмсенчен? Вӗсен (историзмсен), тӗпчевҫӗсем вӗрентнӗ тӑрӑх, хальхи чӗлхере синонимӗсем пулмалла мар. Тӗслӗхшӗн Ҫ. Элкерӗн «Хӗн-хур айӗнче» поэминчен ҫак йӗркесене илме юрать:

> Ҫитрӗҫ кантуртан пурмиспа тиек,
> Килчӗҫ тиесе ял тулли ишкек.

Ку йӗркесенче *кантур, пурмис, тиек* сӑмахсем вырӑнне урӑх сӑмахсем калама май килмест. *Кантур* лексема вырӑнне *контора* теме ҫук. Н. И. Ашмарин словарӗнче ӑна «вулӑс

правленийĕ», «вулăс правленийĕн çурчĕ», «вулăс правленийĕнче ĕçлекенсем» тесе ăнлантарнă. *Вулăс, уес* сăмахсем хăйсем те халĕ историзмсем шутланаççĕ. К. Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романĕнче çакăн пек историзмсем тĕл пулаççĕ: *айпăлта, хăрт, ясак, тăмха, хырăç* т. ыт. те.

Н. Мранькка çырнă «Ĕмĕр сакки сарлака» романра çакнашкал историзмсем пур: *станувуй, сутник, сутски, пурмис, земски* т. ыт. те.

Историзмсемпе танлаштарсан, архаизмсем — пачах урăхла сăмахсем. Вĕсен синонимсем пур. Çав синоним сăмахсенчен пĕрисем япалана е ăнлава авалхилле ят параççĕ, теприсем хальхи чĕлхере анлă усă куракан сăмахсен шутне кĕреççĕ. Çакна К. Турхан романĕнчен илнĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетер: *сенкер — крепость, хӳтлĕх; элем — ялав; чалка — лента; элче — посол; тĕкĕрĕç* (ухăпа перекен) — *дружинник; синкер — инкек, хуйхă; ăрăм — меслет; алмак — тăван; ăрăс — телей; эслепсĕр — çăткăн; тараплă — кутăн; элчел — вилĕм; кĕрмек — мухтанчăк, вĕçкĕн; ӳнер — ăста; энчен — вăйсăр; салах — сулăм укçи; эрлĕк — мăшкăл* т. ыт. те.

Çапла вара, историзмсене пурнăçран çухалнă е кивелнĕ япаласемпе пулăмсен ячĕсем, архаизмсене хальхи пурнăçра пур япаласемпе пулăмсен кивĕ ячĕсем теме пулать.

Сăмах пĕтĕмпех е унăн хăш-пĕр пĕлтерĕшĕсем кăна кивелнине, фонетика тĕлĕшĕнчен улшăннă май сăмахăн пĕлтерĕшĕсем улшăннипе улшăнманнине кура архаизмсене çакăн пек ушкăнлама пулать:

а) фонетика архаизмĕсем. Вĕсем халь усă куракан сăмахсенчен сасăсен шучĕ пысăкрах е пĕчĕкрех пулнипе уйрăлса тăраççĕ: *вăлă — вăл, хвершăл — фельдшер, хветератси — федераци, ăшкап — шкап, тăрăш — тăршшĕ, сентĕр — сентĕре;*

ă) лексика архаизмĕсем. Вĕсем кивелсе пассивлă сăмахсен йышне кĕнĕ: *элчел (вилĕм), юркав (утиял), тараплă (кутăн), пасак (çĕрĕк), никĕс (йĕрке)* т. ыт. те. Ку ушкăна авалхи уйăх ячĕсене те кĕртме пулать: *кăрлач, нарăс (нурăс), пуш, ака, çу, çĕртме, утă, çурла, авăн, юпа, чӳк, раштав* (халĕ вĕсем чĕлхене каялла таврăнма пуçларĕç);

б) сăмах пулăвĕн архаизмĕсем. Вĕсенче сăмах тăвакан аффикс кивелсе тухса ӳкнĕ е улшăннă: *аскăнла (çын) — аскăн (çын); асамçăх — асамçă; ачсемрин — ачсемри; ашăмлăх — ашăм;*

в) семантика архаизмĕсем. Вĕсем нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн хăш-пĕр пĕлтерĕшĕсем кивелнипе пулнă. Тĕслĕхрен,

*кăвак* сăмах малтанах «пĕлĕт», «сенкер», «симĕс» пĕлтерĕшсемпе çӳренĕ, халĕ ку пĕлтерĕшсем чăваш чĕлхинче çук, вĕсем кивелсе архаизма куçнă. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *кӧк, кук* халĕ те «пĕлĕт», «кăвак», «сенкер», «симĕс» пĕлтерĕшсемпе çӳреççĕ;

г) грамматика архаизмĕсем. Вĕсем сăмаха улăштаракан аффикссем кивелнипе пулнă: *Вăрă-хурахран, тискер кайăкран, вутран-кăвартан эсĕ* *с ы х л ă с ă н ч ч ĕ*, *у п р ă с ă н ч ч ĕ* (Н. Никольский); *килетĕ, каятĕ, ларатĕ, чупатĕ; килетшĕн, каятшĕн* т. ыт. те.

Кăтартнă архаизмсем вырăнне хальхи чĕлхере *сыхласамччĕ, упрасамччĕ, килет, каять, ларать, чупать, килнĕ пек чух, кайнă пек чух* сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсем тĕл пулаççĕ.

## САЙРА УСĂ КУРАКАН СĂМАХСЕН ПУХМАЧĔ (СПИСОКĔ)

### 1. Вăрăмăш виçин чăвашла-вырăсла ячĕсем:

*утăм, утас, пусăм, яра пусăмĕ* «шаг» (88 см), *хăлаç* «маховая сажень» (176 см);
*чалăш* «косая сажень» (248 см);
*патак* «палка»;
*вĕрен* «веревка» — 10 чалăш;
*ана пĕвĕ (ана пӳ)* «длина загона» — 80 чалăш е 8 вĕрен;
*çур вĕрен* «полверевки»;
*чĕрĕк вĕрен* «четверть веревки»;
*çухрăм* «верста» (1835 çулччен — 1080 м, кайрантарах — 1066,8 м);
*йӳн* «венец» (15 йӳнлĕ пӳрт, 30 йӳнлĕ икĕ хутлă ампар);
*сыпăк* «звено» (длина ограды).

Вăрăмăш виçин ячĕсене икĕ ушкăна пайлама пулать. Пĕрисемпе арçынсем çĕр ĕçĕнче тата çурт-йĕр тунă çĕрте усă курнă, теприсемпе килти хуçалăхра хĕрарăмсем усă курнă.

Килте пир-авăр тĕртнĕ чух (виçнĕ чух), сĕтел-пукан тунă чух усă курнă виçе ячĕсем:

*пӳрне* «палец» (ун хулăнăшне шута илнĕ);
*5 пӳрне — аллаппи* «ладонь»;
*2 аллаппи — шит* «пядь»;
*2 шит — чике* «локоть»;
*хур* «двойной локоть»;
*шит* «пядь» (18—33 см, вăтамран 20,5 см);

*чике* «локоть» (вăтамран 41 см танлашать):
*хур* «двойной локоть» (82 см);
*аллаппи* «ладонь» (10,25 см);
*пӳрне* «палец» (2,05 см);
*аршăн* «аршин» (1835 çулччен 72 см, кайрантарах — 71,12 см;
*вершук* «вершок» (1835 çулччен 4,5 см, кайрантарах — 4,44 см);
*кумкăç (кумкăчă)* е *сӳретке* «сновальня».

**2. Лаптăкăш виçин ячĕсем:**

*ана* «загон»; синонимĕсем: *пĕрпилĕк* е *пилĕк* «беляк»; *пусă* «загон» (Чăваш çĕршывĕн кăнтăр хĕвелтухăç районĕсенче).

Тĕрлĕ вырăнта *ана* лаптăкăшĕ тĕрлĕрен пулнă:

*ана* — 800 кв. чалăш (1,3 теçеттин); 1200 кв. чалăш (1/2 теçеттин); 1600 (2/3 теçеттин); 1800 (3/4 теçеттин); 2000 (5/6 теçеттин); 2400 кв. чалăш (теçеттин).

Хăш-пĕр общинăсенче *ана* — 3000 кв. чалăш тесе шутлани те пулнă. 1835 çулччен 1 хысна теçеттинĕ (2400 кв. чалăш) 11197,44 кв. м; 1 кв. чалăш — 4,6653 кв. м; 1835 çул хыççăн 1 теçеттин 10925 кв. м; 1 кв. чалăш — 4,5522 кв. м танлашнă.

*Ана* «загон» çапла пайланнă: *2 çурпилĕк, 4 тӳтрем (тӳтрешке)* е *чĕрĕк* «четверть», *8 тăваткал* «квадрат» е *уçмушкă* «восьмушка», *16 мурчăк;*

*тӳтрем* сăмахăн синонимĕсем: черевелник, хăрах йăран;

*тăваткал* сăмахăн синонимĕ — ум («перед», алăпа тырă акнă чухнехи тырă сапăмĕн анлăшĕ);

*пилĕк* «надел» («беляк», тĕрĕк чĕлхисенчен вырăссем илнĕ: тĕрĕкле бӧлӳк «пай, валĕ»).

XVIII—XIX ĕмĕрсенче чăваш тата тутар хресченĕсем çĕре çапла виçнĕ:

*патман* «батман» (1 батман — 4 пуда);

*пăчăх* «бучуг» (батман — 0,5 десятины, бучуг (полбатмана — 0,25 десятины);

*авăнлăх (анлăх)* «на овин» — 800 кв. чалăшпа танлашать.

**3. Пĕрчĕллĕ тата шĕвек япаласене виçмелли ятсем, калăпăш виçин ячĕсем:**

*çӳпçе (тырă чĕресĕ)* «чиряс, кадочка» (хлебная);

*кунтă (кунтăк)* «лукошко, кузов, короб из лубка»; синоним: *пуркă, пурăк, пурак* (кунтă — пуркă — 1 пăт ыраш — 16,38 кг);

*чĕрес* «чиряс»;

*такана* «ночовки, корыто»;
*алтăр* «большой ковш»;
*чӳлмек* «горшок»;
*тирĕк, тиркĕ* «деревянное блюдо»;
*курка* «ковш, кружка»;
*пасман (пасмана)* «батман»;
*пăтавкка* «пудовка»;
*ленкес* «ленкес»;
*патиен* «бадья» (10—12 л);
*шăпан* «жбан»;
*чăм* «кувшин»;
*пăратне* (9 л);
*курка* «ковш»;
*чаплушкă* «маленькая круглая чашка»;
*пичке* «бочка»;
*витре* «ведро»;
*четвĕрт* «четверть».

**4. Виçе ячĕсем:**

*кĕренке (кĕрепенкĕ)* «гривенка»;
*măскал* «золотник», «мыскал»;
*тараса* «весы»;
*кăрамис* «коромысло»;
*писмен, песмен* «безмен».

**5. Укçа виçин ячĕсем:** [1]

*алтын* «алтын»; *сум, сом; укçа* «деньги».

**НЕОЛОГИЗМСЕМ**

Тăван чĕлхе лексикине сăнаса тишкернĕ май эпир кунта кивĕ сăмахсем çеç мар, çĕнĕ сăмахсем пуррине те асăрхатпăр.

Çиелтен пăхсан, çĕнĕ сăмахсене ялан усă куракан сăмахсемпе кивĕ сăмахсенчен уйăрса илме питех те ансат пек туйăнать. Анчах та чĕлхе материалне тишкерме тытăнсан, тĕрлĕрен йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ. Вĕсенчен пĕри вăл — «çĕнĕ сăмах» термин темиçе пĕлтерĕшли. Словарьсем тăвас ĕçре вара пĕрремĕш вырăна çĕнĕ сăмахсене вăхăтлăх е ăнсăртран усă курнине палăртасси тухса тăрать.

Чĕлхеçĕсем çĕнĕ сăмахсене тĕпченĕ май çакнашкал ыйтусем çине ответ шыраççĕ: 1. Çĕнĕ сăмах хăш вăхăтра пулса

[1] Тĕслĕхсене çак кĕнекерен илнĕ: Димитриев В. Д. Старинный чувашский календарь и единицы измерения. Чебоксары, 1992.

кайнă? 2. Унăн авторе кам? 3. Сăмахăн çĕнĕлĕхне мĕнле уйăрса илмелле? 4. Ку е вăл лексема çыру тата калаçу чĕлхинче мĕн таран сарăлнă?

Каларăмăр ĕнтĕ, лексика аталанăвĕ общество пурнăçĕн аталанăвĕпе тата ӳсĕмĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Октябрь революцийĕ хыççăн çĕнĕ общество тытăмне, Коммунистсен партийĕн политикине, наукăпа техника аталанăвне, культура ӳсĕмне палăртакан сăмахсем чылай çуралчĕç. Тĕслĕхрен, *-у (-ӳ), -лăх (-лĕх), -в, -çă (-çĕ)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене илер: *вĕрентӳ, вĕçев, вулавçă, суйлавçă, патварлăх* т. ыт. те.

Ку аффикссем хальхи чăваш чĕлхинче тухăçлă аффикссем шутланаççĕ. Усă курасса вĕсемпе революцичченех усă курнă, анчах та вĕсен сăмах тăвас тухăçлăхĕ хальхи пекех тухăçлă пулман: *пĕлĕмçĕ, çăлтăрçă, кĕнекеçĕ, сыхлавçă*[2] т. ыт. те. *Шантару* «доверенность», *ĕнентерӳ* «удостоверение», *йĕркевçĕ* «инструктор», *тӳрелĕх* «администрация, суд» сăмахсене 20-мĕш çулсенче вырăсларан чăваш чĕлхин мелĕсемпе куçарнă. Анчах та çакăн йышши сăмахсенчен нумайăшĕ хăй вăхăтĕнче чăвашсемшĕн çĕнĕ пулнă, халь вĕсем пурте усă куракан сăмахсен шутне кĕреççĕ. *Йĕркевçĕ, тӳрелĕх* йышши сăмахсем литература чĕлхине кĕреймен пирки ялан усă куракан сăмахсем пулаймарĕç. Вĕсене эпир хальхи словарьсенче тупаймастпăр. 20-мĕш çулсенчех çуралнă *тăванлăх, юлташлăх, хастарлăх, пуплев, выляв* сăмахсем хальхи чăваш литература чĕлхи лексикин тĕп фондне кĕрсе юлчĕç. Вĕсем чĕлхере ялан усă куракан (активлă) сăмахсем пулса тăраççĕ. Çавăн пекех Совет саманинче чăваш чĕлхине кĕнĕ вырăс сăмахĕсемпе интернационаллă сăмахсем, хăй вăхăтĕнче «çĕнĕ» пулнă пулсан та, халĕ тĕп чăваш сăмахĕсемпе пĕр тан правараллă: *декрет, автономи, парторг, атеист, доклад, жюри, кандидат, мораль, облигаци, милиционер, председатель, электричество, экскаватор, слесарь, ферма, колхоз, совхоз, музыкант, композитор, профессор, доцент, поликлиника, санатори, хирург, авиаци, сержант, лейтенант, институт, техникум, лекци, шофер, мотоцикл, компот, костюм, галстук, стадион, чемпион, почта, телеграмма* т. ыт. те.

[2] Н. П. Петров ку сăмахсем чĕлхене XIX ĕмĕрĕн 70—80-мĕш çулĕсенче кĕнине палăртать (Петров Н. П. Развитие словообразовательных типов с аффиксом *-çă* (*-çĕ, -ç*) и пополнение лексики чувашского литературного языка в советский период // Учен. записки / ЧНИИ. Вып. 67: Чувашский язык и литература. Чебоксары, 1976. С. 4.

Çĕнĕ сăмахсен шутне калькăласа куçарнă сăмахсене кĕртмелле: *хăрушсăрлăх* «безопасность», *плансăрлăх* «бесплановость», *принципсăрлăх* «беспринципность» т. ыт. те. Çапла вара, сăмахсене хăш вăхăтра пулса кайнине кура виçĕ ушкăна пайлама пулать: 1) 20-мĕш, 30-мĕш çулсенче; 2) вăрçă хыççăнхи çулсенче; 3) юлашки çулсенче çуралнă çĕнĕ сăмахсем.

20-мĕш çулсенче чăваш чĕлхине урăх чĕлхе сăмахĕсенчен тасатас юхăм палăрнă. Ку юхăм чĕлхе вĕрентĕвĕнче «буржуалла национализм» ят илнĕ. Буржуалла националистсем Д. П. Петров (Юман), А. П. Прокопьев (Милли) ют сăмахсемпе çӳпĕленмен «тап-таса» чăваш чĕлхи туса хурасшăн пулнă. «Таса» чăваш чĕлхи тăвасшăн çуннă Д. П. Петров (Юман) çапла çырнă: «Чăваш чĕлхи — авалхи чĕлхе, питĕ пуян чĕлхе, чăваш сăмах тымарĕсенчен çĕнĕ ăнлавсене çĕнĕ сăмахсемпе калама юрать, çапла тусан кăна чăваш чĕлхин малашлăхĕ пулĕ. Акă, ман умра «Хĕрлĕ ялав». Вуннăмĕш хисеп палли. Пĕр енне вуласа, эпĕ çитмĕл вырăс сăмахĕ тупрăм, çав сăмахсем хушшинче çавăн пек чăваш чĕлхин илемне, тутине яракан сăмахсем пур: *отчет, доклад, учреждени, предприяти, представитель, справка, правительство, постановлени.* Çак сăмахсемпе çырнă хута вуланă чух чĕлхем пăтранать, пуçăм çаврăнать, хăсăкăм килет. Тархасшăн, чăваш ятне ан ярăр, çамрăк çыравçăсем. *Империализм, капитализм, организаци, республика, адрес, делегат, конференци, союз, съезд, революци, совет, лекци, электричество, президиум, пленум, статья, промышленность* пек сăмахсене чăвашла çырма пулать, çырмалла та...»[3] Хăй вăхăтĕнче Д. П. Петров (Юман) çав сăмахсене мĕнле чăваш сăмахĕсемпе улăштармаллине те кăтартнă: *революци* вырăнне *пăлхавăр, искусство* вырăнне *илемĕш, талант* вырăнне *çӳлти тивлет, область* вырăнне *тĕпçĕр, театр* вырăнне *уявхушĕ, кооператив* вырăнне *пĕрлеĕçлӳ* т. ыт. те.

Çакăн евĕр тунă сăмахсене ялан усă куракан лексемăсемпе пĕр шая лартса пăхма май çук. Вĕсене кĕскен ăнсăрт сăмахсем е (окказионализмсем) теме пулать.

Малалла калаçу ку е вăл вăхăтра чăваш чĕлхине кĕнĕ сăмахсем çинчен пырĕ. Чĕлхе наукинче вĕсене *неологизмсем* теме йышăннă. Грек чĕлхинчен тӳрремĕнех куçарсан, *неологизм* «çĕнĕ сăмах» тениех пулать.

[3] Юман. Чĕлхе тавĕ // Канаш. 1922. 31 №.

*Неологизмсем* тесе литература чӗлхине анчахрах кӗнӗ, халӑх хушшине анлӑ сарӑлайман ҫӗнӗ сӑмахсене калаҫҫӗ.

*Неологизмсем* чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхинчен е ун урлӑ ытти чӗлхесенчен кӗреҫҫӗ: *лунодром, луноход.* Кусем — ҫӗнӗ терминсем. Ҫакӑн пек неологизмсем пурӑна киле чӗлхене кӗрсе вырнаҫаҫҫӗ те анлӑ усӑ куракан сӑмахсем пулса каяҫҫӗ. Неологизмсене словарьсене кӗртсех пыраҫҫӗ.

Вӗсемпе танлаштарсан, потенциаллӑ сӑмахсен шӑпи кӑшт урӑхларах. Кусем писательсемпе поэтсем тунӑ ҫӗнӗ сӑмахсем. Вӗсен ҫӗнӗлӗхӗ куҫ умӗнчех, пуласса та чӗлхен сӑмах тумалли мелӗсемпех пулаҫҫӗ. Халӑх хушшине анлӑ сарӑлайман, литература чӗлхинче ҫирӗпленеймен пулсан, потенциаллӑ сӑмахсене словаре кӗртмеҫҫӗ. Акӑ, хӑш-пӗр тӗслӗхсем:

1) *Э-э-э, вӑл шӳт тӑвать, — чарчӗ ӑна тепри. — Ш ӳ т ҫ ӗ вӑл, юри калать* (М. Юхма).

2) *Мӗнешкел хитре хӗре уйӑрса ятӑн... Эх, т у я л а к а н ҫук сана* (А. Емельянов).

Илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсенче *шӳтҫӗ, туялакан* сӑмахсене Юхма Мишшипе А. Емельянов писательсем чӑваш чӗлхин сӑмах тумалли мелӗсене тӗпе хурсах тунӑ: *шӳт + ҫӗ, туя + + ла + (а) кан.* Халлӗхе ҫак сӑмахсем халӑх хушшине сарӑлман-ха, анчах та вӗсем литература чӗлхине кӗме пултараҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсене потенциаллӑ сӑмахсем тесе палӑртма пулать. Чӗлхе наукинче потенциаллӑ сӑмахсене час-часах «уйрӑм ҫын тунӑ» е «писательсемпе поэтсем тунӑ» сӑмахсем тесе палӑртаҫҫӗ. *Шӳтҫӗ* сӑмахӑн чӗлхере расна синонимӗсем пур: *шӳтник, мыскараҫӑ, култаракан. Туялакан* сӑмахӑн синонимӗсем ҫаксем: *хӗнекен, ҫапакан.* Акӑ, тата юлашки ҫулсенче тунӑ *Ҫӑлтӑрпи, Сывтепи, Сывпи, Уйӑхпи* пайӑр ятсене потенциаллӑ сӑмахсем теме пулать. *Ҫӑлтӑрпи, Уйӑхпи* сӑмахсем П. Хусанкайпа А. Энтепе сӑввисенче тӗл пулаҫҫӗ:

— *Уйӑхпи.* Ан хуйхӑр эсӗ:
Кӗтмелли нумай юлмарӗ —
Вӗҫсе пырӗ сан патна вӑл —
Ҫӗр каччи, сан чун савни.
(П. Хусанкай).

*Ҫӑлтӑрпи,*
Сан кашни ҫӳҫ пӗрчи
Вӗҫӗнче ҫӗнӗ ҫӑлтӑр тӗнчи...
(А. Энтепе).

Халӗ *чулҫӑ* термин пирки пӗр-икӗ сӑмах каласа хӑварар. Ку сӑмаха 1940 ҫулта М. Я. Сироткин редакциленӗ «Вырӑсла-чӑвашла словаре» пӗрремӗш хут кӗртнӗ. Ана орфографи

словарĕсем икĕ хутчен, 1951 тата 1963 çулсенче, палăртнă. Ытти словарьсенче нихăшĕнче те *чулçă* сăмах çук. Хальхи чăваш чĕлхинче асăннă сăмаха неологизм тесе пăхмалла-и е архаизмсен шутне кĕртмелле?

*Чулçă* сăмах «каменщик» пĕлтерĕшпе чăваш чĕлхинче революцичченех çӳреме пуçлани паллă:

> *Чулçă*-и эс е хресчен —
> Телейӳшĕн çĕклен эс.
>
> (Т. Тайăр)

Юлашки çулсенче ку сăмахпа писательсемпе поэтсем час-часах усă кураççĕ:

> Этаж çине этаж йăтса
> Çĕклерĕ кирпĕч ватă *чулçă.*
>
> (С. Шавлы)

> Пул *чулçă,* юрăçă, пахчаçă, —
> Эс чыслă, аслă тивĕçпе.
>
> (Ю. Петров)

Савнă Михаил Степанчă, эс — коммунист, эс — Социализмлă Ĕç Геройĕ, эс ху — *чулçă* та платник, хăвах художник та архитектор (М. Илпек).

Юлашки вăхăтра *чулçă* сăмах «чул касакан, чул чутлакан» пĕлтерĕшпе çӳрени те сисĕнет.

Çапла ĕнтĕ, *чулçă* сăмах чăваш литература чĕлхине кĕрсе хăйĕн «çĕнĕлĕхне» тахçанах çухатнă, ялан усă куракан сăмахсен шутне кĕнĕ. Ăна çĕнĕрен хатĕрленĕ «Чăвашла-вырăсла словаре» те кĕртмелле пулнă.

Потенциаллă сăмахсен шăпи тĕрлĕрен пулать. Хăш чухне вĕсем ăнсăрт сăмахсене (окказионализмсене) çывăх тăнăн туйăнаççĕ. Тĕслĕхрен, венгр поэчĕ Шандор Петефи çырнă «Венгр дворянинĕ» сăвва чăвашла куçарнă чух С. Шавлы *дармоед* сăмаха *пырçă* тесе куçарнă:

> Тавтапуç, ыйтмаççĕ хырçă,
> Мĕнпе тӳлĕттĕм эп, *пырçă?*
> Хам пĕччен те, парăм пинĕн...
> Эпĕ — венгр дворянинĕ.

Хальхи чĕлхере *пырçă* çĕнĕ сăмах шутланать. Пурăна киле вăл чĕлхене çирĕппĕнех кĕрсе вырнаçма пултарать пулсан, ăна потенциаллă сăмах теме те юрать.

*Харамçă* сăмахăн историйĕ те интереслĕ. Малтанхи хут ку сăмах П. Хусанкай çырнă «Ирĕк тимĕрçĕ» (1924 ç.) сăвăра тĕл пулать:

Юнлă çулăмпа
Хăртрăм *харамçа.*

Анчах та асăннă лексема, писательсемпе поэтсем тăтăшах усă курнă пулин те, 1963 çулччен словарьсене кĕме тивĕç пулайман. 1963 çулта ăна орфографи словарьне кĕртнĕ. 1971 çулта «Вырăсла-чăвашла словарьте» *дармоед* сăмаха *харампыр, харамçă* тесе куçарнă. Çапла майпа *харамçă* лексема хальхи вăхăтра, уйрăм çын тунă сăмахсен ретĕнчен тухса, активлă сăмахсен шутне кĕнĕ.

Чĕлхере ялан тата сайра усă куракан сăмахсене çакăн пек схема туса кăтартма пулать:

Хальхи чăваш чĕлхин лексики

↓ ↓ ↓

Ялан усă куракан сăмахсем ← Сайра усă куракан сăмахсем → Неологизмсем

↓ ↓ ↓

Потенциаллă сăмахсем | Ансăрт сăмахсем (окказионализмсем) | Кивĕ сăмахсем: архаизмсем тата историзмсем

# СЛОВАРЬ ТӐВАС ӖҪ

## ПЕТӖМӖШЛЕ ҪАЛАНИ

Словарь тӑвас ӗҫе лексикографи теҫҫӗ. Вӑл чӗлхе практикин ӑслӑлӑхӗ шутланать, урӑхла ӑна словарь тӑвасси ҫинчен калакан ӑслӑлӑх теме те пултаратпӑр. Лексикографире, пӗр енчен, теорипе практика пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнмалла: сӑмахсене ку е вӑл теорие пӑхӑнса суйласа илмелле. Ҫирӗп принципсемсӗр тунӑ словарьпе практикӑра усӑ курма питех те йывӑр пулӗччӗ. Тепӗр енчен, словарь тӑвас ӗҫ морфологипе тата лексикологипе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать, мӗншӗн тесен морфологире те, лексикологире те, лексикографире те сӑмах ыйтӑвне те татса пама лекет. Лексикографи хӑйӗн материалне лексикологипе морфологи вӗрентнӗ пек шайлаштарса пыма тӑрӑшать. Словарь тӑвакансем ку е вӑл сӑмаха словарь статйине кӗртнӗ май унӑн пӗлтерӗшӗсем контекстра тӗрлӗрен пулнине, пӗлтерӗш кивелнине, ҫӗнӗ пӗлтерӗшсем ҫуралнине палӑртса хӑвараҫҫӗ. Лексикологсем ҫӗнӗ пӗлтерӗш епле ҫуралнине теори тӗлӗшӗнчен ҫутатса параҫҫӗ.

Словарь тӑвасси — питӗ кӑткӑс та йывӑр, ҫав вӑхӑтрах тата хисеплӗ ӗҫ. Словарь статйисене хатӗрлесе йывӑрлӑх тӳссе курман ҫын тепӗр чухне ҫак ӗҫе тивӗҫлӗ хак пама та пултараймасть.

Словарьсем тӗрлӗ йышшисем пулаҫҫӗ, анчах кирек мӗнле чӗлхере те вӗсене икӗ пысӑк ушкӑна пайлама пулать: 1) ӑнлав словарӗсем; 2) чӗлхе словарӗсем. Вӗсем пӗр-пӗринчен мӗнпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ-ха? Ӑнлав словарӗсенче производство, политика, литература, философи, логика тата ытти ӑслӑлӑх ӑнлавӗсене пурнӑҫпа ҫыхӑнтарса ҫутатаҫҫӗ. Ӑнлав словарӗсен шутне эпир философи, логика, энциклопеди, поэтика словарӗсене кӗртме пултаратпӑр. Ӑнлавсене чӗлхе мелӗсемпех ӑнлантаратпӑр пулсан та, вӑл словарьсене эпир чӗлхе (лингвистика) словарӗсем теместпӗр. Чӗлхе (е лингвистика) словарӗсенче тӗп вырӑнта сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене кӑтартасси тӑрать. Чӗлхе словарӗ лексема пӗлтерӗшне урӑх сӑмахсем урлӑ ӑнлантарать, кашни пӗлтерӗше тӗслӗхсем пулӑшнипе уҫса парать.

Чӗлхе словарӗсем темиҫе тӗрлӗ пулаҫҫӗ:

1. Нормативлӑ справочник словарьсем. Вӗсен шутне 1) орфографи (сӑмахсене тӗрӗс ҫырма вӗрентекен); 2) орфоэпи (сӑмахсене тӗрӗс калама хӑнӑхтаракан) словарӗсем кӗреҫҫӗ.

2. Ӳкерчӗклекен (ҫырса паракан) словарьсем.

Ӳкерчӗклекен словарьсем те темиҫе тӗслӗ:

1) этимологи словарӗсем. Ку словарьсенче сӑмахсем мӗнле пулса кайнине тата вӑхӑт иртнӗ май вӗсен пӗлтерӗшӗсем мӗнле улшӑннине кӑтартаҫҫӗ;

2) истори словарӗсем. Кунашкал словарьсенче сӑмах тата унӑн пӗлтерӗшӗ истори тӗлӗшӗнчен мӗнле аталанса, ҫӗнелсе, улшӑнса пынине тата чӗлхе аталанӑвӗн пӗр-пӗр тапхӑрӗнче сӑмахсен кун-ҫулӗ мӗнле пулнине кӑтартса пама пулать;

3) идеологи словарӗсем;

4) диалектологи словарӗсем;

5) инверси словарӗсем;

6) акцентологи словарӗсем;

7) ятарлӑ словарьсем (кунта фразеологизмсен, синонимсен, антонимсен, ют ҫӗршыв чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсен, кӗскетӳсен словарӗсем кӗреҫҫӗ);

8) паремиологи словарӗсем (каларӑшсемпе ваттисен сӑмахӗсен словарӗсем).

3. Нормативлӑ словарьсем. Вӗсене урӑхла ӑнлантаруллӑ словарьсем теме пулать.

4. Куҫару словарӗсем. Вӗсем сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене тепӗр чӗлхере мӗнле палӑртмаллине уҫса параҫҫӗ. Тӑван чӗлхе сӑмахӗсене тепӗр е темиҫе чӗлхе сӑмахӗсемпе те танлаштарса куҫарма пулать. Темиҫе чӗлхе материалне кӗртнӗ словарьсене урӑхла полиглот словарьсем теҫҫӗ. Чылай чухне ун пек словарьсенче литература чӗлхине кӗрекен сӑмахсене кӑна ҫырса кӑтартаҫҫӗ.

Куҫару словарӗсен шутнех тӗрлӗрен терминологи словарӗсем те кӗреҫҫӗ, сӑмахран: «Обществӑпа политика терминӗсен вырӑсла-чӑвашла словарӗ», «Ял хуҫалӑх терминӗсен вырӑсла-чӑвашла словарӗ», «Медицина терминӗсен вырӑсла-чӑвашла словарӗ», «Техника терминӗсен вырӑсла-чӑвашла словарӗ» т. ыт. те.

Юлашки ҫулсенче уйрӑм авторсен произведенийӗсем тӑрӑх йӗркеленӗ словарьсем кӑлара пуҫларӗҫ. Тӗслӗхрен, Совет Союзӗнче тӑватӑ томран тӑракан «Пушкин чӗлхин сло-

варьне» кăларнă, чикĕ леш енче Шекспир тата Гете произведенийĕсен чĕлхин словарĕсем пичетленсе тухрĕç.

Чĕлхе науки аталаннă май словарь тăвас ĕç те сарăлсах пырать. Пирĕн куç умĕнчех çĕнĕрен те çĕнĕ словарьсем тухаççĕ: «Паронимсен словарĕ», «Сăмах майлашăвĕсен словарĕ», «Слэнгсен словарĕ» т. ыт. те.

Словарьте ăнлантарса пама е тепĕр чĕлхене куçарса кăларма палăртнă сăмахсен йышне словник теççĕ. Словникра палăртнă сăмахсене алфавит йĕркипе реестра кăлараççĕ. Вĕсене пысăк шрифтпа, кашнине çĕнĕ йĕркерен çыраççĕ. Реестра кăларнă сăмаха тĕп сăмах теççĕ.

Лингвистика словарĕсенче материала тĕрлĕрен йĕркелеççĕ. Тĕп сăмах хыççăн пыракан словарь текстне словарь статйи теме йышăннă. Словарь статйинче тĕрлĕ кăтартусем (грамматика, стилистика), иллюстрацилекен материал (сăмах тĕрлĕ контекста лексе пĕлтерĕш сĕмĕсене улăштарнине кăтартакан тĕслĕхсем — «лексикографи контексчĕ»), ăнлантарса пани е тепĕр статьяна вулама сĕнни пулма пултарать. Словарь статйине кĕнĕ сăмах майлашăвĕсем кĕске те уçăмлă пулмалла.

## ЧĂВАШ ÇЫРУЛĂХĔ ТАТА РЕВОЛЮЦИЧЧЕН ТУХНĂ СЛОВАРЬСЕМ

Çырулăх пулнă-ши чăвашсен ĕлĕкрех?

Халăх хушшинче халĕ те «чăваш кĕнекине ĕне çинĕ» текен каларăш çӳрет. Çак ваттисен каларăшне тĕпе хурса, пĕрисем чăвашсен çырулăх пулман тесе ĕнентерме пăхаççĕ, теприсем вĕсене хирĕçлеççĕ: «Пулман кĕнекене ĕне çиме пултарайман», — теççĕ. [1]

Историксемпе [2] искусствоведсем [3] тĕпченĕ тăрăх, авал чăвашсем ӳкерчĕклĕ е тĕрĕллĕ çырупа усă курнă. Ķайрантарах вăл çырулăх манăçа тухнă. Анчах та тĕпчевçĕсем çав тĕреллĕ çырусене вуланă май вĕсенче авалхи китай чĕлхинчи иероглифсене те, Орхонпа Енисей палăкĕсем çинче тĕл пулакан паллăсене те, араб е вырăс алфавичĕн хăш-пĕр сас паллийĕсене те курма пулать теççĕ. [4]

---

[1] Комиссаров Г. И. Чуваши Казанского Заволжья / ИОАИЭ. Казань, 1911. Т. 27. Вып. 5. С. 417.

[2] Каховский В. Ф. Была ли письменность у чувашей в древности? // Учен. записки / ЧНИИ. Вып. 21. С. 201; Вăлах. О рунической письменности. Чебоксары, 1972. С. 23—25.

[3] Трофимов А. А. К вопросу о художественном образе в чувашской вышивке // Чувашское искусство. Чебоксары, 1973. Вып. 11. С. 124—142.

[4] Каховский В. Ф. Была ли письменность... С. 211.

Ҫайрантарах чăваш ҫырулăхĕ араб чĕлхин графика витĕмĕпе аталанса пынă. Ана эпир вил тăпри палăкĕсем ҫинче те куратпăр. Ҫав палăксен ҫырулăхне вуласа пĕлес тесе, юлашки ҫулсенче венгр ученăйĕ А. Рона-Таш нумай ĕҫлерĕ. [5]

Чăваш сăмахĕсене хут ҫине пуҫласа XVIII ĕмĕрте ҫырнă. Ҫак ĕҫе пуҫарса яраканĕсенчен пĕри Страленберг хушаматлă швед офицерĕ пулнă. XVIII ĕмĕрĕн 20-мĕш ҫулĕсенче вырăс ҫĕрĕнче тыткăнра пурăннă швед капитанĕ 1727 ҫулта хăй тăван ҫĕр-шывне каялла таврăннă чухне ҫула май Хусанта чарăнса тăнă, чăвашла-вырăсла пĕлекен тăлмачсенчен чăваш сăмахĕсене ҫырса илнĕ. 1730 ҫулта Стокгольмра унăн нимĕҫ чĕлхипе ҫырнă ĕҫĕ [6] тухать. Кĕнеке вĕҫĕнчи хушăмра 32 чĕлхерен илнĕ 60 сăмаха танлаштарса ҫырса кăтартнă. 60 сăмахран 28-шĕ — чăваш сăмахĕ.

1733 ҫулта Питĕрти наукăсен академийĕ тата Сенат Камчаткăна кайма экспедици йĕркеленĕ. Экспедици членĕсенчен пĕри Г. Ф. Миллер профессор пулнă. Ҫула тухас умĕн экспедици членĕсене вырăс мар халăхсен чĕлхисене сăнаса пĕлме, тĕслĕхсем ҫырса илме хушса янă. Г. Миллер Чăваш ҫĕршывĕнче те пулнă. Вăл Хусан кĕпĕрнин канцелярийĕсенче ĕҫленĕ тăлмачсем пулăшнипе чăваш, мари, тутар, удмурт, пермяк, зырян чĕлхисенчен 313 сăмах ҫырса илнĕ те вĕсене танлаштарса кăтартнă. Вырăсла ҫак ĕҫе «Словарь на татарском, черемисском, чувашском, вотяцком, мордовском, пермском и зырянском языках» тесе ят панă. Малтан ку словарь Г. Ф. Миллер ҫырнă «Vocaularium Harmonicum» кĕнекере пичетленсе тухнă.

1737—1738 ҫулсенче Чĕмпĕр провинцийĕн канцелярийĕнче ĕҫленĕ тăлмачсем В. Н. Татищев [7] историка икĕ словарь («Русско-татарско-чувашско-мордовский словарь» тата «Русско-чувашско-мордовский словарь») хатĕрлеме пулăшнă. Вĕсене пурĕ пин сăмаха яхăн кĕнĕ (пĕрремĕшĕнче — 524, иккĕмĕшĕнче — 500).

1769 ҫулта Питĕрте чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского язы-

---

[5] Rona-Tas A., Fodor S. Epigraphica Bulgarica. Studia Uralo-Altaica 1. Szeged, 1973.

[6] Strahlenberg. Das Nord und Ostliche Theil von Europa und Asia insowelt das ganze Russische Reich mit Sibirien und grossen Tatarey solche in sich begreifzet...

[7] Димитриев В. Д. Два описания чувашей и чувашские словари второй четверти XVIII века // Учен. записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1960. Вып. 19. С. 270—298.

ка» ятпа тухать. Ана Хусанпа Сĕве архиепископĕ Вениамин (Василий) Пуцек-Григорович çырса хатĕрленĕ.[8] Грамматика пысăк мар, унта пĕтĕмпе те 68 страница кăна. Кĕнекере чăваш чĕлхин морфологине çырса кăтартнă, кашни пуплев пайĕ хыççăнах лексика материалне те кĕртнĕ: 700 япала ячĕ, 140 паллă ячĕ, 350 глагол, 150 наречи.[9]

XVIII ĕмĕрте пичетленĕ паллăрах словарьсем:

1. 1785 çулта Чул хулапа Улатăр епископĕ Дамаскин (Дмитрий Семенов-Руднев) тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ чăваш ачисем пулăшнипе кăларнă «Чул хула епархийĕнче пурăнакан тĕрлĕ халăх чĕлхисен словарĕ».[10] Унта пурĕ 11 115 вырăс сăмахĕ, вĕсенчен 11 пинне чăвашла куçарнă.

2. «Мĕнпур чĕлхесен танлаштаруллă словарĕ».[11] Пĕрремĕш пайĕ 1787 çулта, иккĕмĕшĕ 1789 çулта Питĕрте пичетленсе тухнă. Çак словаре Иккĕмĕш Кĕтерне патша хушнипе П. С. Паллас академик редакциленĕ. Словарьте пĕтĕмпе 285 сăмах, анчах чылайăшне чăвашла куçарман.

XVIII ĕмĕрте словарь тăвас ĕç анлă сарăлнă пулнă.[12] Тĕпчевçĕсем, Раççейре тата ют çĕр-шыв архивĕсенче çӳлерех асăннă словарьсемсĕр пуçне, ал çырăвĕ халлĕн упранакан вырăсла-чăвашла словарьсем вунна яхăн пуррине палăртаççĕ.[13]

1799 çулта Австрире Самуел Диарматин латин чĕлхипе çырнă словарĕ тухнă.[14] Кунта чăваш, мордва, мари, удмурт сăмахĕсен грамматика формисене танлаштарса кăтартнă.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче куçару ĕçĕн центрĕ Чул хуларан Хусана куçнă май кĕнеке кăларас ĕçе Хусанти тĕн академийĕ туса пырать.

Ал çыру халлĕн юлнă словарьсенчен пĕри вăл — Ф. А. Волегов 1835 çулта хатĕрленĕ «Свод некоторых слов русских,

---

[8] Петров Н. П. Чăваш çырулăхĕ. Шупашкар, 1971. 6 с.

Андреев Н. А. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1961. 133—149 с.

[9] Алексеев А. А. Чăваш çырулăхĕн Аслă Октябрь революцийĕччченхи утăмĕсем // Тăван Атăл. 11 №. 1971. 68 с.

[10] Вырăсла: «Словарь языков разных народов в Нижегородской епархии обитающих...»

[11] «Сравнительные словари всех языков и наречий...»

[12] Алексеев А. А. Асăннă ĕç. 68 с.

[13] Сергеев Л. П. О памятниках чувашской письменности XVIII века // Учен. записки / ЧНИИ. Вып. 46. С. 228—263.

Егоров В. Г. Чувашские словари XVIII века // Учен. записки / ЧНИИ. Вып. 11. С. 111—142.

[14] Samvele Ijarmathi. Hungaricoc cum Lingvis Fennicoe Originis Grammatice Demonstrata. Cottingoe, 1799.

пермяцких, зырянских, вотяцких и чувашских». Словарь ум сăмахĕнче автор çапла çырнă: «Словарьте тăватă пин сăмаха яхăн. Зырян чĕлхинчен илнĕ сăмахсен шучĕ улт çĕртен иртмест. 1835 çулта Вяткăпа Хусан хушшинче çӳренĕ чух станцăсенче лашасене улăштарнă хушăра эпĕ вотяк тата чăваш чĕлхисенчен пермяк тата зырян чĕлхисемпе танлаштарма тăват çĕр сăмах таран çырса илтĕм. Танлаштарма илнĕ тĕслĕхсем ку чĕлхесем пĕр-пĕринпе тăван маррине кăтартаççĕ».

1836 çулта Хусанта В. П. Вишневскин «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленный для духовных училищ Казанской епархии» ятлă кĕнеке тухать. Ку кĕнеке чăвашсен пичетленсе тухнă иккĕмĕш грамматики шутланать. Словарь материалне 69—216-мĕш страницăсенче пичетленĕ. Пĕтĕмпе унта 2736 сăмах. Чăваш чĕлхин çирĕпленнĕ алфавичĕ пулман пирки словарьте хăш-пĕр сăмахсене пăсса çырни те тĕл пулать: *сызарь* (сăсар), *сямрыкь* (çамрăк), *сірда* (çурта), *хурымь* (хăрăм), *треньча* (чĕренче, тĕренче) т. ыт. те. Ку кĕнекере хальхи чăваш чĕлхинче тĕл пулман сăмахсене асăрхатпăр: *сьола* (пуша, чăпăркка), *валем* (пĕлтерӳ), *атык* (упа сарри), *сыямак* (сив чир, лихорадка) т. ыт. те.

В. П. Вишневский хатĕрленĕ словарĕн пĕлтерĕшĕ хăй вăхăтĕнче пысăк пулнă. Вăл ĕçпе чăваш чĕлхипе интересленнĕ ют çĕр-шыв тĕпчевçисем те усă курнă (сăмахран, Шотт, Френ, Кастрен, Альквист).

Кĕнекен виççĕмĕш пайне «Чăваш, тутар, мари чĕлхисен танлаштаруллă словарьне» («Слова, сходные в чувашском, татарском и черемисском языках») кĕртнĕ. Ана 217—248-мĕш страницăсенче пичетленĕ, унта 418 чăваш, 347 тутар, 135 мари сăмахĕ кĕнĕ. [15]

Словарьте çитменлĕхсем пур пулин те, вăл хăйĕн пĕлтерĕшне паян кун та çухатман. Унпа чĕлхеçĕсем халĕ те анлă усă кураççĕ.

Тюркологсем паян кун та усă куракан тепĕр ĕç вăл — Н. И. Золотницкий хатĕрленĕ «Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен». Словарь 1875

---

[15] Алексеев А. А. Заметки о первых грамматических трудах по чувашскому языку // Учен. записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1970. Вып. 49. С. 214.

çулта Хусанта пичетленсе тухнӑ. Кунта пурӗ 1978 словарь статйи шутланать, вӗсенче пӗтӗмпе 3000 ытла сӑмах.[16]

Н. И. Золотницкий хӑй аса илӗвӗнче словаре тума 1865 çулта пуçӑнни çинчен çырать. Ку ӗçре ӑна чӑваш шкулӗсенче ӗçлекен учительсем тата чӑвашсен паллӑ этнографӗ В. Магницкий нумай пулӑшнӑ.

Н. И. Золотницкин словарьне пӗчӗк этимологи словарӗ теме пулать. Кунта сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене вырӑсла куçарса тӗрлӗ халӑхсен чӗлхисемпе танлаштарса кӑтартнӑ (словарьте çирӗм чӗлхе сӑмахӗсене тупма пулать).

1906 çулта Будапештра венгр тӗпчевçи Гомбоц хатӗрленӗ «Чӑваш-вырӑс-мадьяр словарӗ» тухнӑ. Словаре сакӑр çӗре яхӑн сӑмах кӗнӗ, сӑмахсен этимологине панӑ, кунта хӑш-пӗр диалект сӑмахӗсене те илсе кӑтартнӑ.

Будапештрах 1908 çулта Паасонен пухса йӗркеленӗ «Чӑваш-мадьяр-нимӗç словарӗ» пичетленет. Гомбоц словарӗпе танлаштарсан, ку ӗç калӑпӑшӗпе те пысӑкрах, фонетикӑна тӗрӗс çырса кӑтартассипе те лайӑхрах шутланать.

Паасонен çырнӑ словарьпе халӗ те анлӑ усӑ кураççӗ. Пӗлтерӗшӗ унӑн пысӑк. 1974 çулта ӑна Венгрири Сегед хулинче А. Рона-Таш профессор ертсе пынипе çӗнӗрен пичетлесе кӑларчӗç.

Хусанта 1909 çулта Н. В. Никольский хатӗрленӗ «Вырӑсла-чӑвашла словарь» тухнӑ. Унта вун тӑхӑр пин вырӑс сӑмахне яхӑн. Хӑш-пӗр сӑмахсене словарьте чӑвашла тӳрех куçарнӑ, теприсене ӑнлантарса панӑ. Тӗслӗхсем: акула — тинӗсре пурӑнакан, тӑрана пӗлмен пысӑк пулӑ; агроном — çӗр ӗçне тума кӗнеке тӑрӑх вӗреннӗ çын; ближний — çывӑх т. ыт. те. Словарь статйисене пӗр тӗпрен пулнӑ сӑмахсене кӗртнӗ. Кунта чиркӳ терминологийӗ те пысӑк вырӑн йышӑнать: *акафист, амвон, апостат, артом* т. ыт. те.

## РЕВОЛЮЦИ ХЫÇÇӐН ТУХНӐ СЛОВАРЬСЕМ

Революци хыççӑн чи малтан тухнӑ словарьсенчен пӗри вӑл — Н. В. Никольский çырнӑ «Краткий чувашско-русский словарь». Вӑл 1919 çулта Хусанта тухнӑ, унта вунӑ пин ытла сӑмах шутланать. Словарьте омонимсене пӗр-пӗринчен уйӑрман, вӗсен пӗлтерӗшӗсене пӗр статьярах кӑтартнӑ: *авӑн* — овин, гнуться.

---

[16] Егоров В. Г Деятельность Н. И. Золотницкого по исследованию чувашского языка // Учен. записки / ЧНИИ. Вып. 15. С. 98—100;
Алексеев А. А. Чӑваш чӗлхин паллӑ словарӗ // Ком. ялавӗ. 1975. Нояб. 23-мӗшӗ.

1931 çулта Шупашкарта авторсен коллективĕ (Н. И. Ванеркке, Н. А. Андреев, Ф. К. Кузьмин, А. Т. Варфоломеева т. ыт. те) хатĕрленĕ «Вырăсла-чăвашла сăмах кĕнеки» тухнă. Ăна Т. М. Матвеев редакциленĕ. Словарьте вунă пине яхăн лексема. Вырăс сăмахĕсемпе интернационаллă сăмахсене кунта ун чухнехи орфографи правилисем тăрăх çырнă: *адрес — атрĕс, анархи — анаркхи, социализм — сотсиалисăм* т. ыт. те.

Н. И. Ашмаринăн 17 томлă словарĕ пичетленсе тухни (1928—1950 çç.) чăваш лексикографийĕн чи пысăк утăмĕ пулса тăрать. Автор словарь материалне 30 çул пухнă. 17 томра хĕрĕх пилĕк пине яхăн сăмах, вăл шутра ача-пăча пуплевĕнчен илнĕ лексемăсем, евĕрлев сăмахĕсем, ял, вырăн, çын ячĕсем те пур. Малтанхи çичĕ том материалне автор хăй хатĕрлесе çитернĕ. 1—5 томĕсем хăй пурăннă чухнех тухнă. Ытти томĕсене Н. И. Ашмарин вилнĕ хыççăн (1933 ç.) пичете Т. М. Матвеев, Н. А. Резюков, А. П. Лукин хатĕрленĕ.

Н. И. Ашмарин словарĕнче чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕ анлăн сăнланнă, çавăнпа та ăна эпир энциклопеди словарĕсемпе пĕр шая лартма пултаратпăр. Нумай тĕпчевçĕ словаре, ун ятне кура, «тезаурус словарь» тет. Авторĕ хăй ăна виçĕ ят панă: 1) Чăваш сăмахĕсен кĕнеки; 2) «Thesaurus Linguae Tschuvaschorum»; 3) «Словарь чувашского языка».

Н. И. Ашмарин чăваш сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене латинла тата вырăсла çырса тухасшăн пулнă. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш томсенче словарь статйисене çав тĕллеве пурнăçласа çырнă. Виççĕмĕш томран пуçласа латин чĕлхипе çырнă материалсем словаре кĕмен. Пиллĕкмĕш томран малалла редакторсем текстне те кĕскетнĕ.

Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхине ачаранах пĕлнĕ, çавăнпа А. Фукс: «Чăваш чĕлхи питĕ чухăн, ун словарĕнче пĕтĕмпе те 1646 сăмах кăна», [17] — тенипе вăл килĕшме пултарайман. Çапла калани тĕрĕс маррине вăл хĕрĕх пилĕк пин сăмахлă словарĕпе кăтартса панă.

Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхине çине тăрса вĕреннĕ, питĕ тимлĕ тишкернĕ. Чĕлхене тĕпчессине вăл чăваш халăхĕн фольклорĕпе, этнографийĕпе, историйĕпе тачă çыхăнтарнă. Ученăй чĕлхе материалне пухасси пирки çапла çырать: «Мал-

---

[17] Фукс А. Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии. Казань, 1840. С. 133.

танах... халăхăн пурнăçне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлмелле, халăх пурнăçĕпе йăли-йĕркине тата пултарулăхне пĕлменни чĕлхене тĕпчесе вĕренес ĕçе яланах чарса тăнă».[18]

Историпе, этнографипе çырнă ĕçсем хыççăн унăн морфологипе фонетика çинчен çырнă монографийĕ пичетленсе тухать. 1896 çулта тĕпчевçĕ словарь тăвас ĕçе пуçăнать. 1900 çулта вăл «Программа для составления чувашского словаря» инструкци пичетлесе кăларать. Çакăн хыççăн словарь валли материал пухма вĕреннĕ çынсене явăçтарать. Паллах, кун пек пысăк словаре материал пĕччене пухнипе туса çитерме май пулман. Словарь çинчен калаçнă чухне материал ярса тăнă çынсем çинчен те манма юрамасть. Ун патне словарь тума кирлĕ материал таçтан та пырса тăнă, ăна вара вăл тимлĕн тишкерсе тухса йĕркеленĕ.

Словарĕн пĕрремĕш кĕнеки 1910 çулта, иккĕмĕш кĕнеки 1912 çулта Хусанта тухнă. Хусан вĕренӳ округĕн управленийĕ словарĕн ытти кĕнекисене вăл çулсенче кăларма ирĕк паман. Н. И. Ашмарин словарьне 1927 çулта Чăваш АССР правительстви йышăннипе çĕнĕрен кăларма тытăннă. 1928 çулта Хусанта çак словарĕн пĕрремĕш томĕ тепĕр хут пичетленсе тухнă.

Литература чĕлхин аталану çăлкуçĕ вырăнне хурса, тĕпчевçĕ словаре вырăнти калаçу материалĕсене те нумай кĕртнĕ. Çапла майпа вăл тăван чĕлхемĕрĕн иксĕлми пуянлăхне, унăн витĕмлĕхĕпе çивĕчлĕхне, сăнарлăхĕн асамлă хăватне туллин кăтартса пама тăрăшнă. Тĕпчевçĕ хăй умне лартнă тĕллеве чыслăн пурнăçланă. Тăрăшни сая кайман. Паян кун та чĕлхеçĕсем кăна мар, историксем те, фольклористсем те, этнографсем те, литературоведсем те çак чаплă словарьпе куллен усă кураççĕ.

Паллă тюрколог, СССР наукăсен академийĕн член-корреспонденчĕ С. Е. Малов Н. И. Ашмарин словарьне хак парса çапла çырать: «Чăваш халăхĕ çакăн пек паха словарь пурришĕн хăйне телейлĕ тесе шутлама пултарать».[19] И. А. Андреев профессор Н. И. Ашмарин ĕçне пысăка хурса: «Халăха валли куллен тыткалама вырăсла-чăвашла е чăвашла-вырăсла чылай пысăк словарьсемех кăларса тăма пултартăмăр

[18] Ашмарин Н. И. Краткая программа для собирания грамматических материалов по языкам и наречиям Дагестана // Изв. Общества обследования и изучения Азербайджана. Баку, 1926. № 1. С. 95.

[19] Малов С. Е. Памяти Н. И. Ашмарина. К 70-летию со дня рождения // Учен. записки / ЧНИИ. Чебоксары, 1941. Вып. 1. С. 136—140.

пулсан, — каллех Н. И. Ашмарина пула. Унăн вун çичĕ томлă словарĕсĕр ку словарьсем ниепле те тухайман пулĕччĕç», — тесе çырать.[20]

Материал тĕлĕшĕпе çакăн пек пуян словарьсем кашни халăхăнах çук. Раççейре пурăнакан тĕрĕк халăхĕсенчен якутсем кăна Э. К. Пекарскин вун виçĕ томлă словарĕпе тивĕçлипе мухтанма пултараççĕ.

Н. И. Ашмарин хатĕрленĕ словарĕн уйрăмлăхĕсем пур. Словарьте сăмахсене хăйне майлă алфавит йĕркипе [а, е, ы, и (і), у (о), ӳ (ӧ), ă, ĕ, й, в, к, л, ль, м, н, н, нь, п, р, с, ç, т, ть, ч, ф, х, ш] вырнаçтарнă. Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене юнашар лартнă пирки алфавита вĕçне çитиччен тытса пырайман. Тĕслĕхрен, *кăркка* сăмах хыççăн çакăн пек статьясем вырнаçнă: *хир кăркки, кăркка манки, кăркка мерченĕ, кăркка пуç, кăркка сăмси, кăркка çырли, кăркка туни.*

Сăмахсен пĕлтерĕшĕсене хăш-пĕр чухне питĕ тĕплĕ уçса панă, вырăсла куçарнинче синонимсем те чылаях илсе кăтартнă (тĕслĕхрен, *кăркка* — «пырин, индюк, пырка, индюшка). Сăмахсен нумай пĕлтерĕшлĕхне кашнинчех икĕ параллеллĕ йĕр хыççăн парса пынă: *кăркăс,* киргиз. (В переносном значении — неряха.) Ловкий. Кăркăс пек (лаша тавраш̆енче). Своенравный. Кăркăс çын хăй евĕрлĕ ĕçлеме юратать, хăй шухăшлани пек тăвасшăн, çынна та хăй пекех ĕçлеттересшĕн.

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем словарьте чылай сăмаха вырăсла куçарманнине çитменлĕх тесе кăтартаççĕ. Н. И. Ашмарин словарьне çĕнĕрен кăларас пулсан, çав çитменлĕхе пĕтерме пулать.

Совет тапхăрĕнче тунă чăвашла-вырăсла словарьсем пирĕн нумай мар. Паллăраххисем вĕсенчен çаксем: 1) В. Г. Егоровăн «Чăвашла-вырăсла словарĕ»; 2) наука тĕпчев институчĕ 1961 çулта кăларнă «Чăвашла-вырăсла словарь».

В. Г. Егоров хатĕрленĕ «Чăвашла-вырăсла словарь» малтанхи хут 1935 çулта, иккĕмĕш хут 1954 çулта тухнă. Иккĕмĕш хут кăларнă чухне автор словаре çĕнĕлĕхсем нумай кĕртнĕ.[21] Ку хутĕнче революци хыççăнхи çулсенче неологизмсем шутланнă, кайрантарах манăçа тухнă сăмахсене словаре кĕртмен (тĕслĕхрен, *авточупу, ăрăмчан, япалаш*

---

[20] Андреев И. А. Аслă тĕпчевçĕ // Тăван Атăл. 1970. 9 №. 69, 70 с.

[21] Павлов И. П. Чăвашла-вырăсла словарь // Тăван Атăл. 1955. 3 №. 155—159 с.

т. ыт. те). Вĕсем вырăнне иккĕмĕш кăларăмра çĕнĕ сăмахсем хушăннă: *активлан, активлантар, ăслай, аванс, аптека, барометр, коммунизм* т. ыт. те.

В. Г. Егоров профессор словаре хатĕрленĕ чухне икĕ тĕп тĕллев лартнă: 1) чăваш сăмахĕсене тата сăмах çаврăнăшĕсене вырăсла тĕрĕс куçарасси; 2) хальхи чăваш литература чĕлхине нормăлама пулăшасси. Словаре шкул ачисемпе учительсем валли тата хаçатра, кĕнеке издательствисенче ĕçлекенсем, куçаруçăсем валли кăна мар, чăваш чĕлхипе интересленекен ытти çынсем валли те хатĕрленĕ. Хăй вăхăтĕнче ку словарь питех те кирлĕ пулнă, чăваш халăхĕн культурине аталантарас ĕçре пысăк пулăшу панă.

1961 çулта тухнă «Чăвашла-вырăсла словаре» авторсен коллективĕ (И. А. Андреев, Н. А. Андреев, А. И. Иванов, Т. В. Иванова, Е. В. Владимиров, А. Л. Лукин, М. М. Михайлов, Н. П. Петров, И. П. Павлов, Н. С. Павлов, Н. А. Резюкова, И. Т. Сергеев, С. А. Угандеев, А. С. Уськин тата Р. И. Цаплина) хатĕрленĕ.

Словаре М. Я. Сироткин профессор редакциленĕ. Словарь авторĕсем умĕнче питех те пысăк задача тăнă — чăваш литература чĕлхине малалла нормăласси, чăвашсене вырăс чĕлхине вĕренме пулăшасси тата ытти халăхсене хамăр чĕлхепе туллинрех паллаштарасси.

Словаре хатĕрлекенсем Н. И. Ашмаринăн 17 томлă словарьне тĕпе хунă, анчах та сăмахсен тытăмĕпе пĕлтерĕшĕсене çĕнĕлле уçса панă. Н. И. Ашмарин тата В. Г. Егоров словарĕсемпе танлаштарсан, ку словаре чăваш чĕлхинче тĕл пулакан вырăс сăмахĕсемпе интернационаллă сăмахсене чылай кĕртнĕ. Кунта кивелнĕ тата калаçу чĕлхинче çеç усă куракан сăмахсене те манса хăварман. Словаре хатĕрлекенсем маларах тухнă словарьсемпе те анлă усă курнă. Литература чĕлхинче анлă сарăлнă сăмахсемпе пĕрлех çак словаре обществăпа политика, наукăпа техника, ял хуçалăх терминĕсене кĕртнĕ. 11 пин тиражлă словарь кĕнеке çӳлĕкĕсем çинче тахçанах çук ĕнтĕ. Анчах та ăна туянас текенсен шучĕ çултан-çулах ӳссе пырать. Çавна шута илсе, Наука тĕпчев институчĕ çĕнĕ «Чăвашла-вырăсла словарь» хатĕрлесе çитерсе пичетлесе кăларчĕ. Қалăпăшĕпе те, сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса парассипе те вăл малтанхинчен пысăкрах тата туллирех. Ăна М. И. Скворцов редакциленĕ.

Вырăсла-чăвашла словарьсенчен паллăраххисене кăтартар:

1) В. Г. Егоров пухса хатĕрленĕ «Вырăсла-чăвашла словарь». Пĕрремĕш кăларăмĕ 1960 çулта тухнă, иккĕмĕшĕ — 1972 çулта;

2) 1951 çулта кăларнă «Вырăсла-чăвашла словарь». Словаре авторсен коллективĕ хатĕрленĕ, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспонденчĕ Н. К. Дмитриев профессор редакциленĕ;

3) чăваш лексикографийĕн пысăк ӳсĕмне 1971 çулта тухнă «Вырăсла-чăвашла словарь» кăтартать. Словарьте 40 пин сăмах, ăна И. А. Андреевпа Н. П. Петров редакциленĕ.

В. Г. Егоровăн «Этимологи словарĕ»[22] чăваш лексикографийĕ кăна мар, тĕрĕк чĕлхисен лексикографийĕ те çитĕнӳ тунине пĕлтерет. Кун йышши словарьсем тĕрĕк халăхĕсен нумай мар. Словарьте пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсем пурĕ 2600. Унта литература чĕлхине кĕнĕ сăмахсем кăна мар, диалект сăмахĕсем те, архаизмсем те пур.

Кашни словарь статйинчех автор чăваш сăмахĕсен ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан параллелĕсене чылай илсе кăтартнă. Монгол чĕлхинчен йышăннă сăмахсене уйрăммăн палăртнă. Словарьте финн-угор чĕлхисене кĕнĕ чăваш сăмахĕсене асăннă, этнографи материалĕсемпе паллаштарнă. В. Г. Егоровăн «Этимологи словарĕ» чăваш сăмахĕсен историне тĕпчес ĕçре пысăк утăм пулса тăрать.

Чăваш литература чĕлхине нормăлама терминологи словарĕсем чылай пулăшаççĕ. Юлашки çулсенче тухнă словарьсенчен çаксене асăнса хăвармалла:

1. «Русско-чувашский словарь технических терминов» (Чебоксары, 1971). Н. П. Петров пухса хатĕрленĕ, 10 пин термина яхăн кĕртнĕ.

2. «Русско-чувашский общественно-политический словарь» (Чебоксары, 1973). Авторĕ — М. И. Скворцов. Кĕнекене 8 пин сăмахпа сăмах майлашăвĕ кĕртнĕ. Вĕсене куçарнипе пĕрлех ăнлантарса та панă.

Чăваш чĕлхин ятарласа кăларнă ăнлантаруллă словарĕ çук. Уп евĕрлĕрех словарьсенчен 1949 çулта тухнă «Агитатор словарьне» (редакторĕ М. А. Андреев) çеç палăртма пулать. Словарь хаçатсемпе журналсенче тĕл пулакан хăш-пĕр сăмахсемпе 900 сăмах çаврăнăшне кĕскен ăнлантарса парать.

Чăваш литература чĕлхине пуянлатас ĕçре диалектсен пĕлтерĕшĕ чылай пысăк. Вĕсен пуянлăхне пухса тĕпчес тата

[22] Егоров В. Г. Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964.

словарь йěркелес тěлěшпе Л. П. Сергеев тěпчевçě нумай вăй хучě. 1968 çулта вăл «Чăваш чěлхин диалектологи словарьне» пичетлесе кăларчě. Унта тěрлě вырăнти калаçу сăмахěсем кěнě.

1975 çулта М. Ф. Чернов хатěрленě «Краткий русско-чувашский фразеологический словарь» тухрě. Вăл вырăс фразеологизмěсене чăвашла мěнле куçармаллине кăтартать. Автор хăш-пěр сăмах çаврăнăшěсене тӳрех куçарма май килмен пирки ăнлантарса куçарнă.

Чăваш чěлхин орфографи правилисем час-часах улшăннă май орфографи словарěсем те чылай тухнă. Анчах юлашки çулсенче кăларнă словарьсенче çитменлěхсем те сахал мар. Çавна кура халě çěнě орфографи словарě кăларма йышăннă. Вăл кěçех пичетленсе тухмалла. Çак словарь калăпăшěпе ку таранччен тухнисенчен чи пысăкки пулмалла (40 пичет листине яхăн).

Тěрлěрен словарьсем тăвас ěç пěр вăхăтлăха та чарăнмасть, мěншěн тесен вěсем халăха тăван чěлхене тарăнрах пěлме, унăн пуянлăхне алла илме, илемне лайăххрах туйма пулăшаççě.

Чěлхери сăмахсене сасăпа пусăм тěлěшěнчен тěрěс калама вěрентекен словарьсем те пур. Вěсене чěлхе наукинче орфоэпи словарěсем теме йышăннă. Чăваш чěлхинче ун пек словарьсем сахал. Ана А. Е. Горшков çырнă, вăл «Чăваш чěлхин кěске орфоэпи словарě» ятлă. Вăл уйрăм кěнекен пичетленсе тухман. Çак словаре 1972 çулта «Чěлхе культурин ыйтăвěсем» кěнекере пичетленě. Словарěн тытăмě çакăн пек: малтанах сăмаха çырса пусăм хăш сыпăк çине ӳкнине кăтартнă (скобкăра мěнле каламалла маррине палăртнă, унтан мěнле каламаллине çырса панă):

виçшéрěн (виçшеррěн мар; каламалла: вишшерěн);
калáв (калаф мар);
критиклé (критикла мар);
аслáмăшсěр (каламалла: асламăшшăр).

А. Е. Горшков пичетлесе кăларнă тепěр ěçе те асăнмалла: «Мěнле каласан тěрěс? Словарь-справочник». Шупашкар, 1973. Кунта чěлхери сăмахсене тěрěс те вырăнлă усă курма. вěсене пуплевре пěр-пěринпе тěрěс çыхăнтарма вěрентнě.

Паян куна çитсе те чěлхемěрте синонимсен, антонимсен, омонимсен тулли словарěсем çук. 1983 çулта Е. Ф. Васильева çырнă «Чăваш чěлхинчи синонимсен словарě» пичетлен-

се тухрĕ. Словарь икĕ пайран тăрать: малта синонимсен рĕчĕсене çырса панă, унтан — словарьте тĕл пулакан мĕнпур синонимсен списокĕ. Словарь статйисене кунта автор фразеологизмсемпе е сăмах майлашăвĕсемпе пуянлатнă:

| | |
|---|---|
| хăнала | пăхса яр |
| сăйла | сăй пар |
| чысла | апат ларт |
| хăна ту | |

1995 çулта Л. П. Сергеев I—IV классенче вĕренекенсем валли «Синонимсемпе антонимсен кĕске словарьне» пичетлесе кăларчĕ. Шкул ачисем валли хатĕрленĕ словаре, паллах, чĕлхери мĕнпур синонимсемпе антонимсене кĕртес тĕллев лартман. Унта пуçламăш шкул программипе çыхăннă вулав материалĕнче, калаçура тĕл пулакан тĕслĕхсене çеç çырса кăтартнă: *инкек, нуша, синкер*. Инкек пулчĕ. Нуша хистет. Çут çанталăк синкерĕ. Пурнăç нуши. Вăрçă синкерĕ мĕн иккенне лайăх пĕлет Антиповсен кил-йышĕ (Хв. Агивер). Инкек куçа курăнса килмест (Ват. сăм.). Нуша пылпа кулачă çитерет (Ват. сăм.). Инкек ура айĕнченех тухать теççĕ (В. Алентей).

*Телей, ăраскал.* Телей тупрăм. Ăраскал тупрăм. Пысăк телей.

Телей качака мар, măйракинчен тытма çук (Ват. сăм.). Ăраскала укçалла илме çук (Ват. сăм.).

Антонимсен словарĕнчен илнĕ тĕслĕхсем:
вăрăм — кĕске;
вăрăм хăма — кĕске хăма;
вăрăм кун — кĕске кун;
вăрăм патак — кĕске патак.

Кĕске кутлă Кĕçтенкке йĕтем хыçне вĕçтерет (Туп. юм. Мулкач). Сăхманĕ кĕске, хăй вăрăм (Туп. юм. Тăрна). Качакан сухалĕ вăрăм та ăсĕ кĕске (Ват. сăм.).

Халлĕхе чăваш чĕлхинче омонимсен ни кĕске, ни тулли словарĕ çук. Кун йышши словарь шкул ачисене те, чăваш чĕлхе тĕпчевçисене те, шкул учителĕсене те питех те кирлĕ. Ятарлă словарĕ çук пулин те, вĕсене чăвашла-вырăсла словарьсенче тупма пулать, унта омонимсене реестра кăларнă, рим цифрисемпе палăртнă:
пĕлĕш I «знакомый»;
пĕлĕш II «знакомиться»;
тивĕç I «долг»;
тивĕç II «хватать».

Ку таранччен пичетленнĕ тата эпир пăхса тухнă словарьсенче сăмахсене алфавит йĕркипе пуçламăш сас паллине шута илсе вырнаçтарса тухнине куратпăр. Сăмахсене вĕсен вĕçĕсенчи сас паллисене шута илсе те алфавит йĕркипе вырнаçтарма пулать.

Сăмах мĕнле сас паллипе пĕтнине шута хурса йĕркеленĕ словаре тӳнтер (вырăсла: обратный) словарь теççĕ. Ун пек словаре Л. П. Сергеев, Т. Н. Сергеева, А. Н. Тихонов хатĕрленĕ. Ячĕ те ун «Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕ». Тӳнтер словарь сăмахсен тытăмне, сăмах тăвакан (деривации) аффиксĕсене вĕренме питех те лайăх кĕнеке. Сăвăçсене (рифмачсене уйрăмăнах) рифма шыраса ларса вăхăт иртгересрен питех те пулăшма пултарать. Тĕслĕх вырăнне:

1) *-а* тата *-ç* сас паллипе пĕтекен сăмахсене илер:

| | |
|---|---|
| калча | саваç |
| шалча | шăвăç |
| вăлча | йывăç |
| шакăлча | ывăç |
| укăлча | явăç |

2) *-кă* тата *-лет* аффикслă сăмахсене илер:

| | |
|---|---|
| тытăнкă | тĕксĕмлет |
| юхăнкă | ӳсĕмлет |
| çапкă | пĕтĕмлет |
| тапкă | тĕттĕмлет |
| лăпкă | ĕххĕмлет |
| çупкă | типшĕмлет |

Чăваш чĕлхинче тулли ăнлантару словарĕсем халлĕхе çук терĕмĕр. Кĕске ăнлантару словарĕсен шутне Л. П. Сергеевпа М. Г. Данилова вăтам шкул валли хатĕрленĕ «Чĕлхе терминĕсен ăнлантаруллă словарĕ» ĕçе кĕртме пулать. Вăл 1996 çулта пичетленсе тухнă. Ку словарь статйисене мĕнле йĕркеленине сăнама пĕр-икĕ тĕслĕх илсе паратпăр:

п у с ă м (ударение). Сăмахри сыпăксенчен пĕрне вăйлăрах палăртса калани (армáн, çырý, вắрăм, сĕ́лĕ, чăвáш, тăвáн, кáлăп, сéнĕк, пӳ́лĕм);

с ы п ă к (слог). Ӳпкерен тухакан пĕр сывлăш хумĕпе пулакан сасă е сасăсен çыхланчăкĕ. Сыпăк ытларах чухне уçă сасăпа хупă сасăсенчен тăрать (вăр-ман, пĕ-лĕт, са-ма-на, кĕ-не-ке).

Юлашки çулсенче пичетленсе тухнă лексикографи ĕçĕсенчен чи сулăмли вăл М. Р. Федотов хатĕрленĕ икĕ томлă «Эти-

мологический словарь чувашского языка» (Чебоксары, 1996. I т. — 26,17 п. л.; II т. — 29,66 п. л.).

В. Г. Егоров кӑларнӑ этимологи словарӗнчен М. Р. Федотов хатӗрлени ҫакӑнпа уйрӑлса тӑрать:

— чылай словарь статйисене Н. И. Ашмарин словарӗнчен илнӗ тӗслӗхсемпе пуянлатнӑ;

— В. Г. Егоров ӑнлантарнине хирӗҫлесе ҫырнисем пур;

— иккӗмӗшле сӑмахсен ретне панӑ;

— тункӑс-маньчжур чӗлхисенчи материалсене чылай кӗртнӗ;

— финн-угор чӗлхисенчи тӗслӗхсемпе словарь статйисене пуянлатнӑ;

— реестра кӑларнӑ сӑмахсен диалект варианчӗсене те панӑ (кушял / кушил / кушеле / кушиле / кушелкке / кушилкке / кушилкка).

# СЕМАНТИКА ТАТА СЕМАСИОЛОГИ

## КӲРТЕМ

«Семантика» терминпа чӗлхе наукинче пӗрремӗш хут Франци ученӑйӗ М. Бреал 1897 ҫулта усӑ курнӑ.[1] Семантика ӑнлав анлӑ пӗлтерӗшлӗ: 1) вӑл чӗлхе наукин пӗр пайӗ пулнӑ май сӑмахсен лексика пӗлтерӗшне те, грамматика пӗлтерӗшне те тӗпчет, унсӑр пуҫне ирӗклӗ сӑмах майлашӑвӗсемпе ҫыхӑнчӑк сӑмах майлашӑвӗсен (фразеологизмсен, идиомӑсен) пӗлтерӗшӗсене тӗпчесе ҫырса кӑтартасси те, предложенисен, текстсен пӗтӗмӗшле пӗлтерӗшӗсене палӑртасси те семантикӑн задачисен шутнех кӗрет; 2) семантика — чӗлхе наукин пӗр пайӗ; 3) семантика — семиотикӑн тӗп пайӗсенчен пӗри.

Семантика терминпа юнашарах сематология е семасиология (грек чӗлхинче sēmasia «пӗлтерӗш» + logos «вӗрентӳ») ӑнлавсем пур. Хӑш-пӗр тӗпчевҫӗсем каланӑ тӑрӑх, вӗсем пӗр пӗлтерӗшлех, теприсем ӗнентернӗ тӑрӑх, семасиологи семантикӑн пӗр пайӗ кӑна шутланать.[2]

О. С. Ахманова «семасиологи» термин икӗ пӗлтерӗшлӗ пулнине палӑртать: 1) чӗлхе единицисен пӗлтерӗшне тӗпчекен чӗлхе наукин пӗр пайӗ; 2) сӑмахсен тата сӑмах майлашӑвӗсен лексика пӗлтерӗшне тӗпчекен чӗлхе наукин пӗр пайӗ.[3]

Д. Н. Шмелев семантика ӑнлав семасиологи тенипе пӗр пӗлтерӗшлех тесе шутлать.[4]

Чӗлхе наукинче лексика семантики (вырӑсла: лексическая семантика) тата синтаксис семантики (вырӑсла: синтаксическая семантика) пуррине палӑртаҫҫӗ. Тӳрремӗнех ӑнланас пулсан лексика семантики сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене,

---

[1] Breal M. Essai de semantigue. Scince des significations. Paris, 1897.

[2] Новиков Л. А. Семантика русского языка. М.: Высш. шк., 1982. С. 5.

[3] Ахманова О. С. Словарь лингвистических терминов. М.: Сов. энцикл., 1969. С. 401.

[4] Шмелев Д. Н. Семантика // Русский язык. М.: Сов. энцикл., 1979. С. 279.

пĕлтерĕш аталанăвĕпе улшăнăвĕсене çырса кăтартать. Предложенисен семантика (пĕлтерĕш) структурине тĕпчекен синтаксисăн пĕр пайне синтаксис семантики теме йышăннă. Ку йĕркепе пăхсан ирĕклĕ тата çыхăнчăк сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене хăш пайра пăхса тухмалли уçăмлă курăнмасть. Ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсем — синтаксисăн уйрăлми компоненчĕсем, çавна шута илсен вĕсен синтаксис семантики текен пайра пăхмалла: *хитре чечек, хирти сарă чечек, пысăк çурт, таса шыв, ăслă çын.*

Д. Н. Шмелев шухăшĕпе, *чугун çул, тӳрĕ пилĕк, тăрри шăтăк* йышши сăмах майлашăвĕсем лексика единицисем шутланаççĕ, калаçура вĕсемпе хатĕр ят пару единицисем пек усă кураççĕ.[5] Апла пулсан, вĕсем лексика семантикипе шайлашса тăраççĕ. Çавна курах, тен, вĕсене синоним словарĕсенче пĕр статьярах параççĕ, синонимсен речĕсем: 1) *йĕпен, ислен, лачкам шыва ӳк;*[6] 2) *итле, тăнла, хăлхана чик;* 3) *мулкач, куян, кĕске хӳре, катăк тута, чалăш куç;* 4) *çиллен, тарăх, тутана тăс.*

Хушăран лексика семантики синтаксис семантикипе тан пĕлтерĕшлĕх сĕмĕсене туяннине курма пулать: *ухмах, тăрри шăтăк, унăн килте пурте çук.* Çав ăнлавах сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшĕсемпе те палăртма пулать: *сурăх:* 1) килти выльăх; 2) ухмах (çын); *тăмана:* 1) вĕçен кайăк; 2) ухмах (çын).

Халлĕхе чăваш чĕлхе наукинче ку пулăмсене танлаштарулла мелпе тĕпчени пулман, лексикологи курсĕнче сăмахсен нумай пĕлтерĕшлĕх пуррине палăртнипе тата омоними, синоними, антоними пулăмĕсене çырса кăтартнипех çырлахнă. Пирĕн шутпа, сăмах майлашăвĕсене (вĕсем ирĕклĕ е çыхăнчăк пулнине пăхмасăрах) пĕр сăмах шайĕнче пăхма май çук, апла пулсан вĕсен лексика семантики çук.

Семантика (семасиологи) ку таранччен чăваш чĕлхе наукинче чĕлхе пулăмĕсен тулашĕнче тăнă, чĕлхе единицисен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене çырса кăтартассине (тĕрĕсрех: лексика тата синтаксис семантикине тĕпчессине) никам та тĕп вырăна кăларман. Лексика семантикин аталанăвĕн тĕп çулĕ-йĕрĕсене çырса кăтартнă ĕçсенчен чăваш чĕлхинче В. И. Сергеевăн «Развитие лексической семантики чуваш-

[5] Шмелев Д. Н. Современный русский язык // Лексика. М.: Просвещение, 1977. С. 288.

[6] Тĕслĕхсене Л. П. Сергеев хатĕрленĕ «Синонимсемпе антонимсен кĕске словарĕнчен» (Шупашкар, 1995) илнĕ.

ского языка. Основные тенденции» ĕçне кăна асăнма пулать.[7] Ку ĕçре лексика семантикин аталанăвне çакăн пек терминсемпе сăнарланă: семантика объективизацийĕ, субъективаци, персонализаци, персонификаци, популяци тата абстрагизаци.

Метафора, метоними тата синекдоха пулăмĕсене сăмахсен нумай пĕлтерĕшлĕхĕ пирки ку таранччен тухнă лексикологи курсĕсенче çырса кăтартнă.[8]

Сăмахсен пĕлтерĕш аталанăвне тĕпчесе çырнă ĕçсен шутне Н. П. Петров профессорăн статйисене кĕртмелле, вĕсенче автор чăваш чĕлхин лексика семантики совет тапхăрĕнче аталаннине сăнать.[9]

## ЛИНГВИСТИКА СЕМАНТИКИ

### Грамматика тата лексика пĕлтерĕшĕсем

### Логика семантики

Лингвистика семантики чĕлхе единицисен: морфемăсен, сăмахсен, ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсен, çыхăнчăк сăмах майлашăвĕсен (фразеологизмсен, идиомăсен), предложенисен, текстсен пĕлтерĕшне тĕпчесе çырса кăтартать. Çӳлерех асăннă чĕлхе единицисене грамматика тĕлĕшĕнчен те, лексика енчен те анализлама (анализ тума) пулать. Тĕслĕх вырăнне *çын, çынсем, сĕтел, сĕтелсем, çынлăх, этемлĕх* сăмахсене илер.

*Çын* — тымар морфема, çав вăхăтрах тулли пĕлтерĕшлĕ сăмах та. Унăнне лексика пĕлтерĕшне те, грамматика пĕлтерĕшне те палăртма пулать:

*çын* — япала ячĕ (япалалăх пĕлтерĕшĕ çав япалана курма, тытса пăхма пулнинче курăнать), пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра — грамматика (морфологири) пĕлтерĕшĕ;

---

[7] Сергеев В. И. Развитие лексической семантики чувашского языка. Основные тенденции. Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1991.

[8] Андреев Н. А. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1961; Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1978; Современный чувашский литературный язык. Т. I. Чебоксары, 1990.

[9] Петров Н. П. Чăваш чĕлхинчи лексика семантики совет тапхăрĕнче аталанни // Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1978. 146—159 с.; Петров Н. П. Изменение семантической структуры чувашских слов в советскую эпоху // Проблемы исторической лексикологии чувашского языка. Чебоксары, 1980. С. 90—95.

*çын* — ăсласа калаçма пултаракан тата ĕç хатĕрĕсем туса вĕсемпе пурнăçра усă курма пултаракан чĕрчун — лексика пĕлтерĕшĕ;

*çынсем* — япала ячĕ, нумайлă хисепре, тĕп падежра — грамматика пĕлтерĕшĕ, *-сем* — сăмаха улăштаракан аффикс морфема, вăл япаласен ушкăнлă паллă мар нумайлăха палăртакан граммема;

*çынсем* — ăсласа калаçма пултаракан тата ĕç хатĕрĕсем туса вĕсемпе пурнăçра усă курма пĕлекен чĕрĕ чунсем — лексикăпа грамматика пĕлтерĕшĕсем тачă çыхăнура тăраççĕ; *-сем* аффикс морфемăна чылайăшĕсем сăмаха улăштаракан элемент тесе шутлаççĕ, анчах Ф. Ф. Фортунатовпа унăн вĕренекенĕсем нумайлă хисеп аффиксне дериваци (сăмах тăвакан) аффиксĕ тесе шутланă. Чăнах та, нумайлă хисепе палăртакан формантсем чĕлхе тулашĕнчи чăнлăха, тăрăма палăртаççĕ, ят пару функциллĕ пулса тăраççĕ: пĕр уйрăм илнĕ *сĕтел* нумайлă хисепре пулма пултараймасть, *сĕтелсем* тени темиçе сĕтел пулнине пĕлтерет, вĕсем пĕр формăллă пулмасан та пултараççĕ: *апат сĕтелĕ, çыру сĕтелĕ, телевизор сĕтелĕ, буфет сĕтелĕ, магазин сĕтелĕ, юман сĕтел, çăка сĕтел* т. ыт. те.

*Сĕтел* сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулни унăн лексика пĕлтерĕшĕ анлă пулнине пĕлтерет: *паспорт сĕтелĕ* сăмах майлашăвĕ учреждение палăртать; паллах, вăл учрежденире ĕç хучĕсене сĕтел çинчех çыраççĕ ĕнтĕ.

*Этемлĕх, çынлăх* сăмахсенче сăмах тăвакан *-лăх* аффикс морфема пур, ăна пула *çын, этем* сăмахсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ палăрать: *çынлăх* «гуманизм», *этемлĕх* «человечество (человеческий род)», «гуманизм».

*Çĕр çинче этем нумай та çын сахал* тенине вырăсла çапла куçарма пулать: «На земле народу много, но гуманных людей мало». Апла пулсан *çын* тата *этем* синонимсен пĕлтерĕш расналăхĕ куç умĕнчех.

*Çын* тата *çынлăх* сăмахсен грамматика пĕлтерĕшĕ пĕр килсе тухать, анчах лексика пĕлтерĕшĕ расна. Малтанах пăхсан *çын* сăмах конкретлă пĕлтерĕшлĕ, *çынлăх* абстрактлă пĕлтерĕшлĕ пек курăнать, анчах та ку малтанлăха кăна: *çын* сăмах пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ, вăл пĕр конкретлă (паллă) çынна кăна палăртмасть, пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшĕ унăн абстрактлăхне те кăтартать.

Дериваци аффиксĕсен сăмах тăваслăх пĕлтерĕшне палăртни тĕрĕсех ĕнтĕ, вĕсен сăмахсен пĕлтерĕш расналăхне палăртас сĕмĕ пысăк: *юманлăх* тата *куçлăх* сăмахсенчи *-лăх*

аффикс икĕ пĕлтерĕшлĕ: *юманлăх* — юмансем ӳсекен вырăн; *куçлăх* — куç лайăх куртăр тесе хатĕрленĕ икĕ кантăклă прибор.

Асăрхăр, *юманлăх* сăмахра *-лăх* аффиксăн нумайлăха пĕлтерес сĕмĕ куç умĕнчех, анчах *куçлăх* сăмахра унăн ку пĕлтерĕш тӳрремĕнех палăрмасть. Сăмаха улăштаракан аффикссен те час-часах пĕлтерĕш расналăхне палăртас сĕмĕ пысăк: *Юлташпа килчĕ* тенĕ чухне *-па* пĕрлелĕх падеж аффиксĕ ĕçе кампа пĕрле тунине пĕлтерет. *Ансăр çулпа малалла утрăмăр* предложенири *çулпа* сăмахра вырăн пĕлтерĕшĕ малти вырăна тухса тăрать. *Вырăнпа выртать* тенĕ чух мĕнлелĕх пĕлтерĕшĕ палăрать, *вырăнпа вырт* сăмах майлашăвĕн куçăмлă пĕлтерĕшĕ *йывăр чирле* тенипе пĕр тан. *Эсĕ мана Мускавпа ан хăрат* предложенири *Мускавпа* сăмахăн пĕлтерĕшне уçăмлăн калама та хĕн, унта пĕрлелĕх пĕлтерĕшĕ палăрмасть те, мел пĕлтерĕшĕн сĕмĕ кăштах палăрать.

Лексика тата грамматика пĕлтерĕшĕсене шута хурса эпир сăмахсене тĕрлĕрен ушкăнлама пултаратпăр. *Сĕтел* сăмах лексикăпа семантика тĕлĕшĕнчен *пукан, тенкел, диван, кравать* сăмахсемпе пĕр тематика ушкăнне кĕрет (мебель); *сĕтелĕн, сĕтеле, сĕтелте, сĕтелтен, сĕтелпе, сĕтелсĕр, сĕтелшĕн* сăмахсен ушкăнĕ грамматика тĕлĕшĕнчен вĕçленӳ парадигмине йĕркелет.

Çапла вара, лингвистика семантики тени чĕлхе единицисен (уйрăмах сăмахăн) грамматика пĕлтерĕшĕпе лексика пĕлтерĕшĕн пĕрлĕхĕ пулса тăрать:

$$\underset{\text{(ЛС)}}{\text{лингвистика семантики}} = \frac{\text{лексика семантики (пĕлтерĕшĕ)}}{\text{грамматика пĕлтерĕшĕ (семантики)}}$$

$$\text{ЛС} — \frac{\text{ЛСВ (лексика-семантика варианчĕ)}}{\text{ЛГВ (лексика-грамматика варианчĕ)}}$$

$$\text{ЛС} — \frac{\text{лексема} + \text{семема}_1 + \text{семема}_2 + \ldots + \text{семема} \ldots}{\text{лексема} + \text{граммема}_1 + \text{граммема}_2 + \ldots + \text{граммема}_n \ldots}$$

Лингвистика семантики (ЛС) ăнлав — кăткăс ăнлав, вăл лексика пĕлтерĕшĕпе грамматика пĕлтерĕшĕн пĕрлĕхĕ кăна мар, лексика-семантика варианчĕсен (ЛСВ) тата лексика-грамматика варианчĕсен пĕрлĕхĕ те. Чĕлхе единицин (сăмахăн) лексика пĕлтерĕшĕ пĕрре те, темиçе те пулма пултарать, лексика-грамматика варианчĕсем (ЛГВ) ялан тенĕ пекех лексика-семантика варианчĕсенчен ытларах.

ЛСВ

| | |
|---|---|
| ЛС: нимĕр | çăнăх кĕселĕ$_1$ + пюре$_2$ — мемме, мĕшĕлти |
| | ЛГВ |
| апат-çимĕç (çиме) | нимĕр, нимĕрĕн, нимĕре, нимĕрте, нимĕртен, нимĕрпе, нимĕрсĕр, нимĕршĕн, нимĕрсем, нимĕрĕм, нимĕрӳ, нимĕрĕ, нимĕрччĕ, нимĕрле (скер) . . . |
| нимĕр (çиме) | ЛСВ: 1) кĕсел: вĕри шыва çăнăх ярса пĕçернĕ çурма шĕвек çиме;<br>2) пюре: çĕр улми нимĕрĕ: çĕр улмие пĕçерсе тӳсе (сĕт е шыв ярса) шĕветнĕ çиме;<br>3) куçăмлă: мемме, мĕшĕлти: çаврăнăçусăр **çын.**<br>ЛГВ: падеж, сăпат, хисеп . . . аффиксĕсене йышăннă граммемăсен тĕрлĕрен грамматика пĕлтерĕшĕсем . . . |

**Лексика** семантики — кăткăс пулăм, унăн чĕлхери тăрăмне палăртнă чух ăна логикăпа, психологипе тата философипе тачă çыхăнтармалла. Чĕлхе пĕлтерĕшлĕхне (лингвистика семантикине) çав наукăсемпе пĕр тĕвĕре пăхса тухмалла, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă.

Логика семантики (вăл логика наукин пĕр пайĕ) аталанăвĕн пуçламăшĕ нимĕç математикĕпе логикĕн Г. Фреге тата Ч. Пирс (философ тата логик) американец ячĕсемпе çыхăннă. Пирс — семиотика наукин аслашшĕ тата пĕлтерĕш теорине аталантараканĕ. Фреге малтанласа япалана унăн ячĕ мĕнле шайлашса тăнине тĕпчеме пуçланă. Г. Фреге сĕннĕ тăрăх ăслăлăха (наукăна) «пĕлтерĕш» тата «пĕлтерĕм» (смысл) терминсем кĕнĕ. Г. Фреге кăтартнă тăрăх, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пĕлмелле: пĕлтерĕш (значение, Bedeutung, палăртакан япала), пĕлтерĕм (смысл, Sinn, информаци, япалана пĕлни). Ят (знак) пĕлтерĕме палăртать, япалана ят парать. Пĕр-пĕр знакпа эпир пĕлтерĕме кăтартатпăр тата пĕлтерĕше палăртатпăр. Тĕслĕхрен, *Шурăмпуç çăлтăрĕ* тата *Каçхи çăлтăр* пĕр пĕлтерĕшлех (Венера планета), анчах расна пĕлтерĕмлĕ. Илсе кăтартнă синонимлă сăмах майлашăвĕсем, Венера планетăна палăртса, пирĕн пĕлĕве анлăлатаççĕ.

Тата тепĕр тĕслĕх: *«Саламби» авторĕ* тата *А. Артемьев* тенинче пĕр денотат, анчах пĕлтерĕм расна.

Пĕлтерĕм, çапла майпа, пĕлтерĕшпе ăнкару хушшинче юлать. Тĕрĕссипе илсен, логика семантики ятарлă (искусственнăй, суя) чĕлхесен (чи малтанах математика логикин) пĕлтерĕшсене тĕпчет, абстрактлă символсене чĕрĕ чĕлхене мĕнле куçармаллине çырса кăтартать. Математика логикин никĕсĕ çинче чĕлхене тĕпчени ăслăха çакăн пек терминсем кĕртме май панă: «метаязык», «объект-чĕлхе», «нумайлăх», «предикат», «функци», «конъюнкци», «дизъюнкци», «импликаци», «экстенсионал», «интенсионал» т. ыт. те. Сăмахран, тăванлăх терминĕсен нумай пĕлтерĕшлĕхне пурне те пысăках мар семантика паллисен хисепĕпе палăртма пулать; сăмахăн пĕлтерĕшĕ семантика паллисен тăрăмĕнчен тухса тăрать:

I нумайлăх — 1 — «ар çынлăх палăрăмĕ»
2 — «хĕр арăмлăх палăрăмĕ»
II нумайлăх — 1 — «çуратаканăн палăрăмĕ»
2 — «çуралнин палăрăмĕ»
III нумайлăх — 1 — «çуратаканăн палăрăмĕ (тач тăванлăх енĕпе çуралнă)»
2 — «çуратаканăн палăрăмĕ (ют тăванлăх енĕпе çуралнă)»
IV нумайлăх — 1 — «пĕр тăхăмри хурăнташлăх (пĕр тăвантан çурални)»
2 — «саккунлă çуратаканăн палăрăмĕ (саккунлă çурални)»

| Çапла вара: | I | II | III | IV | атте |
|---|---|---|---|---|---|
| | 1 | 1 | 1 | 1 | |

## ЧĔЛХЕН СИСТЕМĂЛĂХĔ
## ЧĔЛХЕН ЛЕКСИКА-СЕМАНТИКА СИСТЕМИ

Хальхи лингвистика чĕлхере системăлăх пурри çинчен вĕрентет. Чĕлхере фонетика, грамматика, сăмах пулăвĕн, лексика е лексика-семантика тата ытти системăсем пуррине палăртаççĕ.

Фонетика системи çинчен калаçу пуçăнсан эпир сасăсен е фонемăсен тытăмĕ çинчен шухăшлатпăр, кашни чĕлхерех хупă сасăсен (фонемăсен) тата уçă сасăсен (фонемăсен) хирĕç тăрăвĕ тĕп вырăн йышăнать, çавна май эпир уçă сасăсен тытăмĕ (структури) тата хупă сасăсен тытăмĕ (структури) пирки калаçма пултаратпăр.

Кашни системăн хăйĕн тытăмĕ (структури) пур. Хупă фонемăсемпе уçă фонемăсен тытăмĕ (структури) чĕлхери фонемăсен е сасăсен системине йĕркелет. Сасăсен çак икĕ ушкăнĕ пĕр-пĕринчен функци, артикуляци, акустика паллисемпе уйрăлса тăраççĕ.

Грамматикăра (морфологире) пуплев пайĕсен системи пирки калаçма май пур, çавăн пекех категориллĕ тата категорисĕр формăсем грамматикăн (морфологин) системине йĕркелеççĕ. Эпир падеж системи пирки калаçма пултаратпăр. Чăваш чĕлхин падеж системинче 8 падеж категорийĕ тĕвĕленнĕ: тĕп, камăнлăх, пару, туху, вырăн, пĕрлелĕх, çуклăх, пирке падежĕсем. Вăхăт категорийĕн формисем чĕлхери вăхăт категорийĕн системи пуррине хыпарлаççĕ.

Чĕлхери лексика-семантика системине пур енлĕ тата тараннăн тĕпченĕ теме май çук-ха, ку çак система кăткăс пулнинчен те килет. Кăткăслăхне пула ку система пирки иккĕленсе калаçакансем те пур. Ытти системăсемпе танлаштарсан лексика-семантика системи тӳрех куçа курăнмасть, унта регулярлă мар пулăмсем хуçаланнă пек туйăнать. Паллах, лексикăра та, семантикăра та асистемăллă (е антисистемăллă) пулăмсем пур, анчах вĕсемшĕнех чĕлхере лексика-семантика системи çук тесе калама йывăр.

Ытти системăсемпе танлаштарсан лексика та, семантика та тулашри (экстралингвистика) пулăмсемпе çыхăннă. Кивĕ сăмахсем чĕлхерен тухса ӳкни, çĕннисем чĕлхене кĕрсе пыни тата сăмахсен пĕлтерĕшĕсем улшăнни пирĕн пурнăçри факторсенчен килет.

Чĕлхери сăмахсен йышĕ пысăк пулнипе унпа никам та пĕр харăс усă курма пултараймасть, çавна май эпир сăмахсене тематика ушкăнĕсем çине пайласа тĕпчетпĕр, синонимсемпе антонимсене, омонимсемпе паронимсене уйăратпăр.

Тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсен пĕлтерĕшĕсем расна пулин те, вĕсене пĕрлештерсе таракан пĕтĕмĕшле пĕлтерĕм (смысл) пур. Тĕслĕхрен, «сĕтел-пукан» (вырăсла «мебель») текен тематика ушкăнне илер. Кунта *сĕтел* тата *пукан* кăна кĕмеççĕ: «сĕтел-пукан» («мебель») тесен куç умне *диван, кравать, кресло, шкаф* тата ыттисем те тухса тăраççĕ. Идеографи словарьне хатĕрлекен нимĕç ученăйĕсем В. Халлигпа В. Вартбург[10] пĕтĕм чĕлхери сăмахсене виçĕ ушкăна пайлама пулать тенĕ: 1) тĕнче уçлăхĕ; 2) çын (этем); 3) çын тата тĕнче уçлăхĕ.

---

[10] Кун çинчен В. И. Сергеев çырнă кĕнекене пăхăр: «Развитие лексической семантики чувашского языка // Основные тенденции. Чебоксары, 1991. С. 62.

Çӳлерех асăннă трихотомилле классификаципе усă курса пушкăрт тĕпчевçи А. Г. Шайхулов чĕлхери сăмахсене çакăн пек ушкăнсем çине пайлама сĕнет (кашни пысăк ушкăн вакраххисем çине пайланать):

I. Ç у т ç а н т а л ă к. 1) Чĕрĕ мар çут çанталăк: а) çĕр: çĕр çийĕн тытăмĕ; ă) шыв, шывсен расналăхĕ: кӳлĕ, тинĕс, океан, юхан шыв, çăл куçĕ т. ыт. те; б) сывлăш (космос), çут çанталăкри пулăмсем: çумăр, юр, пăр, тăвăл, шăрăх, сивĕ, çиçĕм. 2) Чĕрĕ çут çанталăк: а) флора: ӳсен-тăран тĕнчи; ă) фауна: чĕр чун тĕнчи, чĕр чунсен кĕлетки тытăмĕ.

II. Ç ы н. 1) Çыннăн биологи тытăмĕ. 2) Çын пурнăçĕ, аталанăвĕ (çурални, ӳсни, чирĕ, вилĕмĕ). 3) Çыннăн тулашĕ (фигури, кĕлетки, çӳллĕш). 4) Çыннăн шалти тĕнчи (эмоци, психики, темпераменчĕ, характерĕ).

III. О б щ е с т в о. 1) Обществăри çын. Çынна кирлĕ япаласем (çимелли, кил-çурт, тум-тир, атă-пушмак, чашăк-тирĕк, эрешсем). 2) Çын, унăн çемйи, тăванлăх çыхăнăвĕсем. 3) Патшалăх (государство). 4) Общество тата политика.

IV. Т ĕ н ч е, п ĕ л ӳ. 1) Виçе. 2) Пысăкăш. 3) Вăхăт. 4) Талккăш. 5) Тĕнчене объективлă тата субъективлă пĕлни: сисĕм (туйăм), ăнланни, ăс-тăн, ăслав, шухăш хастарлăхĕ т. ыт. те.

Тепĕр чухне тематика ушкăнĕсене семантика уйланкисемпе (семантическое поле) пĕр евĕрлех теççĕ. Калăпăр, «çын» тематика ушкăнĕ пĕр вăхăтрах «çын» семантика уйланки те пулма пултарать. Тĕслĕхĕшĕн *атте* сăмаха илер. Паллах, *атте* сăмах «çын» тематика ушкăнне (е семантика уйланкине) кĕрет. Анчах та ку сăмах темиçе пĕлтерĕшлĕ: атте 1) ачасен ашшĕ; 2) хуняça: хунь, хуньăм (арăм ашшĕ); 3) кивелнĕ сăмах: турă (çӳлти турă); 4) пачăшкă, пуп (çветтуй атте).

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш пĕлтерĕшсем тăванлăха палăртаççĕ, çавăнпа кунта «тăванлăх» тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсене кĕртетпĕр: *анне, аппа, пичче, шăллăм, пăянам, пăяхам* т. ыт. те.

Виççĕмĕш пĕлтерĕшĕпе вăл чăваш тĕнĕн (е Христос тĕнĕн) пур пек туррисене палăртакан пантеона кĕрет: *пирĕшти, хăрпан, киремет, ырă (ырăсем), пихампар* т. ыт. те.

Тăваттăмĕш пĕлтерĕшĕпе ку сăмах культ çыннисене палăртса тепĕр тематика ушкăнне кĕрет: *пачăшкă, пуп, архиерей, архиепископ, архимандрит* т. ыт. те.

Идеографи словарĕсене е тезауруссене йĕркеленĕ чух сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтармаççĕ, кунта сăмахсене вĕсем мĕнле ăнлава палăртни тăрăх йĕркелеççĕ. Сăмахран, Роже хатĕрленĕ (R. M. Roget. Thesaurus ot Englisch Words and Phrases) тезаурусĕнче ултă тĕп ăнлав ушкăнĕ (е класĕ): абстрактлă ăнлавсем, талккăш, матери (чăн пурнăçра пурри, объективлă пурлăх), ăс-тăн, ирĕк, туйăм. Çак ултă ушкăна тата 24 вак пайсене пайланă, малалла тата 1000 тема палăртнă. Кашни 1000 тема хăйĕн тытăмне пĕр евĕрлĕ ăнлава (пĕлтерĕше) палăртакан сăмахсене кĕртет. Кун пек словарь-тезауруссенче пĕр пек ăнлава пĕлтерекен сăмахсене кĕртнипех çырлахмаççĕ, вĕсем ытти сăмахсемпе мĕнле çыхăнура тăнине те кăтартаççĕ. *Атте* сăмахăн пĕлтерĕшĕсене кура ытти сăмахсемпе мĕнле çыхăннине çапларах кăтартма пулать:

1) атте: *тăван атте, юратнă атте; атте-анне; аслă атте (асатте, аслаçу, аслашшĕ); атте киле* т. ыт. те;

2) *ман хуняçам, сан хуняçу, ун хуняшшĕ; ман хуньăм, сан хуньу, ун хуньăшĕ;*

3) турă: *Аслă атте, аслатте (аслати), Çӳлти атте;*

4) пачăшкă, пуп: *çветтуй атте, таса атте* т. ыт. те.

Сăмах майлашăвĕсенче *атте* сăмахăн тата çĕнĕ пĕлтерĕшĕсем палăрма пуçлаççĕ:

а) çĕнĕ атте: *Ман çĕнĕ аттерен пĕр шăллăмпа икĕ йăмăкăм пур.* «От отчима у меня есть один брат и две сестры» (А. I, 150);

ă) атте çури (е çурри) «отчим»: *Ман аттем те лайăх çынччĕ, аттем çурри те начар çын мар* (А. I, 152).

Фономорфологи улшăнăвĕсене тата этимологи çыхăнăвĕсене пула ку сăмахăн тытăмĕнче сăпатланнă чух улшăнусем пулса иртеççĕ:

1 сăпат: *атте (м) — ата, аçа;*

2 сăпат: *аç-у — аçа + у — аçу;*

3 сăпат: *ашшĕ — аçшĕ — аçăшĕ — аçа + шĕ.*

Авалхи чăваш чĕлхинче *аçа* «атте» (*аçа-ама* «атте-анне») пĕлтерĕшлĕ пулнă, кайрантарах вăл арлăх паллине палăртакан сăмах пулса тăнă: *сысна аçи, аçа сысна, аçа хур. Атте* сăмахăн «турă» (аслатти, аслати) пĕлтерĕшĕ пулнă пекех *аçа* сăмахăн та çавăн пек пĕлтерĕш пур («бог грома»): *аçа çапать. Аçа çурине аçа çаптăр, ама çурине амак çаптăр* (А. I, 118); сăмах майлашăвĕсем: *тип аçа, аçа авăтать, аçа аçатать, аçа çапасшĕ!, аçа-çиçĕм* (мăшăр сăмах), *аçа хĕрĕ* «сирота (она), не имеющая матери», *аçа ывăлĕ* «сирота (он), не имеющий матери» т. ыт. те.

## ЛЕКСИКА-СЕМАНТИКА КАТЕГОРИЙĔСЕМ

### Грамматика тата лексика-семантика категорийĕсем

Грамматикăри (морфологири) сăмахсен ушкăнĕсене лексикăри сăмахсен ушкăнĕсемпе танлаштарса пăхни питех те кăсăклă.

Морфологири сăмахсен ушкăнĕсене (тепĕр майлă — пуплев пайĕсене) пĕр-пĕринчен уйăрса илмелли принципсем пур: а) пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ; ă) морфологи категорийĕсем пурри. Тĕслĕхрен, япала ячĕсен ушкăнне кĕрекен сăмахсен, пĕр енчен, япалалăх пĕлтерĕшĕ пулмалла, тепĕр енчен, вĕсен сăпат, хисеп, падеж категорийĕсем палăрмалла. Паллă ячĕсен ушкăнне кĕрекеннисем вара япалан, ĕçĕн е тепĕр паллăн паллине палăртмалла, вĕсен хисеп, падеж, сăпат категорийĕсем çук, анчах та çав сăмахсем танлаштару, палăрту тата мĕнлелĕх категорийĕсенче пулса хăйсен улшăнăвне палăртаççĕ:

| япала ячĕ | паллă ячĕ |
|---|---|
| çурт (çынсем пурăнма тунă хуралтă) | пысăк (калăпăшĕ анлă, çӳллĕ) |
| çуртсем — нумайлă хисепре | пысăкрах — танлаштару категорийĕнче |
| çуртăм — 1-мĕш сăпатра | пысăкки (пысăкскер) — палăрту категорийĕнче |
| çуртра — вырăн падежĕнче | пысăккăн — мĕнлелĕх категорийĕнче |

Пĕлтерĕшне тата грамматика категорийĕсем пуррине кура япала ячĕсен шутне эпир куçа курăнакан япаласене кăна мар, курăнман, тытса пăхма май çук япаласене те кĕртетпĕр, танлаштарăр:

| конкретлă пĕлтерĕшлисем | абстрактлă пĕлтерĕшлисем |
|---|---|
| *ача, кĕнеке, пахча, сĕтел, хула, ял* | *юрату, курайманлăх, сисĕм, ырату* |

Глаголсенче вара ĕç-хĕл паллисене тайăм, тăрăм, вăхăт, сăпат, хисеп категорийĕсем палăртаççĕ: *ĕçлерĕ, çи, юрлăп, вĕренĕттĕм, тăрăшаттăм.*

Сăмахсене лексика пĕлтерĕшне (пĕлтерĕшĕсене) тĕпе хурса ушкăнланă чухне эпир, паллах, грамматика категорийĕсене тĕпе хумастпăр. Калăпăр, сăмахсен лексикăри ушкăнĕсем е лексика-семантика класĕсем пĕлтерĕш тăчăлăхĕ çин-

че никĕсленеççĕ. Акă, «Чĕр чунсем» текен тематика ушкăнне килти чĕр чунсем те, тискер кайăксем те кĕреççĕ: ĕне, сурăх, лаша, арăслан, кашкăр, упа. Çавна май вĕсене икĕ ушкăна уйăрса пăхса тухма пулать; паллах, çак икĕ ушкăнри чĕр чунсен ячĕсене татах пĕчĕкрех ушкăнсем çине пайласа пăхма май пур:

килти выльăх-чĕрлĕх: а) шултра măйракаллă выльăх: *ĕне, вăкăр;*

ă) йĕкĕр чĕрнеллисем: *сурăх, сысна, качака.*

Ку вăл тематика тĕлĕшĕнчен пайлани пулать. Тематика ушкăнĕнчи сăмахсем лексика-семантика ушкăнĕнчисемпе пĕрлешсе питех те анлă пĕр пĕтĕмĕшле пĕлтерĕш уйланкине (вырăсла: семантическое поле) лекме пултараççĕ. Тĕслĕхрен, «çын» текен семантика уйланки пĕлтерĕш енчен питех те анлă, çавна май çав пысăк талккăшри сăмахсене каллех пĕчĕкрех пайсем çине пайласа пăхма пулать. Акă, çынна ăстăн енчен хаклакан сăмахсем хăйсем уйрăм ушкăна пайланаççĕ:

1) а) *ăслă çын: ăсчах, ăслаккай, шухăшлавçă, гени, талант* т. ыт. те;

ă) *ухмах çын: тăмпай, тăмсай, тăрлак, тăрпалтай, туктакăл, тункăлтăк, тункăс, çурмаккай, сӳлкке, ансух, сăрттай, сăрнаккай* т. ыт. те;

2) а) *ĕçчен çын: ĕçчен, ĕçлевçĕ* т. ыт. те;

ă) *кахал çын: ӳркевçĕ, ламса, услап, наян, сулланчăк, харамса, ханттар, хышан, ленкес;*

3) *нумай калаçма юратакан çын: пакăлти, лапăрти, лăрка, сӳпĕлти, çараккай, сӳткеленчĕк, палкавçă, сĕмпĕлти* т. ыт. те.

Лексика-семантика ушкăнĕсене палăртнă чухне эпир сăмахсен тĕп пĕлтерĕшĕсене кăна тĕпе хуратпăр. Анчах та тан пĕлтерĕшлĕх сăмахсен тĕп пĕлтерĕшсене тĕпе хунипех вĕçленмест. Пирĕн синоним речĕсене палăртнă чухне сăмахсен иккĕмĕшле (куçăм) пĕлтерĕшсемпе те усă курма пĕлмелле. Акă, çын ухмаххине палăртма эпир *сурăх, тăмана, тăрна, тунката, тăмра* тата ытти сăмахсемпе те усă куратпăр.

Ку кăна та мар, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен уйрăм сăмахсемпе анчах мар, пĕлтерĕш пĕтĕçлĕхлĕ сăмах майлашăвĕсемпе те (идиомăсене, фразеологизмсене) усă куратпăр. Çын ухмаххине е катăкрах пулнине палăртаканнисем çаксем: *анра пуç, анра сурăх, арпа пуç, вăрман тункати, çурма çын, тăм*

*писмен, тăмана йăрани, уй тăмани, вăрман тăмани, тĕлĕк патши, тĕнче ухмахĕ, тăм кушиле, тăм пăшал, шăннă пуç, шăтăк тӳпе, шăтăк çамка.*

Лексика-семантика категорийĕ текен ăнлав çапла майпа питех те анлăланса каять, çавна май ку категорие уйрăм субкатегорисем çине пайласа пăхатпăр: нумай пĕлтерĕшлĕх, синоними, антоними, пароними т. ыт. те.

Малтанах нумай пĕлтерĕшлĕх текен ăнлава пăхса тухар.

## НУМАЙ ПЕЛТЕРЕШЛЕХ ТАТА УЙРАМ САМАХСЕН ПЕЛТЕРЕШ СТРУКТУРИ

Ку таранччен чăваш чĕлхинче никам та сăмахсен (е чĕлхе единицисен) нумай пĕлтерĕшлĕхне анлăн тĕпчесе çырса кăтартман. Ку тема «Лексикологи» текен вĕрентӳ кĕнекисенче кăна тĕл пулкалать, унта та темиçе сăмахăн хăш-пĕр пĕлтерĕшĕсене палăртнипех çырлахаççĕ. Тĕслĕхрен, Аслăх тĕпчев институчĕ хăй вăхăтĕнче кăларнă «Хальхи чăваш литература чĕлхи» кĕнекери «Лексикологи» пайри нумай пĕлтерĕшлĕх пирки калаңă йĕркесене илсе пăхар:[11] *шăрçа*: 1) бусина, бусинка, бусы; ожерелье; 2) счеты. М. Ф. Чернов шутланă тăрăх, кунта пĕрремĕш пĕлтерĕшĕ — тĕп пĕлтерĕш, иккĕмĕшĕ — фразеологи тĕлĕшĕнчен çыхăннă пĕлтерĕш. Тата тĕслĕх илсе пăхар:

а) хытă çăкăр «черствый хлеб»;

ă) вăл питĕ хытă «он очень скупой».

Малтанхи пайра *хытă* сăмах *çăкăр* тепипе пĕрлешсе хăй пĕлтерĕшне палăртать, иккĕмĕшĕнче пĕлтерĕш распалăхĕ *хытă* сăмах *çын* лексемăпа çыхăннинчен килет тесе çирĕплетнĕ.

Кунтах *шурă, ватă, пуç* сăмахсен нумай пĕлтерĕшлĕхне палăртнă. Ку вăл, паллах, ним каламанран асăнса иртни кăна пулать.

Тĕрĕссипе илсен, чĕлхери чылай сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ, анчах ăна ку таранччен никам та палăртса çитереймен. Паллах, сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхне палăртас тесен унăн ытти сăмахсемпе çыхăнаслăхне тĕпчемелле, çав никĕс çинче кăна вăл е ку сăмах темиçе пĕлтерĕш тытса тăнине пĕлме пулать. Тĕслĕхрен, *йывăç* сăмахăн тăватă е пилĕк пĕлтерĕш пуррине словарьсенче палăртаççĕ. Ку, паллах, чăнлăха çы-

[11] Современный чувашский литературный язык. Чебоксары, 1990. Т. I. С. 106—110.

вăххăн та палăртаймасть. Тĕпчев тата эксперимент мелĕпе эпир *йывăç* сăмахăн вăтăра яхăн пĕлтерĕш пулма пултарнине палăртрăмăр, акă, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем: пӳртлĕх йывăç — пĕрене, хĕлĕпе йывăç каснă — хĕлĕпех вăрман каснă, йывăç — каçă, йывăç — шертĕ, йывăç — тĕкĕ, йывăç — хулă, йывăç — сай, йывăç — тĕмĕ, йывăç — пуленкке, йывăç — тупăк, йывăç — вутă, йывăç — шалча, йывăç — юпа т. ыт. те.

Пĕлтерĕшсем пĕр-пĕринчен çыхăнса тăнă чухне кăна эпир сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ пирки калаçма пултаратпăр:

$X_1 \rightleftarrows X_2$ ($\rightleftarrows X_3 \ldots$)

хĕрхи $\rightarrow$ «тăмана» — «талпас»

| | | |
|---|---|---|
| «пысăк кăйкăр» | «çерçи тăмани» | «сӳпĕлти» «палкавçă» «шалак» |

Тепĕр майлă:

хĕрхи$_1$ $\rightleftarrows$ хĕрхи$_2$ $\rightleftarrows$ хĕрхи$_3$

$X_1 \rightleftarrows X_2 \rightleftarrows X_3 \ldots \rightarrow$

| | | |
|---|---|---|
| тăмана | «çерçи тăмани» | «ухмах» «тăмсай» |

*Хĕрхи* тата *тăмана* сăмахсен пĕр килекен пĕлтерĕшсем метоними пулăмĕпе çыхăннă:

хĕрхи: çерçи тăмани «сыч»

тăмана: çерçи тăмани «сыч»

*хĕрхи* «талпас», *тăмана* «ухмах, тăмсай» тенисенче метафора пулăмĕ хуçаланать. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн пĕлтерĕш аталанăвĕ ансат тата кăткăс пулма пултарать. Тĕслĕх вырăнне *таса* паллă ятне илсе пăхар:

тĕп пĕлтерĕшĕ:

1) *таса* «хăйĕн малтанхи пахалăхне çухатман», «вараланман»;

куçăмлă пĕлтерĕшĕсем:

2) таса $\rightarrow$ тĕрĕс: вăл вырăсла таса калаçать;
3) таса $\rightarrow$ «тирпейлĕ»: таса тумлан;
4) таса $\rightarrow$ тăрă: таса шыв, таса спирт;
5) таса $\rightarrow$ усă курман: таса тетрадь;
6) таса $\rightarrow$ айăпсăр: таса çын;
7) таса $\rightarrow$ тӳрĕ чунлă: таса ят;
8) таса $\rightarrow$ янравлă: таса сас;
9) таса $\rightarrow$ пархатарлă: таса ĕмĕт, таса сăнар;
10) таса $\rightarrow$ сăваплă: таса тивĕç;
11) таса $\rightarrow$ {йывăр мар / çăмăл}: таса ĕç шыра;
12) таса $\rightarrow$ сывлăхлă: таса ача, хĕр, çамрăк.

Куçăмлă пĕлтерĕшĕсем кунта сăмахăн тĕп пĕлтерĕшĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Схемăласа ăна çапла палăртма пулать:

*таса:*




Хушăран пĕлтерĕш аталанăвĕ куçăмлă пĕлтерĕш çинче те никĕсленме пултарать. Тĕслĕх вырăнне акăлчан чĕлхинчи green «симĕс» сăмахăн пĕлтерĕшĕсене чăваш чĕлхинчи *симĕс* лексемăн пĕлтерĕшĕсемпе танлаштарса сăнар: акăлчанла green «симĕс»;

1 — зеленого цвета (симĕс тĕс)
2 — покрытый зеленью
3 — (болезненно) бледный
4 — сырой, сочный, влажный
5 — в натуральном виде, не подвергавшийся обработке
6 — сохранивший первоначальное качество
7 — недавно получивший свое качество
8 — молодой
9 — полный сил, бодрый
10 — неспелый, незрелый
11 — незрелый (в переносном смысле)
12 — неопытный
13 — простодушный, доверчивый

чăвашла *симĕс* «зеленый» («Чăвашла-вырăсла словарь», 1982);




1 — симĕс тĕс
2 — симĕс (ӳсен-тăран, йывăç-курăк тĕсĕ)
3 — симĕс, пиçсе е пулса çитмен
4 — симĕс (пурнăç опычĕ çук)
5 — симĕс (ешĕл çаран)

Сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕх структурине уйрăм пĕлтерĕш структуринчен уйăрса илме пĕлмелле. Çӳлерех илсе кăтартнă *таса, симĕс* сăмахсен нумай пĕлтерĕшлĕх структурине кăтартрăмăр ĕнтĕ.

Халĕ *ăсчах, шухăшлавçă, эрудит, талант, гени* сăмахсен уйрăм пĕлтерĕшĕн структурине кăтартăпăр:

| | |
|---|---|
| *ăсчах* «мудрец» | — 0 çын (этем) — тĕп сема |
| | — 1 сема: шухăшлама пултаракан (чĕр чун) |
| | — 2 сема: пуян интуициллĕ |
| | — 3 сема: пысăк опытлă |
| | — 4 сема: хăвăрт ăнкарса илекен |
| | — 5 сема: тарăн пĕлӳллĕ |
| *шухăшлавçă* «мыслитель» | — 0 çын (этем) — тĕп сема |
| | — 1 пысăк интуициллĕ |
| | — 2 пысăк опытлă |
| | — 3 хăвăрт ăнкарса илекен |
| | — 4 тарăн пĕлӳллĕ |
| | — 5 ыттисемпе танлаштарсан тарăннăн тата оригиналлă шухăшлама пултарать |
| *эрудит* | — 0 çын (этем) — тĕп сема |
| | — 1 шухăшлама пултаракан |
| | — 2 пуян интуициллĕ |
| | — 3 пысăк опытлă |
| | — 4 хăвăрт ăнкарса илекен |
| | — 5 наукăн пĕр-пĕр облаçĕнче вуланă май нумай пĕлекен |
| *талант* | — 0 çын (этем) — тĕп сема |
| | — 1 шухăшлама пултаракан |
| | — 2 пуян интуициллĕ |
| | — 3 пысăк опытлă |
| | — 4 хăвăрт ăнкарса илекен |
| | — 5 вуламасăрах пултаруллă пулни |
| *гени* | — 0 çын (этем) — тĕп сема |
| | — 1 шухăшлама пултаракан |
| | — 2 пуян интуициллĕ |
| | — 3 пысăк опытлă |
| | — 4 хăвăрт ăнкарса илекен |
| | — 5 творчествăри пултарулăхĕ виçесĕр пысăк |

Танлаштарса пăхсан çакă курăнать: 0 графара панă «çын, этем» тата 1—4 пунктсенче кăтартнă семăсем пурте пĕр евĕрлех, анчах вĕсене пурне те 5-мĕш сема уйăрса тăрать, çавна май вĕсем синонимсен ретне йĕркелеймеççĕ, тематика ушкăнне кăна пуçтарăнаççĕ.

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пĕр-пĕринпе **метафора** тата **метоними** пулăмĕсемпе çыхăннă.

**Метафора.** Икĕ япалана, пулăма, ĕçе пĕр-пĕринпе кусăмлă е куçăмсăр танлаштарса пĕрин паллине теприн çине куçарни:

— формине, тулаш паллине кура асра юлмалла сăнарлани:

$лаша_1 \to лаша_2$ (шахмат фигури) — $лаша_1 \to лаша_3$ (кайăксен кăкăр шăмми);

$лаша_1 \to лаша_4$ (импотент, арлăх пултарулăхĕсĕр арçын);

$куç_1 \to куç_2$ (чӳрече кантăкĕн уйрăм пайĕ);

$куç_1 \to куç_3$ (çăрта, йĕп куçĕ);

$куç_1 \to куç_4$ (хăма е пĕрене çинчи турат е турат тухса ӳкнĕ вырăн, шăтăк);

$куç_1 \to куç_5$ (шыв куçĕ);

$куç_1 \to куç_6$ (çăл куçĕ);

$куç_1 \to куç_7$ (карас куçĕ);

$куç_1 \to куç_8$ (кумă, пир кумми (е кулчи);

$тĕксĕм_1$ (ăмăр, пĕлĕтлĕ) $\to тĕксĕм_2$ (хавасла мар);

— вырăнне кура:

$пуç_1$ (этем кĕлеткин çӳлти пайĕ, выльăх-чĕрлĕх кĕлеткин малти пайĕ);

$пуç_2$ (урам пуçĕ);

$пуç_1 \to пуç_3$ (çырма пуçĕ);

$пуç_1 \to пуç_4$ (ыраш пуçĕ);

$пуç_1 \to пуç_5$ (купăста пуçĕ);

$пуç_1 \to пуç_6$ (атă пуçĕ);

$пуç_1 \to пуç_7$ (шыв пуçĕ);

$пуç_1 \to пуç_8$ (пĕрене пуçĕ);

— ĕçĕн евĕрлĕхне кура:

$тыт_1 \to тыт_2$ (вăрланă япалапа тыт);

$тĕрен_1 \to тĕрен_2$ (ашшĕ-амăшĕ çине тĕрен);

— пахалăх виçине кура:

$пысăк_1 \to пысăк_2$ (çӳллĕ çын);

$пысăк_1 \to пысăк_3$ (çӳллĕ должноçри çын);

$пысăк_1 \to пысăк_4$ (пысăк тухăç, тырă);

$пысăк_1 \to пысăк_5$ (размерĕпе анлă);

$пысăк_1 \to пысăк_6$ (аслă: пысăк пичче).

Метафора пулăмне пăхнă чух çакăн пек куçăмсене асăрхама пĕлмелле:

— япала $\rightleftarrows$ çын: $тунката_1 \to тунката_2$ (ухмах, тăнсăр çын); $пуç_1 \to пуç_2$ (ертӳçĕ); $чĕлхе_1 \to чĕлхе_2$ (тыткăнри çын);

— чĕр чун → ҫын: сурăх$_1$ → сурăх$_2$ (ухмах ҫын): карап-пăл$_1$ (беркут) → караппăл$_2$ (ҫăткăн, апшур, тăранман ҫын); кăвакарчăн$_1$ → кăвакарчăн$_2$ (юратнă хĕр арăм); шăпчăк$_1$ → → шăпчăк$_2$ (хитре юрлакан ҫын); ĕне$_1$ → ĕне$_2$ (лӳппер ҫын, нумай ҫиекен ҫын); арлан$_1$ → арлан$_2$ (вăрҫакан ҫын); ҫă-хан$_1$ → ҫăхан$_2$ (тăранман, выҫлăх ҫын); пăру$_1$ → пăру$_2$ (мем-ме); нăрă$_1$ → нăрă$_2$ (йăраланакан ҫын);

— йывăҫ (ӳсен-тăран) → ҫын: катăркас$_1$ → катăркас$_2$ (чă-кăраш ҫын); вĕҫкĕн$_1$ («мятлик») → вĕҫкĕн$_2$ (мухтанакан ҫын);

— асамлă вăй → ҫын: алпастă$_1$ → алпастă$_2$ (тăрлавсăр ҫын); хăрпан$_1$ → хăрпан$_2$ (пӳтсĕр ҫын); шуйттан$_1$ → шуйттан$_2$ (аскăнчăк ача); юхха$_1$ → юхха$_2$ (чупкăн хĕрарăм); вупкăн$_1$ → → вупкăн$_2$ (апшур, нумай ҫиекен ҫын); хĕрт-сурт$_1$ → хĕрт-сурт$_2$ (ырă хĕрарăм).

Метоними. Метонимире сăмахсен пĕлтерĕшĕсем ҫап-ла йĕркепе ҫыхăннине палăртма пулать:

— пахалăх, паллăлăх → ҫав пахалăх пур ҫын: талант$_1$ → → талант$_2$ (поэт таланчĕ, вăл — тĕлĕнмелле талант);

— вырнаҫтармалли вырăн — унта вырнаҫнă япала: класс$_1$ → класс$_2$ (шкул класĕ, пиллĕккĕмĕш класс (ачисем); аудитори$_1$ → аудитори$_2$ (пушă аудитори, аудитори шăплан-чĕ): стакан$_1$ → стакан$_2$ (стакан сĕт, пĕр стакан ĕҫ); ял$_1$ → ял$_2$ (ял урамĕ, ял ҫывăрать);

— пĕтĕмĕшле япала → ҫав япалан пĕр пайĕ: чие$_1$ (йы-вăҫ) → чие$_2$ (ҫырла); хурама$_1$ (йывăҫ) → хурама$_2$ (ҫуна шă-лĕсене ҫыхнă хурама турачĕ);

— япала → унтан тунă япала: ылтăн$_1$ (хаклă металл) → → ылтăн$_2$ (укҫа); кĕмĕл$_1$ (хаклă металл) → кĕмĕл$_2$ (мăй ҫыххи);

— професси, титул, чаплă ят → ҫав ята илнĕ ҫын: про-фессор$_1$ (профессор ята ил) → профессор$_2$ (профессор ирт-тернĕ лекци); генерал$_1$ (ҫар званийĕ) → генерал$_2$ (генерал приказĕ);

— ташă → ун валли ҫырнă музыка: вальс$_1$ (вальс таш-ла) → вальс$_2$ (вальс выля); танлаштарăр: полька$_1$ → поль-ка$_2$; мазурка$_1$ → мазурка$_2$; кадриль$_1$ → кадриль$_2$; полонез$_1$ → → полонез$_2$;

— хайлавĕ вырăнне авторăн ятне калани: *Вăл Пушкина юратнă* (П. Хусанкай). *(Вăл Пушкин произведенийĕсене юратнă)*;

— япала вырăнне хуҫин ятне калани: *Кӳршĕ ҫунать. (Кӳршĕ ҫурчĕ-йĕрĕ ҫунать)*;

— пĕр-пĕр çĕрте пурăнакансем çинчен калас вырăнне вĕсем пурăнакан вырăн ятне калани: *Ялĕпех ĕçе тухнă. (Ялта пурăнакансем пурте ĕçе тухнă).*

Тĕслĕхсене пăхса тухсан эпир çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пултаратпăр: метоними тесе пĕр ăнлав, япала е пулăм ятне тепĕр ăнлав, япала е пулăм çине вĕсен тулаш е шалаш паллисене кура теприн çине куçарса ят панине калатпăр.

Метонимин тепĕр тĕсĕ вăл — синекдоха. Япалана, пулăма е çынна унăн пĕр-пĕр паллине кура тепĕр ят панине *синекдоха* теççĕ. Акă, илемлĕ произведенисенчен илнĕ тĕслĕхсем: *Катăк Çăвар* (мулкач тутиллĕ пулнăран çапла каланă), *Чалăш Куç* (куçĕ чалăш пăхнăран çынна çапла ят панă).

Танлаштарса пăхма «Чăвашла-вырăсла словарьти» (1982, 152 с.) тĕслĕхе илсе пăхар: *катăк тута* 1) губа с изъяном; 2) *перен. прост.* дырявый рот; 3) *перен.* заяц.

Асăрхăр: Катăк Çăвар Ф. Павловăн «Сутра» комедийĕнчи персонаж, вырăсла — Криворотов. Словарьти *катăк тута* — мулкач.

Çемен Элкерĕн «Хĕрлĕ çăлтăр» калавĕнчи Трахвин Павăлне ятран мар, Хĕрлĕ Çăлтăр тесе чĕнеççĕ, мĕншĕн тесен вăл ялта пĕрчченех (граждан вăрçинчен килсен) хĕрлĕ çăлтăрлă шлемпа çӳрет.

Халăх хушшинче час-часах çапла каланине илтме пулать: «Купăста пуç килет». Калаçу кунта купăста пуçĕ çинчен мар, шурă çӳçлĕ çын (ача) пирки пырать.

Нумайлă хисепри сăмах вырăнне пĕрреллĕ хисеп формипе усă курнине те *синекдоха* тесе йышăнма пулать: *Кĕнеке — пĕлӳ çăл-куçĕ. Ял çыннин ир пуçласа каçченех ĕçлеме лекет. Учитель ачасемшĕн тĕслĕх пулса тăмалла.*

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен уйрăм пĕлтерĕшĕсен çыхăнăвне палăртма пулать. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх вĕсем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ:

1) Тӳрремĕн çыхăнни (радиаллă çыхăну «радиальная полисемия»), кун пек чухне пур пĕлтерĕш те тĕп пĕлтерĕшпе çыхăннă:

сĕтел$_2$ диета сĕтелĕ (ĕçме-çиме) ← сĕтел$_1$ «стол» (предмет мебели) → сĕтел$_3$ паспорт сĕтелĕ

сĕтел$_1$ ↓ сĕтел$_4$ буфет сĕтелĕ

2) Сăнчăрлă çыхăну (цепочная полисемия), кун пек чухне кашни пĕлтерĕшĕ малтанхипе çыхăннă:

сылтăм$_1$ (сулахай енне хирĕçли): сылтăм алă, сылтăм ура, сылтăм ен → сылтăм$_2$ (политика тата общество пурнăçĕнче мал ĕмĕтлĕхе хирĕç тăраканни) → сылтăм$_3$ (сулахайрисене хирĕç таракан реакциллĕ, консервативлă юхăм);

лапăркка$_1$ «грязь» → лапăркка$_2$ «грязнуля, замарашка» → лапăркка$_3$ «пустомеля, болтун».

3) Хутăш çыхăну (тӳрремĕн тата сăнчăрлă):

ланчашка$_1$ «отходы»
↓
ланчашка$_2$ «отрепья», «лохмотья»
↓
→ ланчашка$_3$ «неряха, грязнуля»
↓
ланчашка$_4$ ← «дрянь, погань»

Сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхне сăнанă чух контекст витĕмне те асăрхама лекет. Асăрхăр, словарьсенче пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене палăртнă чухне яланах ĕнентерӳллĕ, çыхăнуллă текст илсе кăтартаççĕ:

пил: 1) благословление, напутствие: *атте-анне пилĕ, пил сăмахĕ;* 2) завет: *Ленин пилĕсем;* 3) сильное желание, стремление, страсть: *унăн вĕренес пил пур, пил тыт;* 4) характер, натура: *унăн пилĕ лайăх;* 5) мысли, ум: *пиле кĕчĕ; Хуть çуна пар, хăта, хуть пылна — кил шухăшĕ ӳкрĕ пил çине* (Фольклор). «Хоть маслом потчуй, сватушка, хоть медом — в мыслях моих думы о доме».

Хушăран словарьсенче сăмахсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене палăртса та çитермеççĕ. Сăмахран, «Чăвашла-вырăсла словарьте» (1982 ç.) *юрату* сăмах пĕр пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Тарăнраххăн тишкерсен ку шухăша хирĕçлеме те пулать:

юрату: 1) чи çирĕп иленӳ, туйăм, кăна çакăн пек контекстсенче курма, туйма пулать: *çынсене, тус-юлташсене, хăвăн учителе, атте-аннене, Тăван çĕр-шыва юратни;* 2) кăмăл, чун туртни, кăмăллани: *ĕçлеме юратни, хăвăн профессие юратни, искусствăна, литературăна, спорта, пылак çиме юратни;* 3) тепĕр çынна чунтан килĕштерни: *хĕр арăма е ар çынна юратни, арăма е упăшкана юратни, таса юрату;* 4) çав туйăма çуратакан çын е япала: *Вăл манăн пĕрремĕш юрату. Ман юратăвăм — Атăл.*

# СĂМАХСЕНЕ ПĔЛТЕРĔШ ТĔЛĔШĔНЧЕН УШКĂНЛАНИ

## СИНОНИМСЕМ

Чĕлхере пĕр япаланах е пулăмах темиçе сăмахпа палăртма пулать: *çăл — пусă, аш — какай, лайăх — аван, савăн — хĕпĕрте, пăшăрхан — кӳрен* тата ыттисем те. Акă, К. В. Иванован «Нарспи» поэминчен илнĕ тĕслĕхсем:

1. Лаши ĕçсе тăнăçем
   Каччă калать сăмахне.
2. Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
   Пакăлтатать инкĕшпе.
3. Ав, усалсем лăпланчĕç:
   «Хĕр калаçать, ан шавла».
4. Хăй такмакне вăл калать,
   Хăй аллинчи сăрана
   Тăка-тăка çаптарать.

Вĕсенче *калать, пакăлтатать, калаçать, çаптарать* сăмахсем пĕр-пĕриншĕн синонимсем пулаççĕ, анчах та пурте пĕр тан пĕлтерĕшлĕ мар.

Хăш чухне *кала, калаç* сăмахсен пĕлтерĕшĕсем çывăх пулин те, вĕсене пĕр тан семантикăллă сăмахсемех теме май çук. Тĕслĕхрен, словарьсенче *кала* лексема ытти сăмахсемпе çыхăнас тĕлĕшрен тата пĕлтерĕшĕсем енчен *калаç* сăмахран чылай ирттернине курма пулать. *Кала* тата *калаç* сăмахсем нумай пĕлтерĕшлĕ пулин те, вĕсен тĕп пĕлтерĕшĕсем кăна синонимлă.

Маларах илсе кăтартнă *пакăлтат* лексема *çаптар* сăмахпа синонимлă, мĕншĕн тесен пĕрремĕш сăмахĕ вĕçĕмсĕр каланине пĕлтерет, иккĕмĕшĕн «пĕлнĕ япалана хăюллăн кала» пĕлтерĕшĕ пур.

Асăннă синоним сăмахсем литература чĕлхине кĕрсе çирĕпленнĕ ĕнтĕ. *Кала, калаç, пакăлтат* сăмахсен тĕп пĕлтерĕшĕсем пĕр-пĕринпе синонимлă пулсан, вĕсемпе *çаптар* сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕ синонимлă. *Çаптар* сăмах тĕп пĕлтерĕшĕпе *çап, хĕне* сăмахсемпе пĕр ретре тăрать.

Чăваш чĕлхинче тата *сӳпĕлтет, палка, лĕпĕртет* сăмахсем пур. Кусем хăйсен пĕлтерĕшĕсем питех те çывăххине кура пĕр ушкăн тăваççĕ. Калаçура та, çырура та вĕсемпе эпир пĕр-пĕрин вырăнне ирĕклĕнех усă курма пултаратпăр. Анчах та *сӳпĕлтет, лĕпĕртет* лексемăсем хăйсен тĕп пĕлтерĕшĕсемпе синонимлă, *палка* сăмах — куçăмлă пĕлтерĕшĕпе. *Палка* сăмахăн тӳрĕ пĕлтерĕшĕ — «шавласа юхса тух»: *Шыв палкаса юхать.*

Уйрăм сăмахсемпе пĕрлех синоним ретне фразеологиллĕ сăмах майлашăвĕсем те кĕме пултараççĕ, сăмахран, çӳлерех илсе кăтартнă синоним ретне çак фразеологизмсене те кĕртме пулать: *сăмах çап, талпас çап.* Кусем, паллах, *çаптар* глаголăн пĕлтерĕшĕпе çывăх, анчах пĕлтерĕмĕ вĕсен расна.

Литература чĕлхине кĕнĕ сăмахсемсĕр пуçне диалект сăмахĕсем те синонимсен ушкăнне йĕркелеме пултараççĕ: *павра, лапăртат, пекĕлтет, сĕпĕлтет, мăкăртат.*

Сăмахсем хăйсен иккĕмĕшле, куçăмлă, пĕлтерĕшĕсемпе те синоним ретне кĕме пултараççĕ: *мăкăрланать — тĕтĕм йăсăрланать* (тӳрĕ пĕлтерĕш); *мăкăрланать — ятлаçса-вăрçса калать* (куçăмлă пĕлтерĕш). *Йăсăрлан* сăмах та, *мăкăрлан* сăмах пекех, куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать.

Çапла вара, синоним тесе пĕр ăнлавах палăртакан тĕрлĕ сăмахсене калатпăр. Анчах та вăл сăмахсем пĕр-пĕринчен е пĕлтерĕш сĕмĕсемпе, е стиль уйрăмлăхĕ пуррипе уйрăлса тăраççĕ.

Авалхи грек ученăйĕсем хăй вăхăтĕнчех пĕлтерĕшĕсем пĕр евĕрлĕ сăмахсене *синонимсем* тенĕ. Ку шухăшпа хальхи вăхăтра та чылай чĕлхеçĕ килĕшет, нумайăшĕ чĕлхере синоними пулăвне халĕ те çителĕклĕ таран тĕпчеменнине палăртать. Чăнах та, синонимсем çинчен ку таранччен те пĕр пĕтĕмĕшле теори çирĕпленмен-ха.[1] Ку, паллах, синоним чĕлхере кăткăс ыйту пулнине пĕлтерет. Хăшĕсем чĕлхере синоними пулăвĕ пачах та çук теççĕ. Теприсем синоними лексикологи ыйтăвĕ мар тесе ĕрентеççĕ.[2]

Пĕр пĕтĕмĕшле ăнлантару çукки синонимсем чĕлхере пачах тĕл пулманнине пĕлтермест-ха. Чăваш чĕлхин синонимĕсене ятарласа тĕпчекен Е. Ф. Васильева акă мĕн çырать: «Чă-

---

[1] Звегинцев В. А. Замечания о лексической синонимии // Вопросы теории и истории языка. Л., 1963. С. 27. Ку хирĕçӳлĕхе «Лексическая синонимия» кĕнекене (М., 1967) кĕнĕ статьясене вуласан та сисме пулать.

[2] Смирницкий А. И. Лексикология английского языка. М., 1966. С. 201.

ваш чӗлхи синонимсемпе питӗ пуян, вӗсем наука тӗлӗшӗнчен интереслӗ синонимсем, вӗсен пулӑвӗ те, тытӑмӗ те, ушкӑнӗсем те хӑй евӗрлӗ. Чӑваш чӗлхи — перекетлӗх законне ҫирӗп тытса пыракан чӗлхесенчен пӗри. Пирӗн чӗлхере кашни форма май килнӗ таран пӗр-пӗр паллӑ пӗлтерӗшпе ҫыхӑнма тӑрӑшать, ҫавӑнпа та чылай чӑваш сӑмахӗ омонимланса, сапаланса каясшӑнах мар. Ҫак закона пулах чӑваш чӗлхинче пӗр-пӗр тымартан тӗрлӗ аффикссем хушӑннипе пулнӑ синонимсем питӗ сахал. Тӗслӗхрен, *сыхлав — сыхлӑх, хӑват — хӑватлӑх, ирӗк — ирӗклӗх* синонимсем чӑваш чӗлхишӗн типлах мар». [3]

## СИНОНИМ РЕЧӖ

Темиҫе синонимран тӑракан сӑмахсен ушкӑнне *синоним речӗ* теҫҫӗ. Синоним ретӗнче икӗ е ытларах сӑмах тӑма пултарать, ҫав сӑмахсем пӗр пуплев пайне кӗрекен сӑмахсемех пулаҫҫӗ: *симӗс — ешӗл* (паллӑ ячӗсем), *анчӑк — йытӑ* (япала ячӗсем), *ҫывӑрать — тӗлӗрет* (глаголсем). Тӗрлӗрен пуплев пайне кӗрекен сӑмахсене пӗр синоним ретӗнче пӑхма май ҫук. Хӑш чухне, уйрӑммӑнах глаголсенче, пӗлтерӗшне кура синоним ретне сӑмах майлашӑвӗсем, фразеологизмсем те кӗме пултараҫҫӗ пек, сӑмахран: *ҫывӑр — харлаттар, хуп турттар, ыйха ҫап; калаҫ — сӑмахла, юмахла, пупле, халапла, сӑмах вакла, сӑмах хуш, сӑмах чӗн, вула, шарла, ҫӑвар уҫ, мӑкӑртат, палка, шавла, ҫӗмӗрӗл, лӗпӗртет, пакӑлтат, павра, халап яр.* Анчах та лексикӑпа фразеологи синонимӗсене пӗр рете лартса анализлама май ҫуккине кура вӗсене кашнине хӑйне уйрӑммӑн пӑхмалла. [4]

Синоним ретне кӗрекен хӑш-пӗр сӑмахсем пӗр-пӗринпе ирӗклӗнех ылмашӑнма пултараҫҫӗ: *вӑй пӗтрӗ — хал пӗтрӗ, симӗс ҫаран — ешӗл ҫаран, тӑрӑ шыв — таса шыв; кахал — наян, чуман, юлхав, ӳркенчӗк, мӑран.* Анчах пӗр-пӗрин вырӑнне усӑ курма май ҫук синонимсем те пур. Акӑ, *ӗҫ вӑйӗ*

---

[3] Васильева Е. Ф. Чӗлхепе пуплев синонимӗсем ҫинчен // Чӗлхе культурин ыйтӑвӗсем. Шупашкар, 1972. 2-мӗш кӗн. 100 с.

[4] Авалиани Ю. Ю., Ройзензон Л. И. Синонимические отношения слов и фразеологических сочетаний // Лексическая синонимия. М., 1967. С. 163—173. Анчах та ку ыйту ҫине чӗлхе наукинче пур тӗпчевҫӗсем те пӗр пек пӑхаҫҫӗ теме май ҫук-ха. Сӑмахран, М. Ф. Палевская ҫапла ҫырать: «...Фразеологизмы, эквивалентные слову, в целом очень близки к словам и вместе с ними образуют единую синонимическую систему языка». (Палевская М. Ф. Проблема синонимического ряда, его границ и возможность выделения доминанты // Лексическая синонимия. М., 1967. С. 97).

тетпĕр пулин те, *ĕç хăвачĕ* теместпĕр. Чĕлхере *симĕсленнĕ çĕр улми* тени пур, *ешĕлленнĕ çĕр улми* çук.

Синоним ретне кĕрекен сăмахсем çыннăн кăмăлне палăртас сĕмĕпе уйрăлса тăма пултараççĕ. Сăмахран, *ĕç — лакка, çи — кӳп, калаç — пакăлтат* синоним речĕсене *лакка, кӳп, пакăлтат* сăмахсем *ĕç, çи, калаç* тенипе стиль тĕлĕшĕнчен пĕр мар. *Лаккать* тени *ĕçет* тенине пĕлтерет, анчах та вăл нумай ĕçнине (*сĕт лаккать*) е сасă кăларса ĕçнине (*сĕте витре хĕрринчен лаккать*) пĕлтерет.

*Кӳпет* сăмах *нумай çиет* тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕ, *пакăлтат* лексема нумай е кирлĕ-кирлĕ мара калаçнине пĕлтерет.

Синоним ретне кĕрекен сăмахпа çырура та, калаçура та питĕ анлă усă кураççĕ. Сăмах пĕлтерĕшĕн анлă тата хушăмлă стиль палли çук пулсан, çавăн пек сăмаха с и н о н и м р е ч ĕ н т ĕ п с ă м а х ĕ (д о м и н а н т а) теме йышăннă. Акă, *пысăк — катмар — мăнă — шултра* синоним ретĕнче *пысăк* сăмах ыттисемшĕн тĕп сăмах (доминанта) пулать. *Тухăçлă — перекетлĕ — илпеклĕ* синоним ретĕнче тĕп сăмах — *тухăçлă, самăр — тачка — нечĕрке — шыçмак* синоним ретĕнче — *самăр.*

Тепĕр чухне тĕп сăмаха палăртасси кăткăсланать. Тĕслĕхшĕн *илемлĕ — чипер — хитре — хӳхĕм — маттур* синоним ретне илсе пăхар. Кунта синоним речĕн тĕп сăмахĕ вырăнне *чипер* тата *хӳхĕм* сăмахсем йышăнма пултарайманççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен пĕлтерĕшĕсем *илемлĕ, хитре* тенинчен ансăртарах. *Илемлĕ, хитре* сăмахсем чăваш чĕлхинче синоним речĕн тĕп сăмахĕ вырăнĕнче тăрасшăн. Вĕсем литература чĕлхинче те, калаçу чĕлхинче те анлă сарăлнă. Ку сăмахсенче стиль уйрăмлăхĕсем палăрсах каймаççĕ, кашни лексема тĕп (пĕтĕмлетӳ) пĕлтерĕшлĕ.

Тутар чĕлхинчи *матур — гузэл — чибер — курэм — курекле — ямьле* синоним речĕн *матур, чибер* сăмахĕсем пирки те çавнах каламалла. Чăваш чĕлхинче *маттур* сăмах çӳлерех асăннă *илемлĕ — чипер — хитре — хӳхĕм — маттур* синоним речĕшĕн тĕп сăмах пулаймасть, мĕншĕн тесен вăл ытларах «вăйлă», «хăюллă» пĕлтерĕшсемпе çӳрет.

## СИНОНИМСЕН ТĔСĔСЕМ

Нумай тĕпчевçĕ (В. В. Виноградов, А. П. Евгеньева, Ю. Д. Апресян тата ыттисем те), синонимсене, вĕсен пĕлтерĕшĕпе тытăмне тата стиль уйрăмлăхĕсене шута илсе, икĕ пысăк ушкăна уйăраççĕ: 1) лексика (е семантика) синонимĕсем; 2) стиль синонимĕсем.

Чĕлхе наукинче тата грамматика синонимĕсем пуррине те палăртаççĕ. «Грамматика синонимĕ» текен терминпа чи малтан А. М. Пешковский усă курнă.[5] Грамматика синонимĕсене хăйсене икĕ пая пайлаççĕ: морфологи тата синтаксис синонимĕсем.

Кирек мĕнле чĕлхере те уйрăм сăмахсем кăна мар, уйрăлми пĕтĕçсе ларнă сăмах çаврăнăшĕсем те синонимлă пулма пултараççĕ, вĕсене фразеологи синонимĕсем теççĕ: *ăшша пиç — хура тара ӳк — чăм шыва ӳк; чике тăршшĕ ларт — пуртти аврипе тыттар; пуш параппан çап — талпас çап; маншăн пулсан хут купăс — ик айкки те тăвайкки.* Формине кăштах улăштарнă, анчах пĕлтерĕш енчен пĕрешкел ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсене тата предложенисене грамматика синонимĕсем тесе пăхаççĕ: *сĕтеле хур — сĕтел ăшне хур; пӳрт патĕнче тăр — пӳрт çывăхĕнче тăр; ĕнене урапа çумне кăкар — ĕнене урапаран кăкар; лашасене шыв ĕçтер — лашасене шăвар.*

## ЛЕКСИКА СИНОНИМĔСЕМ

Чăваш чĕлхинче лексика (семантика) синонимĕсене хăйсене икĕ пысăк ушкăна пайлама пулать: 1) чĕлхе синонимĕсем; 2) пуплев синонимĕсем. Чĕлхе синонимĕсем вĕсем — хальхи литература чĕлхинче çирĕпленсе çитнĕ, çырура та, калаçура та анлă усă куракан çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. Тĕслĕхрен, пĕр синоним ретне кĕрекен *уй* тата *хир* сăмахсен пĕлтерĕшĕсем аяларах илсе кăтартнă тĕслĕхсенче пĕр-пĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ пек, вĕсенче стиль уйрăмлăхĕсем те палăрсах каймаççĕ:

Уйсенче юр анчах,
Çырмара пăр анчах.
Вăл хăçан пулать-ши?
(К. Иванов).

Ката та хир, вак-вак ĕшнеллĕ
Хăртнă пек вырăн, хир каллех...
(П. Хусанкай).

Хир илемĕ каять,
Сĕм вăрман çаралать...
(К. Иванов).

---

[5] Пешковский А. М. Принципы и приемы стилистического анализа и оценки художественной прозы // Ars poetica. М., 1927.

Уй варринче лаштра юман.
(Халăх юрри).
Уя тухсан, ай, мĕн лайăх?
(Халăх юрри).

Анчах та чăваш чĕлхинче çакăн пек çывăх пĕлтерĕшлĕ тулли синонимсен хисепĕ пысăках мар. Акă, вăхăта палăртакан *вăхăт — самана — самант* сăмахсене илсе пăхар. Тĕп сăмах кунта *вăхăт*, юлашки икĕ сăмахĕнче те çав пĕлтерĕш сыхланса юлать, анчах та вĕсен пĕлтерĕш сĕмĕсенче уйрăмлăхсем пурри куç кĕретех. Танлаштарăр:

| калатпăр: | каламастпăр: |
|---|---|
| патша вăхăтĕнче | патша самантĕнче |
| патша саманинче | |
| пирĕн вăхăтра | |
| пирĕн саманара | пирĕн самантра |
| юлашки вăхăтра | |
| юлашки самантра | юлашки саманара |
| çак вăхăтра | |
| çак саманара | |
| çак самантра | |
| кĕске вăхăтра | кĕске саманара |

Пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен *вăхăт, самана* сăмахсем вăхăтăн пысăк калăпăшне кăтартаççĕ, *самант* кĕске вăхăта палăртать. Çапах та *вăхăт, самана* сăмахсем умĕнче *çак, ку* тĕрĕслетӳ сăмахĕсем тăраççĕ пулсан, вĕсем те вăхăтăн кĕскерех пайне пĕлтереççĕ е паллă тапхăра кăтартаççĕ. Пушкăрт чĕлхинче вăхăтăн кĕске пайне палăртма *мэл, сак* сăмахсем пур. «Вăхăт, самана, самант» пĕлтерĕшлĕ синоним ретне пушкăртсем çак сăмахсене кĕртеççĕ: *деуэр, вакыт, заман, осор*. Чăваш чĕлхинче грамматика терминĕ *вăхăт* сăмах пулсан, пушкăрт чĕлхинче — *заман* лексема: *хэзэрге заман* «хальхи вăхăт», *уткэн заман* «иртнĕ вăхăт».

Хальхи вăхăтра чĕлхе синонимĕсем япала ячĕсем, паллă ячĕсем, наречисем, глаголсем хушшинче тĕл пулаççĕ.

Япала ятне кĕрекен синонимсем конкретлă тата абстрактлă пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ. Тĕслĕхрен, *Этем этемпе пурăнать* (Ват. сăмахĕ); *Çынсăр çын пурăнмасть* (Ват. сăмахĕ) предложенисенче *этем* тата *çын* сăмахсем — синонимсем.

Нумай тĕрĕк чĕлхисенче *çын* сăмах çук, вĕсенче «çын» пĕлтерĕшпе *киши* сăмах çӳрет, çавăнпа та чăваш чĕлхинче синоним речĕ: *çын — этем,* тĕрĕк чĕлхисенче: *киши — одам* (адам).

*Кивĕ çынтан çĕнĕ çын тума хĕн* (Ват. сăмахĕ). *Этеме терт кўрет çанталăк* (М. Исаев). *Хурлăх куракан хурчка пулнă, тухман çын тăмана пулнă* (Ват. сăмахĕ) тĕслĕхсенче *хĕн, терт, асап, хурлăх* лексемăсем пĕр пĕлтерĕшлĕ.

Паллă ячĕсем пулакан чĕлхе синонимĕсен шутне *çамрăк* (каччă) — *яш* (каччă), *ватă* (çын) — *çулланнă* (çын), *тикĕс* (çул) — *такăр* (çул) йышши сăмахсене кĕртме пулать:

Çамрăк ĕмĕр иккĕ килмест, ăна лайăх иртерес пулать (Ват. сăмахĕ).

Иртет яш ĕмĕр,
Килмест вăл каялла.
(Халăх юрри).

Чĕлхе синонимĕсем глаголсем хушшинче те анлă сарăлнă *(ывăн — ĕшен, хисепле — чысла, савăн — хĕпĕрте)*:

1) Çĕрĕм-шывăм савăн:
Ку пуянлăх сан.
(Н. Сандров).
2) Лайăх лаша кўлсе тухсан,
Пĕкки витĕр пăхса пырсан,
Ай-ай-ай, чунăм хĕпĕртет.
(Халăх юрри).

Чĕлхе синонимĕсен шутне *куллен — ялан — пĕрмай, часах — кĕçех, ĕлĕк — авал, сасартăк — тăрук* йышши наречисене те кĕртме пулать:

Куллен-кунах саламат
Анать-çке пăтаран.
(К. Иванов).

Кусса тăран урапа яланах пĕр йĕрпе чупмасть (Хал. сăмахлăхĕ).

Вăйлă кăкăрăм
Çăмăллăн сывлать.
Хăнăхнă аллăм
Пĕрмаях шаккать.
(П. Хусанкай).

Илнĕ тĕслĕхсенче синонимсем пĕлтерĕшĕсемпе тулли синонимсен картне пур чухне те ларсах çитеймеççĕ. Вĕсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ нумай чухне контекстра кăна палăрать. Т у л л и   с и н о н и м с е м семантика тĕлĕшĕнчен шăп та шай пĕр пек пулмалла, стиль уйрăмлăхĕсем вĕсенче пачах палăрмалла мар, тата вĕсем пĕр вăхăтрах чĕлхере анлă усă куракан сăмахсем пулмалла. Ун пек синонимсен шутне хăш-

пĕр тĕпчевçĕсем литература чĕлхипе диалектсенчен е ытти чĕлхесенчен йышăннă сăмахсене кĕртеççĕ: *сĕкет — тĕкет, йĕр — макăр, йышăну — решени.*

Тулли синонимсене палăртнă чухне сăмахсен тĕп пĕлтерĕшĕсене кăна шута илни çителĕксĕр. Синонимсене пур контекстра та пĕр-пĕринпе ылмаштарма пулать пулсан е вĕсен кашни пĕлтерĕшех пĕр-пĕринпе синонимлă пулсан кăна вĕсене тулли тесе шутлама пулать. Çӳлерех илсе кăтартнă *уй* тата *хир* сăмахсене питех те çывăх пĕлтерĕшлĕ пулнипе чылай чухне ылмаштарса лартма пултаратпăр, уншăн пĕлтерĕш пачах та улшăнмасть. Анчах та чĕлхере вĕсене пĕр-пĕрин вырăнне çирĕпленнĕ сăмах майлашăвĕсенче калани питĕ сайра е пачах та тĕл пулмасть: *çеçен хир — çеçен уй* (?), *хир чăххи — уй чăххи* (?), *хир качаки — уй качаки* (?), *уй тӳпи — хир тӳпи* (?), *уй чӳкĕ — хир чӳкĕ* (?).

Тулли синонимсене сăмахсен тĕрлĕ варианчĕсемпе пăтраштарма кирлĕ мар, тĕслĕхрен: *ерипен — ерипе, асамçă — асамăç.* Çакăн пек тĕрлĕ янравлă сăмахсем пĕр-пĕринчен пĕлтерĕш сĕмĕпе уйрăлса тăмаççĕ пулсан, вĕсене уйрăм сăмахсем мар, сăмахăн варианчĕсем теççĕ. Е. Ф. Васильева хăйĕн çӳлерех асăннă ĕçĕнче ку пулăма çителĕклĕ таранах уçăмлăн кăтартайман. Сăмахран, *ирĕк — ирĕклĕх* йышши пĕр тымартан тĕрлĕ аффикссем хушăнса пулнă синонимсем чăваш чĕлхинче питĕ сахал тесе палăртать вăл, çав вăхăтрах *вăтану — вăтанчăк — вăтанулăх, канăç — канлĕх — канăçлăх, йыхрав — йыхăру, çинçе — çинçешке, шурă — шуранка* тенисем сăмахăн тĕрлĕ варианчĕсем е синонимсем пулнине çирĕплетмест. Пирĕн шутпа, ку сăмахсем тĕрлĕ сăмах тăвакан аффикссем хушăннипе пулнă. Вĕсен лексика пĕлтерĕшĕн сĕмĕсем кăшт улшăннă, çавăнпа вĕсене синонимсем тесех пăхмалла. Кунта тата çакна каласа хăвармалла: пĕр тымартан пулнă, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен нумаях уйрăлса тăман сăмахсене чĕлхе наукинче пĕрисем вариантлă сăмахсем теççĕ, теприсем синонимсем тесе çирĕплетеççĕ.[6] Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем çавăн пек сăмахсене грамматика (е морфологи) синонимĕсем тесе те пăхаççĕ. Сăмахран, М. И. Фомина «Лексика современного русского языка» кĕнекинче *жираф — жирафа, дверями — дверьми, бесчувствен — бесчувственен* сăмахсене морфологи синонимĕсем тесе палăртать.[7]

---

[6] Филин Ф. П. О слове и вариантах слова // Морфологическая структура слова в языках различных типов. М.; Л., 1963. С. 129.

[7] Фомина М. И. Лексика современного русского языка. М., 1973. С. 46.

## ПУПЛЕВ (КОНТЕКСТ) СИНОНИМĔСЕМ

Пăхса тухнă тĕслĕхсенчен çакă курăнать: лексика синонимĕсене тĕрлĕрен янăракан пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тесе палăртма май çук, мĕншĕн тесен синоним ретне кĕрекен кашни сăмахăн пĕлтерĕш сĕмĕсем пулаççĕ. Акă, *пысăк — шултра — капмар — мăнă* синонимсенех илсе пăхар. Вĕсене, çиелтен пăхсан, пĕр пĕлтерĕшлĕ тесе йышăнма пулать. Чăнах та, хăш чухне ку сăмахсемпе пĕр-пĕрин вырăнне усă курма май пур: *пысăк чул, шултра чул, капмар чул, мăнă чул; пысăк ту, капмар ту, мăнă ту.* Анчах та чылай тĕслĕхре ку сăмахсене, хăйсен тĕрлĕрен пĕлтерĕш сĕмĕсем пуррине кура, пĕр-пĕринпе ылмаштарма çук.

Контекст витĕмне пулах хăш-пĕр сăмахсем чĕлхере куçăмлă пĕлтерĕшпе çӳреме пуçлаççĕ. Çак куçăмлă пĕлтерĕше туяннă сăмахсем çĕнĕ синоним ретне тума пултараççĕ: *Унăн çавракa куçĕсем ман çине т и р ĕ н ч ĕ ç. Мĕскер т и р ĕ н т ĕ н эсĕ ман çине?*

Тĕп лексика пĕлтерĕшлĕ расна сăмахсем контекста пула çĕнĕрен синоним речĕ тăваççĕ пулсан, вĕсене п у п л е в е к о н т е к с т с и н о н и м ĕ с е м теме йышăннă. Пуплев синонимĕсем ахаль калаçу чĕлхинче те, илемлĕ литературăра та пур. Уйрăмах вĕсем поэзире нумай. Сăмахран, А. Воробьев çырнă «Мăн çул» поэмăра çак йĕрке тĕл пулать:

*Вăрнар енчен чупать мăн çул.*

Ку предложенире *чупать* сăмаха хăйĕн тĕп пĕлтерĕшĕпе мар, куçăмлă пĕлтерĕшĕпе калана. Çул чĕрĕ чун мар, вăл паллах, чупма пултараймасть. Кунта *чупать* сăмах куçăмлă пĕлтерĕшĕпе çĕнĕ синоним ретне кĕрет. Контекст пулмасан, *чупать — килет, чупать — тăсăлать, чупать — выртать* сăмахсене синонимсем тесе йышăнма май килмест.

Илемлĕ литературăран илнĕ ытти тĕслĕхсем çинче чарăнса тăрар. — *К а с а к а н чĕлхе, — хăвăрттăн хушса хучĕ Генка* (А Емельянов). Паллах, *касакан* тенине кунта тӳрĕ пĕлтерĕшпе ăнланмалла мар, мĕншĕн тесен чĕлхе вăл çĕçĕ те, пуртă та, çава та мар. *Касакан чĕлхе* кунта «тӳрĕ калакан чĕлхе» пĕлтерĕшлĕ.

*Сиплет* тулта Михетер
Туй кӳмине пĕчченех.
(К. Иванов).

*Сиплет* сăмахăн тĕп пĕлтерĕшĕ «сыватать». Анчах та çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхре автор ăна çĕнĕ синоним ретне «юсать, тӳрлетет, майлать» пĕлтерĕшпе кĕртет.

Чӗлхере анчахрах усӑ курма пуҫланӑ е пӗр автор хӑйӗн произведенине хальтерех кӗртнӗ, чӗлхере сарӑлман сӑмахсене синонимсен словарӗнче кӑтартмаҫҫӗ. Анчах та хӑш чухне куҫӑмлӑ пӗлтерӗшпе усӑ курнӑ сӑмахсем халӑх чӗлхине кӗрсе анлӑ сарӑлма пултараҫҫӗ. Тӗслӗхрен: *хӗвел* 1) *ҫутатать, пӑхать, кулать (савать);* 2) *хӗртет, пӗҫертет, ҫунтарать.*

Ҫапла вара, *хӗвел* сӑмахпа ҫыхӑннӑ сӑмахсем икӗ синоним речӗ тӑваҫҫӗ. Пӗрремӗш ретӗнче тӗп сӑмах — *ҫутатать. Пӑхать, кулать* сӑмахсем малтан куҫӑмлӑ пӗлтерӗшпе ҫӳренӗ пулмалла, анчах хальхи чӗлхере вӗсем иккӗшӗ те «ҫутатать» пӗлтерӗшлӗ. Иккӗмӗш синоним ретӗнче тӗп сӑмах — *пӗҫертет. Хӗртет, ҫунтарать* сӑмахсем унӑн пӗлтерӗш уйрӑмлӑхӗсене кӑтартаҫҫӗ.

*Хӗртет, пӗҫертет, ҫунтарать* сӑмахсен куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем татах пур: *Вӑрланӑшӑн ӑна кӑштах хӗртмелле пулнӑ. Тепре алла лексен, пӗҫертме те пултараҫҫӗ. Ҫунтарать кӑна хулӑпа.*

## СТИЛЬ СИНОНИМӖСЕМ

Синонимсем пӗр-пӗринпе пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен ҫывӑх, апла пулин те вӗсен пӗлтерӗш тата стиль уйрӑмлӑхӗсем пуррине кашни синоним ретӗнчех курма пулать.

Стиль синонимӗсем тесе лексика пӗлтерӗшӗсем пӗр пекрех килекен, тӗрлӗ стильсенче усӑ куракан сӑмахсене калаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, наука стилӗнче ҫак синонимсем анлӑ сарӑлнӑ: *верен, тӗпче, тишкер; ӗнентер, ҫирӗплет.*

Синоним ретне кӗрекен сӑмахсен тӗрлӗрен стиль сӗмӗсем палӑрнине ытти тӗслӗхсенче те курма пултаратпӑр: *ӗҫтер* (шыв ӗҫтер) литература чӗлхинче сарӑлнӑ, анчах *шӑвар* (эрех нумай ӗҫтер) — тӳрккес калаҫу чӗлхинче; *ура* (ҫын ури) литература чӗлхинче тӗл пулать, *тяппи* (тяппуна пар) сӑмаха ытларах ачасемпе калаҫнӑ чух усӑ кураҫҫӗ.

Семантика тата стилистика синонимӗсем пӗр-пӗринчен стиль тӗлӗшӗнчен (е урӑх стильре усӑ курнипе) кӑна мар, пӗлтерӗш сӗмӗсем урӑхларах (кӑшт хирӗҫлерех) пулнипе те уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Сӑмахран, *ӗҫ — сып — лакка* синонимсене пӑхса тухар. *Ӗҫ* сӑмах ку ретре тӗп сӑмах шутланать. *Сып* лексема «кӑштах ӗҫ» пӗлтерӗшлӗ, *лакка* сӑмах «нумай ӗҫ» тенине пӗлтерет. *Ҫи — ҫырт — кӳп* синоним ретӗнче *ҫырт — кӳп* сӑмахсен хире-хирӗҫле пӗлтерӗшӗсем пур. *Ҫырт* «кӑшт

кăна çи, çырткала» пĕлтерĕшлĕ, *кӳп* «латтине пĕлмесĕр нумай çи» тенине пĕлтерет. Е акă, тата чăваш писателĕсен произведенийĕсенчен илнĕ тĕслĕхсем:

Кăп-каппăн *çыртрĕ* те апат,
Часрах хире тухса тапать.
(С. Шавли).

Куллен какай *кӳпсе*
Какăрса ларма пĕртте
Намăс мар-и этеме?
(Я. Ухсай).

Каларăмăр ĕнтĕ, пуплев синонимĕсемпе чĕлхе синонимĕсем чăваш чĕлхинче питех те нумай. Пуплев синонимĕсем чĕлхе синонимĕсенчен хăйсен сăнарлăхĕпе уйрăлса тăраççĕ.

## СИНОНИМСЕН ПУЛĂВĔ ТАТА ВĔСЕН РЕЧĔСЕМ АТАЛАНСА САРĂЛНИ

Чĕлхе синонимĕсен речĕсем анлăланса сарăласси тĕрлĕрен сăлтавсенчен килет. Калаçнă е çырнă чух, пĕр-пĕр ăнлава витĕмлĕ уçса парас тесе, çынсем ăна тĕрлĕ сăмахсемпе паллă тăваççĕ. Ун пек чухне калаçăва чĕлхере анлă сарăлнă лексика синонимĕсемпех çырлахтараççĕ.

Сăмахран, *кăвак тӳпе* вырăнне *сенкер тӳпе* теме пултаратпăр. *Кăвак* тата *сенкер* сăмахсем чылай чухне пĕр-пĕринпе ирĕклĕнех ылмашăнма пултараççĕ.

Илемлĕ литература произведенийĕсенче писательсемпе поэтсем çут çанталăк пулăмĕсене, общество пурнăçĕн явленийĕсене час-часах илемлĕх мелĕсемпе усă курса сăнарлаççĕ. Метафорăсемпе, эпитетсемпе тата сăпатлантару формисемпе усă курни синонимсен ретне анлăлатма пулăшать:

Хĕвел йăл-йăл кулчĕ,
Пăхрĕ кантăкран.
Ванюка вăл курчĕ,
Саврĕ кăмăлтан.
(А. Çулĕç).

Ку строфара сказуемăйсем тăваттă: *кулчĕ, пăхрĕ, курчĕ, саврĕ.* Анчах та пурте вĕсем синонимсем тесе ĕнентерме хĕн. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш йĕркесенче *кулчĕ* тата *пăхрĕ* сăмахсем пуплев синонимĕсем пулаççĕ. Тĕп сăмах кунта — *пăхрĕ.* (Хĕвел)*пăхать* — *кулать* синоним ретнех *саватъ* сăмаха та кĕртме пулать, мĕншĕн тесен поэзире çак сăмаха та «пăхать» пĕлтерĕшпе усă курни сисĕнет:

Хӗвел *савать* тӗнчене,
Хӗл ыйхинчен вӑратса.
(К. Иванов).

Юлашки ҫулсенче чӑваш чӗлхинче *космос* сӑмахпа анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Ҫак ӑнлава палӑртма хамӑр чӗлхерех *уҫлӑх* сӑмах тата *тӗнче уҫлӑхӗ* сӑмах майлашӑвӗ пур. Чӗлхере халӗ икӗ терминӗпе те анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Ҫакнашкал тӗслӗхсем синоним речӗ вырӑс чӗлхинчен е ун урлӑ кӗнӗ сӑмахсемпе пуянланнине ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Синоним ретӗнче тӗп чӑваш сӑмахӗсемпе пӗрле ытти чӗлхесенчен тахҫан авал кӗнӗ сӑмахсем тӑма пултараҫҫӗ: араб сӑмахӗсем (*мул* «пуянлӑх», *несӗл* «йӑх», *хавал* «вӑй»), перс сӑмахӗсем (*кахал* «наян», *начар* «чухӑн»), монгол сӑмахӗсем (*какай* «аш», *юлхав* «кахал»), мари сӑмахӗсем (*каччӑ* «яшӑ ача», *шанкӑ* «вутӑ»).

Синоним ретне пӗр сӑмах тӗпӗнченех тӗрлӗ аффикссем хушӑнса пулнӑ сӑмахсем тума пулӑшаҫҫӗ:

Пит маттур-ҫке Иванов бульварӗ,
Пыллӑхри пек ҫамрӑк *ҫӑкасар.*
(В. Митта).

*Ҫӑкалӑхра* вӗҫет куккук,
Хӑй мӑшӑрне вӑл йыхӑрать.
(А. Цветков).

Синонимсен ретне, кунсӑр пуҫне, литература чӗлхине диалект сӑмахӗсем кӗрсе пыни пуянлатать. Тӗслӗх вырӑнне *яштӑм* сӑмаха илсе пӑхар. Диалектра ҫеҫ ҫӳрекен ҫак сӑмахпа малтанах Элӗк, Вӑрнар, Муркаш, Красноармейски районӗсенче усӑ куратчӗҫ: *Акӑ, вӑрман чӗтресе, ӳлесе ячӗ. Ку вӑл яштӑм пихта кайса ӳкрӗ* («Ҫӗнтерӳ ҫулӗ», 1968). Халӗ вара ҫак сӑмах литература чӗлхинче *яштака, тӳрӗ* сӑмахсемпе пӗр синоним ретне кӗрет:

Туя турӗ ҫул ҫине
*Яштӑм* ҫамрӑк хӑваран.
(Т. Иванов-Таҫук).

### СИНОНИМСЕН ЧӖЛХЕРИ ВЫРӐНӖ

Кирек мӗнле чӗлхе те синонимсемпе пуян. Ҫак пуянлӑхпа кирлӗ пек усӑ курма синонимсен виҫӗ тӗп функцийӗ пуррине пӗлмелле:

а) пӗр сӑмахах темиҫе хут калассинчен хӑтарни: *Пысӑк ҫуртсем хушшипе капмар крансен хусканӑвӗ курӑнать;*

а) шухăша тĕрĕс уçма пулăшни:

Килчĕ *ырă* çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
(К. Иванов).
*Чипер* ача Сетнерĕн
Пĕр урхамах лаши пур.
(К. Иванов).

Ку йĕркесенче *ырă — чипер* сăмахсем — синонимсем, анчах та вĕсем пур чухне те пĕр-пĕрин вырăнне çӳреме пултараймаççĕ. Тĕслĕхрен, *Килчĕ чипер çуркунне* тесен, сăвă поэзилĕхĕ çухалать;

б) стиль уйрăмлăхĕсене палăртни:

*Чипер* каччă Тăхтаман
Силпи хĕрне çаклатнă.
(К. Иванов).

Юлашки тĕслĕхре *чипер* сăмах *лайăх — ырă — аван — хитре* сăмахсемпе пĕр синоним ретне кĕрет пек, анчах та унпа текстра иронипе усă курнă, çавна кура вăл шӳтлĕ (е тăрăхлакан) стилĕн палли пулса тăрать.

Кашни писатель, поэт хăйĕн произведенийĕсенче синонимсемпе хăй евĕрлĕ усă курать. П. П. Хусанкай поэмисемпе сăввисенче синонимсене чылай чухне пĕр сăвă йĕркинех темиçе кĕртнине, çапла майпа калас шухăша татах та ĕнентерӳллĕрех тунине асăрхама пулать:

Ĕç пултăр *тирпейлĕ, таса* та *илемлĕ.*
(«Магнит ту»).
Тăшман тӳсеймест, вăл *чакать,* вăл *тарать.*
(«Таня»).
Савăта-и кĕрен, хапрăка-и —
*Тăрăхлаççĕ, кулаççĕ* кăна.
(«Çирĕм ултă»).

Шăрçасем пек тирсе тухнă *тирпейлĕ, таса, илемлĕ* синонимсем, пĕр тан пĕлтерĕшлĕ мар пулин те, юнашар тăрса, витĕмлĕ сăнар тăваççĕ.

Иккĕмĕш тĕслĕхрех, ак, *чакать, тарать* сăмахсем, пулса иртекен ĕçĕн хăвăртлăхне палăртса, вулакан умне уçăмлă картина кăларса тăратаççĕ. *Тӳсеймест* сăмахпа поэт тăшман çапăçма пултарайманнине палăртать. Çапăçма пултарайман тăшман чакать кăна мар, çаврăнса пăхмасăр тарать. *Тăрăхлаççĕ, кулаççĕ* синонимсем, пĕр ретре тăрса, пĕр-пĕрин пĕлтерĕшне вăйлатаççĕ, калас шухăша ĕнентерӳллĕрех тăваççĕ. Çавна пула произведени сăнарлăхĕ ӳсет.

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах хăйĕн пĕлтерĕшĕсемпе темиçе синоним ретне те кĕме пултарать. Тĕслĕхшĕн *пысăк, кала* сăмахсене илсе пăхар:

пысăк 1 — мăнă, капмар, катмар, шултра; пысăк 2 — çӳллĕ (пысăк çурт — çӳллĕ çурт); пысăк 3 — çитĕннĕ (пысăк сын — çитĕннĕ çын); пысăк 4 — вĕреннĕ (пысăк çын — вĕреннĕ çын); пысăк 5 — аслă (пысăк пичче — аслă пичче); пысăк 6 — аслă (пысăк çĕлĕк — аслă çĕлĕк); пысăк 7 — хулăн (пысăк ура — хулăн ура); пысăк 8 — тачка (пысăк пĕрене — тачка пĕрене);

кала 1 — калаç, пупле, юмахла, халапла т. ыт. те; кала 2 — хуш (килме хуш — килме кала); кала 3 — сĕн (укçа илме кала — укçа илме сĕн); кала 4 — ответле (урок кала — урок ответле).

Иккĕмĕш вырăнта кăтартнă сăмахăн синонимĕсем пурте пĕр синоним ретне кĕме пултараймаççĕ: *мăнă — çӳллĕ — çитĕннĕ, вĕреннĕ — аслă — хулăн — тачка* сăмахсене тӳрех синонимсем тесе пăхма май çук. *Кала* сăмах пирки те çавнах палăртмалла: *калаç — хуш — сĕн — ответле* лексика синонимĕсем мар.

Çапла вара, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах кашни пĕлтерĕшĕпех хăйне уйрăм синоним ретне кĕме пултарать, ку сăмахсем вара ялан мар, пĕр-пĕр пĕлтерĕшĕсемпе çеç синонимлă пулнине кăтартать.[8] Çак уйрăмлăха пулах сăмахсем лексика единицисен тĕрлĕрен çыхăнăвне лекеççĕ. Сăмахран, *ĕçтер* глаголăн пĕлтерĕшĕ *шăвар* глаголăннинчен уйрăмрах, кăна эпир *шăвар* сăмах ытти сăмахсемпе ытларах çыхăнма пултарнинчен куратпăр: *выльăх-чĕрлĕхе шăвар* (*выльăх-чĕрлĕхе ĕçтер* теме те май пур), *ӳсен-тăрана шăвар* (*ӳсен-тăрана ĕçтер* теместпĕр), *хурçă шăвар* (*хурçă ĕçтер* теме çук), *шăвармалли система* (*ĕçтермелли система* тесен пĕлтерĕш пачах улшăннине асăрхатпăр), *çумăр шăварать* (*çумăр ĕçтерет* тени чĕлхере çук).

Тĕслĕхсем, акă, мĕн кăтартаççĕ: *ĕçтер — шăвар* сăмахсем синонимсем пулин те, пĕр пек тытăмлă сăмах майлашăвĕсенче пĕр-пĕринпе ылмашăнаймаççĕ. Апла пулсан, *ĕçтер — шăвар* сăмахсен хăш-пĕр пĕлтерĕшĕсем кăна синонимлă.

---

[8] Шмелев Д. Н. Проблемы семантического анализа лексики. Автореф. М., 1969. С. 18. Автор çапла çырать: «Синонимами являются не слова вообще, а слова в определенных значениях, определяемых типизированными контекстами их употребления».

## АНТОНИМСЕМ

Антонимсем тесе пĕр-пĕринпе хирĕçле семантикăллă сăмахсене калаççĕ. Вăл сăмахсем логика тĕлĕшĕнчен шайланса, килĕшсе тăман ăнлавсене пĕлтереççĕ. Çав ăнлавсем пĕр-пĕринчен пĕлтерĕш хире-хирĕçлĕхĕ пуррипе уйрăлса тăраççĕ. Сăмахран: *хура — шурă, хаяр — йăваш, лайăх — япăх, ир — каç.* Çакăн пек сăмахсене лексика антонимĕсем теççĕ.

Антоним речĕ ытларах икĕ сăмахран тытăнса тăрать. Антонимсем кашни пуплев пайне кĕрекен сăмахсенченех пулма пултараймаççĕ: тĕслĕхрен, сăпат местоименийĕсем хушшинче антонимсем çук.

Япала ячĕсем хушшинче вара антонимсем час-часах тĕл пулаççĕ: *атте — анне, ывăл — хĕр, хуйхă — савăнăç, тус — тăшман, ĕç — кану, çĕр — пĕлĕт.*

Антоним паллă ячĕсем те нумай: *лайăх — япăх, хитре — усал, çамрăк — ватă, тарăн — ăшăх, инçе — çывăх, ăшă — сивĕ.*

Антоним наречисенчен çаксене асăнма пулать: *хăвăрт — вăрах, хăвăрт — ерипен, ĕлĕк — халь.*

Антоним глаголсем: *кай — кил, ут — чуп, сут — ил, кĕр — тух, савăн — хурлан, хăпар — ан.*

Антоним хыç сăмахсем: *тăрăх — урлă.*

Калас пулать, кашни сăмахăнах антоним пулмасан та пултарать. Акă, *çурт, чӳрече, сехет, кĕнеке, сĕтел* сăмахсен лексика антонимĕсене тӳрех тупма та май çук.

Антонимсем япаласемпе пулăмсене тата вĕсен тĕрлĕрен паллисене хирĕçлесе кăтартаççĕ:

а) вăхăта (*ир — каç, çулла — хĕлле, ĕлĕк — халĕ, çуркунне — кĕркунне*);

ă) вырăна (*кăнтăр — çур çĕр, мал (ен) — кай (ен), анатра — тура, сăртра — айлăмра, малта — кайра*);

б) çут çанталăк пулăмĕсене (*ăшă — сивĕ, юр — çумăр, ăшăт — сивĕт, йĕпет — типĕт, тух — ан, çутăл — тĕттĕмлен*);

в) калăпăша (*пысăк — пĕчĕк, ансăр — сарлака, тарăн — ăшăх*);

г) кăмăл-туйăм уйрăмлăхĕсене (*савăнăç — хуйхă, хаваслă — хуйхăллă*);

д) этем ĕç çине мĕнле пăхнине (*кахал — ĕçчен*), *правур — ӳркев*);

е) япаласен пахалăхне (*лайăх — япăх, тăварлă — тăварсăр, усăллă — усăсăр*) т. ыт. те.

Тытăмĕ тĕлĕшĕнчен антонимсем пĕр тымартан тата тĕрлĕрен сăмахсен тымарĕсенчен пулса кайнисем пулаççĕ. Чăваш чĕлхинче антонимсем пĕр сăмах тымарĕнченех *-лă (-лĕ)* тата *-сăр (-сĕр)* аффикссем хушăннипе пулса каяççĕ: *шывлă — шывсăр, тăварлă — тăварсăр, вăйлă — вăйсăр, илемлĕ — илемсĕр, майлă — майсăр, ăслă — ăссăр* (танлаштарăр: тутар чĕлхинче *анлы* «ăслă» — *ансыз* «ăссăр», *сулы* «шывлă» — *сузыз* «шывсăр» т. ыт. те); *-сăр (-сĕр)* аффикслă паллă ячĕсен *-лă (-лĕ)* аффикслă антонимĕ чĕлхере пурин те пулмасан та пултарать: *харсăр — харлă* (?), *чăрсăр — чăрлă* (?), *ирсĕр — ирлĕ* (?).

Антоним ретне çирĕплетӳпе хирĕçлев аспектĕнчи глаголсене те кĕртме пулать: *пулчĕ — пулмарĕ, килчĕ — килмерĕ, канчĕ — канмарĕ, кайрĕ — каймарĕ* (тутар чĕлхинче: *барыр* «каять» — *бармас* «каймасть»).

Пĕр сăмах тымарĕнченех пулса кайнă антонимсене чăваш чĕлхи урăх чĕлхесенчен те йышăнма пултарать: *революци — контрреволюци, прогресс — регресс.*

Тĕрлĕ сăмахсен тымарĕсенчен пулнă антонимсем, пĕр тымартан пулнипе танлаштарсан, хире-хирĕçле пĕлтерĕше вăйлăрах палăртаççĕ:

| чăвашла | тутарла |
|---|---|
| *ăслă — ăссăр — ухмах* | *анлы — ансыз — ахмак* |
| *вăйлă — вăйсăр — хавшак* | *кочле — кочсез — йомшак* |

Каларăмăр ĕнтĕ: чĕлхере кашни сăмахăнах хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмах пулмасан та пултарать. Акă, *пĕлĕт* сăмахăнах хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмах çук. Анчах та *пĕлĕт* япала ятĕнчен *-лă (-лĕ)* аффикс хушăннипе паллă ячĕ пулать те, унăн антонимне тупасси ансатланать: *пĕлĕтлĕ (çанталăк) — уяр (çанталăк).*

Урăх чĕлхерен кĕнĕ чылай термин сăмахсен те антонимсем пулмаççĕ: *атом, катализатор, интеграл, логарифм.*

Хăш-пĕр сăмах майлашăвĕсем антоним пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ: *Тăван çĕр-шыв — ют çĕр-шыв.* Кун пек тĕслĕхсем чĕлхере нумаях мар. Вĕсене фразеологи антонимĕсем тесе пăхма пулать.

Лексика антонимĕсене пуплев антонимĕсенчен уйăрса илме пĕлмелле. Пуплев антонимĕсем пĕр-пĕр çын калаçăвĕнче е писательсемпе поэтсен чĕлхинче анлă сарăлнă:

Ансăртран пĕрре эп илтрĕм
Переменăра чухне
Çав пуппа учитель пирĕн

Шултранах калаçнине.
«Шкул... чиркӳ, патшалăх... турă».
(П. Хусанкай).

Ахаль чухне *шкул* тата *чиркӳ* сăмахсем антонимсем пулмаççĕ, анчах та П. Хусанкай хăйĕн произведенийĕнче ку сăмахсен семантикине политика пĕлтерĕш сĕмĕпе пуянлатать, çавăнпа та *пуп* тата *учитель* сăмахсем те контекстра хире-хирĕç пĕлтерĕшлĕ пулса каяççĕ. Çакăн евĕр сăмахсене контекст е пуплев антонимĕсем теме май пур.

Антонимсемпе ваттисен сăмахĕсенче тата каларăшсенче анлă усă кураççĕ: *Инçе шухăшла та çывăхра пурăн. Қаçхи ĕç — кăнтăр кулли. Пысăка ĕмĕтленекен пĕчĕккине çухатать. Ырă арçын пуçтарать, усал хĕрарăм салатать. Нумай та пĕтет, сахал та çитет, тату пурăннине мĕн çитет?*

Тепĕр чухне антонимсемпе усă курса пĕр ăнлава палăртакан, анчах логика тĕлĕшĕпе нимĕнле майпа шайлаштарма май çук сăмах майлашăвĕсем тăваççĕ: *ăслă ухмах, чухăн миллионер, васкамасăр хыпалан, çамрăк старик.* Илсе кăтартнă сăмахсем, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пачах хирĕçле пулин те, пĕрлешсе çĕнĕ ăнлав тăваççĕ. Қу пулăма чĕлхе наукинче оксиморон (оксюморон) теççĕ. Антоним сăмахсенчен пĕрлешсе пулнă оксиморонсем чăваш чĕлхинче кăна мар, ытти чĕлхесенче те тĕл пулаççĕ (тутар чĕлхинче: *кузле сукыр* «куракан суккăр», *бай хэерче* «чухăн пуян», *чын ялгын* «чăн суя», *сакаллы сабый* «сухаллă ача»; вырăс чĕлхинче: *умный дурак, бедный миллионер* т. ыт. те).

## АНТОНИМСЕН ЧĔЛХЕРИ ВЫРĂНĔ

Антонимсемпе чĕлхере анлă усă кураççĕ. Вĕсем пулăшнипе пурнăçăн, ĕç-хĕлĕн, событисен хире-хирĕçлĕхне витĕмлĕреххĕн те уççăнраххăн кăтартма пулать. Шухăша тарăнлатнипе пĕрлех антонимсем чĕлхене илемлĕ те витĕмлĕ тăваççĕ.

Қашни çыравçăн хăйне евĕр стиль уйрăмлăхĕсем пулаççĕ. П. Хусанкай, тĕслĕхрен, хире-хирĕç пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе пĕр йĕркерех е юнашар йĕркесенче усă курать, çапла майпа ĕçĕн, пулăмăн, япалан контрастлăхне куç кĕретĕн кăтартса парать:

Эс ман *савăнăç* та *хурлăх*,
Эс — пĕрĥемĕш юрату.
(«Çур çĕр Осетире»).

Унта йăлтах: *хаваслăх, хурлăх,*
*Телей, инкек* — пĕр çĕклемре.
(«Қаçхи Тбилисире»).

П. Хусанкаях антоним сăмахсемпе «Сăн» ятлă сăвăра уса курнине сăнар:

*Йăваш* та эсĕ, *шăллă* та,
*Япшар* та эсĕ, эсĕ — *хытă*.
. . . . . . . . . . . . . .
*Сăпайлă* та, *пуçтах* та питĕ.
Қĕскен сана мĕскер теес?
*Эсрел* те эсĕ, *пирĕшти* те.

### САМАХАН НУМАЙ ПЕЛТЕРЕШЛЕХЕ ТАТА АНТОНИМСЕМ

Тĕслĕх вырăнне каллех *пысăк* сăмахах илер, унăн синонимĕсене пĕлтерĕшĕсене кура пĕр енне, антонимĕсене тепĕр енне çырса тухăпăр:

| синонимсем | антонимсем |
|---|---|
| пысăк — мăнă, шултра (чул) | пĕчĕк, вĕтĕ (чул) |
| пысăк — çӳллĕ (йывăç) | лутра (йывăç) |
| пысăк — çитĕннĕ (çын) | çитĕнмен (çын) |
| пысăк — вĕреннĕ (çын) | вĕренмен (çын) |
| пысăк — аслă 1 (пичче) | кĕçĕн (пичче) |
| пысăк — аслă 2 (кĕрĕк) | тăвăр (кĕрĕк) |
| пысăк — аслă 3 (вырăн) | хĕсĕк (вырăн) |
| пысăк — хулăн<br>мăн (сас) | çӳхе<br>çинçе (сас) |
| пысăк — тачка<br>кӳпшек (çын) | начар<br>хыткан (çын) |
| пысăк — сарлака<br>анлă (шыв) | çинçе<br>ансăр (шыв) |
| пысăк — ирĕклĕ (вырăн) | хĕсĕк (вырăн) |

Чылай чухне тĕпчевçĕсем, *пысăк* сăмахăн тĕп пĕлтерĕшне шута хурса, унăн антонимĕ *пĕчĕк* сăмах пулнине кăна кăтартаççĕ. Ку питех те çителĕксĕр, мĕншĕн тесен нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн кашни пĕлтерĕшĕнех синоним тата антоним пĕлтерĕшĕсем пулма пултараççĕ. Қалăпăр, *пысăк* сăмах «мăнă, шултра е капмар» пĕлтерĕшлĕ пулсан, унăн антонимĕсем *тăвăр, çӳхе, вĕренмен* сăмахсем пулма пултараймаççĕ. Пулсассăн та, вĕсене эпир лексика антонимĕсем вырăнне мар, контекст антонимĕсем вырăнне йышăнăттăмăр. *Пысăк* сăмах «вĕреннĕ» пĕлтерĕшлĕ чухне унăн антонимĕ *вĕ-*

*ренмен* пулать, *пысăк (аслă) çĕлĕк* тенĕ чух — *тăвăр, пысăк (хулăн) сас* тенĕ чух — *çӳхе (е çинçе).*

*Пысăк* сăмахăн синонимĕсем тата антонимĕсем чылай чухне пĕрешкел сăмахсемпех çыхăнăва кĕме пултараççĕ. Тĕслĕхрен: *пысăк (йывăç) — çӳллĕ (йывăç) — лутра (йывăç), пысăк (хăяр) — çитĕннĕ (хăяр) — çитĕнмен (хăяр), пысăк (çын) — вĕреннĕ (çын), пысăк (шыв) — сарлака (шыв) — ансăр (е пĕчĕк шыв)* т. ыт. те. Чăваш чĕлхинче *пысăк — пĕчĕк* тата *çӳллĕ — лутра* антонимсем чылай чухне пĕр сăмахпах çыхăнура тăма пултараççĕ пулсан *(пысăк çын, йывăç — пĕчĕк çын, йывăç; çӳллĕ çын, йывăç — лутра çын, йывăç),* акăлчан чĕлхинче антонимсем пулакан *high* «çӳллĕ», *low* «лутра», *tall* «çӳллĕ», *short* «кĕске» сăмахсем çын кĕлеткин ӳсĕмне, çӳллĕшне кăтартнă чух пурте пĕр тан çыхăнура тăраймаççĕ. Акăлчансем *a tall man* «çӳллĕ çын» теççĕ (*a high man* тени çук), *a short man* «лутра çын» теççĕ (*a low man* мар). Çав вăхăтрах *high, low, tall, short* антонимсем чĕрĕ мар япаласене палăртакан сăмахсемпе пуринпе те çыхăнура тăма пултараççĕ.

Чăваш чĕлхинче *пысăк йывăç* тени йывăçăн çӳллĕшне кăна мар, унăн сарлакăшне те кăтартать.

Кара-калпак чĕлхинче *бийик* («пысăк, çӳллĕ») сăмахпа ытларах чĕрĕ мар япаласен çӳллĕшне палăртаççĕ: *бийик тау* «çӳллĕ ту», *бийик агаш* «пысăк, çӳллĕ йывăç», *бийик шкаф* «çӳллĕ шкаф». Çын кĕлеткин çӳллĕшне палăртнă чух кара-калпаксем *узын* «вăрăм» сăмахпа усă кураççĕ: *узын адам* «вăрăм çын». Выльăх-чĕрлĕх пысăкăшне вĕсем *бийик, улкен* сăмахсемпе кăтартаççĕ: *бийик нар* «çӳллĕ, пысăк пĕр курпунлă тĕве», *бийик торы* «çӳллĕ, пысăк тур лаша».

Çав вăхăтрах кара-калпаксем *бийик сыйыр* «çӳллĕ ĕне» темеççĕ, вĕсен чĕлхинче *улкен сыйыр* «пысăк ĕне» тени çирĕпленнĕ. *Улкен* «пысăк» сăмахăн антонимĕ *киши* (е *кишекен*) «пĕчĕк» сăмах пулать: *киши сыйыр* «пĕчĕк ĕне».[9] Акăлчансен *broad smile,* вырăссен *широкая улыбка* сăмах майлашăвĕсем пур. Анчах акăлчансем *narrow smile,* вырăссем *узкая улыбка* темеççĕ. Чăвашла *уçă кулă* теççĕ, анчах та пирĕн чĕлхере *хупă кулă* тени тĕл пулмасть. Ку вара, антоним сăмахсем ялан пĕр сăмахпа çыхăнура тăманнине кăтартать.

[9] Тĕслĕхсене К. А. Исмаиловăн çак статйинчен илнĕ: Семантический анализ пространственных прилагательных *бийик, бэлент, жокары* в каракалпакском языке // Аспекты лингвистического анализа. М., 1974. С. 384—393.

Çапла вара, тӗрлӗ чӗлхесенчи антонимсем хӑйсен çыхӑнура тӑма пултарас спецификине кура пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑраççӗ.

Сӑмахӑн пӗлтерӗшӗсем мӗн чухлӗ пуянрах, унӑн синоним тата антоним речӗсем çавӑн чухлӗ нумайрах. Акӑ, *пысӑк — начар (хыткан)* антоним ретнех илсе пӑхар. Малтанах пӑхсан, *пысӑк (çын) — начар, хыткан (çын)* тенисем нимӗнле пӗлтерӗш хирӗçлӗхне те кӑтартмаççӗ пек. Анчах та, *пысӑк* сӑмахӑн «тачка, кӳпшек» пӗлтерӗшӗ пуррине шута илсен, *пысӑк — начар (хыткан)* сӑмахсем антонимсем пулнине йышӑнма тивет.

Çӳлерех çырса кӑтартнисене шута илсен, çапла пӗтӗмлетсе калама пулать:

а) нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахӑн антонимне унӑн тӗп пӗлтерӗшӗ тӑрӑх кӑна тупса палӑртни çителӗксӗр;

ӑ) нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен хӑйсен синоним е антоним речӗсем йӗркеленсе кайма пултараççӗ.

## ЭНАНТИОСЕМИ

Пӗр сӑмахӑнах хире-хирӗçле пӗлтерӗшӗсем пулнине энантиосеми теççӗ.[10] Пӗр сӑмахах хире-хирӗç пӗлтерӗшлӗ пулса каясси тӗрлӗ сӑлтавсенчен килет.

Тепӗр чух диалектра литература чӗлхинче пӗр пӗлтерӗшпе çӳрекен сӑмахӑн пачах хирӗçле пӗлтерӗшӗ пулма пултарать. Акӑ, *ӳрӗк* сӑмахах илсе пӑхар. Литература чӗлхинче *ӳрӗк* «çаврӑнӑçуллӑ, правур» пӗлтерӗшлӗ, диалектра вӑл «сӳрӗк, çаврӑнӑçусӑр, кахал» пӗлтерӗшпе çӳрет. Литература чӗлхинчи пӗлтерӗшӗ унӑн кайрантарах çуралнӑ пулмалла, мӗншӗн тесен *ӳрӗк-сӳрӗк* текен мӑшӑр сӑмахра икӗ синоним

---

[10] Шерцль В. И. О словах с противоположными значениями (или о так называемой энантиосемии) // Филологические записки. Воронеж, 1883. Вып. 5, 6. С. 1—39; Пете И. О противоположных значениях одного и того же слова в русском языке // Материалы и сообщения по славяноведению. 2. Szeged, 1964. Виноградов В. В. ку пулӑма омоантоними тесе ят панӑ. Омоантонимсем пирки вӑл çапла çырнӑ: «Одна и та же приставка, присоединенная к одному и тому же глаголу, нередко приводит к образованию разных слов, значения которых могут быть прямо противоположны, например, просмотреть в значениях: 1) «пересмотреть до конца, быстро проглядеть»; 2) «не разглядеть». (Виноградов В. В. Об омонимии и смежных явлениях // Избр. труды. Исследования по русской грамматике. М., 1975. С. 302). Виноградов В. В. шухӑшне Новиков Л. А. та çирӗплетет: «Развитие в многозначном слове противоположных значений может приводить к «расщеплению» слова на омонимы» (Новиков Л. А. Типы антонимов в русском языке (структурная классификация) // Русский язык в школе. 1973. № 3. С. 75.

пěрлешесси авалах пулма пултарнă, вěсен пěлтерěшěсем диалектсенче те пěр килсе тухмаççě.

Япаласен, пулăмсен е ěç-хěлсен чи çÿллě шайри пахалăхне е степенне кăтартнă чух час-часах сăмахсен хире-хирěçлěх пěлтерěшěпе усă курни сисěнет. Қалăпăр, *хěвел пěçертет, сивě пěçертет* тенě чухне *пěçертет* сăмах пěрремěш конструкцире «хěртет, çунтарать» пěлтерěшлě, иккěмěшěнче «шăнтать» пěлтерěшлě. *Хěртет* глагол пирки те çавнах калама пулать: *хěвел хěртет, сивě хěртет.* Ёненмеллерех пултăр тесе, П. Хусанкай çырнă «Таня» поэмăран илнě йěркесене пăхар:

Шартлама *хěртет.* Қÿтет
Тăм илен ура.

Қу текстра *хěртет* тени, *шăнтать* сăмахпа синонимлă пулса, хăйěн тěп пěлтерěшěпе антонимлă пулса каять. Қун пек чухне энантиосемие контекст пулăшнипе уйăрса илме пулать.

Сăмахсем, вěсене мěнле интонаципе каланине кура, хăйсен пěлтерěшěсене улăштарма е пачах хирěçлетме пултараççě: *Ăслă эсě, ăслă, анчах ăсу пěр пуса та тăмасть.*

Қу предложенире *ăслă* сăмаха хăйěн тÿрě тěп пěлтерěшěпе мар, хирěçле пěлтерěшпе каланă. Қалаканни *ухмах* сăмах вырăнне *ăслă* сăмахпа усă курать. Тепěр тěслěх: *Ну, Çăпала-а, пи-ит лайăх çăвăннă иккен эсě мунчара* (Л. Агаков). Қу предложенире *пи-ит, лайăх* сăмахсем хирěçле пěлтерěш туянаççě, мěншěн тесен вěсене иронипе каланă. Иронисěр калас пулсан, асăннă сăмахсем вырăнне *шутсăр* тата *япăх* сăмахсем лартма пулěччě. [11]

Нумай пěлтерěшлě сăмахăн хăш-пěр пěлтерěшěсем антонимлă пулма пултараççě. Тěслěх вырăнне *пуç* сăмаха илсе пăхма пулать. Пěлтерěшěсем унăн вун пиллěкрен те иртсе каяççě. Вěсенчен «пуçламăшě» тата «вěçě, пěтмěшě» пěлтерěшсене илер. Тěслěхсем: *Çавăнпа вăл çыру пуçне адресне çырас пулать, тет* (Ашм.). *Пěр пуçě çăка, тепěр пуçě юман, варринче мăкăр* (Туп. юмах).

Пěрремěш предложенире *çыру пуçне* тенине эпир *çыру вěçне* тенě пек ăнланмастпăр. *Çыру пуçě* «çыру пуçламăшě» пěлтерěшлě. Иккěмěш предложенире вара *пěр пуçě, тепěр пуçě* тени *пěр вěçě, тепěр вěçě* тенипе пěр килсе тухать. Апла пулсан, ку тěслěхсенче эпир *пуç* сăмахăн энантиосемине куратпăр.

---

[11] Чěлхе вěрентěвěнче ку пулăма антифразис тесе ят пани те пур. (Ахманова О. С. Словарь лингвистических терминов. М., 1969. С. 49).

Энантиосеми чĕлхере анлă сарăлман. Вăл нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсем хире-хирĕçле чух тĕл пулать, анчах та ăна нумай пĕлтерĕшлĕ кашни сăмахăнах пур тесе калама май çук.

## ОМОНИМСЕМ

Омонимсем вĕсем — сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăракан, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *шăпăр* I (урай шăлмалли япала) — *шăпăр* II (музыка инструменчĕ); *иш* I (шывра иш) — *иш* II (аркат, çĕмĕр); *тăрă* I (пĕр-пĕр япалан çӳлти шĕвĕр пайĕ) — *тăрă* II (таса); *вулатăр* I (эсир вулатăр) — *вулатăр* II (вăл вулатăр); *сивĕ* I (япала ячĕ) — *сивĕ* II (паллă ячĕ); *сӳре* I (япала ячĕ) — *сӳре* II (глагол); *илпек* I (пайăр мар ят) — *Илпек* II (пайăр ят).

Çӳлерех мăшăрлатса илсе кăтартнă сăмахсем пурте пĕр пек янăраççĕ, анчах та пĕлтерĕшĕсем вĕсен пачах расна. Çиелтен пăхсан, вĕсене пурне те пĕр ушкăна кĕртме пулать пек, анчах та, тимлĕрех сăнасан, çак омоним пулакан мăшăрсем кашниех ытти мăшăрсенчен мĕнпе те пулин уйрăлса танине курма пулать. Пĕрисем пĕр пуплев пайне кĕрекен лексика единицисем шутланаççĕ, теприсем — сăмахсен грамматика формисем çеç, виççĕмĕшĕсем пĕр сăмах тĕпĕнчен пулнă, хăйсен формисене улăштармасăрах тĕрлĕ пуплев пайне кĕрекен сăмахсем пулса кайнă. Çак уйрăмлăхсене кура омонимсене виçĕ ушкăна пайлама май пур: лексика омонимĕсем, лексикăпа грамматика омонимĕсем тата фонетикăпа лексика омонимĕсем.

## ЛЕКСИКА ОМОНИМĔСЕМ

Ку ушкăна пĕр пуплев пайнех кĕрекен, пĕр пек янăракан тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене кĕртеççĕ. Тĕслĕхшĕн А. Воробьевăн «Юратнă сăнсем» кĕнекинчен илнĕ йĕркесене сăнаса пăхар:

Вĕçтерет *çул* тăрăх
Пĕр хура ача.
Шăп çирĕм *çул* ăна кĕтсе
Тертлентĕм, çунтăм ку таран.

Кăтартнă тĕслĕхсенче *çул* — *çул* сăмахсем — омонимсем. Пĕр пек янăраççĕ пулин те, пĕлтерĕшĕсем вĕсен пачах распа: *çул* I — сукмак, шоссе; *çул* II — çулталăк.

Тутар чĕлхинче *юл* I «çул, сукмак» тата *юл* II «меслет, май» омонимсем пĕр сăмах тĕпĕнчен, чăваш чĕлхинче çӳле-

рех илсе кăтартнă *çул* I тата *çул* II омонимсем тĕрлĕ сăмах тĕпĕнчен пулса кайнă.

Лексика омонимĕсем вĕçленнĕ е сăпатланнă чух пур грамматика формисене те пĕр пекех йышăнаççĕ пулсан, вĕсене тулли омонимсем теме йышăннă. Танлаштарăр:

| | чăвашла çул I | тутарла юл I | чăвашла çул II | тутарла юл II |
|---|---|---|---|---|
| нум. хис. | çулсем | юллар | çулсем | юллар |
| кам. пад. | çулăн | юлнын | çулăн | юлнын |
| çуклăх пад. | çулсăр | юлсыз | çулсăр | юлсыз |

Илнĕ тĕслĕхсенче лексика омонимĕсен тĕрлĕрен грамматика формисем те омонимлă пулса каяççĕ, çавăнпа та вĕсене т у л л и  л е к с и к а  о м о н и м ĕ с е м теме йышăннă та ĕнтĕ. Кун йышши омонимсем пур грамматика формине те йышăнма пултараççĕ пулин те, пĕлтерĕшĕсем расна пулнă май чылай çыхăнура пĕр пек сăмахсемпе тăма пултараймаççĕ:

| | |
|---|---|
| шăпăр I | шăпăр II |
| (çӳп-çап шăлмалли хатĕр) | (музыка инструменчĕ) |
| шăпăр кирлĕ | шăпăр кирлĕ |
| шăпăр тыт | шăпăр тыт |
| шăпăрпа шăл | ? |
| ? | шăпăр кала |
| шăпăр çых | ? |

Çӳлерех асăннă сăмах майлашăвĕсенче омоним сăмахсен пĕлтерĕшĕсем яр-уççăн тухса тăраççĕ, вĕсене пĕр-пĕринпе пăтраштарма пачах та май çук.

Хăш-пĕр чĕлхесенче тулли мар лексика омонимĕсем пуррине палăртаççĕ. Вырăс чĕлхинче, сăмахран, *бор* I (хыр вăрманĕ), *бор* II (хими элеменчĕ), *бор* III (шăл шăтармалли хурçă пăра) омонимсем пур. Виçĕ омонимран юлашки иккĕшĕ нумайлă хисеп аффиксне йышăнмаççĕ. Пур формăра та пĕр пек пулманнине кура вĕсене тулли мар омонимсем теççĕ. Тулли мар омонимсем акăлчан чĕлхинче те час-часах тĕл пулаççĕ:

| | |
|---|---|
| lie I (вырт) | lie II (суй) |
| lies (выртать) | lies (суять) |
| | lay (выртнă) |
| | lain (причасти форми) |
| | lied (суйнă) |
| | lied (причасти форми) |

Кунта, *lie* I тата *lie* II глаголсен грамматика формисем чылай чухне пĕр пек пулин те, иртнĕ вăхăт тата причасти

формисем урăхла. Чăваш чĕлхинче кун пек тĕслĕхсем çукпа пĕрех. Е. Ф. Васильева илсе кăтартнă *ывăлсем* I «младший брат мужа» — *ывăлсем* II «сыновья»; *хĕрсем* I «младшая сестра мужа» — *хĕрсем* II «дочери, девушки» тулли мар лексика омонимĕсен картне лараймаççĕ, мĕншĕн тесен *ывăлсем* I, *хĕрсем* I — лексикализациленнĕ (тулли лексика пĕлтерĕшлĕ) сăмахсем, çав вăхăтрах *ывăлсем* II, *хĕрсем* II — нумайлă хисеп аффиксне йышăннă грамматика формисем çеç.[12] Апла пулсан, вĕсене лексикăпа грамматика омонимĕсем тесе пăхни тĕрĕсрех пулĕ.

## ЛЕКСИКĂПА ГРАММАТИКА ОМОНИМĔСЕМ

Лексика омонимĕсем пĕр пуплев пайне кĕрекен пĕр пек янăракан расна пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулсан, лексикăпа грамматика омонимĕсем тĕрлĕ пуплев пайне кĕрекен сăмахсем шутланаççĕ:

| | |
|---|---|
| пилĕк I (япала ячĕ) | пилĕк II (хисеп ячĕ) |
| вĕрен I (япала ячĕ) | вĕрен II (глагол) |
| çакă I (япала ячĕ) | çакă II (местоимени) |

Чăваш чĕлхинче омонимсем виçĕ пуплев пайне кĕрекеннисем те тĕл пулаççĕ: *çыр* I (япала ячĕ) — *çыр* II (паллă ячĕ) — *çыр* III (глагол); *шур* I (япала ячĕ) — *шур* II (паллă ячĕ) — *шур* III (глагол).* Паллах, вĕсен грамматика формисем пĕр пек килсе тухмаççĕ, çавăнпа та ун пек сăмахсене акалчан чĕлхинчи пек тулли тата тулли мар омонимсем тесе калама май çук.

Лексикăпа грамматика омонимĕсем шутне пĕр-пĕр пуплев пайне кĕрекен икĕ е ытларах сăмахăн тĕрлĕ формисене те кĕртмелле: *çулăм* I «пламя» — *çулăм* II «мой путь»; *урам* I «улица» — *урам* II «моя нога»; *çирĕм* I «двадцать» — *çирĕм* II «я поел»; *çыран* I «берег» — *çыран* II («ты пишешь» — ытларах калаçу тата поэзи чĕлхинче).

## МОРФОЛОГИ (Е ГРАММАТИКА) ОМОНИМĔСЕМ

Пĕр пуплев пайне кĕрекен сăмахсен тĕрлĕ грамматика формисем сасă енчен пĕрешкел килсе тухаççĕ пулсан, вĕсене морфологи (грамматика) омонимĕсем, е омо-

---

[12] Васильева Е. Ф. Чăваш чĕлхинчи омонимсем çинчен // Вопр. чувашского языка и лит-ры. Чебоксары, 1965. Вып. 26. С. 106, 107.

* Тĕслĕхсене Васильева Е. Ф. çырнă «Чăваш чĕлхинчи омонимсем çинчен» статьяран илнĕ.

формăсем, теççĕ. Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем (сăмахран В. В. Виноградов) шутланă тăрăх, грамматика омонимĕсем лексикологи объекчĕ пулмаççĕ.[13] Анчах та лексикологи морфологипе тата фонетикăпа тачă çыхăнса тăнине шута илсен, ку пулăма лексикологире çырса кăтартнине хирĕçлеме кирлĕ мар.

Тĕрлĕрен сăмах тĕпĕсенчен пулнă грамматика формисем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек килсе тухнине çакăн пек тĕслĕхсем кăтартаççĕ: 1) *(çил) вĕрет — (шыв) вĕрет;* 2) *(шыв) вĕрет — (эсĕ шыв) вĕрет;* 3) *(эсир) юрлатăр — (вăл) юрлатăр, (эсир) ташлатăр — (вăл) ташлатăр.*

Омоформăсем глагол тĕпĕ <*а, е*> сасăсемпе пĕтнĕ чухне кăна пулаççĕ. Глагол тĕпĕ хупă сасăпа пĕтсен, çав формăсем омонимлă пулмаççĕ: *(эсир) çыратăр — (вăл) çыртăр, (эсир) каятăр — (вăл) кайтăр, (эсир) ларатăр — (вăл) лартăр* т. ыт. те.

### ФОНЕТИКĂПА ЛЕКСИКА ОМОНИМĔСЕМ

Ку ушкăна омофонсемпе омографсене кĕртмелле. Омофонсем тесе тĕрлĕ çырăнакан, анчах та пĕр пек илтĕнекен сăмахсене калаççĕ: *суд* (япала ячĕ) — *сут* (глагол).

Омофонсен шутнех пĕр пек янăракан пайăр мар тата пайăр ятсене те кĕртмелле: *илпек — Илпек, вашават — Вашават, турхан — Турхан.*

Пĕр пек çырăнакан, анчах та урăхларах янăракан тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене омографсем теççĕ. Чăваш чĕлхинче вĕсен хисепĕ пысăках мар: *тир* I (пăшал пемелли вырăн) — *тир* II (выльăх е пĕр-пĕр тискер чĕр чун тирĕ). Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ *тир* I сăмахра юлашки <*р*> хупă сасă çемçелмест *(тира кайрăм, тирта пултăмăр). Тир* II сăмахра <*р*> хупă сасă яланах çемçен илтĕнет: *тиртен çĕлетрĕм, тирне шăтарнă.*

Омографсен шутне хăш-пĕр тĕпчевçĕсем *Ялта* (хула ячĕ) тата *ялта* (вырăн падеж форми) сăмахсене кĕртеççĕ. Тĕрлĕрен çырнăран вĕсене омографсем тесе йышăнма май çук. Ударени тĕрлĕ сыпăксем çине ÿкнĕ пирки вĕсем омофонсем те пулаймаççĕ.

### ОМОНИМСЕН ПУЛĂВĔ

Омонимсем тĕрлĕ майпа пулаççĕ. Çав мелсенчен хăшĕ-пĕрисене пăхса тухар.

[13] Виноградов В. В. Асăннă ĕç. 297 с.

1. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен семантика пӗрлӗхӗ арканни, тӗрӗсрех каласан, нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахӑн уйрӑм пӗлтерӗшӗсем, тӗп пӗлтерӗшпе ҫыхӑнма пӑрахса, уйрӑм сӑмаха тухса кайни. Тепӗр чухне вӗсем тахҫан пӗрлӗхлӗ пулнине ҫав сӑмахсен этимологине тӗпчени ҫеҫ кӑтартса парать, сӑмахран: *пус* I *(пӳрнепе пус, урапа пус); пус* II *(выльӑх пус).* В. Г. Егоров хӑйӗн «Этимологи словарӗнче» вӗсем пӗр тӗпренех пулса кайнине кӑтартать. Вӑл: «Чӑвашсем выльӑх пуснӑ чух выльӑха ҫыхса пӑрахса урапа пусса тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа *пус* II пулса кайнӑ», — тесе ӗнентерме тӑрӑшать.

Чӑвашла *пус* I тата *пус* II вырӑнне ытти тӗрӗк чӗлхисенче *бос (бос, пас)* лексемӑпа усӑ кураҫҫӗ.

2. Сӑмахра сасӑсем фонетика ылмашӑвӗсене пула пӗр пек янӑрама пуҫлани. Ӗлӗкрех вӗсем, ытти тӗрӗк чӗлхисенчи пекех, тӗрлӗ янӑравлӑ сӑмахсем пулнӑ, танлаштарӑр:

| чӑвашла | тутарла | узбекла | якутла |
|---|---|---|---|
| *ҫӗр* I (япала ячӗ) | жир | ер | сир |
| *ҫӗр* II (хисеп ячӗ) | йез | юз | суус |
| *ҫӗр* III (глагол) | черу | чиримок | сытый |

3. Сӑмаха улӑштаракан (е сӑмах тӑвакан) аффикссем тӗрлӗ сӑмах тӗпӗсем ҫумне хушӑнни. Тӗслӗхсем: *юрлӑ* I *(пурнӑҫ) — юрлӑ* II *(ҫумӑр ҫурӗ). Юр* I тата *юр* II сӑмахсем аффикссем хушӑнман чухне те омонимсем пулаҫҫӗ.

Хушӑран сӑмаха улӑштаракан аффикссем, пӗр глагол тӗпӗ ҫумне хушӑнса, икӗ грамматика формине палӑртаҫҫӗ: *(эсир) ӗҫлетӗр* I — *(вӑл) ӗҫлетӗр* II; *(эсир) хӗнетӗр* I — *(вӑл) хӗнетӗр* II; *(эсир) ваклатӑр* I — *(вӑл) ваклатӑр* II.

4. Ют чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсем тӑван сӑмахсемпе пӗр евӗрлӗ илтӗнни. Тӗслӗхсем: *тир* I (япала ячӗ) — *тир* II (глагол); *салат* I (япала ячӗ) — *салат* II (глагол).

5. Литература сӑмахӗпе диалект сӑмахӗ пӗр пек янӑрани: *тукмак* I (кашкӑр) — *тукмак* II (кисӗп, чукмар); *мӑйӑх* I (сухал) — *мӑйӑх* II (михӗ); *ут* I (лаша, ӑйӑр) — *ут* II (ывӑт).

6. Конверси е субстантиваци мелӗ (сӑмахсен хӑйсен формине улӑштармасӑрах пӗр пуплев пайӗнчен тепӗр пуплев пайне куҫса кайни): *ватӑ* II (паллӑ ячӗ) — *ватӑ* I (япала ячӗ); *тарӑх* II (глагол) — *тарӑх* I (япала ячӗ).

Конверси мелӗпе пулнӑ омонимсене ҫак сӑмах майлашӑвӗсенче уҫӑмлӑнах курма пулать: *сӳре сӳре, пура пура, пӗве пӗве, хутӑр хутӑр* (танлаштарӑр, пушкӑртла *кара кара* «хура чернил»).

Н. К. Дмитриев пушкăрт чĕлхинчи нумай функциллĕ *карт* I «вата» — *карт* II «ватă çын» сăмахсене пăхса тухнă май малтанах *карт* паллă ячĕн пĕлтерĕшĕпе çӳренĕ тесе кăтартать.[14] Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем конверси мелĕпе пулнă омонимсене ĕлĕкрех пулнă тымар морфемăсен синкретизмĕпе çыхăнтараççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, ĕлĕкхи тĕрĕк чĕлхисенче ят сăмахсене глаголсенчен уйăрса илме йывăр пулнă.[15] Чĕлхе аталаннă май çав сăмахсем структура тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринчен хăйсен парадигмипе уйрăлса тăма пуçлаççĕ.

Чĕлхеçĕсем вĕрентнĕ тăрăх, конверси мелĕпе пулакан сăмахсем пуринчен ытла паллă ячĕнчен япала ятне, глаголтан япала ятне е паллă ятне, наречирен япала ятне, евĕрлев сăмахĕсенчен япала ятне, евĕрлев сăмахĕсенчен глагола куçса пулаççĕ.[16]

Конверси мелĕпе пулнă омонимсем пĕр-пĕринпе этимологи тата семантика тĕлĕшĕнчен çыхăннă:

Ватă çын иртет,
Сăх сăхса илет.
(П. Хусанкай).

*Ватăран* куличчен йытăран кул (Ват. сăмахĕ).

Иккĕмĕш тĕслĕхре *ватăран* паллă ячĕ япала ятне куçнă тесе ăнлантарма пулать.

*Хăйра, тура, ала* сăмахсем малтан глагол пĕлтерĕшпе, унтан тин япала ячĕн пĕлтерĕшĕпе çӳреме пуçланă теме май пур, мĕншĕн тесен ытти тĕрĕк чĕлхисенче япала ячĕ *-к* (*-г*) аффикс хушăннипе пулать: узб. *кайрак (хăйра),* азерб. *дараг (тура).* Чăваш чĕлхинче сăмах вĕçĕнчи *-к (-г)* сасăсем тухса ӳкнĕ.[17]

Тĕрĕк чĕлхисенче конверси питĕ тухăçлă мел шутланать. Ку пулăма авторсем асăрхамасăр иртсе кайма пултараймаççĕ пулин те, паян куна çитсе те конверси мелĕпе пулнă омонимсене йĕркеленĕ принцип тăрăх словарьсене кĕртни çук. Калăпăр, словарьсене тулли лексика омонимĕсемпе пĕрлех хушăран конверси йĕркипе пулнă лексикăпа грамматика омонимĕсене те кĕртеççĕ: *пăрça* I «горох» — *пăрça* II «блоха»; *шăрчăк* I «сверчок» — *шăрчăк* II «моток». Шел те ĕнтĕ, çак йĕркене çирĕп тытса пыраççĕ теме май çук. Нумай чух-

---

[14] Дмитриев Н. К. Грамматика башкирского языка. М.; Л., 1948. С. 81.

[15] Севортян Э. В. К проблеме частей речи в тюркских языках // Вопросы грамматического строя тюркских языков. М., 1955. С. 191—205.

[16] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи // Морфологи. Шупашкар, 1965. 29 с.; Юлдашев А. А. Принципы составления тюркско-русских словарей. М., 1972. С. 230—265.

[17] Павлов И. П. Асăннă ĕç. 28 с.

не конверси мелӗпе пулнӑ омонимсене пӗр словарь статйинех кӗртеҫҫӗ: *кӑвар* 1) горячие угли, жар; 2) перен. огонь, пламя, пыл (огненный, пламенный, пылкий).

Словарь статйисене ҫакӑн пек ҫырни конверсие йышӑнманни пулать.

### ОМОНИМСЕНЕ НУМАЙ ПӖЛТЕРӖШЛӖ СӐМАХСЕНЧЕН УЙӐРСА ИЛЕССИ

Омонимсемпе нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем хушшинчи уйрӑмлӑхсене тупма тӑрсан, йывӑрлӑхсем сиксе тухаҫҫӗ. Тепӗр чухне нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахӑн семантика пӗрлӗхӗ арканнипе пулнӑ омоним сӑмахсене пӗр-пӗринчен уйӑрса илме пачах та май ҫук. Тӗслӗхрен, «Чӑвашла-вырӑсла словарьте» (Шупашкар, 1961) *урапа* сӑмахӑн ҫакӑн пек пӗлтерӗшӗсене кӑтартнӑ: 1) телега; 2) воз; 3) колесо // колесный. 1956 ҫулта тухнӑ мари-вырӑс словарӗнче *орва* I «телега», «воз»; *орва* II «колесо» сӑмахсене омонимсем тесе иккӗшне те реестра кӑларнӑ. *Орва* сӑмах мари чӗлхине тӗрӗк чӗлхисенчен кӗнине шута илсен, чӑваш чӗлхинчи *урапа* тата мари чӗлхинчи *орва* пӗр сӑмахранах пулса кайнӑ тесе пӑхмалла. Ҫитменнине, вӗсен пӗлтерӗшӗсем те пӗр килсе тухаҫҫӗ. Апла пулсан, асӑннӑ словарьсенче пӗр ыйтӑвах икӗ тӗрлӗ татса панӑ. Чӑнах та, ку сӑмахсем омонимсем пулнипе пулманнине мӗнле пӗлмелле-ха? Пӗр енчен, *урапа, орва* сӑмахсем нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем пулни ҫинчен иккӗленмесӗрех калама пулать пек, мӗншӗн тесен словарьсенче ҫавнашкал сӑмахсене, тӗпрен илсен, омонимсем тесе кӑтартмаҫҫӗ: *кантӑк* 1) *чӳрече* «окно»; 2) *кӗленче* «стекло». Тепӗр енчен, *урапа* I (*орва* I) тата *урапа* II (*орва* II) сӑмахсем пӗлтерӗшӗсене улӑштарни те сисӗнет. Анчах та ҫак пӗлтерӗш улшӑнӑвӗн чикки пур чухне те палӑрмасть, ҫавӑнпа словарьсенче *урапа* тата *орва* сӑмахсене икӗ тӗрлӗ панӑ та ӗнтӗ.

Хӑш-пӗр тӗпчевҫӗсем омонимсене нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсенчен синонимсемпе усӑ курса уйӑрма сӗнеҫҫӗ: *вӑрӑ* I — *ҫаратакан, вӑрлакан, хурах;* *вӑрӑ* II — *вӑрлӑх, тӗшӗ.* Асӑннӑ тӗслӗхсенче *ҫаратакан* тата *тӗшӗ, вӑрлакан* тата *вӑрлӑх* пӗр-пӗриншӗн синонимсем пулмаҫҫӗ, ҫавӑнпа та *вӑрӑ* I, *вӑра* II сӑмахсене омонимсем тесе шутламалла.

Пур омонимсене те ку йӗркепе тӗрӗслесе пӑхма май ҫук. Сӑмахсен хӑш-пӗр пӗлтерӗшӗсен синонимӗсем пулма пултарнӑ пирки ҫӳлерех кӑтартнӑ меле пӑрахӑҫлама лекет. Акӑ, *сӑн* сӑмахах илер. Словарьте унӑн ҫак пӗлтерӗшӗсем пуррине кӑтартнӑ: 1) внешний вид, облик, наружность; 2) цвет;

3) изображение, портрет, фотографический снимок; 4) маска.

Халĕ *сăн* сăмахăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш пайсенче кăтартнă пĕлтерĕшĕсен синонимĕсене тупăпăр: 2) *сăн — тĕс* (*ăна хĕрлĕ сăн кĕчĕ — ăна хĕрлĕ тĕс кĕчĕ; кĕпен сăнĕ кайрĕ — кĕпен тĕсĕ кайрĕ*); 3) *сăн — портрет* (*сăн ӳкерттер — портрет ӳкерттер*).

Çĕнĕрен тупăннă *тĕс* тата *портрет* сăмахсем синонимсем мар, апла пулсан, *сăн* «цвет», *сăн* «изображение, портрет, фотографический снимок» сăмахсене омонимсем тесе шутламалла. Ку вара словарьте *сăн* нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах тесе кăтартнине хирĕçлет.

Омографсенче ку ыйтăва татса парасси чылай ансатланать: *тир* I (пăшал пемелли вырăн) — *тир* II (вырьăх-чĕрлĕх тирĕ). *Тир* I термин ют чĕлхерен кĕнĕ пирки кунта нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах çинчен калаçу та пулма пултараймасть.

Омонимсене нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен уйăрса илес тесен, сăмахсене истори тĕлĕшĕнчен тĕпчемелле, вĕсен этимологине çутатса памалла. Анчах та чылай чухне çавсене шута хупи те çителĕксĕр. Е. Ф. Васильева ку ыйту çине анлăрах пăхма сĕнет: «Омоним е полисеми мĕн иккенне пĕлес тесен, сăмаха тĕрлĕ енчен (морфологи, синтаксис, семантика енчен) тĕпчес пулать. Ку вăл сăмах мĕнле мелсемпе пулса кайнине, вăл предложенире ытти сăмахсемпе мĕнле çыхăнура тăма пултарнине шута илни пире омонимие полисемирен уйăрма пулăшать». [18]

## ОМОНИМСЕМПЕ ЧĔЛХЕРЕ УСĂ КУРНИ

Чăваш чĕлхинче омонимсем калаçу чĕлхинче те, çыру чĕлхинче те тĕл пулаççĕ. Вĕсем халăх сăмахлăхĕнче кăна мар, илемлĕ литературăра та анлă сарăлнă. Каларăшсемпе тупмалли (е сутмалли) юмахсенче омоним сăмахсемпе чăвашсем тахçанах усă курма тытăннă: *Пĕлсен те калăп, пĕлмесен те калăп. Хур шăмми тытакан хур пулман, тет. Ĕне çилли сет парать, этем çилли мĕн парать. Екки ярсан, Екки Элекçей те юмарт.*

Халăх, хăйĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен произведенийĕсенче омонимсемпе вырăнлă усă курса, калас шухăша çивĕчлетнĕ тата тарăнлатнă. Меллĕ усă курнă омонимсем çынсен тавра курăмне, шухăшлавне анлăлатма пулăшнă.

Илемлĕ произведенисенче омонимсем, метафорăпа метоними, гиперболăпа танлаштару пекех, чĕлхене сăнарлăх кӳреççĕ:

---

[18] Васильева Е. Ф. Чăваш чĕлхинчи омонимсем çинчен. 105 с.

Сана татах та шавлама йыш кирлĕ,
Эппин, вăрман, çынна итле те *туй*:
Юман урайсене авса кĕр кĕрлĕ
Шăв-шавлă вăтăр каччăн вăтăр *туй.*

(Я. Ухсай).

Мĕнле-ши эпĕ? Пур-ши *халĕ*
Йĕри-тавра ман пек турат?
Е çыннăн, çитĕнсен ăс-*халĕ,*
Ытти хăех тип шар курать.

(П. Хусанкай).

Поэтсем, омоним сăмахсемпе усă курса, каламбурсем (сăмах вăййисем) тăваççĕ, çав каламбурсенче чылай чухне пайăр ят пайăр мар ятпа рифмăланать:

Тыткăнларĕ Тукасри
*Укçине,*
Хамах куртăм хутаçри
*Укçине.*
(Т. Иванов-Таçук).
Комсомолка *Урине*
Тăрăст! тапрĕ *урине.*
(Т. Иванов-Таçук).
Хĕвел хĕртет. Пахчаçă *Уçăп*
Пахча та вăрлăх тĕрĕслет.
«Тепре, тен, выставка та *уçăп*» —
Тесе кăçал ĕмĕтленет.
(П. Хусанкай).

Поэзире сайра хутра янравлăха ўстерме тата калас шухăша кулăшларах тума пайăр ятсене сăмах майлашăвĕсемпе хирĕçлетеççĕ:

— Ну-ка, — терĕ, — ăнлантар, *Антун,*
Мĕншĕн панăччĕ сана çакна?
Мĕншĕн тетĕп-çке? Кала, *ан тун.*

(Н. Евстафьев).

Çыру чĕлхинче тĕрлĕ çырнине тата илтĕннине шута илсен, кунашкал пулăмсене омофонсем тесе шутламалла.

Çынсем ахаль калаçурах тепĕр чухне омоним сăмахсемпе усă кураççĕ. *А х ă р кун килсен, а х ă р, вара. У р а м пылчăк пирки у р а м вараланчĕ. П ă р çинче кĕпе п ă р. Кăмакара п ă р ç а пиçет, урайĕнче п ă р ç а сикет. С а р ă хĕр с а р ă çакнă. Ç и р ĕ м улма ç и р ĕ м. Ç у каçиччен ç у хатĕрле. Т у й яшкине т у й хуранпа пĕçернĕ. Эсĕ т у й*

*килнине туй* (Н. Р. Романов. Записки словарного характера. Чăваш наука тĕпчев институчĕн архивĕ, I уйр., 354 упр. ед., 34 с.).

## ПАРОНИМСЕМ

Чĕлхе наукинче ку ыйтăва тарăн тĕпченĕ тесе калама май çук-ха. Лингвистсем ăна тĕрлĕрен çутатаççĕ. Паронимсем чăваш чĕлхинче мĕнле вырăн йышăннине уçса паракан ĕçсем пачах çук. Ку çеç-и-ха, ытти тĕрĕк чĕлхисене тĕпчекенсем те паронимии пирки сахал çырнă,[19] çавăнпа паронимсем çинчен пирĕн ирĕксĕрех тăван мар чĕлхесене тĕпчекенсем мĕн каланине шута илме лекет. Паха шухăшсем уйрăмах Н. П. Колесников, О. В. Вишнякова, И. И. Фомина, Н. М. Шанский ĕçĕсенче пур.[20]

Н. И. Кузнецова «О паронимии» текен статйинче паронимсем мĕнле пулса кайнине палăртать: сăмахсем фонетика (сасăсем) тĕлĕшĕнчен пĕр евĕрлĕрех илтĕнни, этимологи тĕлĕшĕнчен пĕр пек килсе тухни, вĕсен семантика пĕр пеклĕхĕ пулма пултарни тата çав сăмахсене калаçура пăтраштарма май пурри.[21] Çак факторсене кура паронимсене автор виçĕ ушкăна пайлать: синонимлă паронимсем, контактлă паронимсем тата дистанциллĕ паронимсем.

Н. И. Кузнецова çырнă тăрăх, паронимивăл — синонимипе омонимие çывăх тăракан чĕлхе пулăмĕ. Паронимсем, кун-сăр пуçне, вариантлă сăмахсемпе пĕр евĕрлĕ.

Мĕнле сăмахсем паронимсем пулаççĕ-ха? Паронимсем тесе пĕр сăмах тымарĕнченех пулнă, пĕр евĕрлĕрех илтĕнекен, пĕр пуплев пайнех кĕрекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене калаççĕ. Вырăс чĕлхинче паронимсен ретĕнче çакăн пек сăмахсене пăхаççĕ: *дипломат — дипломант, земной — земляной, однорукий — одноручный, клев — клюв* т. ыт. те.

Чăваш чĕлхинче пур-ши кун пек сăмахсем? Вырăс чĕлхипе танлаштарсан, вĕсен мĕнле уйрăмлăхсем пур?

Пароним пулакан сăмахсен тĕп палли вăл — вĕсем пĕр сăмах тымарĕнченех пулни: *сăмса — сăмсах, тăварак — тăварлак* т. ыт. те.

---

[19] Магрупов Ахрар. Паронимлар лугати. Ташкент, 1974.

[20] Колесников Н. П. Паронимия в современном русском языке // Русский язык в школе. 1961. № 3. С. 52—54; Вишнякова О. В. Паронимы в русском языке. М., 1974. С. 63; Шанский Н. М. Лексикология современного русского языка. М., 1972. С. 64.

[21] Кузнецова И. Н. О паронимии // Вестн. Моск. ун-та. Филология, 1976. № 1. С. 33—44.

Тепĕр чухне сăмахсем паронимлă пулнине вĕсен этимологине тĕпчемесĕр те татса параймастпăр. Тĕслĕхрен, *пĕк* тата *пÿк* сăмахсем хальхи чĕлхере пачах уйрăм пĕлтерĕшлĕ сăмахсем шутланаççĕ. Вĕсен сасă тытăмĕ те пĕр мар. Анчах та истори тĕлĕшĕнчен вĕсем пĕр тымарлă сăмахсем шутланаççĕ: * *çаран — çерем, çÿпĕ — чÿпĕк — чĕлпĕк, яшă — ешĕл* т. ыт. те. Тепĕр чухне çакăн евĕрлĕ сăмахсем хăйсен тулаш формине пачах улăштарма пултараççĕ, анчах пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсем вĕсен пур чухне те палăрса çитеймеççĕ: *çемçе — йăмшак.* Çавăнпа та кун пек сăмахсене синонимсем тесе пăхмалла.

Паронимсене вариантлă сăмахсемпе пăтраштарма юрамасть. Вариантлă сăмахсенче фонетика улшăнăвĕсем сăмахсен семантикине пачах улăштармаççĕ е стиль уйрăмлăхĕсене кăна палăртаççĕ. Танлаштарăр:

| | вариантлă сăмахсем | паронимсем |
|---|---|---|
| м//н : | пĕрме — пĕрне | чĕрме — чĕрне |
| в//м : | патвар — патмар | сывлав — сывлам |
| х : | пăчă — пăчăх | сăмса — сăмсах |
| к : | кумаля — кумаляк | хыса — хысак |
| а//е : | кăнчала — кĕнчеле | çаран — çерем |
| а//у : | лапас — лупас | |

Пĕр тĕпрен пулса кайнă пур сăмах та паронимлă пулаймасть. Паронимсенче ударени пĕр пек сыпăксем çине ÿкмелле тата сыпăксен шучĕ пĕр пек пулмалла: *сыпă — сыпăк* (паронимсем); *çаврăм — çаврăнăш; хыткан — хытакан; çаратулăх — çарату* (пĕр тĕпрен пулнă, анчах вĕсем паронимсем мар).

Паронимсен пĕлтерĕшĕ чылай чухне пачах расна пулсан та, вĕсене пĕр-пĕринпе пăтраштарма пулать:

Ыткăнса пырса
Вăйлă *çарана*
Хăвindependentпăр çеç
Çÿç касуçă пек.
(В. Митта).

Ту хĕрринчи лаптăкра хресченсем *çерем* уçаççĕ (М. Илпек). Пăхса тухнă тĕслĕхсенче *çаран* «çулмалли улăх» пĕлтерĕшпе, *çерем* «курăкланнă çĕр» пĕлтерĕшпе çÿреççĕ. Тепĕр тĕслĕх: *Кунта, ĕлĕкхи* *ç а р а н р а, кăçал сахăр кăшманĕ*

---

* Ку ыйту чĕлхе наукинче халлĕхе тавлашуллă.

*акнă иккен* (В. Сатай). Юлашки предложенире вара *çаран* сăмахпа тĕрĕс усă курман, вăл лексема вырăнĕнче *çерем* сăмах килĕшӳллĕрех.

Паронимсем сăмах тĕпĕ çумне тĕрлĕрен е пĕр евĕрлĕрех янăракан аффикссем хушăннипе те пулаççĕ. Акă, *ăслай — ăстай, пăлхану — пăлхату, аркану — аркату, тăварак — тăварлак, хирĕçӳ — хирĕçлӳ* йышши сăмахсене омонимсем е омофонсем тесе йышăнма май килмест.

Паронимсен паллисем сăмахăн тытăмĕнче те, пĕлтерĕш уйрăмлăхĕнче те пур, мĕншĕн тесен тепĕр чухне нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн кашни пĕлтерĕшех тепĕр сăмахăн пĕтĕм пĕлтерĕшĕпе паронимлă пулать. Хăш чух вĕсен уйрăм пĕлтерĕшĕсем кăна паронимлă. Çавăнпа пароним пĕлтерĕшлĕ тесе эпир пур чухне те уйрăм сăмахсене хăйсене мар, çав сăмахсен контекстран килекен пĕлтерĕшĕсене калатпăр. Тĕслĕх вырăнне *ас* тата *ăс* сăмахсене илсе пăхар. Вĕсем пĕр тĕпренех пулса кайнă, анчах пĕлтерĕшĕсем пĕр килмеççĕ:

| *ас* | *ăс* |
|---|---|
| асра тыт | ăсра тыт |
| асра та çук | ăсра та çук |
| ас пĕтнĕ (?) | ăс пĕтнĕ |
| ас ту | ăс ту (?) |
| аса илтер | ăса илтер (?) |
| сывă ас (?) | сывă ăс |
| ас пух (?) | ăс пух |
| аса вĕрен (?) | ăса вĕрен |
| ас-тăн (?) | ăс-тăн |
| ас-хал (?) | ăс-хал |
| ас-хакăл (?) | ăс-хакăл |
| асра шутла | ăсра шутла |

Вырăс чĕлхинче паронимсем ытларах паллă ячĕсенчен пулаççĕ пулсан, чăваш чĕлхинче — япала ячĕсенчен тата глаголсенчен.

Нумай чухне пароним пĕлтерĕшлĕ сăмахсем мăшăрăн кăна çӳреççĕ. Тепĕр чухне паронимсен ушкăнĕ виçĕ е тăватă сăмах пĕрлешнипе пулать: *ăслай — ăстай — ăстаç — ăсчах, пăянам — пăяхам — пăятам.*

*Ăн* тата *тăн* сăмах тĕпĕсенчен çакăн пек сăмах мăшăрĕсене (паронимсем) тума пулать: *ăнлав — тăнлав, ăнла — тăнла, ăнлă — тăнлă, ăнсăр — тăнсăр, ăнсăрлан — тăнсăрлан, ăнсăрлат — тăнсăрлат, ăнсăрлăх — тăнсăрлăх.*

Анчах та, *ăнкар — тăнкар* (?), *ăнкарт — тăнкарт* (?), *ăнкару — тăнкару* (?), *ăнкарусăр — тăнкарусăр* (?) йышши паронимсемпе чĕлхере усă курмаççĕ. *

Паронимсем чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчен те кĕрсе пыраççĕ: *абонент — абонемент, адресат — адресант, дипломат — дипломант, квадрат — квадрант* т. ыт. те. Асăннă паронимсем хăйсем те вырăс чĕлхине ют чĕлхесенчен кĕнĕ.

Маларах эпир паронимсене вариантлă сăмахсемпе пăтраштарма кирлĕ маррине ăнлантартăмăр ĕнтĕ. Кунсăр пуçне сăмахсен этимологи варианчĕсем чĕлхе аталаннă май пĕлтерĕшĕсене улăштарнипе улăштарманнине пăхса тухрăмăр. Юлашкинчен, акă, мĕн хушса калама пулать. Вариантлă сăмахсем нихăш контекстра та хăйсен пĕлтерĕшне улăштармаççĕ. Вĕсемпе яланах пĕр-пĕрин вырăнне усă курма пулать пулсан, паронимсен пĕлтерĕшĕсем пĕр пек сăмах майлашăвĕсенчех расна. Тĕслĕхрен, *Ерипе (ерипен) каякан мала тухнă, хытă (хыт) каякан кая юлнă*, ваттисен сăмахĕсенче *ерипе — ерипен* тата *хытă — хыт* лексемăсем — вариантлă сăмахсем. Паронимсен шутне çак сăмахсене кĕртмелле: *выçă* (выçăхнă) çын; *выçкăн* (çăткăн, сăхă) çын.

## ПАРОНИМСЕМ ТАТА ОМОНИМСЕМ

Омонимсем пĕр сăмах тĕпĕнченех нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн семантика пĕрлĕхĕ арканнине пула пулса кайма пултараççĕ. Анчах та, паронимсемпе танлаштарсан, вĕсем чылай чухне пĕр пек илтĕнеççĕ тата çырăнаççĕ. Паронимсем пĕр евĕрлĕрех кăна илтĕнеççĕ: *хыр* I (япала ячĕ) — *хыр* II (глагол) — омонимсем; *тăпра // тăпрас* — паронимсем.

## ПАРОНИМСЕМ ТАТА СИНОНИМСЕМ

Вĕсен çакăн пек уйрăмлăхсем пур:

а) паронимсем çинчен калаçнă чух ялан тенĕ пекех икĕ сăмаха танлаштарма тивет, синоним ретĕнче икĕ е темиçе сăмах пулать;

ă) пароним сăмахсем тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ е çывăх пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа та вĕсемпе пĕр-пĕрин вырăнне ялан усă курма май çук, синонимсене час-часах пĕр-пĕринпе ылмаштарма пулать;

б) паронимсем — пĕр тĕпрен пулнă сăмахсем, синоним ретне чылай чухне тĕрлĕ тымартан пулнă лексемăсем кĕреççĕ;

* Ыйту паллиллĕ (?) вариантсем хушăран диалектсенче кăна тĕл пулаççĕ.

в) синонимсен ретĕнче ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем те пулма пултараççĕ (*декада — вунă кунлăх*), пароним пулакан сăмахсем иккĕшĕ те — е тăван чĕлхе сăмахĕсем, е ют чĕлхерен кĕнĕ лексемăсем;

г) паронимсем, синонимсем пекех, пайăр ятсенчен пулмаççĕ.

### ПАРОНИМСЕМ ТАТА АНТОНИМСЕМ

Паронимсен пĕлтерĕшĕнче пысăк уйрăмлăх çукпа пĕрех, антонимсем вара хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ. Кунашкал хире-хирĕçлĕх пĕр тĕпрен пулнă антонимсен те пур: *тăнлă — тăнсăр, илемлĕ — илемсĕр.* Пароним сăмахсен пĕлтерĕшĕсем расна пулни куç кĕрет курăнмасть, вăл хирĕçӳлĕхе хушăран контекст кăна палăртать.

### ПАРОНИМСЕМ ТАТА ПАРОНИМ ЕВĔРЛĔ САМАХСЕМ (ПАРОНИМИ ТАТА ПАРОНОМАЗИ)

Пароним евĕрлĕ сăмахсем тесе пĕр сăмах тымарĕнчен е тĕпĕнчен пулман, пĕр евĕрлĕрех илтĕнекен, пĕр пуплев пайнех кĕрекен тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене калаççĕ: *вучах // пучах, юрату // ырату, пăрăç // кăрăç.*

Пароним евĕрлĕ сăмахсене омонимсемпе пăтраштарма юрамасть: пароним евĕрлĕ сăмахсем пĕр евĕрлĕрех янăраççĕ, омонимсем сасă тĕлĕшĕнчен яланах пĕр пек.

Парономази, тавтологипе, парадокспа, аллитераципеле, антитезăпа, сăмах вăййипе (каламбурпа) пĕр ретре тăрса, пуплев фигури пулать. Парономази сăмах вăййипе çывăх тăрать, унăн уйрăлми пайĕ шутланать, сăмахран:

Тĕрлĕ *фюрер,*
Сирĕн *хӳрĕр*
Касăлчĕ часах.
(С. Шавлы).
Эх, *юрату, юрату,*
Çамрăк çыншăн *ырату.*
(Уйăп Мишши).

*Фюрер // хӳрĕр* сăмахсемпе автор кунта сăмах вăййи тăвас тĕллевпе усă курнă, *юрату // ырату* — пароним евĕрлĕ сăмахсем.

Парономази чĕлхере çирĕп закон тăрăх аталанса пыракан пулăм мар, вăл пуплев фигури. Поэзире е ваттисен сăмахĕсенче унпа тулли рифма е сăмах вăййи тăвас тĕллевпе усă кураççĕ.

## ПАРОНИМИ ТАТА ПОЛИСЕМИ

Ку таранччен эпир паронимсене тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ, ҫав вӑхӑтрах пӗр пекрех илтӗнекен сӑмахсем тесе палӑртрӑмӑр. Анчах та, паронимсене сӑмахӑн нумай пӗлтерӗшлӗхӗпе ҫыхӑнтарса тӗпчесен, ку шухӑш пур чухне те тӗрӗс килсе тухманнине куратпӑр. Тӗслӗхшӗн *сӑмса // сӑмсах* паронимсене илсе пӑхар. *Сӑмса* сӑмах этемӗн, выльӑх-чӗрлӗхӗн сывласа шӑршӑ пӗлмелли, кайӑк-кӗшӗксен таккаса е чавса апат тупмалли тата апат ҫимелли органне пӗлтерет: *Чӗрнипе те хыттӑн чӗрет, с ӑ м с и п е те таккать* (К. Турхан). *Сӑмсах* тени пӗр-пӗр пысӑк талккӑшӑн ӑҫта та пулин шӗвӗрӗлсе тухакан пайне палӑртать: *Вӑрман с ӑ м с а х ӗ н ч е утӑ купи курнӑччӗ* (М. Кипек). *Ҫыран с ӑ м с а х ӗ н ч е юр тӑман пирки кукшаланса юлнӑ ҫӗр, раштав сиввине чӑтаймасӑр, ҫурӑла-ҫурӑла кайнӑ* (А. Артемьев).

Илнӗ тӗслӗхсенче *сӑмса // сӑмсах* паронимсем тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем шутланаҫҫӗ. Ҫынсен, выльӑх-чӗрлӗхсен, кайӑк-кӗшӗксен, хурт-кӑпшанкӑсен *сӑмси* ҫинчен каласнӑ чух эпир нихӑҫан та *сӑмсах* сӑмахпа усӑ курмастпӑр. Анчах та, *сӑмса* сӑмах нумай пӗлтерӗшлӗ пулма пултарнине те манма юрамасть. *Сӑмса* чӗрчунсен, ҫынсен кӗлетке пайне кӑтартнисӗр пусне (ку унӑн пӗрремӗш, тӗп, пӗлтерӗшӗ), чӗрӗ мар япаласен шӗвӗр пайне те кӑтартма пултарать (ку унӑн иккӗмӗш, куҫӑмлӑ, пӗлтерӗшӗ): *Ака-суха — ал ҫемми, ҫӑкӑр с ӑ м с и — шӑл ҫемми* (Ват. сӑмахӗ).

Паронимсем ҫинчен каласнӑ чух сӑмахсен тӗп пӗлтерӗшӗсене кӑна шута илмелле мар. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмах пӗр тӗпренех пулнӑ тепӗр сӑмахпа пӗлтерӗш уйрӑмлӑхӗсене кура паронимлӑ та, синонимлӑ та пулма пултарать. Пӗлтерӗшӗсем пӗр пек е пӗр евӗрлӗрех килсе тухни сӑмахсемпе хушӑран пӗр-пӗрин вырӑнне усӑ курма май парать: *ӑнран кай — тӑнран кай, ӑнсӑр пул — тӑнсӑр пул; ту хысинче — ту хысакӗнче* т. ыт. те.

Сӑмахсен тӗп пӗлтерӗшӗсем пӗр пек килсе тухаҫҫӗ пулсан, вӗсене пӗр тӗпрен пулнӑ синонимсем тесе палӑртни тӗрӗсрех пулать. Чӑваш чӗлхинче ун пек сӑмахсем нумай мар, тӗслӗхрен: *ҫӑкасӑр — ҫӑкалӑх, юмансар — юманлӑх, хурӑнсар — хурӑнлӑх.*

Пароним пулакан сӑмахсенчен пӗрин пӗлтерӗшӗ теприн куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗпе пӗр килсе тухсан е вӗсен куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем кӑна тӳр килсе тухаҫҫӗ пулсан, ун пек чӗлхе единицисене синоним пӗлтерӗшлӗ паронимсем теме май пур.

Омонимипе синонимн хушшинче тăрса, паронимн вĕсемпе нихăшĕпе те пăтрашăнса каймасть. Çавăнпа та ăна хăйне евĕр пулăм тесе палăртатпăр, чĕлхе вĕрентĕвĕн объекчĕ пулма тивĕçлĕ тесе шутлатпăр.

## ВАРИАНТЛĂ СĂМАХСЕМ

Вариантлă сăмахсене пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринчен уйрăлса тăман чĕлхе единицисем тени çителĕксĕр, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр-пĕринчен фонетика е морфологи, акцентологи е орфоэпи тĕлĕшĕнчен расна тăраççĕ, сăмахсен стиль е диалект уйрăмлăхĕсене те палăртма пултараççĕ. Урăхла каласан, вариантлă сăмахсен тулаш форми улшăнни сăмахăн шалаш танлăхне (тождествине) пăсмасть. Çавна кура ĕнтĕ, вĕсене сăмахăн варианчĕ тесе пăхаççĕ те. Сăмахăн хăш вариантне йышăнасси литература чĕлхине нормăлассипе çыхăннă. Қалăпăр, литература чĕлхинче пĕр сăмахах икĕ (е виçĕ) вариантпа çӳреме пултарать: *пурăнăç — пурнăç, вĕлтрен — вĕлтĕрен, пăрахут — пароход, закон — саккун.* Литература чĕлхинче пĕр тан правапа çӳрекен единицăсене сăмахсен орфографи варианчĕсем теме пулать. Вĕсен шутнех акцентологи варианчĕсене те кĕртмелле, ун пек чухне ударени тĕрлĕ сыпăксем çине ӳкни лексемăн пĕлтерĕш сĕмне улăштармасть: *айăк — аяк, хăяккăн — айăккăн, тайăн — таян, чăкăрташ — чăкăртăш.*

Нумай сăмахсен варианчĕсем литература чĕлхинче тĕл пулмаççĕ, вĕсене вырăнти калаçусенче (диалектсенче) кăна илтме пулать. Вырăнти калаçусенче çеç усă куракан вариантсене с ă м а х с е н д и а л е к т в а р и а н ч ĕ с е м теççĕ. Вĕсем чĕлхере питех те нумай. Словарьсенче ун пек сăмахсене диал. тесе палăртса хăвараççĕ. Акă, 1961 çулта М. Я. Сироткин редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словарьте» çакăн пек çырнине тупма пулать: *авăрла* II диал. см. *арла*; *авăт* II диал. см. *алт*; *ала* II диал. см. *алла* т. ыт. те.

Нумай-нумай сăмахăн варианчĕсене эпир хурăнташ чĕлхесенче тупма пултаратпăр. Вăхăт иртнĕ май хурăнташ чĕлхесенче сăмахсем хăйсен тулаш формине чылай улăштарнă, анчах хăш-пĕр пĕлтерĕшĕ пĕрех юлнă пулсан, вĕсене эпир вариантлă тесе шутлатпăр. Хурăнташ чĕлхесенче тĕл пулакан сăмахсен варианчĕсем В. Г. Егоровăн «Этимологи словарĕнче» уçăмлă курăнаççĕ: чăвашла *кăкăр* — узбекла *кукрак,* казахла *кокрек,* хакасла *когис,* тутарла *кӳкрек.*

Тăван чĕлхесенче тĕл пулакан вариантсене сăмахăн этимологи варианчĕсем теме пулать. Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхе-

не кĕнĕ сăмахсен те фонетика варианчĕсем пулаççĕ. Ун пек вариантсене эпир араб, перс, монгол, мари, вырăс чĕлхисенче тупма пултаратпăр, сăмахран: чăвашла *хатĕр* — перс чĕлхинче *хазер,* чăвашла *вăй* — мари чĕлхинче *вий,* чăвашла *шкул* — вырăсла *школа* т. ыт. те. Çавăнпа пĕрлех тĕпчевçĕсем чĕлхере сăмахсен структурăллă варианчĕсем пуррине палăртаççĕ. А. И. Смирницкий сăмахсен çакăн пек структурăллă варианчĕсене кăтартать: фономорфологи варианчĕсем тата лексикăпа семантика варианчĕсем. Фономорфологи варианчĕсене вăл татах çакăн пек пĕчĕкрех ушкăнсем çине пайлать: 1) фонетика, е сасă, варианчĕсем; 2) морфологи варианчĕсем, вĕсем хăйсем тепĕр икĕ пая пайланаççĕ: а) грамматика варианчĕсем; ă) лексикăпа морфологи варианчĕсем. [22]

Малтанах сăмахсен фонетика варианчĕсем çинче чарăнса тăрăпăр. С ă м а х с е н ф о н е т и к а в а р и а н ч ĕ с е м тесе эпир сасă тытăмĕ тĕлĕшĕнчен уйрăлса тăракан чĕлхе единицисене калатпăр. Паллах, стиль уйрăмлăхĕсен сĕмĕсем кунта палăрмасăр юлма пултараймаççĕ.

Чăваш чĕлхинче (асăрхăр: литература чĕлхинче кăна мар) вариантлă сăмахсен фонетика тĕлĕшĕнчен çакăн пек уйрăмлăхсем пуррине палăртма пулать:

1) Уçă сасăсем тухса ўкни е кĕрсе ларни: *эпĕ — эп, кĕтўçĕ — кĕтўç, вутă — вут, лапсака — лапсак, яштака — яштак, пурăнăç — пурнăç.*

2) Сăмах вĕçĕнчи сыпăк тухса ўкни: *арпашăн — арпаш, именчĕклĕ — именчĕк, вуннă — вунă — вун, виççĕ — виçĕ — виç.*

3) Уçă сасăсен ылмашăвĕ:

а // ă *(араслан — арăслан, валашка — вăлашка);*
а // и *(карташ — картиш);*
а // е *(кăнчала — кĕнчеле, лапчашка — лепчешке);*
а // у *(лапас — лупас, калăм — хулăм);*
ă // ĕ *(кăнчала — кĕнчеле, çухăр — çихĕр);*
ă // у *(састăп — саступ);*
ĕ // и *(кĕшĕкле — кишĕкле, кĕпек — кипек);*
ĕ // е *(милĕк — милке)* т. ыт. те.

4) Хупă сасăсен ылмашăвĕ:

м // н *(кăмтар — кăнтар, пĕрме — пĕрне);*
к // х *(кĕвелĕк — кĕвелĕх, тăкçа — тăхçа);*

---

[22] Смирницкий А. И. К вопросу о слове // Труды Института языкознания АН СССР. М., 1954. Т. IV. С. 25.

ç // ч (*авкăç — авкăч, тыткăç — тыткăч*);
л // н (*килеми — кинемей*) т. ыт. те.

5) Хупă сасăсем тухса ӳкни е кĕрсе ларни:
м (*лапа — лапам, пĕçек — пĕçмек*);
р (*витле — виртле, шаршан — шашан*);
н (*ерипе — ерипен, хутра-ситре — хутран-ситрен*);
х (*пăчă — пăчăх, тумха — тумхах*);
т (*катер — катерт, вĕçер — вĕçерт*);
к (*вирĕн — виркĕн, кăмпăлчă — кăмпăлчăк, пĕрчĕ — пĕрчĕк*).

6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмах пĕр вăхăтрах вырăсла тата чăвашла янăрани: *саккун — закон, налук — налог, вакун — вагон, кĕпĕрнаттăр — губернатор, пăрахут — пароход* т. ыт. те.

Чăваш литература чĕлхинче хăраххăн юлнă (вариантсăр) аффикс та пур. Ку вăл йĕрке хисепĕн аффиксе *-мĕш* (*вуннăмĕш, иккĕмĕш, саккăрмĕш, çĕр утмăлмĕш* т. ыт. те).

Сăмахсен морфологи варианчĕсене тĕпчесси — кăткăс ыйту. Пĕр енчен, с ă м а х с е н  м о р ф о л о г и  в а р и а н ч ĕ с е м тесе, грамматика форми урăх пулин те, семантики улшăнман лексемăсене калаççĕ. Сăмахран, çак тĕслĕхсене танлаштарса пăхар: *тутăрпа пĕркен — тутăр пĕркен, вăл кун — вăл кунне, юлташ валли — юлташа валли, черете тăр — черет тăр, ир каяççĕ — ирпе каяççĕ.*

Тепĕр енчен, пĕр сăмах тĕпĕнченех тĕрлĕрен сăмах тăвакан аффикссем хушăнса пулнă чĕлхе единицисене с ă м а х с е н  м о р ф о л о г и  в а р и а н ч ĕ с е м теме май пур.

Юлашки вăхăтра чĕлхе наукинче сăмахсен морфологи варианчĕсем пирки хирĕçле шухăшсем çуралчĕç. Тĕслĕхрен, Ф. П. Филин, К. С. Горбачевич, Р. П. Рогожникова пĕр тĕпрен пулнă иккĕмĕшле сăмахсене вариантлă тесе пăхмаççĕ.[23] Акă, *çăкалăх* тата *çăкасар* сăмахсене илсе пăхар-ха. Пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен иккĕшĕ те пĕр ăнлавах палăртаççĕ. Пуласса вĕсем пĕр сăмах тĕпĕнченех *-лăх* тата *-сар* аффикссем хушăннипе пулнă. Асăннă аффикссенчен иккĕмĕшĕ тухăçлă маррисен шутне кĕрет. Танлаштарăр: чăв. *пĕрлĕх* — узб. *бирлик;* чăв. *вăрманлăх, йывăçлăх* — узб. *урманлик;* чăв. *шĕшкĕлĕх* — тур. *tindiklik;* чăв. *хăйăрлăх* — тур. *kumluk;* чăв.

---

[23] Филин Ф. П. Асăннă ĕç. 128—133 с.; Горбачевич К. С. Вариантность слова как лексико-грамматический феномен // Вопр. языкознания. 1975. № 1. С. 55—64; Рогожникова Р. П. Варианты слов в русском языке. М., 1966. С. 13.

*хурӑнсар, юмансар, ҫӑкасар* — узб. *олмазор* «улма сачӗ», *олчазор* «чие сачӗ», *экинзор* «акнӑ уй, хир».

Сӑмахсен морфологи варианчӗсене тӗпченӗ чух синоним ыйтӑвӗ тухса тӑрать. Чӑнах та, *ҫӑкалӑх, ҫӑкасар* йышши сӑмахсене мӗнле пӑхмалла-ха? Синонимсем-и вӗсем е сӑмахсен морфологи варианчӗсем? Пӗр сӑмах-и вӗсем е икӗ сӑмах? Ҫак ыйтусене татса панӑ чухне мӗнле паллӑсене тӗпе хумалла? Пирӗн шутпа, вариантлӑ сӑмахсен тӗп палли вӑл — пӗлтерӗш пӗрлӗхӗ те, тӗрлӗрен янӑравлӑхӗ те. Ҫавсене кура эпир сӑмахсен вариантлӑхӗ ҫинчен калаҫатпӑр. *Кӑнчала // кӗнчеле* фонетика тӗлӗшӗнчен икӗ сӑмах пулакан единицӑсем, семантика енчен вӗсем пӗр пек пулаҫҫӗ. *Ҫӑкалӑх // ҫӑкасар* — морфологи тӗлӗшӗнчен икӗ сӑмах пулаҫҫӗ, пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен пӗр пекленеҫҫӗ. Апла пулсан, *юманлӑх // юмансар, хурӑнлӑх // хурӑнсар* йышши сӑмахсене эпир пӗр тӗпрен пулнӑ синонимсем тесе пӑхма пултаратпӑр. *Ҫӑкалӑх // ҫӑкасар* евӗр сӑмахсене икӗ сӑмах тесе шутласан, пирӗн вӗсене синонимсен словарьне кӗртмелле, енчен те вӗсем пӗр сӑмах шайӗнчех юлаҫҫӗ пулсан — вариантлӑ сӑмахсен словарӗнче вырӑн памалла.

Тӗрлӗрен сӑмах тӑвакан аффикссем хушӑнса пулнӑ сӑмахсене икӗ уйрӑм сӑмах тесех пӑхмалла. *Ҫӑкасар // ҫӑкалӑх* тенӗ чухне сӑмах тӗпӗ улшӑнмасӑрах юлать (*-лӑх* аффикс *-сар* аффиксӑн варианчӗ пулмасть). Апла пулсан, *ҫӑкасар* тата *ҫӑкалӑх* — хӑйне уйрӑм икӗ сӑмах.

Фонетикӑпа морфологи варианчӗсемсӗр пуҫне, сӑмахсен лексикӑпа семантика варианчӗсем пур. С ӑ м а х с е н  с е м а н т и к ӑ п а  л е к с и к а  в а р и а н ч ӗ с е м тесе сӑмахӑн пӗлтерӗшӗсене тата омонимсене калаҫҫӗ.

## ВАРИАНТЛӐ СӐМАХСЕНЕ ФОНЕТИКА, ОРФОЭПИ, ОРФОГРАФИ ЕНЧЕН НОРМӐЛАССИ

Л и т е р а т у р а  ч ӗ л х и  тата л и т е р а т у р а  н о р м и  текен ӑнлавсем пӗр-пӗринпе питӗ тачӑ ҫыхӑннӑ. Л и т е р а т у р а  ч ӗ л х и н  н о р м и  вӑл — пӗр чӗлхепе калаҫакан ҫынсен коллективӗ пӗр-пӗр тапхӑрта усӑ куракан е усӑ курма йышӑннӑ чӗлхе мелӗсем.[24] Литература чӗлхин нормисем аталанса пыраҫҫӗ, норма вӑл яланлӑхах хытса ларнӑ япала мар. Чӗлхе аталаннӑ май чӗлхе нормисем те аталанса улшӑнсах пыраҫҫӗ. Литература чӗлхин нормисене тытса пыни

[24] Петров Н. П. Редактортан // Чӗлхе культурин ыйтӑвӗсем. Шупашкар, 1972. 2-мӗш кӗн. 3 с.

çав чĕлхепе калаçакансене тата çыракансене пĕр-пĕрне ăнланма пулăшать, çырулăха çăмăллатать. Нормăсене пăсни çынсене пĕр-пĕрне ăнланма йывăрлатать.

Кирек мĕнле чĕлхере те сăмахсене каласси е çырасси вылянма пултарать. Ку вылянура вариантлă сăмахсем çураласçĕ те ĕнтĕ.

Чĕлхеçĕсемпе журналистсен, писательсемпе поэтсен тивĕçĕ вăл чĕлхе аталанăвĕн законĕсене тĕплĕн тишкерсе калаçу тата çыру чĕлхинчи лексикăпа фонетика, орфографипе орфоэпи тата грамматика варианчĕсене кирлĕ пек суйласа илсе çирĕплетесси пулать.

Акă, нумайлă хисепри пĕрремĕшпе иккĕмĕш сăпат местоименийĕсене мĕнле çырнин историне илсе пăхар. 1926 çулта пичетленсе тухнă орфографи словарĕнче ку местоименисене *епĕр, есĕр* тесе çырмалла тенĕ. 1929 çулта кăларнă «Чăваш чĕлхине сăнаса вĕренмелли кĕнекере» вĕсене *эпир, эсир* формăпа панă. 1938 çулта тухнă орфографи словарĕнче *эпир, эсир* тесе çырма йышăннă. 1961 çулхи орфографи правилисенче икĕ тĕрлĕ те çырма ирĕк панă: *эпир — эпĕр, эсир — эсĕр.* Хальхи орфографи правилисем те сăпат местоменийĕсен çак варианчĕсене норма тесе йышăнаççĕ.

Вариантлă сăмахсемпе усă курма ирĕк панине чĕлхе нормине пăсни тесе шутлама май пур, мĕншĕн тесен пĕр пĕлтерĕше е ăнлава палăртма чĕлхере икĕ е ытларах форма çирĕпленсе юлать. Сăмахсен формисем ытларах пулни чĕлхен перекетлĕх туртăмне пăснă пек туйăнать. Анчах та ку апла мар. Чĕлхе хăйĕн аталанăвĕнче нихăçан та вариантлă сăмахсенчен хăтăлаймасть. Вăхăт иртнĕ май сăмахсен хăш-пĕр варианчĕсем чĕлхерен тухса ӳкеççĕ, вĕсен вырăнне теприсем йышăнаççĕ. Ку процесс авалтан пулса пынă, малашне те пулĕ. Халăх чĕлхинче çӳрекен вариантлă сăмахсене литература чĕлхи кирлĕ чухлĕ илме тăрăшать, кирлĕ маррине йышăнмасть.

Чĕлхене нормăлас ĕçре йĕрке (система) тăвасси орфографипе орфоэпие пур енлĕ тĕпчененчен те килет. Сăмахран, орфографи правилисенчи *-ей* сасăсемпе пĕтекен сăмахсен формисене мĕнле калассипе çырассине тишкерсе тухнă хыççăн И. П. Павлов тĕпчевçĕ çакăн пек шухăш патне пырса тухать:

1. Вырăс чĕлхинчи çыру урлă кĕнĕ сăмахсене *-ей* хыççăн кирек хăçан та аффикссен хытă вариантне хушмалла: *мавзолейăн, хоккейла* (*мавзолейĕн, хоккейле* мар. — **В. С.**).

2. Авалтанхи чăваш сăмахĕсенче тата пуплев урлă кĕнĕ, чăвашланнă сăмахсенче *-ей* хыççăн яланах аффикссен çемçе варианчĕсене хушмалла: *Раççейре, телейлĕ* (*Раççейра, телейлă* мар. — **В. С.**).

Чăваш чĕлхинчи сăмахсен акцентологи варианчĕсене нормăласси — орфографипе орфоэпи словарĕсен правилисен тĕп тĕллевĕ. Орфоэпи сăмахсене сасăпа ударени тĕлĕшĕнчен мĕнле тĕрĕс каламалли правилăсене çирĕплетет. Сăмахран, *ӳслĕк* (*ĕслĕк* мар), *тĕпчев* (*тĕпчеф* мар), *рехмет* (*ĕрехмет, ăрахмат* мар).

Литература чĕлхине нормăланă чухне, паллах, сăмахсен пур фонетика варианчĕсене те йышăнма май çук. Ун пек туни чĕлхене çӳп-çап кĕртсе тултарни пулĕччĕ. Қалăпăр, вырăнти калаçусенче *çенĕк* сăмахăн *çенĕх, çеник, çелнĕх, çених, çинюк, çеннĕк, çилник* варианчĕсем тĕл пулаççĕ. Вĕсене пĕрне те литература чĕлхине кĕртмен. Анчах та, хушăран сăмахсен фонетика варианчĕсем литература чĕлхине икĕ е виçĕ тĕрлĕ те кĕме пултараççĕ: *пултăран — пултран, пурăнăç — пурнăç, пуйăс — поезд, саккун — закон* т. ыт. те. Ку норма шутланать.

Çапла вара, вариантлă сăмахсене нормăласси те чĕлхе аталанăвĕпе çыхăннă, вĕсене литература чĕлхине кĕртесси ĕмĕрлĕхех çирĕпленсе ларнă правилăсем тăрăх пулса пыма пултараймасть.

## ТУПМАЛЛИ

**Чăваш чĕлхин лексикине тĕпченин историйĕ** . . . . . . 3

**Лексика тата лексикологи** . . . . . . . . . . . 9

Пĕтĕмĕшле ăнлантарни . . . . . . . . . 9
Сăмах — лексикăн тĕп единици . . . . . . 14
Лексема . . . . . . . . . . . . . 17

**Чăваш лексикин историри аталанăвĕ** . . . . . . . 19

Чăваш чĕлхин тĕрĕк чĕлхисен хушшинчи вырăнĕ . . . . 19
Чăваш чĕлхин историри тапхăрĕсем . . . . . . . 20

**Хальхи чăваш чĕлхин лексикине пулса кайни енчен пăхса тухни** . 24

Умĕн калани . . . . . . . . . . . . 24
Тĕп чăваш сăмахĕсем . . . . . . . . . . 25
Чăваш чĕлхинче хăйĕнче пулса кайнă сăмахсем . . . . 27
Чăн чăваш сăмахĕсем . . . . . . . . . . 27
Сăмахсен йышĕ пĕр тĕпрен (тымартан) хунаса пыни . . . 30
*Шыв* сăмахăн диалект, дериваци тата этимологи йăвисем . . 30
Урăх чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем . . . . . . 33
Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем . . . . . . 34
Қалаçу урлă йышăннă сăмахсем . . . . . . . 35
Çыру урлă йышăннă сăмахсем . . . . . . . . 37
Араб тата перс чĕлхисенчен йышăннă сăмахсем . . . . 38
Мари, мордва тата удмурт чĕлхисенчен йышăннă сăмахсем . 41
Монгол чĕлхинчен йышăннă сăмахсем . . . . . . 44
Қитай, санскрит (инди) чĕлхисемпе чăваш чĕлхинчи пĕрпсклĕхсем . . . . . . . . . . . . . . 48
Тутар чĕлхинчен йышăннă сăмахсем . . . . . . 49
Чăваш тата тункăс-маньчжур чĕлхисенчи пĕр килекен сăмахсем 51

**Чĕлхери сăмахсен йышĕ усă курас енчен сийленни** . . . . 54

Чăваш литература чĕлхин никĕсĕ . . . . . . . . 54
Ятарлă лексика . . . . . . . . . . . 60
Жаргон, арго лексики тата макаронизмсем . . . . 63
Чăваш чĕлхи лексикин стиль сийĕсем . . . . . . 65
Лексикăн стиль сийĕсем тата сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ . 68

**Ялан тата сайра усă куракан сăмахсем** . . . . . . . 69

Лексика — общество кун-çулĕн тĕкĕрĕ . . . . . . 69
Сайра усă куракан сăмахсен пухмачĕ (списокĕ) . . . . 72
Неологизмсем . . . . . . . . . . . . 74

**Словарь тăвас ĕç** . . . . . . . . . . . . 80

Пĕтĕмĕшле калани . . . . . . . . . . . 80
Чăваш çырулăхĕ тата революциччен тухнă словарьсем . . 82
Революци хыççăн тухнă словарьсем . . . . . . . 86

**Семантика тата семасиологи** . . . . . . . . . 96

Қўртĕм . . . . . . . . . . . . . . 96
Лингвистика семантики . . . . . . . . . 98
Чĕлхен системăлăхĕ. Чĕлхен лексика-семантика системи . . 102
Лексика-семантика категорийĕсем . . . . . . . 106
Нумай пĕлтерĕшлĕх тата уйрăм сăмахсен пĕлтерĕш структури 108

**Сӑмахсене пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен ушкӑнлани** . . . . . 116
Синонимсем . . . . . . . . . . . 116
Синоним речӗ . . . . . . . . . . . 118
Синонимсен тӗсӗсем . . . . . . . . . 119
Лексика синонимӗсем . . . . . . . . . 120
Пуплев (контекст) синонимӗсем . . . . . . 124
Стиль синонимӗсем . . . . . . . . . 125
Синонимсен пулӑвӗ тата вӗсен речӗсем аталанса сарӑлни . . 126
Синонимсен чӗлхери вырӑнӗ . . . . . . . . 127
Сӑмахӑн нумай пӗлтерӗшлӗхӗ тата синонимӗ . . . . 129
Антонимсем . . . . . . . . . . . 130
Антонимсен чӗлхери вырӑнӗ . . . . . . . . 132
Сӑмахӑн нумай пӗлтерӗшлӗхӗ тата антонимсем . . . 133
Энантиосеми . . . . . . . . . . . 135
Омонимсем. Лексика омонимӗсем . . . . . . . 137
Лексикӑпа грамматика омонимӗсем . . . . . . 139
Фонетикӑпа лексика омонимӗсем . . . . . . . 140
Омонимсен пулӑвӗ . . . . . . . . . . 140
Омонимсене нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсенчен уйӑрса илесси . 143
Омонимсемпе чӗлхере усӑ курни . . . . . . . 144
Паронимсем . . . . . . . . . . . 146
Паронимсем тата омонимсем . . . . . . . . 149
Паронимсем тата синонимсем . . . . . . . . 149
Паронимсем тата антонимсем . . . . . . . . 150
Паронимсем тата парономази . . . . . . . . 150
Паронимсем тата полисеми . . . . . . . . . 151
Вариантлӑ сӑмахсем . . . . . . . . . 152
Вариантлӑ сӑмахсене фонетика ,орфоэпи, орфографи енчен нормӑласси . . . . . . . . . . . . 155

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

Андреев Н. А. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1961.

Горшков А. Е. Чăваш чĕлхи: Лексика, фразеологи, пуплев культури: Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар, 1997.

Сергеев Л. П. Лексикологи // Чăваш чĕлхи. Хушса çĕнетнĕ иккĕмĕш кăларăм. Шупашкар, 1993.

Современный чувашский литературный язык: Введение. Фонетика. Орфоэпия. Лексикология. Фразеология. Графика и орфография. Ч. I. Чебоксары, 1990.

Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1978.

**Учебное издание**

**СЕРГЕЕВ Виталий Иванович**

СОВРЕМЕННЫЙ ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

ЛЕКСИКА И ЛЕКСИКОЛОГИЯ
СЕМАНТИКА И СЕМАСИОЛОГИЯ

**Учебное пособие**

Редактор **М. М. Федорова**

Корректор **Е. Е. Семенова**

ЛР № 020279 от 14.01.97.

Сдано в набор 11.07.99. Подписано в печать 11.03.2000.
Формат 60×90/16. Бумага газетная. Высокая печать.
Гарнитура литературная. Усл. печ. л. 10,0. Уч.-изд. л. 10,5.
Тираж 1000 экз. Заказ № 51.

Чувашский государственный университет
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15